К89
29942 чув



ВЛАДИМИР КУЗЬМИН

# ВИҪӖ ЮМАН

Национальная библиотека ЧР
4-029772

29772 шув

Возвратите книгу не позже
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

Зак. 931.

К 89

ВЛАДИМИР КУЗЬМИН

# ВИҪӖ ЮМАН



Повесть

Шупашкар
Чӑваш
кӗнеке
издательстви
1986

ББК 84. Чув 7—4
К 89

Владимир Прокопьевич Кузьмин

**ТРИ ДУБА**

*Повесть*
*На чувашском языке*

Редактор **В. В. Синичкин.** Художник **З. И. Чернова.** Художественный редактор **Е. Е. Михайлова.** Технический редактор **Л. Н. Кондрашкина.** Корректор **Л. А. Иванова. ИБ 1976.** Сдано в набор 27.03.86. Подписано к печати 16.06.86. НТ 03508. Формат 84×108 1/32. Бумага типографская № 3. Печать высокая. Гарнитура литературная. Усл. печ. л. 7,56. Усл. кр.-отт. 7,77. Уч.-изд. л. 8,39. Тираж 3500 экз. Заказ № 1376. Изд. № 40. Цена 70 коп. Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.

29772 чув
Чуваш... Республиканская БИБЛИОТЕКА им. ... Горького

**Владимир Кузьмин.**
К 89 Виҫӗ юман. Повесть. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви. 1986. 144 с.

Пер.: 70 п., 3500 экз.

Автор хӑйӗн кӗнекинче вӑрман промышленноҫӗнче ӗҫлекен ҫынсем ҫинчен хавхаланулла кӑмӑлпа ҫырса кӑтартать.

**ББК 84. ЧУВ**

К $\frac{4702650000 — 117}{М 136(03) — 86}$ 40 — 86

ПРОВЕРЕНО
29/Ю

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1986 ҫ.

# ВИÇĔ ЮМАН

*Йĕпреçри вăрман ĕçченне*
*Геннадий Никифорович Петрова*
*халаллатăп*

## 1

Тавралăх çуркунне ытамĕнче. Янкăр тӳпере хĕвел куçа шартарса шăранать. Хĕл ыйхинчен вăраннă уй-хир вырăнăн-вырăнăн хуралса улаланнă. Унта та кунта сывлăша тăрисем вĕçсе çĕкленеççĕ, юрласа чуна хускатаççĕ. Раман Дубов уй урлă сĕлкĕшлĕ çулпа утать. Хăвăртрах вăрман пунктне çитесшĕн вăл. Анчах çулĕ çăрăлчăк ав, утма кансĕр. Çавăнпа канма тенĕ пек чарăнса тăрсах итлет Раман тăри юррине. Таçта çитиех вĕçсе çĕкленнĕ шĕшлĕ кайăк тӳпене такам ывăтса янă пĕчĕкçеççĕ те, анчах калама çук янăравлă шăнкăрав пек туйăнать.

Вăрмана çитсен, Раман çĕлĕкне хывса тарланă çамкине шăлса илчĕ. Кунта юр çирĕп-ха, çул та пăсăлман. Утма çăмăл. Пĕр-икĕ сехет пек кайсан, шак юманлăх пуçланчĕ. Унтан уçланка илсе тухрĕ çул, кунта — вăрман ĕçлекенсен поселокĕ. Иртнĕ кĕркуннеренпех, мĕн салтакран таврăннăранпах кăмăлĕ туртăнатчĕ-ха Раманăн çакăнта, анчах ниепле те ялтан хăпса тухса пулмарĕ: ĕç хыççăн ĕç тупăнса тăчĕ. Иван Капитонович Арсентьева марлин, тен, халĕ те тапранса тухаймастчĕ пулĕ-ха Раман. Иван Капитонович вăл Юманлăхра тахçантанпах ĕçлет. Мастер. Пĕр кунхине, яла таврăнсан, кӳрше тесе, Дубовсем патне каçрĕ çавăскер. Вăрман касакансен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен питĕ хавасланса каласа кăтартрĕ, Рамана Юманлăха чĕнчĕ. Малтанласа, ан тив, ĕçлемех мар, ахаль пырса кур, эппин, — паллашмалла, тесе хăварчĕ. Канăçĕ çухалчĕ вара çавăн хыççăн каччăн...

Вăрман пункчĕн кантурĕнче Дубова Арсентьев мастер участокне кайма каларĕç. Каллех вăрманпа утать акă вăл. Паçăрхи мар ĕнтĕ вăрманĕ кунта, шавлă. Йĕри-таврах мотор кĕрлет, касса янă йывăçсем хаплата-хаплата ӳкеççĕ.

Кӳршине курса хавасланнӑ Иван Капитонович, ялти-килти ҫинчен ыйта-ыйта пӗлсе, ун-кун ҫинчен калаҫса, ҫынна ҫул хыҫҫӑн ларса канма чӗнес вырӑнне, юлашкинчен, ак, пӗчӗк уҫланка илсе тухрӗ.

— Ман сӑмаха манмарӑн апла, килсе курас терӗн? — тинех чарӑнса тӑчӗ хайхискер.

— Курас тесе ҫеҫ мар, ӗҫлес тесех килтӗм-ха, Иван Капитонч, — терӗ Раман, темшӗн кӑштахименсе. — Сан участокна ячӗҫ ак. Эсир каҫа таврӑнасса кӗтсе, баракра ухмах сутса ларас килмерӗ, тухрӑм та утрӑм. Ҫапла кунта акӑ эп.

— Маттур! — кулса ячӗ Арсентьев. — Савӑнтаратӑн! — Рамана вӑл, тин курса илнӗ пек, пӗр хушӑ шӑпӑрттӑн-кӑмӑллӑн пӑхса тӑчӗ.

— Сан пек маттурсем питех те кирлӗ пире. Чим-ха, мӗн, Сидоров патне ярас пуль сана. Аван бригадир. Ахальтен мар Хӗрӳ Хӗветӗр теҫҫӗ ӑна.

Дубовсен йӑхне Иван Капитонович лайӑх пӗлет. Октябрьти революциччен кунта вӑрмана нимӗҫ промышленникӗсем пӗтерсе пурӑннӑ. Тӗнчипе чапа тухнӑ чӑваш юманӗпе ытти йывӑҫа вӗсем ют патшалӑхсене ӑсатса тӑнӑ. Ҫавсем патӗнче тар тӑкса вӑрман ӗҫленӗ Чаккас Ухванеҫӗ. Вӑйлӑ та тӗреклӗ арҫын пулнӑран ӑна Дубов хушамат туянтарса янӑ. Чӑвашла Юман теме тытӑннӑ. Ухванеҫӗн ывӑлӗ Йӑкӑнат, граждан вӑрҫинче ҫӳренӗскер, Улатӑрта милицире тӑнӑ, вӑрӑ-хурахпа тытӑҫса вилнӗ. Йӑкӑнат ывӑлӗ Митрахван, Иван Капитоновичпа тантӑшскер, иртнӗ вӑрҫӑран таврӑнаймарӗ. Юман Митрахванӗн кӗҫӗн ывӑлӗ халӗ ак, салтак атти, галифе, фуфайка, сурӑх тирӗнчен ҫӗлетнӗ ҫӗлӗк тӑхӑннӑ тӗреклӗ хул-ҫурӑмлӑ каччӑ, ун умӗнче пӑхаттир пек тӑрать. Ҫӗмӗрт пек хура куҫӗ, ҫаврарах пичӗ, тӳрӗ сӑмси, ҫамки урлӑ усӑнса аннӑ ҫӳҫ пайӑркӗ, варринчен пӑт путӑк янахӗ — пурте ун йӑлтах ашшӗне, Митрахвана, аса илтереҫҫӗ. Сасси те ашшӗннех. Ашшӗ пекех васкамасӑр калаҫать, ӑшшӑн, евӗккӗн кулать. Чунӗ-чӗрипе те ашшӗнех хывнӑ пулсан, чӑн-чӑн Юман таврашех, чӑн-чӑн Юман Раманех пулма кирлӗ.

— Аслаҫуна та астӑватӑп, таврара пӗр пӑхаттирччӗ, — хӑйӗн шухӑшне сасӑпах каласа ячӗ Арсентьев. — Аҫупа вара пӗрле ӳсрӗмӗр, пӗрле вӗрентӗмӗр, пӗрле вӑрман ӗҫлеме ҫӳреттӗмӗр. Клуба ялти икӗ пӑт пуканӗсене пуҫтарнӑччӗ. Ҫамрӑксем эпир вӑйпа тупӑшса ҫӗклеттӗмӗр ҫавсене, ӑмӑртусем ирттереттӗмӗр. Эх, аса илмелли кӑна юлчӗ ӗнтӗ халь...

— Вӑрҫӑ хыҫҫӑн та выртатчӗҫ-ха вӑл пукансем клуб-

ра, — сăмаха сыпăнтарчĕ Раман. — Қайран весене шкула илсе пынăччĕ. Физкультура урокĕсенче хам та сахал мар ҫĕкленĕ. Салтакра вара ҫавна пулах, тен, штангăпа пĕрремĕш разряда ҫитрĕм. Мастерах пулаймарăм та...

— Пулăн-ха, темле маҫтăр та пулăн, — качча хулпуҫҫинчен лăпкаса илчĕ Арсентьев. — Паянлăха ĕҫлемесен те юрĕ сана. Ырантан тытăн.

Тĕттĕмленеспе моторист электростанцие чарчĕ. Вăрман ĕҫлекенсем ĕҫ хатĕрĕсене будкăна кĕртсе хучĕҫ, киле пуҫтарăнма тытăнчĕҫ.

— Ҫапла пирĕн пурнăҫ, шăллăм, — калаҫрĕ Арсентьев поселокалла утнă май. — Куратăн-и, пурте йĕп-йĕпе. Киле ҫитсен, йăлт типшĕнес пулать. Ыран — каллех йĕп-йĕпе. Кашни кун ҫапла. Хĕлĕпех. Ҫапах, хăвах куран, пуҫа усмаҫҫĕ пирĕн ҫынсем. Илтетĕн-и, епле шӳтлесе-кулласа пыраҫҫĕ! Ывăннин тĕсĕ те ҫук темелле.

Иван Капитонович мĕншĕн ҫапла калаҫнине Раман лайăх ăнланать-ха: кунти ĕҫ ҫăмăл маррине ҫын малтанах пĕлтĕр, ҫавăнпа пĕрлех шикленсе те ан ӳктĕр тет ĕнтĕ вăл.

Юманлăха ҫитсен, Арсентьев Рамана общежитие ямарĕ, курмалла-хăна пулмалла, хăйсем патне илсе кĕчĕ.

## 2

Раман ирех вăранчĕ. Ҫĕнĕ ҫĕрте, ҫын патĕнче, ыйхă ҫăмăл вăл. Тумланса кил хушшине тухрĕ. Ҫурхи чĕрĕ сывлăш пите-куҫа самантрах уҫăлтарса ячĕ. Йĕри-тавра вăрман кашлать. Мăрьесенчен тĕтĕм мăкăрланма пуҫларĕ. Акă, Иван Капитонович та картишне васкаса тухрĕ, Рамана сывлăх сунчĕ, ĕнине утă антарса пачĕ.

Вĕсем каялла кĕнĕ тĕле пӳртре пурте вăраннăччĕ ĕнтĕ. Иван Капитоновичăн сăмах-юмах ваклама питех юратман арăмĕ, Нинук инке, ухватпа кăмакара ҫĕр каҫнă чугуна туртса кăларчĕ. Арсентьевсен кĕҫĕн ывăлĕ, Ҫимун, Раманран пĕр ҫул аслăскер, салтакран таврăнсанах авланса янă-мĕн. Ун арăмĕ чĕчĕ ачипе ав. Ҫимунĕ хăй шоферта ĕҫлет, вăрман турттарать.

Килте ăсталанă анлă сĕтел ҫине Нинук инке хĕп-хĕрлĕ тăм чашăксемпе вĕри яшка лартрĕ, йывăҫ кашăксем пырса хучĕ. Пурте пĕрле ларса апатланчĕҫ. Ҫимун арăмĕ ҫеҫ, ачине кăкăр ĕмĕртекенскер, ҫитсă чаршав хыҫĕнчен тӳрех тухаймарĕ. Раман яшка сыпнă май кил хуҫи ҫине пăха-пăха илет. Иван Капитонович чылаях ватăлнă. Аш татăкне вăрах чămлать: шăлĕсем пĕтсе пыраҫҫĕ пулас. Раман ашшĕне пĕчĕкле ҫеҫ астуса юлнăскер, ăна апат ҫисе ларакан Иван

Капитоновичпа танлаштарса пăхма тимлерĕ. Пурăннă пулсан, халь унăн ашшĕ те вата курăнмаллаччĕ пуль ĕнтĕ. Ҫапла шухăшласа, Раман сĕтел хушшинчен тухрĕ, Нинук инкене апатшăн тав турĕ.

Иван Капитоновичпа Раман аслă урампа Юманлăх леш вĕçне тухрĕç. Кунта ялти пек мар, пачах урăхла. Ҫӳллĕ йывăççем айне ларса тухнă бараксем, вĕсем хыçĕнче — выльăх-чĕрлĕх витисем. Темиçе мунча. Столовăй. Ҫывăхрах клуб, вăрман пункчĕн кантурĕ. Урам тăршшĕпех вутă шаршанĕсем, пĕренесем, кĕрешсем. Машинăсем тăтăш çӳренипе юртан хăвăрт тасалнă çул хăйăрлă, типме пуçланă.

Вĕсем поселок хыçĕнчи пысăках мар çурта çитсе кĕчĕç. Иван Капитоновичпа Раман кĕрсе тăрсан, ахаль те тулли пӳрт ăшчикки татах тăвăрланчĕ. Ҫынсем доминолла çапса лараççĕ. Чĕлĕм тĕтĕмĕ явăнать. Вăйсăр лампочка çутинче Раман ĕнер Арсентьев кăтартнă Хĕрӳ Хĕветĕре палласа илчĕ. Хĕветĕр сак çине ура хуçлатса ларнă та çынсене тем каласа кăтартса ахăрттарать. Иван Капитоновичпа Рамана вăл хĕсĕнкелесе хăйпе юнашар ырăн туса пачĕ те, хулăн чикарккине пăклаттара-пăклаттара, пуçланă юмахне малалла çаптарчĕ:

— Ҫапла тахçан ĕлĕк, эсир, ачапча, урамра чăхсемпе пĕрле тусан ăшĕнче шыва кĕрсе чаваланнă çулсенче, хырăм выçса хăваланипе кăмака туса çӳреме тивнĕччĕ манăн. Ҫитрĕм хайхи Мереçене. Пĕрисем тин çеç пӳрт лартса пĕтернĕ. Пурте пур — кăмака çук. Хĕпĕртерĕç эпĕ пынăшăн. Тытăнтăм ĕçе. Упăшки, пирĕн пекех, вăрман касать. Арăмĕ мана пулăшма юлать. Пĕр кирпĕч хуратăп та инке çине пăхатăп. Тăм витрине çĕклесе парать çак, çума пырса тăрать те ихик! тесе авкаланса илет. «Мĕн пит çамрăк кĕсре пекех кĕçенет-ха ку?» — тетĕп. Тăм калакне сак çине хуратăп та алла ун еннелле яратăп — вăшт çеç тарать ман çумран. Ҫапла пĕр-икĕ кун хушшинче кăмака туса пĕтертĕмĕр. Шухăш кил хуçи арăмĕ пиркиех-ха хамăн. «Эх, мăрье кăларса пĕтерем кăна! — шухăшлатăп ăшăмра. — Вара тӳрех хутса яратпăр та-ха ку кăмакана!..» — тетĕп. Ĕмĕтленетĕп. Мăрье кăларса тăрласа пĕтертĕм çеç, упăшки çитрĕ кĕчĕ. Кăмăл лапах ӳкрĕ манăн. Кăмакана вара виççĕн хутса пăхма тиврĕ.

— Ха-ха-ха! Тӳлессе лайăх тӳлерĕç-и хуть? — ыйтрĕ доминолла çапса ларакансенчен пĕри, темле тăсланкăрах каччă.

Хĕрӳ Хĕветĕр хăйне пӳлнине юратмасть пулас, тăсланка кăпи пăхса илчĕ те ура çине тăрса каласма тытăнчĕ:

— Хайхи инке, упăшки кирлĕ ĕçпе лавккана чупсан,

мана ик хăлхаран сысна çурине ярса тытнă пек çавăрса илчĕ те, ваçка, хыттăн-хыттăн виçĕ хутчен чаплаттарса чуптурĕ, аллисемпе мăйран явса тытрĕ, вĕлер те вĕçертмест ытамĕнчен. Эп, ухмах, савăннипе çемçелсех кайрăм. Нимĕн тума пĕлместĕп. Сăмах та чĕнейместĕп. «Ку сана кăмакашăн, вĕри кăмакашăн, чаплă кăмакашăн», — тесе тепре чуптурĕ те лак лартрĕ хĕрарăм мана сак çине. Çав самантрах упăшки те персе çитрĕ.

Мухтанатăп кăмакапа, хăйсене мухтатăп. Ĕçшĕн укçа илес самант çитрĕ. Ман кĕçенекен инке упăшки умне пырса тăчĕ те — пăркаланса çапла калать: «Укçа тет-и? Тӳленĕ эп ăна! Расчет тунă. Йăлт татăлнă». Çакна илтсен, упăшки ман çине вăкăрла пăха пуçларĕ. Сехĕрлентĕм ӳкрĕм. Кутамккана çĕклерĕм те часрах урамалла шăвăнтăм. Чӳречерен шăл йĕрсе юлчĕ инке: «Хăрăм ларсан, тасатма кил», — тет, мур.

Пурте ахăлтатса ячĕç.

— Арăмна мĕн тесе суйрăн укçасăр таврăнсан? — ыйтрĕ леш тăсланкă каччах.

— Арăма-и? — шухăша кайса тăчĕ Хĕрӳ Хĕветĕр. — Арăма... Авланăр-ха хăвăр, кăмака тума вĕренĕр, вĕри кăмака пек пĕçертекен инкесене тĕл пулăр — вара пĕлĕр. Атьăр ĕçлер!

Халăх чĕлĕм тĕтĕмĕ тулнă пăчă пӳртрен урама шавласа тухрĕ. Иван Капитонович Хĕрӳ Хĕветĕре чĕнсе илчĕ те: «Паян санпа çак йĕкĕте яратăп», — тесе кăтартрĕ Раман çинелле.

Хĕветĕр хирĕçсе тăмарĕ, килĕшрĕ. Делянкăна çитиччен вĕсем виççĕшĕ пĕрле утрĕç. Хĕрӳ Хĕветĕр, чунĕпе шухă пулин те, çулĕпе çамрăк мар çав ĕнтĕ. Арсентьевпа пĕр ӳсĕмри çын. Утнă май, Иван Капитоновичăнни евĕрех, сывлăшĕ пӳлĕнет. Çамки çине пăчăр-пăчăр тар тапса тухрĕ ав. Чĕлхи яка ĕнтĕ, çул тăршшĕпех чарăнма пĕлмесĕр калаçса пычĕ. Раман пурнăçĕ çиичен тĕпĕ-йĕрĕпе тенĕ пек ыйтса пĕлме ĕлкĕрчĕ.

— Туслă ĕçлер, туслă пурăнар, Раман, — çул вĕççĕнче качча хăй сисмесĕрех тепĕр хут алă пачĕ вăл. — Акă, çитрĕмĕр хамăрăн ĕç вырăнне.

Бригадир Рамана электропăчкăпа мĕнле ĕçлемеллине кăтартрĕ, кабеле станци патĕнчен туртса килсе каялла пуçтармаллин, йывăçа хăш еннелле тӳнтермеллин вăрттăнлăхĕсене вĕрентрĕ, хăрушсăрлăх техники тенине чылай ăнлантарчĕ. Çапла Раман Дубов Юманлăх вăрман пунктĕнчи малта пыракан бригадăра моториста пулăшаканра ĕçлеме пуçларĕ.

## 3

Вăрмана янратса ларакан двигатель патĕнчен Раман кабель сĕтĕрсе çитрĕ. Сĕтĕрме çăмăлах мар ăна, вăй пур çынна та самаях хашкана ертет. Ватă хурăн айĕнче тăракан Хĕрӳ Хĕветĕр, ывăç тупанĕ çине сурнă пек туса, аллисене тимлесех сăтăркаласа илчĕ те электропăчкăна тапратса ячĕ. Ăна тепĕр вĕçĕнчен Рамана тыттарчĕ. Пăчкă хурăн вулли варринелле çăмăллăн чăшлатса кĕме пуçларĕ. Чăй! чăй! сирпĕнет икĕ еннелле пăчкă кĕрпи, пите-куçа сапать, сăмса айне лексе кăтăклантарать. Раман, хăнăхманскер, кĕрпе куçа кĕресрен пуçне аяккинелле пăрма пăхрĕ кăна, Хĕрӳ Хĕветĕр кăшкăрса пăрахрĕ:

— Мĕн пăркаланан?! Тӳрĕ тăр! Лайăх тыт пăчка!

Пăчкă вĕçне Раман пĕтĕм вăйран пăчăртаса лартрĕ, куçне хĕссе, шăмшакне хытарчĕ. Пăчкă шалаллах, шалаллах путать, вулла хĕрхенмесĕр кăшлать, тавралла тутлă шăршă çĕкленет, шултра кĕрпе сапăнать. Ушкăнри виççĕмĕш çын, тăрнаккай Çтаппан, хурăна уçă çĕрелле юплĕ тыткăчпа ĕхлетсе тĕртет. Пăчкă ирĕккĕнрех касма пуçларĕ. Йывăç шарт! шарт! тăвать. Тункатапа вулă хушшинчи хушăк аслăлансах пырать. Вуншар çул пĕр тĕлте саркаланса ларнă ватă хурăн яланхи вырăнĕнчен татăлса майĕпен тайăлать. Тинех вăл, хĕвелпе сывпуллашнăн, шанклашка тураттисемпе хăлаçланса-хăлаçланса илчĕ те ӳхĕрсе, макăрса çĕре ӳксе хаплатрĕ, уçă вырăна тăсăлса выртрĕ.

— Акă, пуçларăмăр та, — Рамана хулпуççийĕнчен лăпкарĕ моторист. — Пĕрремĕш йывăçа касрăмăр. Пирĕн чĕлхепе каласан, тӳнтертĕмĕр, эппин. Астуса юл çак саманта.

Раман тарланă çамкине фуфайка çаннипе шăлса илчĕ, ассăн сывласа ячĕ:

— Асра юлма кирлех. Чĕрене пырса тиврĕ ак...

— Мĕн пулчĕ тата? — пăчка тунката çине лартрĕ Сидоров.

— Çын та мар, чĕрчун та мар ĕнтĕ, — пуçне пăркаларĕ Раман, — чунсăр япала çеç темелле, анчах сасăпа макăрса янă пекех туйăнчĕ çак хурăн. Кур-ха, куççуль тăкать вĕт! Тумламăн-тумламăн юхать сĕткенĕ...

Каснă тĕпрен пăчăртатса тухакан хурăн шывне шĕвĕр пӳрнипе сăтăра-сăтăра илекен пулăшаканĕ çине бригадир пĕр авăк тĕлĕнсе пăхса тăчĕ, унтан хуллен çапла хушса хучĕ:

— Шалккă та ĕнтĕ. Çапах пирĕн касмаллах. Нимĕн те тăваймăн. Çĕршыва йывăç кирлĕ.

Çтаппан ахăлтатса кулма пуçларĕ:

— Вăт тĕнче! Тупнă мĕншĕн кулянмалли! Вăт тĕнче! Кашни хурăншăн макăрсан, ман куççуль тахçанах типсе лармалла. Интереслă!

Бригадир ăна чышкипе юнарĕ:

— Ах, çак чунсăра! Выльăх пусма çеç ямалла сана ашкакай комбинатне. Мĕнле ăнланма пĕлместĕн эс çын чунне? Эппин, иксĕмĕр пек тăмсай мар Раман, япалана чĕрепе туйма пĕлет.

Пăчкă çĕклесе бригадир хыççăн тепĕр хурăн патнелле утма тытăннă Раман Çтаппан хутне кĕчĕ:

— Ятлама кирлĕ марччĕ ăна. Лайăх ĕçлекен çын кăмăлне пăсатпăр капла.

Херу Хĕветĕр ăшра тулнине çисле кăларса пĕтермесĕр лăпланакан йышши мар иккен, пăчка аллине илсен те çаплах Çтаппана хăртрĕ-ха вăл:

— Тăн кĕртеп-кĕртеп ĕнтĕ — усси çук. Куç умĕнче мĕн пур, çавна çеç курать. А çав япала мĕншĕн ун умĕнче выртать е тăрать, мĕн тума кирлĕ вăл пурнăçра — çавна ăнланма пĕлмест.

Алличчи тыткăчне кĕрт çине лап пăрахрĕ те Çтаппан айккинелле пăрăнса тăчĕ. Хĕрхенсе кайрĕ ăна Раман. Апăршана, лăплантарас тесе, сăмах хушасшăнччĕ, анчах пулмарĕ каласа, бригадир кăшкăрнипе, ĕçе пикенсе, пăчкă аврине йăпăр-япăр ярса тытрĕ. Мотор кĕрлеме пуçларĕ.

Бригадăри ытти çынсем вĕсем каснă йывăç турачĕсене иртеççĕ. Раман паян вĕсенчен пĕрне лайăх астуса юлчĕ. Вăл Анюта ятлă.

Çăмăллăн, илемлĕн ĕçлет Анюта. Икĕ аллипе çавăрса тытнă пурттине кашни сулса ямассерен хĕрĕн пиçĕ пĕвĕ шур хăва пек авăнса илет. Хуçине пит ятуллă ĕç тумĕ витĕр çамрăк кĕлеткен пĕтĕм хусканăвĕ палăрса тăрать. Кач! кач! янăрать таврара. Пип-пип! чăв-чăв! юрла-юрла ташлать вĕлтренкайăкĕ. Ялт çутатса ярать çур хĕвелĕ вăрман каснă уçă вырăна. Анюта, хăй çине пĕр харăс тинкернĕ виçĕ арçынна курмасăр-туймасăр, хурăн туратти иртет. Кач! кач!

Чăр-ри! чăр-ри! юрлать пăчкă. Туратсем хăлаçланнипе сывлăш чĕтренет. Хап та хап ӳкеççĕ йывăççем çурхи çĕр çине.

Барака самаях ĕшенсе таврăнчĕ Раман. Апла пулин те утă тултарнă тӳшек çинче чылайччен çаврăнкаласа выртрĕ вăл. Ыйхи килмерĕ.

# 4

Сидоров бригадине ĕçлеме çĕнĕ вырăна куçарчĕç. Çурхи вăрман илемĕпе киленсе, çавăнта, çĕнĕ делянкăна каять халь бригада. Йывăç тураттисем мăнтăрланса папкаланма пуçланă ĕнтĕ. Шыв кӳлленчĕкĕсем çумĕпе çеçпĕл çеçке сарать. Серте кăшăлах сăмсаланса тухнă. Çул канавĕ хĕррипче, вĕтлĕх айĕнче, кăтра кăмпа кăнтарăнса çĕкленет. Пип-пип! чăв-чăв! юрлать кайăк.

— Илтетĕр-и? — аллине хăлхи çумне варинккелесе тытрĕ Хĕрӳ Хĕветĕр. — Вĕлтрентăрри! Телĕнмелле кайăк. Эп ăна тытас тесе пайтах тăрăшнă. Çук, алла лекмест. Хăй çывăхнех ярать, куç умĕнчех юрласа ларать. Вăт-вăт çĕлĕкпе хупласа хуратăп теп. Сиссе те юлаймастăн, çурăм хыçĕнче йĕкĕлтесе ларать юррипе сана... Вăрмана çур илемĕ кĕртекен пирвайхи кайăксенчен пĕри вăл. Пуринчен те малтан вĕçсе килет кăнтăртан, пуринчен те кайран вĕçсе каять. Çу каçиччен икĕ хут чĕпĕ кăларать, апăрша. Тепĕр тĕлĕнтерĕшĕ пур тата. Халь тем тесен те аçисем анчах пулма кирлĕ. Амисем вунă-вуникĕ кун каярах юлса çитеççĕ вĕсен.

Ку таранччен шăпăрт утса пынă Çтаппан тутине чаплаттарса илчĕ те бригадира çапла каласа хучĕ:

— Интереслă. А ма тата пĕрле килмеççĕ-ха вĕсем? Юнашар вĕçен кайăка та лайăх пуль? Интереслă. Суяп эс куна. Çĕтсе кайсан, вăрманта çынна та тупма çук. Вĕлтрентăрри арăмĕ хăйĕн пăрахса килнĕ упăшкине тупать пулать вара. Вăт тĕнче!

Хĕрӳ Хĕветĕр хăйне суеç вырăнне хурса пӳлнĕшĕн тарăхрĕ пулмалла. Тути хĕррийĕ ун çиллессĕн кăлт-кăлт туртăнса илчĕ.

— Ну, çак Çтаппана! — пĕррех тапса сирпĕнтерчĕ вăл ури айне лекнĕ хăрăк турата. — Çăва шăтăкĕнчен сиксе тухрĕ пуль ман тĕллĕн. Суян тет тата, лăпăрти. Хăй пĕлмест нимĕн те, анра-сухра. Итле, Çтаппан, малтан аçисем пирĕн вăрмана килсе вырăн пăхаççĕ, йăва çавăрма тытăнаççĕ. Çавăрнă йăвана чĕпĕ кăларма, ху каланă пек, «арăмĕсем» вĕççе çитеççĕ. Çутçанталăк саккунĕ. Инстинкт тени ку. Ăнлантăн-и? Каллех суять теп пулсан, тыт та вĕлтрентăррине, ыйт хăйĕнчен.

Пĕр-пĕрне ăнланмасăр уссăр тавлашакан Хĕрӳ Хĕветĕрпе Çтаппанран пурте кулаççĕ.

— Акă, çитрĕмĕр тинех, — чарăнчĕ Хĕветĕр. — Çакăнта, курăс кӳлли çумĕнче, пирĕн çĕнĕ участок. Электростанци çитиччен ларса канар.

Хĕрсем çеçпĕл пуçтарма пуçларĕç. Раман та вĕсемпе

хутшăнса кайрĕ. Анюта çумнерех пуласшăнччĕ вăл, анчах хăяймарĕ. Вара бригадир патне таврăнса ĕç çинчен калаçма тытăнчĕ.

— Ман хурăн шывĕ ĕçес-ха, — терĕ те Çтаппан, çумĕнчи хурăн айне тăрса, ун вуллине пуртăпа пĕр шит тăршшĕ хĕреслĕн кач-кач! касса хăпарчĕ, хуйăра сӳсе валак турĕ, аяла алюмини курка вырнаçтарса лартрĕ.

Бригадир хытах ятласа пĕтернĕшĕн Раман пaçăр Çтаппана чăнласах хĕрхеннĕччĕ. Халĕ вара ăна вăл йывăçпа çапла чунсăрла хăтланнăшăн тарăхса кайрĕ. Çакна сиснĕнех, Хĕрӳ Хĕветĕр Раманран маларах сăмах тупрĕ:

— Ай, аптрамалла санпа, Çтаппан, — терĕ вăл, аллине шанăçсăррăн сулса. — Хурăн шывĕ те йĕркеллĕ юхтарма пĕлместĕн-çке. Вĕрент, вĕрент сана. Çирĕм пиллĕке çитсе те пуçне качака ăсĕ чухлĕ ăс кĕмен. Пĕтертĕн вĕт строй-материала. Халĕ эс каснă таран, чи çирĕп паїне, вутта яма тивет.

— Шалккă-им пĕр йывăç! — сарă шăлне кăтартрĕ Çтаппан. — Эп анчах-им ун пек касаканни? Çынсем те питех уяса тăмаççĕ. Темме вĕсене курмастăр, мана çеç вăрçатăр. Айваннине тупнă та. Çтаппан чăтать.

— Çынсене ан пăх эс, каяннăй! — Хĕветĕр Çтаппана тулма ĕлкĕрнĕ куркана илсе тыттарчĕ. — Ме, ĕç шерпетне. Электростанци çитрĕ вăн. Тепре капла аташнине курам кăна эп сана...

Кĕçех вăрман мотор кĕрлевĕпе ахрăм ярса шатăртатма пуçларĕ. Бригада ĕçе тытăнчĕ.

Кăнтăр апатне ларсан, участока Арсентьев çитсе тухрĕ. Сидорова вăл кăшт делянка тăрăх уткаласа çӳреме чĕнчĕ. Хурăнсем хушшипе пырса, вĕсем прачака тухрĕç, унтан каялла çаврăнчĕç.

— Мĕнле ман каччă? — сăмах май ыйтрĕ Иван Капитонович.

Хĕветĕр тӳрех хирĕç чĕнмерĕ, самантран тин:

— Эпĕ çынна ытлашши мухтама юратманнине эс, Йăван, хăвах лайăх пĕлетĕн, — терĕ вăл шухăшлăн. — Мĕн тес сана. Килĕшет мана вăл. Вăйĕпе те, ăсĕпе те. Пултаруллă ача. Çтаппан хăраххи мар. Хапăлламастăп эпĕ анра сурăх пек сĕнксе çӳрекенсене. Çын вăл чĕрĕ пултăр! Ларса илер мар-и кăштах? — пуç сулчĕ бригадир юман тункати еннелле.

— Урăх бригадăна куçарар мар-и апла Çтаппана? — чеен куç хĕсрĕ Арсентьев, вырнаçса ларсан.

— Ай-яй ăслă пуласшăн, — пуçне пăркаларĕ Сидоров, — хура пулсан та хамăнах тенĕ пек, тăнсăр пулсан та хам

бригада сынниех, хăнăхнă сын. Анчах... — тем такăнчĕ бригадир. — Анчах манран тăн кĕртсе пĕтерессн пулас çук. Раман аллине паратăп Çтаппана. Сын тутăр. Малашне иккĕшĕн пĕрле ĕçлемелле пулĕ.

— Эс тата ăçта каян? — бригадир кăмăлне чухласа илчĕ пулин те, тĕлĕненçи турĕ мастер.

— Инçете, инçете, куптан кураиман çĕре, Çĕпĕре, — аллипе тухăçалла тĕллесе кăтартрĕ Хĕрӳ Хĕветĕр. — Пичче чĕнет. Унччен хам вырăнта ĕçлеме Дубова вĕрентсе хăваратăп.

Арсентьев пĕр хушă пуçне чиксе ларчĕ, унтан ура çине сиксе тăчĕ те Хĕветĕре:

— Минретсе çитертĕн ĕнтĕ эсĕ мана çав Çĕпĕр пирки! — терĕ куçран тӳррĕн пăхса. — Кай! Чарса тăмастăп урăх. Эс, тӳрккес, мана та, тусна, итлес çук. Анчах çакна ан ман: эпир çук çĕрте çеç пурте лайăх пек вăл. Кунта йывăр тесе, унта сăпка çакса памĕç. Часах каялла тапса килĕн-ха.

— Юрать, юрать, — алă сулчĕ Хĕрӳ Хĕветĕр, — курăпăр унта...

Арсентьев урăх нимĕн те чĕнмерĕ, вăрт çаврăнчĕ те прачакпа анаталла уттарчĕ. Сидоров бригада сыннисем патне таврăнчĕ.

## 5

Салтакра хăнăхнă çирĕп йĕркене Раман Юманлăха ĕçлеме килсен те пăрахмарĕ: кашни ир физзарядка тăвать, тумне-çийне тирпейлĕ тытать, утти-тăрри уçăмлă ун, хăвăрт. Ыттисене те, хăйпе пĕрле баракра пурăнакансене, йĕркене хăнăхтарма тăрăшать. Малтанах унран тăрăхлама та пăхрĕç. Ĕçкĕпе ашкăнакансене, картла вылякансене чарма тăрăшнăшăн ăна шăл хăйракансем те тупăнчĕç. Раман пурпĕрех чакмарĕ. Хăйне пуртăпа хăмсарма тăнă пĕр ӳсĕре барак пусми çинчен вăркăнтарса ярсан, çав пуçтахсем самаях лăпланчĕç.

Халĕ Раман ĕç хыççăн барака хăюллăн, савăнăçлăн килсе кĕрет. Шалта таса, чĕлĕм тĕтĕмĕ явăнмасть, вырăнсене салтакри пек типтерлĕ пуçтарса хунă. Чӳрече янахĕсем çинче — чĕрĕ чечексем.

Паян Раман делянкăран чылаях ĕшенсе таврăнчĕ. Хывăнса çăвăнчĕ те ĕç тумтирне майласа типме çакрĕ, малтанах якатса хунă шăлаварĕпе гимнастеркине илсе тăхăнчĕ. Унтан, апат тусан, клуба тухса утрĕ. Кино пулмалла иккен. Раман билет туянчĕ те зала кĕчĕ. Сын нумай, пуш тенкел çукпа пĕрех. Малалла иртмерĕ Дубов. Кайри стена

çумĕнче нрĕклĕрех пек. Çавăнталла пăрăнчĕ каччă. Çавна май алăк еннелле çаврăнса пăхрĕ те хайхи Анютăна курах кайрĕ. Хĕр, те Рамана асăрхаса, те пуш вырăн шыраса, ун хыççăнах утрĕ. Каччă, халиччен ăна ĕç тумĕпе çеç куркаланăскер, ĕнтĕ ак тĕлĕнмеллипех тĕлĕнсе тăчĕ. Чипер те икен Анюта! Утмăлтурат çеçки пек сенкер çитсăран çĕлетнĕ хурталлă чăваш кĕпи çиййĕн тĕм-хура кĕске пиншак тăхăннă хĕр, уринче çӳллĕ кĕлеллĕ пушмак. Пуçне куçа йăмăхтаракан пурçăн тутăр çыхнă. Тутăр айĕнчен ик еннелле ункăланса тухнă сап-сарă çӳçĕ, хулпуççи урлă умнелле янă икĕ хулăн çивĕчĕ, сывлана майăн çăмăллăн çĕкленсе илекен тулли кăкăрĕ... Ашшăн, кăмăллăн çиçекен хăмăр куçĕ... Çурхи çилпе кăшт кушăрханă тути хĕррисенче савăнăçлă кулă вылять хĕрĕн. Эй, пĕтĕмпе именсе кайăн çав...

Кино пĕтсен, Раман Анютăна хĕрарăмсен баракĕ умне çитиччен ăсатса ячĕ.

— Раман, паçăрах каласшăнччĕ эп сана, — ун-кун çинчен калаçса пынă çĕртех сасартăк темĕн аса илчĕ хĕр.

— Итлетĕп, Анюта...

— Хам савăнни çинчен каласшăнччĕ эпĕ.

— Мĕн тупăнчĕ апла? Мĕншĕн савăнатăн?

— Саншăн, Раман.

Раман сисмесĕрех питне аллипе сăтăрса илчĕ.

— Маншăн?

— Саншăн пулмасăр тата, Раман. Эс таврăннăшăн, пирĕн йыша ĕçлеме килнĕшĕн.

Раман хирĕç пĕр сăмах тупса калаймарĕ.

— Эс мĕн, шикленсе ӳкмерĕн пулĕ те пĕрре курсах юратса пăрахрĕ ку тесе? — кулчĕ хĕр. — Ан шиклен. Юрату пирки мар ман сăмах. Хамăн ĕç пирки. Итле. Ыранах пуху пуçтаратăп та калатăп комсомолецсене: «Акă сире çĕнĕ секретарь, — тетĕп, — суйларăр, ĕçлерĕм эп, халĕ мана çитет», — тетĕп.

— Ав мĕн иккен.

— Йăлăхрăм эп кунта пурăнса. Арçынсемпе тан ĕçлеп, ывăнатăп тем тери. Хĕрарăм ĕçĕ мар вăл вăрман касасси. Шупашкара каятăп, пир-авăр комбинатне ĕçе кĕретĕп.

Раман нимĕн калама та пĕлмерĕ. Анюта хăй юрринех юрларĕ:

— Тăнла, Раман, ав мĕнле ӳлет вăрман! Çав кĕвве итлесе пурăнатăп кунта иккĕмĕш çул. Вăтам шкул пĕтерсенех пуçа килсе чикрĕм те... Çамрăксем нумай тытăнса тăмаççĕ çак упа шăтăкĕнче, пĕр яхăн ĕçлеççĕ те пăрахса каяççĕ. Эс те çаплах тăван ак, Раман. Ыттисенчен мĕнпе уйрăм эс!..

— Пĕлместĕп-ха, Анюта, нимĕн те калама пĕлместĕп халлĕхе. Ĕçлесе пăхам.

— Эпĕ Иван Капитонча калатăп. Вăл пирĕн парторг. Сана парса хăваратăп комсомол «тилхепине». Тыт ăна, Раман, эс вăйлă. Ыранччен!

— Юрĕ, ыранччен.

Анюта баракалла чупса кĕрсе кайрĕ. Раман, вăрман кашлавне итлесе, хăйсен баракнелле уттарчĕ. «Эх, Анюта,—шухăшласа пычĕ вăл, — илемлĕ те чипер эсĕ... Кама шыраса, кама тĕл пулса, кама савăнтарма вĕçен кайăкла тухса вĕçетĕн-ши ĕнтĕ?..»

Ыйхăсăр асапланчĕ çав çĕр Раман. Кăвак çутă киличченех вут çинчи пек вĕтеленсе выртрĕ. Унтан тăрса тумланчĕ те хуллен баракран тухрĕ. Уçă сывлăш самантрах вăй кĕртсе чĕртрĕ качча çапла, сывлăшĕ ырă-ха кунта. Анчах, йĕри-тавра вăрман пулин те, барак тавраш̆енче хăтсăр: поселок уçланкинче йывăç та хăварман, йăлт çаратса тăкнă. Раман сарай çумĕнче кĕреçе тăнине асăрхарĕ те уп патнелле васкарĕ. «Барак умне йывăç лартам-ха, ара. Хам кунта ĕçлеме пуçланă ятпа асăнмалăх пултăр-и», — терĕ каччă хăйне хăй.

Вара çерем тăрăх çывăхри вăрман кĕтессинелле çул тытрĕ. Кунта, çырма пуçĕнче; йывăççене тĕкĕнмен. Çамрăк хурăнсемпе çăкасем пĕр-пĕринпе ăмăртмалла тенĕ пек пĕве кайнă. Паркарах хурăнпа çăка хунавĕсем суйласа кăкларĕ те Раман каялла уттарчĕ. Ăна хирĕç вăрман леш вĕçĕнчен хĕвел ташласа çĕкленчĕ. Хĕрсем те, кайăкла ир вăранакан-скерсем, уçă сывлăша сирпĕнсе тухнă, барак умĕнче пĕр-пĕринпе тĕрткелешсе тем çуйхашаççĕ. Раман, вĕсем патнелле çывхарнă май, пĕрре чăрăш тураттисенчен çакланнă хĕвел çине, тепре хĕрсем еннелле пăха-пăха илет. Акă хĕвел те, йывăççен ытамĕнчен çăлăнса, тата çӳлерех çĕкленчĕ, хĕрсем те, çихĕрешсе, пĕрин хыççăн тепри баракалла чупса кĕрсе кайрĕç. Анюта çеç сасартăк чарăнса тăчĕ те каялла вăрт çаврăнчĕ.

— Сана пaçăрах асăрхарăм, — сапаланнă çӳçне майларĕ вăл. — Ăçтан таврăнать ку тетĕп. Аллунти кĕреçепе хунавсене куртăм та тин тавçăрса илтĕм.

— Ытла та çара уçланкăра. Йывăç лартни пăсмĕ терĕм. Ирсерен, ĕçе кайиччен, чип-чиперех икĕ-виç тĕм лартса ĕлкĕрме май пур, — вăтанарах сăмах хушрĕ Раман. — Таçтан тытăнас? Те çакăнтанах ĕнтĕ...

Анюта пусма картлашки тăрăх чупса анчĕ те Рамана алăран пырса тытрĕ, пĕр сăмах чĕнмесĕр урам леш еннелле ертсе кайрĕ.

— Акă çакăнта ларт, Раман, — терĕ хĕр, ăна куçран чăр пăхса, — çакăнта, эпĕ те пулăшăп.

Дубова та кунти ирĕклĕ вырăн килĕшрĕ. Васкасах шăтăк чавма пуçларĕ вара вăл.

— Ку хурăп санăн пулать, Анюта, — хăюлăх çитерсе, Раман та хĕре куçĕнчен пăхрĕ, — çăки — манăн. Пĕр бригадăра ĕçленĕ ятпа пулччăр.

— Уншăн анчах та мар, — йывăç тавра асăрхануллăн таптаса çаврăнчĕ Анюта. — Сан çăку эс вăрман ĕçлеме пуçланă ятпа ўстĕр, ман хурăн — эп вăрман касма пăрахнă ятпа.

«Эх, ятпа, ятпа...—хĕрхўн шухăшларĕ каччă.—Кам ятран якатĕ-ши сан хурăнун кăтрисене, кам çивĕтлĕ?»

Каччă шухăшне туйнă, ăнланнă евĕрех, Анюта çапла каласа хучĕ:

— Ман хурăна та пăхсамччĕ вара эс, качакасене тапăнма ан пар. Ахаль тумăп, хуларан сахăрланă пĕремĕк илсе килсе çитерĕп.

Раман хирĕç чĕнмерĕ, килĕшнĕ пек курăнса, пуçне сулса илчĕ те барак умĕнче шăл йĕрсе тăракан Çтаппана чышкипе юнарĕ. Çтаппан каçса кайса ахăрать:

— Курăр-ха, курăр ик тăмсая, вăрман варринче йывăç лартаççĕ! Ха-ха-ха! Вăрманта вăрман тăвасшăн. Тĕнче мыскари! Ха-ха-ха!

Тўссе тăраймарĕ Раман, Çтаппана барак хыçнелле хăваласа кĕрсе кайрĕ. Лешĕ, хурах кăшкăрса-шавласа, рабочисен пĕчĕк пўртне чăмма ĕлкĕрчĕ. Алăкра Раман кĕçех Иван Капитоновича пырса çапăнатчĕ.

— Тăр-ха, Раман, — хулĕнчен тытрĕ хайхискере Иван Капитонович.—Сана пăхса тăрса тĕлĕнтĕм эпĕ халь. Эсир Анютăпа иксĕр тытăннă ĕç савăнтарчĕ мана. Миçе çул пурăнатпăр çак шанклашкара, çавна шутласа пăхман. Кĕçех поселокĕ пĕтмелле. Урăх вырăна куçăпăр. Çап-çара уçланкă çуталса вырттăр-и вара кунта? Çук, вăрман çитĕнтĕр! Лартăр. Пурне те хутшăнтарăпăр ку ĕçе.

## 6

Делянка вĕсене, ĕнерхи-виçĕмкунхи пекех, кайăк юррипе кĕтсе илчĕ. Чăйй-чăрри! хушăнчĕ кайăк юрри çумне пăчкă саси. У-у-ух! ухлатса ўкрĕ çĕр çине йывăç. Кач-кач! иртет çивĕч пурттипе туратсене Анюта. Пип-пип, чăв-чав! сиккелет сăмса умĕнчех вĕлтрентăрри. Йăл-ял çиçет хĕвел йывăç тураттисем витĕр.

Раман Анюта еннелле никам сисмесле мар пăхса илет

те каллех пуçне йываç кутнелле чикет, такама темшĕн шăмарнăн, пăчкă аврине хытăрах та хытăрах чăмăртать.

Анюта хăй мĕн шухăш тытнине Иван Капитоновича каланă та пулмалла: çакă часах сисĕне пуçларĕ. Мастер, Рамансен ушкăнне пырса тухсанах, калаçăва кĕтмен хушăрах темелле çамрăксен ĕçĕ-пурнăçĕ еннелле пăрса ярать. Пуху умĕн вара куçранах каларĕ:

— Раман, комсомол скретарьне сана суйлама сĕнес тетпĕр. Партбюрора канашласа пăхрăмăр, пурте килĕшеççĕ. Атя, ĕçлер пĕрле.

Раман ним пĕлмене хывса ыйтрĕ:

— Анюта тата мĕн, пултараймасть-им?

— Эх, шельмă пуçĕ, — пӳрнипе юнарĕ мастер. — Анланмасть тетĕн пуль! Витĕр куратăп иксĕре те: вăл мĕнле кăмăллине те, хуна секретаре суйлама кам сĕннине те пĕлетĕн-иç!.. Анюти маттурчĕ-ха. Аишĕ пекех. Каясах тет те ĕнтĕ ак... Чарас темерĕм. Иксĕре пĕрле ĕçлени пит килĕшмеллеччĕ те... Анчах мĕн тăвăн...

— Темле çав, Иван Капитонович, секретарьте пултарасса шанмастăп. Ĕçлеме те нумай ĕçлемен те халь, çынсене пĕлсех каймастăп, — килĕшме васкамарĕ Раман.

— Шанмастăп тени аван мар. Пĕрре те. Хăвна ху шанмаллах, — каччă куçĕнчен тӳррĕн пăхрĕ Арсентьев.

— Ну, мĕнле калас сире? Салтакри мар-çке кунта, шкулти те мар. Пăхатăп та, пĕри — пĕр тĕрлĕ, тепри — тепĕр майлă. Пĕри килет, тепри каять. Çавăнпа шанмастăп тетĕп хама хам, — шухăшлăн калаçрĕ каччă.

— Апла эсĕ ку ыйтупа пуçна каллĕ-маллĕ çавăрттарнă иккен-ха, — кăмăллăн кулса илчĕ Иван Капитонович. — Эп иккĕленместĕп. Ху та ан иккĕлен. Ма чĕнместĕн?

— Пуху мĕн кăтартĕ унта... — чылаях чĕнмесĕр тăнă хыççăн каларĕ Раман. — Шанаççĕ пулсан комсомолецсем, ĕçлесе те пăхăп-и..

— Паçăрах çапла каламалла та, — каччă аллине тытса чăмăртарĕ парторг.

Кун иртет те çĕр иртет, çиелтен пăхма пурте пĕр хăпăхнă йĕрпе тикĕссĕн пырать темелле пурнăç, анчах хăй черечĕпе улшăнăвĕ килсех тăрать иккен кун уттине. Акă ĕнтĕ Раман — Иван Капитоновичăн çамрăксем енĕпе ĕçлекен сылтăм алли.

Раман каçхи поселокпа пырать. Юнашар, сылтăм енче, Анюта.

— Саламлатăп сана, секретарь, — алă пачĕ хĕр, — комсомол «тилхепине» çирĕп тыт. Ак çапла, çи-ирĕп тыт.

— Тавтапуç ырă сунпăшăн, Анюта.

Хĕр каччă хăлхинчен пăшăлтатрĕ:

— Ним те ан кала, Раман. Пĕлетĕп эс мĕн калассине, ăнланатăп. Сиснĕ эп сан шухăшна. Ман çине мĕншĕн часчасах пăхнине лайăх чухлатăп. Юрамасть. Каччă пур ман. Хыçалтах пырать вăл халь. Асатма тухнă.

Раман, çакна илтсен, хĕр аллине ваштах вĕçертрĕ, лешĕ хирĕç пĕр сасă та кăлармарĕ, утма çеç чарăнчĕ.

— Мĕнле каччă вара вăл хăй хĕрне урăххи ăсатнине хыçалтан йĕрлесе пыраканскер? — çула урлă выртакан турата тапса вăркăнтарчĕ тарăхса кайнă Раман.— Эп пулсан, тӳссе пыраяс çук. Хуса çитсе...

— Ну, мĕн хуса çитсе?..

— Ак çапла, хуса çитсе... — чышкине çĕклесе кăтартрĕ Дубов.

— Ихи-хик! — кулса ячĕ Анюта. — Апла пулсан, кăтартха хастарлăхна.

Каялла вăшт çаврăнчĕ те Анюта хыçалти темле çын еннелле вĕçтере пачĕ, çитсе ун хулĕнчен уртăнчĕ. Çул варринче хытса тăракан Раман тĕлĕнчен кĕçех вĕсем иккĕшĕ те пуçĕсене каçăртса иртсе кайрĕç. Виç-тăват утăм тăвать те Анюта каялла йăкăлт çаврăнса пăхать. Раман хуса çитсе ăна каччă аллинчен вăйпа çăлса илет-и те илмест-и тет пулĕ ĕнтĕ. Раман чăтать-ха — вырăнтан та хускалмарĕ. Шăлне шатăртаттарса çыртать вăл, чышкине чăмăртать. Анюта çаплах çаврăна-çаврăна пăхать. Раманăн тек тӳсĕмĕ çитмерĕ — вăрт çаврăнчĕ те Анютăсенчен тепĕр еннелле вашлаттарчĕ. Хыçалтан хĕр кăшкăрни ура сассипе тата каçхи вăрман шавĕпе хутăшса кайса çухалчĕ: «Раман! Ра-ман!..» Каччă ăна илтмерĕ.

Баракра чылайччен çывăрса каяймасăр асапланса выртрĕ вăл, хăйпе хăй калаçрĕ: «Туятăп эп ун ăшĕнче мĕн пуррине. Ахальтен иленсе пăхмĕччĕ вăл ман çине». — «Тен, йĕкĕлтет вăл сана? Тен, юри пăрахса утрĕ урăххи патне? Ма туртса илмерĕн? Хăю çитмерĕ-и?» — «Юрамасть, секретарь эпĕ». — «Апла пулсан, куçна хуп та çывăр»..

Хăйпе хăй çапла калаçса вĕриленнĕ Раман куçĕ умĕнчен Анюта сăнарĕ самантлăха та кая пĕлмест. Акă хĕр, пĕшкĕнсе, çăмăллăн, ĕнĕçӳллĕн хурăн тураттн иртет, пуртта кашни сулса ямассерен пиçĕ пĕвĕ шур хăва пек авăнать. Анюта хура кĕске пиншакпа, утмăлтурат çеçки пек сенкер çитсă кĕпепе, тутăрĕ айĕнчен тухса усăннă çӳç пайăрки çинче пăчкă кĕрпи... «Комсомол «тилхепине» çирĕп тытма сĕнекен, лартнă йывăç тавра тăпра таптаса çаврăнакан, ирхи хĕвелпе питне çăвакан, палламан каччăпа пыракан Анюта... Хăшĕ-ши вă... тĕрĕсси?

29772 чув
Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

Ыран вăл Шупашкара каять. Кайтăр, ара. Анчах мĕншĕн унашкалах куç мĕнче тăрать вăл?..»

## 7

Çурхи шыв-шур иртрĕ ĕнтĕ. Вăрман çăралса ешерчĕ. Раманпа Анюта пуçарнипе поселок варрине лартнă хунавсем те ешĕл тум тăхăнчĕç.

Хайне комсомол организацийĕн секретарьне суйланăранпа Раман ытлашши пысăк ĕçсемех туса ĕлкĕреймерĕ-ха. Çапах та ĕçĕн пуçламăшĕ хайне те, Арсентьева та самаях килĕшни сисĕнет. Кăшт тӳрккесреххĕн курăнакан, пустуй сăмах ваклама юратман çак каччă поселок çамрăкĕсем хушшинче сисĕнмеллех йĕрке кĕртме пултарнăшăн парторг чăн та савăнмаллипех савăнать. Улатăртан килнĕ вырăс каччипе — Миша Фильчинпа — Дубов халĕ ĕçрен пушă вăхăтра тăтăшах клубра ирттерет. Фильчин Раманран икĕ çул аслă, мотористра ĕçлет. Музыкăна питĕ юрататъ — баян, купăс ăста калать. Уяв ячĕпе концерт хатĕрленĕ куписенче чăвашпа вырăс каччи çапла часах туслашса çитрĕç. Иккĕшĕ вĕсем поселокри ватăрах çынсене те килĕсенчен «тăпăлтарса» кăларчĕç, клуб сцени çине тăратрĕç. Виçĕ сĕрме купăс тупăнчĕ. Хĕрӳ Хĕветĕр ашшĕн шăпăрне çĕклесе килчĕ. Арсентьев хăй те купăсçăсен ансамблĕнче халĕ.

Кĕçех районта ĕçпе юрă уявĕ кĕрлесе иртрĕ. Унта Юманлăхри пултарулăх коллективĕ те палăрма пултарчĕ. Дубов пăт пуканĕпе вылякансен командине йĕркеленĕччĕ, спортсменсем уявран призсемпе таврăнчĕç. Уявĕ вăл çапла аванах иртрĕ-ха. Анчах клуб заведующийĕ çук пирки ытти культурăллă ĕçсемпе палăраймаççĕ-ха юманлăхсем. Çавна пула Иван Капитонович Рамана вăрманпромхоз кантурне çитсе килме канаш пачĕ.

Кантурта каччă рабочком председательне, Илья Ильич Тарина, хăвăрт шыраса тупрĕ. Палламан-пĕлмен çыншăн Тарин малтанлăха ватă пек курăнать. Ир кăвакарма пуçланă çӳçне вăл хыçалалла яп-яка тураса вырттарнă. Куçлăхпа. Вĕçĕмсĕр пирус мăкăрлантарать. Калаçнă май темле тĕлĕнмелле сасăпа хăлтăр-хăлтăр кулса илет. Итлесе пĕтерчĕ те вăл Рамана — тӳрех пӳрнисене хуçлатса шутлама пуçларĕ:

— Сире тепĕр баян туянса паратпăр-и? Паратпăр. Хор валли форма пулать-и? Пулать. Библиотека куçарса паратпăр-и? Паратпăр. Штанга вара... Çук, пулмасть. Халлĕхе тăхтăр. Клуб заведующийĕ тупăнать-и? Тупăнать. Лартар-и Миша Фильчина? Унран лайăх завклуб пулать.

— Иван Капитонович та çавнах тăвасшăн клуб пуç-лăхне. Фильчинĕ хăй те килĕшет. Чирпе аптраканскерне мотористра чăнах та йывăртарах пуль çав, — терĕ Дубов.

Районти юрă уявĕнче Раман Анютăна питĕ шыранăччĕ. Чăваш хĕрĕсемпе вырăсла тумланнă пикесем хушшинче те таçтанах уйăрса илнĕ пулĕччĕ вăл ăна. Анчах хĕр ниçта та курăнмарĕ.

Çу каçипе те сас-хура памарĕ Анюта. Поселокра та ун çинчен асăнаканах пулмарĕ. Дубов асĕнчен кăна тухма пĕлмерĕ вĕçĕмсĕр чĕрене çунтаракан хĕр.

Ĕнтĕ шăрăх кунсем иртсе кайрĕç. Вĕлтрентăррисем те, иккĕмĕш хут чĕпĕ кăларса, кăнтăралла ăсанчĕç, ытти кайăк сасси те сайралсах пырать.

Раман çул хĕррине тухнă та татăлса ӳкекен вĕрене çул-çисене сăнаса тăрать. Сап-сарă çулçă сывлăшра вĕлтĕртетсе çаврăнать, хуллен каччă тĕлнелле анса пырать. Акă çы-вăхрах ĕнтĕ вăл. Раман аллине тăсрĕ. Çулçă, çакна кĕт-нĕн, пĕр-икĕ хутчен ярăнса илчĕ те ывăç тупанĕ çине анса выртрĕ.

— Килтĕн-и? — терĕ каччă, çулçа çавăркаласа пăхса.— Пăрахам мар, эппин, сана, упрам.

Раман ăна сумкинчи тетрадь хушшине чикрĕ те кабель сĕтĕрекен Çтаппана пулăшма васкарĕ.

— Çак резина пралука сĕтĕрсех тăн тухать ĕнтĕ, —лач сурчĕ лешĕ.

— Резина пралук мар, кабель, — терĕ Раман кулса.— Хăçан хăнăхса çитетĕн? Вĕрентсе ывăнтăм ĕнтĕ сана. Ним усси те çук.

Çтаппан хăйĕннех перет, хăйĕнлех калаçать. Дубова вăл тепĕр чухне самаях тĕлĕнтерет. Çынсем ăна тăрри шă-тăкрах теме хăнăхнă та, каччи хуть мĕн тусан та, мĕн персе ярсан та, «эй, çав тăрнаккайпа!» тесе алă çеç сулаç-çĕ. Чăнах та, Çтаппанăн тыткаларăшĕнче, сăмах-юмахĕнче тем пиçсех çитменни сисĕнет. Пĕвĕ, хытарса çитереймен пек, утнă чух та, пĕр вырăнта тăнă чух та лăнк-ланк ка-five, пуçне наян лаша каялла пăхнăн пăра-пăра илет. Çав самантра куçĕ ун урмăшлăн курăнать. Чĕлхи те çаврăнă-çуллă мар Çтаппанăн. Малтанах, пĕрремĕш хут ĕçе тух-сассăнах, сиснĕччĕ-ха Раман Çтаппан ăшĕнче мĕн пулса иртнине. Каярахпа ăнланчĕ: Çтаппан нимĕнле айван та мар, ача чух йывăр чирпе асапланса пăсăлса юлнăскер, вăл халĕ те, каччă пӳне кĕрсен те, çемçешке кăмăлне пула хăйĕнчен кулма юрататакансен мăшкăлĕ айĕнчен тухаймасть, Пĕррехинче Раман вăл тупката çинче куçне шăлса ларни-не асăрхарĕ, вара патне пырсах ыйтрĕ:

— Мĕн пулчĕ, Çтаппан?

— Ним те пулман, — чышкипе сăтăрса типĕтрĕ вăл куççульне, — чун кӳтсе килнипе чăтаймарăм. Пулкалать хăш чухне ман уҫ пекки, нимсĕр-мĕнсĕрех чун хурланса килет. Хама тăлăххăн туятăп вара. Хам та айăплă-ха. Сана та хамран сивĕтрĕм ав. Анютăпа иксĕр йывăç лартнинчен кăлăхах култăм, ашкăнса тепĕ пек. Эс ун чухне хирĕç мĕн те пулин калатă е тытса хĕненĕ пулсан, луччĕ хăвăрт иртсе каятчĕ пуль. Эсĕ, пур, хирĕç пĕр сăмах та чĕнмерĕн, кайран та тапратмарăн ун çинчен.

— Чипер калаç-ха, Çтаппан, эп ăна тахçанах маннă, — хыпăнса ӳкрĕ Раман. — Вăт мĕнле ача иккен эс!..

Çак калаçу хыççăн Раман Çтаппан çине урăхларах куçпа пăхма пуçларĕ.

## 8

Сивĕсем пуçланас умĕн Хĕрӳ Хĕветĕр Çĕпĕре тăванĕсем патне тухса кайрĕ. Вăл кайсан тепĕр куннех Дубовăн çĕнĕ ĕçе тытăнма тиврĕ: ăна бригадира лартрĕç. Пулăшаканĕ пулма хайхискер Çтаппана суйласа илчĕ. Ун вырăнне турат иртнĕ çĕртен пĕр çамрăка куçарчĕ. Ирех ĕçе тытăнаймарĕç. Касса пĕтернĕ пирки урăх çĕре куçмаллаччĕ. Хальчченхинчен виçĕ çухрăм шаларах кĕчĕç, юманлăхра чарăнчĕç. Ура айĕнче — çулçă кавирĕ. Çаралса юлнă йывăç тураттисем темле салхуллăн тĕмсĕлсе пăхнăн туйăнаççĕ. «Ан кулянăр, — тет Раман вĕсене, — çуркунне каллех çулçă кăларăр ак, вăрман илемне кӳрĕр. Хăшĕн пăчкă айне пулма черечĕ çитнĕ, ăна касмаллах ĕнтĕ пирĕн. Унсăрăн май çук. Ан ятлăр».

— Акă çакăнта пулать пирĕн делянка, — тĕллесе кăтартрĕ мастер. — Раман Дубов бригади кунта, Яков Кашкинăн — тепĕр кĕтессинче... Каснă йывăçа çак çул хĕррине кăларатпăр. Пурте пĕрле.

Ĕç вырăнĕ хатĕрлесе çитернĕ тĕле кăнтăрла çитрĕ. Рабочисем апата ларчĕç. Кашкин бригадинчен тин çеç çитнĕ Иван Капитонович Раман çумне вырнаçрĕ.

— Ĕçме сăра таврашĕ çук-и сирĕн? — сасартăк ыйтса тĕлĕнтерчĕ мастер çынсене.

— Мана карчăк парса янăччĕ те, — сумкинчен бидон кăларчĕ турат иртекен Хĕлĕх Хĕлимунĕ. — Чаплах мар тулĕк, шăркаланнă, ĕçсе пăхăр.

Мастер Хĕлимун тултарса панă куркана тытрĕ, юман кутне çуррине яхăн тăкса, сăрана майĕпен ĕçсе ячĕ.

— Ку мĕне пĕлтерет тата? — йывăçа мĕн тăррине çи-

тичченех куçĕпе пăхса хăпарчĕ Хĕлимун, — мухмăрлă мар пулĕ те юман.

— Çук-ха, юманĕ те, хам та мухмăрлă мар. Аса килчĕ, тахçанхи аса килчĕ. Çак юманпа, çак юманлăхпа çыхăннă истори. Ун чухне эпĕ ачаччĕ. Граждан вăрçи хыççăнах ĕнтĕ.

Апат çиме пăрахсах итлеме пуçларĕç çынсем Иван Капитонович калавне.

Чаккас çынни Юман Йăкăначĕ, граждан вăрçинчен таврăнсан, Улатăра милицие ĕçлеме кĕнĕ. Унта ăна Колчак çарĕсене аркатнă чухне пĕрле çапăçнă юлташĕ, милици начальникĕнче тăракансkер, чĕннĕ-мĕн. Йăкăнат хушăран килкелесе кайнă. Килĕнче тăхăрвуннă урлă каçнă ашшĕ тата арăмĕ, Варвари, ывăлĕ, Митрахван, пурăннă.

Вăрçă чарăннă пулсан та, ку тăрăхра лăпкă пулман. Патак Палюкĕ текен вăрă-хурах пуян ачисенчен, таркăн салтаксенчен, ĕçлемесĕр пурăнма хăнăхнă ăçтиçуксенчен пухнă ушкăн таврари ялсене чăтлăх вăрмантан сиксе туха-туха тапăннă. «Максим» пулемет таранах хĕçпăшалланнăскерсем, вĕсем совет активисчĕсене, комсомолецсене вĕлернĕ, ялсене çунтарнă. Милици отрячĕсем вăрă-хурах ушкăнне, майĕпен хĕстерсе, пĕтерсех пынă-ха. Анчах та хăшпĕр ялта хурахсене пулăшакансем пулнă, çавсем ĕнтĕ пуçкасансене хӳтĕлĕх кӳнĕ, милици ĕçĕ çинчен вăрттăн пĕлтерсе-систерсе тăнă.

Халĕ лесникра çӳрекен Михаил Сятров ашшĕ Кавĕрле те çавсемпе çыхланса кайнă. Сятровсем Дубовсенчен инçех мар, çырма урлăра çеç, пурăннă. Йăкăнат милиционер пĕррехинче Улатăртан яла таврăннă, ывăннăскер, вăл канма выртнă, алăка шакканипе вăраннă. Пӳрте пĕр ача хашкаса кĕрсе тăнă.

— Анне ячĕ мана, Йăкăнат пичче. Пырса кĕчĕç те пирĕн пата пăшаллă çынсем аннене кăрчама тупса пар тесе хăшкăлтарма тытăнчĕç. Анне мана кăрчама шырама тесе кăларса ячĕ. Эпĕ тӳрех кунта чупрăм.

Сятровсенчен кил урлăра пурăнакан Пăлаки ачи пулнă ку. Пăлаки упăшки вăрçăран таврăнайман. «Пăх-халĕ вĕсем, эсрелсем, хăраххăн хĕрарăма хăратса çӳреççĕ!» — тесе, Йăкăнат Пăлакисем патне тухса чупать. Пăч-тĕттĕм. Куçран йĕппе чиксен те курăнмасть. Анкарти хыçĕпе тӳрех кил хушшине пырса кĕрет вăл. Пăлакисен пĕчĕк чӳречинчен имшер çутă сăрхăнать. Йăкăнат, йăмра хыçĕнче çын пытанса тăнă пек туйăннăрăн, унталла йăпшăнса пырать. Акă, алла тăсмалла та хĕссе илмелле çеç хайхискере йывăç вулли çумне. Анчах, темĕнрен такăнса, тăрăнса каять

Йăкăнат. Йăмра хыçĕнчи çынна пурпĕрех урараи ярса илсе туртса антарать-ха вăл. Çав самантрах пăшал сасси янраса каять. Алла лекнĕ хураха Йăкăнат янахĕнчен тăнран тухмалла наклаттарать те пўрт алăкнелле ыткăнать. Ăна хирĕç, кĕмсĕртеттерсе те кăшкăрашса, икĕ арçын умлăн-хыçлăн сиксе тухать. Пĕрне тўрех ура хурса, теприне чышкăпа çапса антарать Йăкăнат.

Сятровсен йытти урса кайса вĕрме пуçлать. Çын çуйхашни, лаша тулхăрни илтĕнет. Сиссе те юлаймасть Йăкăнат, ура хунипе чикеленсе кайнă хурах тарса ĕлкĕрнĕ темĕн. Алла лекнисене ан вĕçерĕнччĕр тесе çыхса пăрахать.

— Палюк йĕксĕкĕсем кусем, ыттисем Сятровсем патĕнче, — куçне шăла-шăла йĕрет Пăлаки.

Çав вăхăтрах урампа вăрман еннелле пар лаша кўлнĕ тăрантас кĕрлеттерсе иртет, тĕттĕмре куçран пач çухалать. Хыçран виçĕ хут кĕрслеттерет Йăкăнат наганран. Ăна хирĕç пулемет тăкăртатать.

Сасăпа ял халăхĕ ура çине çĕкленет. Çынсем чупса çитеççĕ, тытнă хурахсене ял Совет çуртне илсе каяççĕ.

Юман Йăкăначĕсен лаша таврашĕ пулман, яланхи пекех, çуранах тухса утать вăл ирхине станцие. Çулĕ вунă çухрăм ярт вăрманпа пырать. Шăпах халĕ эпир ларакан çак вырăнта, юманлăхри çырма хĕрринче, сыхласа тăнă ăна хурахсем. Йăкăнат кунта хăйне хăрушлăх кĕтессе ăша та илмесĕр шăхăркаласа утнă. Сасартăк икĕ енчен те ун умне пăшаллă çынсем сиксе тухаççĕ. Йăкăнат кусем камсем иккенне самантрах тавçăрса илет те çиçĕмле хăвăртлăхпа пĕрне хăй айне пĕтĕрсе ўкерет. Çав хушăрах теприне урипе тапса сирпĕтет. Наганне кăларма ĕлкĕрнĕ Йăкăнат çапла тан мар тытăçăва кĕрет, тăшмансенчен юман хўттине тăрса хўтĕленет. Хурахсем ăна хупăрласа илеççĕ. Пĕрин хыççăн тепĕрне пере-пере ўкерет вĕсене Йăкăнат. Анчах, аманса пĕтнĕскер, хăй те нумай тытăнса тăраймасть, тăрăнса анать. Ун тавра кĕпĕрленнĕ хурахсем тĕлĕнсе пăхса тăраççĕ улăп пек паттăр милиционер çине. Унтан, вилнĕскерне, вăрмана шаларах сĕтĕрсе кĕрсе юман çумне вĕренпе çыхса хăвараççĕ. «Юман Йăкăначĕ юман çумĕнчех çĕртĕр», — теççĕ хурахсем.

Çухалнă Йăкăната тусĕсем çак юманлăхра шыраса тупнă.

Часах Палюк ушкăнĕн пысăк пайне çавăрса илсе тĕппипе пĕтерне. Çатра Кавĕрли Çĕпĕре ăсатнă хыççăн унта нумаях пурăнайман, вилнĕ. Ывăлĕ, Михали, ашшĕ çĕре кĕрсен каялла таврăннă, Палюк хĕрне качча илнĕ. Ашшĕамăшĕсен ачисем айăплă мар та, çапах ялйыш вĕсем çине

асăрхансарах, иккĕленӳллĕрех пăхнă яланах. Михала, лаша çинчен ӳксе уксах пулса юлнăскер, салтака кайман. Вăрçă тухичченех леснике ĕçлеме кĕнĕ. Чаккас сыннисене пайтах ăш хыптарнă вăл. Пули-пулмишĕнех пăшалпа хăратнă. Пĕррехинче Йăкăнат ывăлĕ, Митрахван, ăна лайăхах тытса ислетнĕ, пăшалне йывăç çумне çапса тĕпретнĕ, пурттине шыва вăркăнтарнă. Нихçан та ăш куçпа пăхман вăл Михала çине. Ара, Сятров Кавĕрли хурахсене Юман Йăкăначĕ çинчен пĕлтерме вăрмана ывăлне, Михалана, лашапа чуптарнă-çке. Темпе пĕтетчĕ ĕнтĕ вĕсен пĕр-пĕрне курайманлăхĕ — вăрçă тапранчĕ. Митрахван вăрçăран таврăнаймарĕ.

Чаккаспа кӳршĕллĕ Кураккасси çынни, Хĕветĕр ятлăскер, Кĕпитун Арсентьевсен кумăшĕ, пĕр вăхăт Çĕпĕре кайса пурăннă. Çавăнта вăл чăвашсем хушшине лекнĕ. Пĕри Чаккас çывăхĕнчи ялтанах пулнă. Палюк ушкăнне аркатсан çавăнта кайса лекнĕскер. Кайран Чăваш çĕрне таврăнас темен, Çĕпĕртех юлнă. Чирпе пит аптранă. Вилес умĕн Хĕветĕре хăйĕн чунне уçса кăтартнă, тет, çавă. Сятров Кавĕрли Палюка мĕнле пулăшнине те, хурахсем Юман Йăкăнатне мĕнле вĕлернине те тĕплĕн каласа панă, тет, «Эпĕ пĕрре те пемен ăна уп чух. Утаманăн çывăх тусĕ, лаша вăрри Ишмулла, юман хыçĕнчен персе амантрĕ, вăлах юман çумне çыхтарчĕ», — тенĕ пулать.

Халь тин никама та айăплаймăн. Сятров Кавĕрли те, Ишмулла та, Палюк ушкăнĕн хӳрешкисем те тахçанах вилсе пĕтнĕ. Вĕсен усал ячĕ çеç юлнă халăхра.

Иван Капитонович калавне вĕçлесен, никам та сăмах чĕнмерĕ-ха, мĕнле ларнă çаплипех йăшăлт та хускалмаççĕ вăрман касакансем. Шăплăха Арсентьев хăй сирчĕ:

— Вăт çапла, ачасем, икĕ тĕнче — киввипе çĕнни — кĕрешнĕ вырăнта халь эпир. Пирĕн ăна паллă туса хăвармалла. Мĕнле паллă тумаллине сирĕн бригадир, Йăкăнат виччен мăнукĕ Раман, хăех чухласа илĕ тетĕп.

Иван Капитоновича шăпăрттăн итлесе ларнă Раман ура çине тăчĕ те, пăчкине илсе, кăшт тытăнчăклăраххăн:

— Аплантăм, Иван Капитонч, — терĕ.

Пĕрне-пĕри сăмах чĕнмесĕр ĕçлерĕç Раманпа Çтаппан, хăйсем ларнă ватă юман айне çатракапа ытти тăркăшран тасатрĕç. Унтан Раман, пуçне çĕклесе, вулă тăрăххăн çӳлелле пăхрĕ те:

— Хăварар ĕнтĕ çак юмана, юлташсем, Йăкăнат Дубов милиционер ячĕпе лартăр, ирĕклĕн кашлатăр, — терĕ.

Мастер, уйпа килĕшсе, «Хăварар!» терĕ те, пурте ĕнтĕ васкасах ĕçе тытăнчĕç.

Тата кăштахран каллех Раманăн пăлхануллă сасси илтĕнчĕ:

— Хăварар-ха çакна та. Атте ячĕпе пултăр, пит кăмăла килмелле йăрăс юман.

Тепĕр темиçе йывăç тӳнтерсен, хайхи Çтаппан тарлă çамкине шăлса илчĕ те акă мĕн каларĕ:

— Хăварас çак çамрăк юмана та, Раман ячĕпе ӳстĕр, паян вăл бригадирта, мотористра ĕçлеме тытăннă ятпа.

Кун тĕттĕмленсе çитнĕ тĕлелле Арсентьев мастер участокĕнчи рабочисем юман касса чылаях пысăк лаптăк уçрĕç. Малашне ĕнтĕ унта-кунта хăварнă юмансем çеç çак вырăнта шалкăм вăрман пулнине аса илтерĕç, çĕнĕрен лартас хунав вăрмана хăвăртрах çĕкленме йыхăрĕç. Çул хĕрринчи пуринчен те çӳллĕ, пуринчен те сарлака ват юман кĕрхи çил çинче пăхаттир пек курăнса кашлать. Юнашарах, вунă-вуникĕ утăмра, тепĕр юман ун еннелле пуçне таять, вĕсенчен инçех мар ларакан çап-çамрăк юман сарă çулçисене сывлăшалла вĕçтерет. Çул хĕрринчи виçĕ юман, виçĕ пăхаттир, кĕрхи çилпе мăнаçлăн кашлаççĕ...

## 9

Кун хыççăн кун иртрĕ. Делянка куç умĕнчех çаралса пычĕ. Рамансем вăрмантан таврăнаççĕ те клуба васкаççĕ. Октябрь уявĕ çывхарать, концерта хатĕрленмелле.

Çав çулхине хура кĕр питĕ ăшă тăчĕ. Ноябрь çитеспе пĕрре юр çуса пăхрĕ те — каллех ирĕлтерчĕ. Вăрăма кайрĕ кĕр. Вăрман ĕçлекенсемшĕн ку лайăх-ха, вĕсем хĕллехи кĕртлĕ-юрлă кунсене юратсах каймаççĕ. Типĕ вăрманта ĕçлессине мĕн çиттĕр ĕнтĕ.

Юманлăхран çичĕ çухрăмра Мерчĕк поселокĕ ларать. Кунта тепĕр вăрман пункчĕ. Иккĕшĕ те пысăках мар пункт-сем, çавăнпа вĕсене пĕрлештерес пирки тахçанах калаçу пырать. Анчах халлĕхе сăмах çеç-ха ку. Халлĕхе икĕ пункчĕ те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет.

Миша Фильчин чылаях пысăк программăллă концерт хатĕрлесе çитерчĕ. Юлашки тĕп репетици иртерес вырăнне Мерчĕке кайса концерт кăтартма шутларĕç. Икĕ машинăпа тиенсе çитрĕç вĕсем кӳршĕсем патне. Пысăках мар клубра халăх туллиех. Раман хорпа пĕрле тăрса юрларĕ, унтан Маяковскин Ленин çинчен çырнă поэмине калама тухрĕ. Концерта вăл салтак тумĕпе кайнăччĕ. Залпа куçа-куçăн тăма хăнăхмансскер, хăйне именерех тытрĕ-ха. Поэмăна вуланăçемĕн ерипенех хăюланса пычĕ, сасси çирĕпленчĕ ун, алли сывлăша касать.

Раман каласа пĕтерсен, залри халăх пĕр хушă шăп ларчĕ, унтан пурте харăссăн алă çупса ячĕç.

Икĕ сехете яхăн пырать ĕнтĕ концерт. Клубра пăчăланса çитрĕ. Уçăлма тесе Раман хыçалти алăкран картишне тухрĕ. Тĕттĕм тулта. Çиллĕ. Унталла-кунталла кăштах уткаларĕ те каччă каялла кĕме тесе алăк умĕнчи çутта таврăнчĕ. Çак самантра уи умне пĕр хĕр тухрĕ тăчĕ.

— Салам, çухалнă каччă!..

— Тамара?! — тĕлĕннипе шак хытса тăчĕ Раман.

— Çапла, Ромашок, Тамара, — аллине тăсрĕ хĕр.

— Мĕнле майпа кунта эс?

— Мĕнле майпа тетĕн-и? Çаплах. Эпĕ ку вăрман хĕрĕçке-ха, кĕрхи тĕттĕм каç çуратнăскер.

Ним калама аптрарĕ каччă, пуçра самантрах тахçанхи аслатиллĕ каç, шкул вальсĕ ташлакан Стасикпа Тамара, пĕр хĕре ăсатакан икĕ каччă вĕлтлетсе иртрĕç.

— Мĕн пулчĕ сана, Раман, ма чĕнместĕн?

— А-а. Аха. Тĕттĕм каç çуратнăскер терĕн-и-ха?

— Çапла.

— «Тĕттем каç çухатнăскер» тенĕ пек туйăнчĕ те...

— Шкулти юлашки каçа аса илтĕн-им?

— Аса илтĕм, Тамара. Ăна иикам та манман пуль хамăрпа пĕрле вĕренекенсенчен.

— Паллах, манмаççĕ. Анчах уи чухне мĕн каланине манакансем те пур.

— Камсем?

— Калас-ши, калас мар-ши?

— Мĕн пытарса тăран тата?

— Стасик, çав Стасик манчĕ. Кайран каласа парăп. Халь сана курнипе хам та темле пулса кайрăм: миçе çул...

— Ултта...

— Çапла, ултă çул иртрĕ. Улшăннă эс, Раман, тĕрекленнĕ, чăн-чăн арçын пулса кайнă.

— Эс вара, Тамара, улшăн...

Хĕр ăна каласа пĕтерме памарĕ:

— Эх, Раман, ан калаç кирлĕ мара. Мана мар куратăн вĕт эсĕ халь, вунçиччĕре чухнехине куратăн...

Раман умĕнче, Раман асĕнче халĕ — Сятрв лесникĕн хĕрĕ, пĕрле, пĕр класра вĕреннĕ Тамара. Ашшĕ ăна кĕрсерен, вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн, вăрмантан Чаккаса тăрантаспа лартса килетчĕ. Тамара вара çăва тухиччен Рамансемпе кӳршĕллĕ мăнаккăшĕ патĕнче пурăнатчĕ. Тăнтăн пурăнакан Сятров Михали пĕртен-пĕр хĕрне шукăль тумлантаратчĕ, апат-çимĕçрен те тутлă усратчĕ. Класра Тамара ытти хĕрачасенчен ир пике сĕмĕ кĕме пуçланă

кĕлетки-пĕвĕпе, паха кĕпи-тумĕпе, хăйне хăюллă тыткаланипе уйрăлса тăратчĕ. Ашшĕсĕр ӳсекен Раман Дубовăн çиййĕнче ăшне ватка хурса çĕленĕ кивĕ пиншакчĕ, кăвак пир шăлаварччĕ, уринче — çăпата. Унтан-кунтан саплăклă пиншакне килте черетпе амăшĕ те, пиччĕшĕ те тăхăнатчĕç.

Тумтирĕ начар пулсан та, кăмăл-туйăмĕ çунатлăччĕ ачан. Тамарăн илемлĕ сăнĕ-пичĕ ăнран янăччĕ апăршана. Улттăмĕш класра чухнех вăл ăна вăрттăн çырусем парkаласа пăхрĕ. Хĕрача хирĕç, витлесе, чĕлхе çеç кăларса кăтартрĕ. Хăй вара Василий Павлович учитель ывăлĕнчен, Стасикран, уйрăла пĕлмесĕр çӳретчĕ. Раман ăшчикĕнче айванла тăвăл çураçусăр алхасатчĕ. Шкулта калаçма май килменрен вăл хĕрпе урăх çĕрте куça-куçăн тĕл пулма йӳтĕм шырарĕ.

Тамарăн химипе ĕç ăнмастчĕ. Стасик та ку предметпа вăйлах марччĕ. Раман вара яланах «пиллĕк» илетчĕ. Хайхи ача, учительницăпа килĕшсех, Тамарăна химипе пулăшма шут тытрĕ. Пĕр кунхине шкултан таврăнсан Тамарăсен мăнаккăшĕсем патне каçрĕ. Лесник хĕрĕ сĕтел хушшинче пĕчченех кĕнеке вуласа ларатчĕ. Çитсе кĕрсен, Раман алăк кутĕнче хăюсăррăн чарăнса тăчĕ. Тамара пуçне çĕклерĕ те: «Э-э, эсĕ-и ку, Ромашок, уруна салт та ирт, лар ак çакăнта», — тесе хăйпе юнашар вырăн кăтартрĕ. Ача васкасах урине салтрĕ, тăлисене алăк сули çумне пуçтарса хучĕ. Сĕтел пуçне тухса тăнă Тамара унран тăрăхлама тытăнчĕ: «Ну, халĕ ĕнтĕ, çаруран рыцарь, кала мана тӳррĕн, сана çеç юрататăп, сана çеç курас килет, сана аса илсе çĕр çывăраймастăп тесе чĕркуçленсе тупа ту, вара ĕненетĕп эс мана юратнине».

Раман хĕремесленсе кайрĕ, чĕри хыттăн-хăттăн тапрĕ ун, чĕлхи çĕтрĕ. Хĕрĕн çунса таракан куçĕнчен пăрăнчĕ те вăл шăл витĕр темиçе сăмах аран-аран сăрхăнтарса кăларчĕ: «Тамара, пĕлетĕн-и, эпĕ... пурпĕрех сана...» Тамара пĕчĕк ача пек сиккелерĕ, урай варринче ташласа çаврăнма тытăнчĕ. Хăй çине тĕлĕнсе пăхса таракан Раман умĕнчен мăнкăмăллăн кула-кула иртрĕ. Унтан Раман умнe тăп чарăнчĕ те: «Куртăн-и ĕнтĕ камне, эпĕ мĕнлине? — тесе йĕкĕлтерĕ. — Пулас артистка эп! — пуçне каçăртрĕ çавăнтах. — Эсĕ кам? Çаруран рыцарь. Шутла пуçупа лайăхрах. Кампа кăмăллă мана юнашаррăн утма? Санпа-и е Стасикпа? Акă, тыт хăвăн вăрттăн «романусене», сыр та çăпатусене — вĕçтер аннӳ патне кăмака çине. Ытах юрататăн пулсан, йĕркеллĕ тумлан малтан, культурăлан, кайран ман хыççăн ут. Мăнакка сан çинчен аннене каласа панă, сан çырăвусене вуланă вĕсем. Анне те, атте те кăш-

ласах яраççĕ халь мана. Хăвăртрах тухса вĕçгер кунтан. Кĕçех мăнакка çитмелле».

Хирĕç сăмах та шарламарĕ Раман, тăли-çăпатине илсе хул хушшине хĕстерчĕ те çара уранах килнелле тухса чупрĕ. Хăйне Тамара çапла мăшкăл кăтартнăшăн çурăлса тухасла тарăхрĕ пулин те, чăтрĕ вăл, чĕрине хытарчĕ.

Кайран, каникул вăхăтĕнче, Раман çу каçипех плугарьте, комбайнер помощникĕнче ĕçлерĕ, аттестат илес куна тесе костюм, шурă кĕпе, галстук, пушмак туянмалăх укçа турĕ.

Юрату тени Раман чĕринчен тухма пĕлмерĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланаспа Сятров Михали хĕрне тăрантаспа каллех тăванĕ патне лартса килчĕ. Раман чӳречерен Тамара çине ăмсанса, тĕмсĕлсе пăхса тăчĕ. Каçхине вăл çырма хĕрринчи кĕлет умне вăййа тухрĕ. Тамара та хĕрсемпе унта пынăччĕ. Стасик çукчĕ. Раман Тамарăна ташша чĕнчĕ. Хĕр килĕшрĕ. Ана куçран пăхма вăтанса çаврăнчĕ каччă вăйă картинче. Тамара хăй сăмах пуçларĕ. «Эсĕ, Ромашок, — пăшăлтатрĕ вăл каччă хăлхинчен, — манпа мĕншĕн калаçманнине пĕлетĕп, çилленнĕ эсĕ мана. Хăвах шухăшла, мăшăр пулаймăпăр эпир иксĕмĕр. Санран халь те темле мазут шăрши перет, хуть мĕн кала, эп Стасикках кăмăллатăп. Авă, сăмах çинех килчĕ вăл, эп унпа ташласшăн».

Хăраххăн тăрса юлнă Раман чунĕ тăвăнса килнипе вăйă картинчен пуçран çапнă пек тухса утрĕ.

Вĕренӳ çулĕ сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Юлашки экзамен. Асату касĕ. Раман шкула лайăх тумланса пынăччĕ. Тамара савăнăçлăччĕ, унпа та ташларĕ. «Мĕн тери килĕшет сана ку костюм, Ромашок, — каччăн усăнса аннă хура çӳç пайăркине тӳрлетсе, куçран пăхрĕ Тамара, — ахалех тарăхтарнă эпĕ сана çăпатапа мазутшăн, хитре-çке эсĕ, вăйлă». «Хитре тумтирлĕ хитре каччă кирлĕ апла сана?— шухăшларĕ Раман. — Стасик манран та яка тумланнăçке...» Тамара Рамана алăк патнелле туртрĕ. Тулта çумăр лӳшкетчĕ. Аша писнĕ хĕрпе каччă шăвăшлăхран шапăртатса юхакан çумăр шывĕпе пичĕсене çурĕç.

Акă халĕ те Раманăн ывăç тупанĕ йĕпе, анчах çумăр шывĕ мар ку, Тамарăн куççулĕ: вăл темшĕн йĕрет. Раман шкул вальсĕпе акăш пек таплăн çаврăнакан, сывпуллашса юлашки хут ала тытакан, Стасикпа юнашар утса каякан вупçиччĕри Тамарăна аса илет...

## 10

Алăкра шавлани илтĕнчĕ. Концерт пĕтрĕ пулас. Тамара, кăрт сиксе, Раман хулпуççийĕ çинчен пуçне çĕклерĕ.

— Итле-ха, Ромашок, — терӗ вара хӑйӑлтирех сасӑпа, — ан кай кӗҫӗр Юманлӑха. Эпир кунтан инҫех пурӑнмастпӑр.

— Ыран, канмалли кун, воскресник ирттересшӗнччӗ ҫамрӑксемпе... — аптраса тӑчӗ Раман.

— Сансӑр ирттереймеҫҫӗ-им! Ӗлкӗрен ирпе...

Каччӑ кӑштах иккӗленсе тӑчӗ те:

— Юрӗ, — терӗ, шухӑшне татса. — Эс ҫакӑнтах тӑр, эппин. Эп юлташсене кӗрсе пӗлтерем...

Кӗҫех вӑл, алӑкран васкасах кӗрсе кайнӑскер, каялла чупса тухрӗ.

— Пулчӗ. Калаҫса татӑлтӑмӑр. Воскресник пуҫланиччен ҫитсе ӗлкӗретӗп ыран.

Кунти тавралӑха Раман лайӑхах пӗлмест. Тамара ӑна кукӑр-макӑр ҫулпа ҫырма урлӑ вӑрман ӑшнелле илсе кӗрсе кайрӗ. Умра йытӑсем вӗрсе ячӗҫ.

— Альма, Тарзан, шӑпланӑр! — хӑтӑрчӗ вӗсене Тамара.

Йытӑсем, йӑпӑлтатуллӑн найкӑшса, сӑнчӑрсене чӑнкӑртаттарчӗҫ.

— Пӳрте кӗместпӗр, — вӗрлӗк карта урлӑ каҫрӗ Тамара, — пӗве хӗрринче ларӑпӑр.

— Сивӗ пулмӗ-и?

— Ҫук.

Раман хӗре хулпуҫҫинчен салтак бушлачӗ уртса ячӗ.

— Итле-ха, Раман, ҫартан таврӑнни кӗҫ ҫулталӑк ҫитет терӗн. Ҫапах салтак тумӗпех ҫӳретӗн-ҫке... Костюмпа пальтолӑх та ӗҫлесе илеймерӗн-и халиччен?

Раман куҫӗ умӗнчен каллех «тумлан малтан, культурӑлан, кайран ман хыҫҫӑн ут» текен хӗр сӑнӗ вӗлтлетсе иртрӗ, салтнӑ тӑла-ҫӑпатана хул хушшине хӗстерсе чупакан ача аса килчӗ. Халӗ те вӑл ҫав хӗр ҫумӗнчех, унпа юнашарах, ҫӑпатапа мар, атӑпа, пир йӗмпе те мар, салтак шӑлаварӗпе. Пурпӗрех хӗр ӑна костюмпа пальто туянманшӑн тӗртсе пырать.

— Укҫа ҫитмест, — терӗ аптранӑ енне Раман.

— Аҫта хуран тата укҫуна? Пулас арӑму валли пухатӑн-им?

— Эс ан кул-ха. Киле пулӑшмалла. Пичче пӳрт лартасшӑн.

— Хӑҫан качча ӗретне кӗрес тетӗн-ха?

— Пӗлместӗп.

— А эп пӗлетӗп. Тытатӑп та тумлантаратӑп сана. Аттеп укҫа нумай. Ярса илетӗп те мӑйкӑчласа лартатӑп сана хам ҫумӑма, ак ҫапла. Ак... ҫапла...

Раман тути пӗҫерсе кайрӗ. Куҫӗ хуралса килчӗ. Вӑл

татах кĕнеке вуласа ларакан хĕр умĕнче хăй çаруран «Тамара, пĕлетĕн-и, эпĕ... пурпĕрех сана...» тесе вăтанчăкпăн пăшăлтатса тăнине аса илчĕ. Акă халĕ ăна ун чухне юрату çырăвĕсене каялла персе панă хĕр майран ыталаса чуптăвать...

— Пирĕн икĕ пĕве, — чĕкеç чĕлхипе чĕвĕлтетрĕ Тамара, — пĕри сан пулать, тепри — ман. Варрипе çул. Ун тăрăх иксĕмĕр утăпăр. Ак çапла.

Пĕве хĕррине çитсе чарăнчĕç.

— Атя сулă çине, — аллинчен туртрĕ йĕкĕте Тамара,— тул çутăличченех ярăнса çӳрĕпĕр...

Раман умри пысăках мар сулă çине сикрĕ. Лесник пӳрчĕ хыçĕнчи чăрăш тăррисемпе выляса, уйăх майĕпен имшер çутине пĕве тĕкĕрĕ çине сапалать, сулă çинче салтак бушлачĕ пĕркенсе ларакан Тамарăна питрен ачашлать.

— Пĕве çинелле пăх-ха, Раман. Мĕнле илемлĕ, тĕттĕм шыв тĕпĕнче уйăх! Акă, шыв тĕпĕнчи чăрăш тăррисенчен хăпрĕ вăл.

— Аха, чăнах та.

— Халĕ кур! — кĕсменпе чалт! çапрĕ шыва Тамара. Вăрманĕ те, улăхĕ те, çăлтăрсем те çутă тĕттĕм хум хушшинелле тĕпренсе тăкăнчĕç. — Стасик аса килчĕ, çавăнпа тарăхрăм, тĕнче илемне те хĕрхенмерĕм, хум айне путартăм.

Сулă пĕве варринелле хуллен-хуллен шăвать, хыçран тăсăлса пыракан вĕтĕ-вĕтĕ шатрашкаллă шыв хӳре çинче тулса çитмен уйăх çăлтăрсемпе ташлать. Яштака чăрăшсем шĕвĕр тăррисемпе кармаша-кармаша алă сулнăн туйăнать. Раман Тамара çумне чĕркуçленсе ларчĕ.

— Стасик чаплă пурнăç парнелеймерĕ мана, — салхуллăн калаçать Тамара.

— Сана та, Стасика та шкулти сывпуллашу каçĕ хыççăн урăх курман эпĕ...

— А эп сана курнă, — пуçне каччă хулпуççийĕ çине тайăнтарчĕ Тамара.

— Пулма пултараймасть! — тĕлĕнчĕ Раман. — Эпĕ тепĕр куннех пиччепе Тарăнвара тухса кайнăччĕ, куккасене пӳрт лартса пама... Каялла таврăннă çĕре Стасик та, эсĕ те çукчĕ. Эсир иксĕр мăшăрланнă, таçта куçса кайнă, терĕç.

Тамара ассăн, ассăн сывласа илет.

— Пире, ухмахсене, вĕлтренпе хытă вĕтелемелле пулнă та ун чухне... Стасикран манăн çне юлнăччĕ. А эс тата, тепĕр ухмаххи, çавăрттаран та çавăрттаран мана ташăра,

ăш пăтранать, аран-аран уçă сывлăша тухса ĕлкĕртĕм... Намăсран атте-анне пире туйсăрах мăшăрлантарчĕ те, Саратова Стасик мучăшĕ патне тухса кайрăмăр...

— Эсĕ мана хăçан, ăçта курнă вара? — ĕнтĕ нимĕн кала пĕлменрен ыйтрĕ Раман шăпăрт пулса ларнă Тамарăран.

— Саратовра, Ромашок... — каччă çӳçне тĕлсĕррĕн арпаштарса калаçрĕ Тамара. — Тĕлĕкре. Эс мана, атте патĕнчен пушăт вăрласа тухса, çăпата туса патăн пек, ура сырса ятăн мунча умĕнче, пуçна çĕклесе те пăхмарăн. Ман валли халат çĕклесе пыракан Стасика курсан, таçта тăрса утрăн, куçран пач çухалтăн. Тепрехинче тата сана кум тунă пек эп. Урăх курман, темле курас тесен те... Паянччен те. Халь акă эсĕ ман çумра, халь эсĕ тĕлĕкре мар, халь эсĕ...

Тамара Рамана мăйĕнчен ыталарĕ, пуçне унăн сарлака кăкăрĕ çине хучĕ, чыхăнса чуптунă хыççăнхи пек пӳлĕнепӳлĕне сывларĕ. Раман ăна пилĕкĕнчен çатăрласа илчĕ.

— Вĕлеретĕн вĕт, упа. Стасикпа танлаштарсан, сан вăю... Эх, начар çын тĕлне пултăм эпĕ, Раман. Шкулта вĕреннĕ чух атте-анне культурăллă çын ачипе çӳреттерессĕн пулчĕç. Çӳретрĕç. Савăнтартăм вĕсене. Хамшăн çеç савăнăç пулмарĕ. Ачам та, Алеша, çулталăкченех чирлесе вилчĕ...

— Стасику ăçта халь сан? — чăтаймасăр ыйтрĕ Раман.

— Саратовра. Ун халь хула майри пур. Лайăхраххи, манран хӳхĕмреххи... Юрĕ, йĕркипе калам, эппин. Стасик мучăшĕ, Витя пичче, аэропорт çывăхĕнчи Днепровски текен урамра пурăнатчĕ. Кунĕн-çĕрĕн арçынсем валли атăпушмак çĕлетчĕ, кăвакарчăнсемпе айланатчĕ. Пĕрне, Султан ятлăскерне, пĕрмай пасара кайса сутатчĕ. Лешĕ, пысăк пĕсехеллĕ, шурă кăвак кăвакарчăн, сутса янă çĕртен темиçе кунтанах калле вĕçсе таврăнатчĕ. Пĕррехинче хайхи таврăнмарĕ Султан. Питĕ кулянчĕ Витя пичче, выç куç... Мĕн чухлĕ пăхса тăман пулĕ эпĕ кăвакарчăнсем ӳхĕрсе вĕçнине! Вĕсен ирĕклĕ ваййи чуна кăвак тӳпенелле туртатчĕ, хамăр Чăваш çĕршывне вĕçсе çитсе сасартăк сан умна анса ларас та килетчĕ. Ак çапла юратса ыталас килетчĕ...

Сулă чӳхенсе илчĕ. Пĕве варринчен тавраналла вĕтĕ хумсем ункăланса йăрăлтатрĕç. Именсе пĕлĕт аркипе хупланнă уйăх та, куç мăчлаттаракан çăлтăрсем те çав хумсем çинче чӳхенсе ташларĕç, симĕс чăрăшсем лапсăркка туратттисемпе алă çупрĕç.

— Шкулта чухне те сăмах тупаймастăнччĕ эс, Ромашок, халь теименчĕк, — каччăн нӳрĕ çӳçне шăла-шăла илчĕ Тамара. — Арçынпăн хăюллă пулмалла. Арçын вĕт эс халь,

Ромашок! Чăн-чăн арçын. Эх, хăю çитереймен пиркиех хĕр пилĕкĕнчи пиçиххие салтаймаççĕ хăшпĕр каччăсем. Кайран ӳкĕнеççĕ. Кайран, ху пĕлен, каю шăтать. Çапла пуль, Ромашок?

Нимĕн те чĕнмест Раман. Ача чухнехи юратăвĕ, юмахри пек, пĕлĕтрен татăлса аннăнах туйăнать халь ăна. Çав юратăва курса-туйса тăнипе анрасах кайрĕ вăл. Пĕрлех, юнашарах халĕ çав юрату, тахçанхи пек таçта тармасть, куçран çухалмасть, тарма мар, Раман çумне хыттăнран та хыттăнрах çыпçăнать, йăпшăнать. Юрату— темле пуççавăрмăш юрату — сулă çинче ярăнать.

— Хăюллă пулмалла тетĕн апла? — сывлăшне çавăрса ярса сăмах хушрĕ Раман.

— Ахă, — ачашшăн чĕнчĕ Тамара, — хĕр юратăвне хăюллăн çĕнсе илмелле те хăюллă сыхласа упрамалла.

— Стасик пек-и?

— Мĕнле калас... Стасикăн хĕр пилĕкĕнчи пиçиххие туртса салтма хăюлăхĕ çитет. Анчах ăна хăй аллинче, хăй кăкăрĕ çумĕнче ачашласа усрамашкăн вăйĕ çитмест. Юратăвĕнчен тарса, тарса пырать вăл. Çынсем хăйсен хыçĕнчи кĕпере çунтараççĕ пулсан, вăл умĕнчине çунтарать. Манпа мĕн туса хучĕ вăл? Вĕренсе пĕтерçĕ те университетне — Алдан тăрăхне ылтăн шырама тухса кайрĕ. Эпĕ пĕччен тăрса юлтăм. Курма килсе каятчĕ те укçа парса хăваратчĕ, каллех хăйĕн экспедицине тухса вĕçтеретчĕ. Консерваторирен те вĕренсе тухаймарăм, çурма çулта пăрахма тиврĕ. Пулмарĕ манран юрăç, артистка тухмарĕ. Кунта та йăнăшрăм эпĕ. Хытах. Кайран ача садĕнче ĕçлерĕм. Пĕлтĕр Витя пичче кăвакарчăнĕсене вĕçтернĕ чухне сарай тăрринчен ӳксе хытă аманчĕ. Больницăра вăрах выртрĕ. Ват шăмшак чăтаймарĕ пулас, вилсе кайрĕ çын. Пытарнă кунхине кăвакарчăнсене эпĕ хамах уçса кăлартăм. Кунĕпе вĕçрĕç вĕсем. Лайăххах пăхрăм та хайхискерсене — шалт тĕлĕнсе тăтăм. Ушкăнра Султан та пур! Ыттисене каялла читлĕхе хупнă чухне пач çухалчĕ. Хуçине ăсатма пычĕ пуль çав... Витя пиччен ывăлĕ пурччĕ, комбайн заводĕнче ĕçлетчĕ, темле майра патĕнче пурăнатчĕ. Ашшĕ вилсен, вăл килне пĕччененех таврăнчĕ. Çулăхса тăнран кăларчĕ мана. Утма-тăма та памастчĕ. Йĕрĕнчĕкскер çине пăхассăм та килместчĕ. Çапла тăркăшса пурăннă хушăра Стасик килсе çитрĕ. Кӳршĕсем тем элеклесе панă ăна. Иксĕмĕр юлсан, мана вăл çапла каларĕ: «Эпĕ Алдан тăрăх ылтăн шыраса чире кайрăм, эсĕ Саратовра ылтăнланă автанпа асса кайнă», — терĕ. Экспедицисенче шăнса ӳпкине пăсăнăччĕ вăл, хулана таврăнмассерен Атăл леш енчи санаторие

каятчĕ. Ҫайрантарах унта хăйне сиплекен врачпа ҫыхланса кайнă. Хайхи япалисене пуҫтарчĕ те ун патне пурăнма куҫрĕ. Эпĕ те тухса килтĕм вара.

Раман ҫумĕнче куҫне, ҫамкине аллипе хĕреслесе хуплана Тамара ларать... Иккĕшĕ те чĕнмерĕҫ. Ҫыранти витерен лаша тулхăрни илтĕнет. Ăна хирĕҫ сас туса, сăнчăрти йытă вĕрсе ячĕ. Унтан таврара каллех шăпланчĕ. Пĕлĕт аркине сирсе пăрахнă уйăх пĕве вĕҫнех куҫса кайнă, ҫăлтăрсем ҫеҫ паҫăрхи вырăнтах куҫ хупмалла выляҫҫĕ, шĕвĕр тăраллă чăрăшĕсем лăссисене ĕшенчĕклĕн лăс уснă. Сулă ҫыран хĕрринелле шăвать.

Раман ҫамрăк хĕрарăма пусĕнчен ачашлать, лăпкать, ăшă сăмахпа лăплантарать.

— Ҫывăрса каятăп ак кун пек... Арҫын ачашланине манса кая пуҫланă ĕнтĕ эпĕ.

Уйăх ҫутине ҫĕнтерсе, шурăмпуҫĕ палăрса килчĕ. Тамара сăнне-питне уҫăмлăн курма кансĕрленĕ каҫ чаршавĕ майĕпен сирĕлсе пырать ĕнтĕ. Раман халĕ хĕрарăмăн кăтралатнă ҫӳҫне кăна мар, шĕвĕртерех сăмсине те, путарах панă куҫне те, ҫӳхерех тутине те аван уйăрать, шап-шурă шăлĕсене курать. Каҫ тĕттĕмлĕхне тартнă кун ҫути Раман умне пурнăҫ тумхахĕнчен такăнса чĕркуҫҫине шăйăрттарнă ҫамрăк хĕрарăма кăларса тăратрĕ. Ун ҫине сăнаса, кăшт шеллесе пăхрĕ каччă, вара йăл кулса илчĕ:

— Салам сана, Тамара!..

Тамара та Рамана куҫĕнчен тинкерчĕ:

— Салам, Ромашок! Мĕнле чупатăн?

Сулă пĕве ҫыранне ҫитсе чарăнчĕ. Раман Тамарăна, сылтăм алă вĕҫҫĕн ҫĕклесе, ҫĕр ҫине антарса тăратрĕ те хыттăн ҫапла пăшăлтатрĕ:

— Пит хастар чупатăп. Эпĕ сана... сана... Тамара...

Сасартăк йытă вĕрсе янипе вăл пӳрт еннелле ҫаврăнса пăхрĕ.

— Ху упа пек, чуну — мулкачăнни, — тăрăхларĕ унран Тамара. — Халĕ чуп Юманлăха! Кĕҫĕр каллех кĕтетĕп. Тепĕр пĕвинче ярăнăпăр, сан пĕвӳнте. Юрать-и?

Раман хăюсăррăн пуҫне пăрчĕ:

— Килессе килĕп-ха эп, ярăнма та ярăнăпăр. Ҫайран мĕн пулĕ?

— Эх, эсĕ те ҫав, шиклĕ каччă! Ҫавна ăнланмастăн,— кулчĕ Тамара. — Халь вĕҫтерех, Ромашок, чуп, эп те киле кĕретĕп. Ыш! Сивĕ.

Раман Мерчĕк еннелле васкаса утрĕ, каялла ҫаврăнса пăхрĕ: Тамара алă сулса тăрать. Ăна хирĕҫ хăй те алă сулчĕ те уттине хăвартлатрĕ. Ҫул тăршшĕпех шухăшласа

пычĕ вăл: «Эх, Тамара, Тамара. Хăюллă, вăйлă арçын шыратăн. Шкулта чухне пир йĕм тăхăннă çăпаталлă каччăсене çывăха ямастăн...»

Утнă çĕрте утса, чупнă çĕрте чупса сисмесĕрех çитрĕ вăл Юманлăха. Çуркунне лартса хăварнă йывăçсем патĕнче чарăнчĕ. Акă, çăка çумĕнче — Анютăн хурăнĕ. Мĕнле-ши вăл халь, Анюта? Çыру çаплах çырмасть. Нимĕнле сас-хура та çук. Хурăнĕ çулçă тăкман-ха хĕрĕн, тăрринчи çулçăсене сарă та тивсе ĕлкĕреймен. Çуркуннерепех, çăвĕпех шăварса тăчĕ ăна Раман. Лайăх пăхсан, йывăç та хăвăрт ӳсет, сарăлать иккен.

Хулпуççи çине кĕреçе çавăрса хунă Миша Фильчин çитсе тăчĕ.

— Улах ачине салам! — шăл йĕрчĕ вăл. — Тӳрех тупнă вара эс, маттур!

Раман ăна алă пачĕ, хăй савăнăçлă, тусĕ умĕнче кăшт мухтанса илесси те килчĕ унăн:

— Çапла ăна кайнă-кайман тупаççĕ. Туртатăн-тӳртатăн баянна — хĕр мар, шăлсăр карчăк та туртăнмасть хăвăн çумна.

— Ничево, — хур аçилле пуçне каçăртрĕ Фильчин, — ман урама та уяв çитĕ-ха. Хăвăртрах çырткаласа тух. Хырăмна пыллă чейпе сарса ĕлкĕрейменех-ха ĕнтĕ эс унта.

Кунĕпех ĕçлерĕç каччăсемпе хĕрсем, çухалас поселокпа сывпуллашма хатĕрленнĕн, йывăç лартрĕç тар кăларсах.

## 11

Октябрь уявне юманлăхсем чаплăн кĕтсе илчĕç. Йывăç касассипе те, ăна анатри склада турттарса кăларассипе те вĕсем вăрманпромхозра мала тухрĕç. Коллектива куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав пачĕç. Арсентьев участокĕ пунктра пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Тепĕр савăнăç: тин кăна вăрманпромхоза килнĕ пăчкăсене, «Дружба» ятлăскерсене, пуринчен малтан вĕсене пачĕç.

Моторлă пăчкăпа ĕç палăрмаллах çăмăлланчĕ, хулпуççи çине лартать те халĕ ăна Раман — делянкăна тухса утать. Унччен пек, электростанци патĕнчен кабель сĕтĕрсе хăшкăлмасть. Çитменнине тата кабеле çӳле çакмаллаччĕ. Çĕрте вырттарсан, урапа-çуна, трактор е ӳкнĕ йывăç çаклатса тăна илетчĕç. Пĕр хăравçи тата çĕлен тесе пуртăпа та лачлаттарнăччĕ кабеле. Пайтахчĕ чăрмавĕ.

«Дружбăна» Раман часах хăнăхрĕ. Электропăчкăпа иккĕн ĕçлетчĕç пулсан, халĕ — пĕчченех. Йывăça майлă тӳнтерме тĕксе пулăшакан çеç кирлĕ.

Çĕнĕ пăчкăпа ĕçлеме тытăннă малтанхи эрнинчех Дубов патне кӳршĕ делянкăран Яков Кашкин пычĕ. Якку унран нумай та аслă мар, çирĕм тăваттăра кăна-ха. Типшĕмрех пит-куçлă çамрăк. Хăйне Хĕрӳ Хĕветĕр помощникĕнчен бригадира куçарнă хыççăн авланчĕ. Тĕрĕссипе, Юманлăхри лавккаçă — хăйĕнчен вуникĕ çул аслă, шите яхăн çӳллĕрех, тулли кĕлеткеллĕ, çивĕч чĕлхеллĕ, пурте Машка-Милашка текен ачаллă хĕрарăм патне киле кайса кĕчĕ. Хăлхи витĕр мартан салтака юрăхлă пулайман Кашкин. Хыттăн калаçать. Питне куктĕрри пусса илнĕ. Сарлака туталлă, лапчăк сăмсаллă, пуçĕ те ун ик енчен хĕстерсе лапчăтнă пек курăнать. Сарăрах шăлĕсем сайра. Кушак куçне аса илтерекен куçĕ темле тĕссĕрленсе вăрттăн йăлкăшать. Çынна хирĕç тӳррĕн пăхмасть. Шултра хĕрлĕ çӳçĕ ялан арпашăнчăк.

Кăмăла каймасть вăл Рамана. Ĕçне те тăрăшсах тăвать ĕнтĕ Яков Кашкин, комсомол енĕпе хушнине те пурнăçлать, авланнă, çемьеллĕ тесе сăлтав тупса пăрăнмасть. Çапах ăш туртмасть ун патне. Ак халĕ Дубов умĕнче вăл кĕвĕçсе павраса тăрать:

— Мастерпа иксĕр те пĕр ялтан та, лайăхах çав вăл саншăн. Ку лаптăкран йывăç паха тухать. Ай, мĕнле шалкăм вăрман! Ай, мĕн чухлĕ каснă!..

Раман, тӳрĕ калама юратаканскер, тарăхмасăр-тумасăр лаплаттарса хучĕ:

— Ан кала, çын çăварĕнчи татăк мăннăн курăнать вăл, Якку. Пĕлместĕп пульэпĕ кама мĕнлерех лаптăк лекнине. Иван Капитонч мана мар, сана хуна лайăхрах лаптăк касса пачĕ вĕт! Сире сăмахлаттарас мар тесе. Кулма килтĕн-и эс кунта манран е мĕн те пулин ыйтмалли пурччĕ-и?

Кашкин кушак куçне мăчлаттарса илчĕ те, тутине мăкăртса, питçăмартисене карăнтарчĕ, Раман аллинчи пăчка куç хывса:

— Тем тесен те, сан лайăхрах ĕçленĕ пек туйăнать, — терĕ, — Арсентьев япăх пăчкă парас çук сана: мĕнле яка! Ман бензобак кĕтесĕ путăк. Алла чĕтретет.

Дубов аптраса ӳкмерĕ, кула-кулах «Дружбине» Кашкина тыттарчĕ:

— Ме апла! Касса пăх, тĕрĕсле. Мана Иван Капитонч автомат-пăчкă панă, сана — чĕтретекеннине; мана Иван Капитонч шалкăм вăрман уйăрса панă, сана — шĕшкĕ вĕтлĕхĕ. Яра пар. Ĕçле! Эп канам-ха.

Тунката çине кайса ларчĕ те Дубов пăчка урлă-пирлĕ çавăркаласа пăхакан Яккăва куç айĕн сăнама пуçларĕ: мĕн хăтланĕ-ха ку малалла? Лешĕ мотора хăвăрт тапратса

ячĕ те юнашарти хыра касма пуçларĕ. Мотор сассине илтсе, каннă çĕртен Çтаппан йăраланса çитрĕ, юман тĕреве алла илчĕ. Якку ăста ĕçлет, йывăçа хăвăрăт касса ӳкерчĕ, пăчка Дубова тавăрса пачĕ.

— Ну, мĕнле? — ыйтрĕ Раман.

— Силлет. Манăнни пекех, — терĕ Кашкин, хулĕсене вылятса. — Латнă эс вăйлă та, ăнать сан пурнăç.

Раман çемçен кулса илчĕ:

— Эх, эсĕ те çав... Каллех çын вăйне хапсăнан. Эп айăплă-и эс асси пулнăшăн? Çӳлти турра ӳпкеле. Мана мар..

Кашкин хĕремесленсе кайрĕ:

— Эс мĕн, мĕн кулан манран? Вăюпа мухтанатăн-и? Кашкина пĕлместĕн-ха эсĕ...

— Пустуй ан халтăртат-ха кăркка аçилле, — çилленсех пӳлчĕ ăна Дубов. — Эп чĕнмен сана кунта. Ху килтĕн. Ху кĕвĕçсе çӳрен.

Урлă-пирлĕ выртакан йывăçсем хушшипе сиккелесе кайса, Якку кĕçех куçран çухалчĕ.

Кăнтăрлапа Дубовсем патне вăрманпромхоз директоре Антон Николаевич Захаровпа рабочком председателе Илья Ильич Тарин тăрантаспа персе çитрĕç. Директор, яланхи пекех, тур ăйăр кӳлнĕ. Ямшăк-мĕн тытмасть вăл. Лашине йывăçран кăкарса утă пачĕ те тăрантасăн малти кустăрмине урипе тапса тĕрĕслерĕ, унтан тин çынсем патнелле васкаса утрĕ.

Темшĕн директор Рамана çарта чухнехи хăйсен полкĕн командирне аса илтерет. Йăрăс пӳллĕ те çӳллĕскер, типшĕмрех пит-куçлăскер, вăл сарлака çамкаллă тăрăхларах пуçне тӳп-тӳрĕ тытса вашлаттарса çӳрет. Паян вăл хром атăпа, хăмăр сăран пальтопа, пуçĕнче йăлтăркка çăмлă çĕлĕк. Çийĕнче халĕ унăн папахăпа шинель пулас-тăк, ăна каснă-лартнă Рамансен полковникĕ темелле.

Антон Николаевича Дубов хăй Юманлăха килнĕ пĕрремĕш кунах курнăччĕ. Ун чухне Захаров пункт пуçлăхĕ кăначчĕ-ха. Унăн ĕç пӳлĕмне вăтана-вăтана кĕрсе тăнăччĕ Раман. Захаров ăна сĕтел хушшинчен тухса алă тытрĕ. Пĕрле ăшшăн ларса калаçрĕ. Вăрмана килсен те Антон Николаевич çынсемпе чун каниччен юмахламасăр пăрахса каймасть. Çын хуйхи-суйхине, кăмăл-туйăмне, ĕмĕтне çывăха илет, пулăшу ыйтсан — пулăшма тăрăшать. Ваттипе ватă майлă, çамрăккипе çамрăк майлă калаçать. Хăй те Раманран пĕр вунă çул кăна аслăскер, ытларах çамрăксем еннелле туртăнни сисĕнет унăн: вăхăт пулсан, спорт вăййисене хутшăнать, хорта юрлать, воскресниксене

тухать... Сасси ун çинçерех, янравлă. Акă халĕ Захаров хăй çумĕнче мечĕк пек кăлтăртатса пыракан Тарина хытах ятлать. Раман ун сăмахĕсене аванах уйăрса илчĕ:

— Парторгĕ чире перет, — илтĕнет çул хĕрринчен. — Сире-и! Сире иксĕре те вĕрентетĕп халăхна ĕçлеме! Тухса çӳреместĕр рабочисем хушшине. Паян сире, Илья Ильич, тĕттĕмччен вăрманта усратăп, унтан пĕр-пĕр чăтлăхра тăрантас çинчен антарса хăваратăп. Арсентьев хăш квар-талта ĕçленине пĕлместĕр те...

Рабочком председателĕ йăлăнса ыйтать:

— Антон Николайч, тархасшăн, хытă ан калаçăр. Ра-бочисем илтсен...

Директор Тарин сăмахне хăлхине те чикмест, те тарăх-са, те Рамансене илттерес тесе, сассине татах хăпартать:

— Намăсран хăратăр? Пите хĕретес килмест-и? Қан-турта шăлавар çĕтсе ларма меллĕрех-и? Эсир кабинет-сенче чĕлĕм мăкăрлантаратăр, вĕсем кунта мĕн мăкăрлан-тараççĕ? Қуратăр-и, вăрман касакансен пуçĕсем мĕнле пăс-ланаççĕ?

Директор сиввĕн пăхнипе Тарин çăварне хыпнă пирусне тивертмесĕрех каялла кĕсйине персе чикрĕ.

— Сывă-и, ăмăрткайăксем! — хыттăн саламларĕ Заха-ров, ун хыççăн яланхи йăлипе кашнине алă парса тухрĕ. Тарин та унран юлмарĕ. Захаров ун çине чеен пăхса илчĕ те: — Вăт, юлташсем, пур-и çак çынна кам та пулин пал-ланни? — тесе ыйтрĕ.

Дубов юриех шарламарĕ, ыттисем пуçĕсене çеç пăрка-ларĕç.

— Пастай, пастай, — ушкăн умне тухса тăчĕ Çтаппан.— Пирĕн чăрăша пĕçертнĕскерне тытман-и-ха эсир? Çав пу-лас ку этем... Ытла кăн-кан пăхкалать. Интереслă.

— Паллаштарас пуль апла, — куллине аран-аран чар-чĕ директор, — Тарин теççĕ ăна, Илья Ильич, рабочком председателĕ, вăрă мар, тӳрĕ чунлă çынах. Сирĕн хӳтлĕхĕр пулмалла ĕнтĕ ун, рабочи хӳтлĕхĕ.

Хĕремесленсе кайнă питне Тарин вĕçĕмех шăла-шăла илет, ун-кун çаврăнкалать, аптранă енне рабочисене тепĕр хут алă парса тухма хăтланчĕ. Бригада çыннисем ăна ка-рах сырса илчĕç, ыйту хыççăн ыйту тăка пуçларĕç: «Сто-ловăйра хăçан йĕрке тăватăр?», «Машка-Милашкăна хăçан лавккаран тасататăр?», «Сывалма кайма путевкăсем пур-и?»

Антон Николаевич, рабочисем мĕн ыйтса шавланине тимлĕн итлесе тăракансker, Тарина тепĕр хут пӳрнине юнарĕ те пурте илтмелле хыттăн çапла каларĕ:

— Татса парăр пурне те! Йăлт сирĕн ĕç!

Председатель çынсемпе калаçнă вăхăтра Захаров тин çеç ушкăна пырса çитнĕ мастерпа сăмах пуçларĕ.

— Иксĕмĕр тытăнтăмăр пĕчĕк комплекслă бригадăсем йĕркелеме, — кăшт айккинерех чĕнсе илчĕ вăл ăна, — иксĕмĕрĕнех вĕсен уссине кăтартма тивет. Çав бригадăсем малтанхи пысăк бригадăсенчен япăх ĕçлесен, пире министерство пуçран шăлмĕ.

Арсентьев директорăн çырă куçĕнчен чăрр пăхрĕ, ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса илсе, хирĕç васкамасăр таврăчĕ:

— Ку таранччен намăса юлманччĕ те пирĕн участок... Халь шанмастăр-и çак? Тем, ăнланмарăм-ха сире, Антон Николаевич?

— Ăнланмалла марри нимĕн те çук кунта, Иван Капитонович. Пĕчĕк комплекслă бригадăсен малашлăхне лайăх кăтартса памалла пирĕн. Çавă çеç.

— А вара эпир кăтартса параймăпăр-ши? — тĕлĕннипе сассине хăпартрĕ Арсентьев. — Дубов! Раман! Кил-ха кунта?

Бригадир самантрах чупса çитрĕ.

— Итле-ха, эп сана акă мĕн пирки чĕнтĕм... Директор, ак, шансах каймасть пек пире. Министерство хытах лектерме пултарать тет. План тулаймасан. Мĕнле, шантарса сăмах парăпăр-и ăна?

Ку кĕтмен ыйту Рамана аптратса ўкермерĕ, хăйсем мĕнле ĕçленине, малашне мĕн-мĕн тума пултарнине пĕлсе, шанса тăраканскер, сывлăш çавăрса ячĕ те пуçлăхсене лăплантарнăн, васкамасăр каларĕ:

— Министерство лектерессинчен хăрамалли çук пирĕн. Унпăн директор ан шиклентĕр. Хамăр ĕçе пĕлетпĕр эпир.

Мастер Рамана çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ:

— Маттур. Эп сана ку ыйтупа çеç мар, урăххишĕн те чĕннĕччĕ. Комсорг тесе.

— Итлетĕп, ара, — таврăчĕ Раман.

— Акă мĕн, секретарь, — урисене ылмаштарса пĕр вырăнта тăп-тап пускаласа илчĕ Арсентьев, — пирĕн иксĕмĕрĕн пысăк ĕç тумалла пулать. Акă мĕн. Санăн та бригадăра йăлт çамрăк халăх. Яков Кашкинăн та. Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене йĕркелесе ярар мар-и?

Мастерпа бригадир калаçнине шăпăрт итлесе тăнă директор ку шухăша ырларĕ.

— Эпир ăмăртма хатĕр Кашкинсемпе. Хуть паянтанах, — салтакла тўрленсе тăчĕ Раман.

— Ăмăртма эсир ахаль те ăмăртатăр-ха, — терĕ Арсентьев. — Анчах хăвăр виçепе. Кунта вара урăхла ăмăрту

пуçаратăр. Услови туса хатĕрлĕпĕр. Эртелпе сӳтсе явса обязательствăсем палăртăпăр. Ăмăрту килĕшĕвĕ йышăнăпăр. Ак хайхи сана саккунлă ăмăрту!

— Ăнлантăм, Иван Капитонч, — çирĕппĕн тавăрчĕ Дубов. — Вăраха ямăпăр. Кайма юрать-и?

Бригадира Захаров кăшт тăхтама ыйтрĕ.

— Итлĕр-ха, — терĕ вăл мастерпа Рамана. — Эпĕ сиренпе хăвăр тахçанах илтнĕ сас-хура çинчен, сире пурсăра шухăшлаттаракан ыйту пирки калаçса пăхасшăн. — Директор пĕр хушă шухăша кайса тăчĕ те акă мĕн пĕлтерчĕ: — Министерство пирĕн сĕнӳпе килĕшет. Юманлăх, Мерчĕк, Хурашыв пункчĕсене пĕрлештерме хирĕç мар. Юманлăхпа Мерчĕк поселокĕсене Хурашыва, район центрĕ çумне, куçармалла пулать. Ĕç калăпăшĕ ӳсет. Техника нумайланать. Мĕнпур вăя пĕр çĕре пухмалла. Тĕрĕсех пуль çак план?

Иван Капитонович директор каласа пĕтерессе çеç кĕтнĕ пулас, тӳрех ырласа сăмах хушрĕ:

— Тĕрĕс пулмасăр, ара! Пысăк хуçалăх пысăк ĕçех тăвать ĕнтĕ вăл. Çынсене те пурăнма лайăхрах пулĕ. Сĕм вăрман варринче мĕнех ырри пур! Çамрăксем, вăн, тытăнса тăрасшăн мар, туха-туха шăвăнаççĕ. Ватăлатпăр тата хамăр. Смена хатĕрлемелле. Пурнăçĕ-кукри çырлахтараканни пулмасан, хатĕрлĕн унта!..

Раман та хутшăнмасăр тӳсеймерĕ:

— Çамрăксем кунтан пăраха-пăраха кайса тĕрĕс те тăваççĕ пуль. Камăн çамрăклăха вăрманти упа шăтăкĕнче ирттерес килтĕр! Куçмалла хăвăртрах станци çывăхне.

— Кăçалах пĕрлештерме пуçлатпăр, — сăмахне вĕçленĕн калarĕ директор. — Атьăр-ха, кун пирки çынсене калар. Тарин йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ ав атту.

Илья Ильич, чăнах та, рабочисем ыйту хыççăн ыйту парса тапăннипе йăлт хăшкăлса çитнĕ-мĕн. Директорпа мастер пырса тăрсанах вăл хашш сывласа ячĕ те кĕсйинчен пирус туртса кăларчĕ. Апат вăхăчĕ вĕçленнине кура директор çынсене нумай тытса тăмарĕ, кĕскен, уçăмлăн ăнлантарса панĕ пуласси çинчен, ыйтусене хуравларĕ, вара васкасах сывпуллашрĕ те тăрантасĕ патнелле вашлаттарчĕ. Рабочком председательне вăл каçчен ытти бригадăсене çитсе çаврăнма хушса хăварчĕ.

— Ну, мĕнлерех çĕнĕ директор? — юриех ыйтрĕ Таринран мастер.

— Çавраçил, — аллине лаш сулчĕ Илья Ильич. —Хăй те лара-тăра пĕлмест, пире те хăвалать вăн. Леш директорĕшен пулсан... Хамăр кахала вĕренсе кайнă пуль çав...

— Çавраçил вăл хушăран, тен, кирлĕ те пулĕ, уçă çилĕ вара яланах кирлĕ, — терĕ те Арсентьев Тарина ытти бригадăсем ĕçленĕ çĕре ертсе кайрĕ.

## 12

Раман ĕнтĕ каç пулса ĕç вĕçленнĕ-вĕçленменех Мерчĕкелле тухса тапать. Пĕр каçхине уйăх тухмарĕ, çăлтăрсем те вылямарĕç, чăрăшсем те шавламастчĕç. Раманпа Тамара сулă çинче ярăннă сехетре лапка-лапка юр çума тытăнчĕ.

— Пĕтрĕ тинĕс çулçӳревçисен романтики! — салхуллăн шӳтлерĕ Тамара.

— Упасем пек, юр айĕнче йăва тупăпăр, — шăннă хĕрарăма хăй çумне пăчăртарĕ каччă,—ав çавăнта, çырма пуçĕнче.

Тамара ахăлтатса кулса ячĕ. Ун сассине илтсе, çыранти йытă сăнчăрне чăнкăртаттарчĕ.

— Эх, Ромашок, — терĕ Тамара кулма чарăнса, — сивĕ пире пурпĕрех пӳртелле хăвалĕ. Мана шăнтса пăссан, ун çинчен анне пĕлсен... Хăвăнах сыватмалла пулать.

Чĕнсен те Раман çав каç Тамарăсем патне кĕрес темерĕ. Çĕнĕ юр çийĕн çĕнĕ йĕр туса, Юманлăхаллах утарчĕ.

Хĕл ларсан, каччă йĕлтĕр туянчĕ. Мерчĕке ĕнтĕ йĕлтĕрпе хутла пуçларĕ. Анчах сивĕ хăйĕннех тăвать. Раманпа Тамарăна та хĕл мучи пĕр каçхине ăшă пӳртелле хӳтерсе кĕртрĕ. Шалта хĕрĕн амăшĕ çеçчĕ.

— Анне, — чĕвĕлтетрĕ Тамара, — паллаштарам-ха ак сана, Раман ку. Ромашок. Ялта вĕреннĕ чухнех каланăччĕ эп сана ун çинчен, иртнинче те...

Тамара амăшĕ, Рамана пĕрремĕш хут кураканскер, каччă пĕтĕмпе тĕсесе пăхса тăчĕ.

— Мĕнле маттурскер! Раман терĕн-и-ха? Ирт, ирт малалла, йĕкĕт. Эпир Тамарăпа апат хатĕрлер-ха, — кĕçех хĕрĕпе иккĕшĕ кухньăналла кĕрсе çухалчĕç вĕсем.

Пӳлĕмре Раман пĕчченех тăрса юлчĕ. Нимĕн тума аптранипе вăл чӳрече çумĕнчи стенара çакăнса тăракан рама умне пычĕ, кĕленче айĕнчи сăнӳкерчĕксене пăхма пуçларĕ. Иван Капитонович, Раманпа Тамара ашшĕсем тата темиçен çамрăк чухне пĕрле ӳкерттернĕ ӳкерчĕк те пур кунта. Акă Рамансен класĕ — Стасикпа иккĕшĕ вĕсем Тамарăна варрине хупнă. Стасик ашшĕ Василий Павлович, класс руководителĕ. Çума-çумăн ларакан Стасикпа Тамара. Чӳречен тепĕр енĕнче — пысăклатнă икĕ сăн. Пĕри,

кёске мăйăхлă та курпунтарах сăмсалли, çиллес те çӳхе ту-талли, рама ăшёнчен çынна çисе ярас пек пăхса ларать. Тепри, вăрăм сухалли, пуçне чалăштарни, чеен кулать.

Кухньăран тулли турилккесемпе тухакан Тамара, Раман сăнӳкерчĕксем пăхнине курсан, ăнлантарса пачĕ:

— Ак ку, ман пек шĕвĕр сăмсалли, — кукаçи, вăрăм сухалли — асатте. Чаплă вĕт?

Тамара турилккесене сĕтел çине лартса хăварчĕ те каллех кухньăна таврăнчĕ. Раман çав самантра Иван Капитонович пĕркун ват юман айĕнче каласа панă историе аса илчĕ. Палюкпа ун хӳрешки Сятра Кавĕрли — çĕнĕ пурнăç çулне урлă тăнă тăшмансем. Хăйсен вăхăтĕнче вĕсем çĕнĕ пурнăç тăвакансене кăкăртанах пырса çапнă, никама та хĕрхенсе тăман. Çапла майпа Раман аслашшĕне те вĕлернĕ ав. Паян та вĕсем, чĕрĕлсе тăрас пулсассăн, никама та шеллес çук, çав шутра Рамана та. Палюк мăнукĕпе çӳренине пăхмасăрах. Анчах ĕнтĕ вĕсене тахçанах пурнăç çулĕ çинчен шăлса ывăтнă, сăнçсем кăна хаярланса, чееленсе кĕленче айĕнче пăнтăхаççĕ ак. Ячĕ-шывĕ çук. Аса илсен те ватăраххисем усалпа çеç аса илеççĕ вĕсене.

Раман аслашшĕ вара пурăнать. Мăнукĕ касмасăр хăварнă ват юман айне халĕ хĕрлĕ çăлтăрлă палăк лартрĕç, ун çине паттăрăн ятне ылтăнпа çырса хучĕç. Чаккас шкулĕнчи пионер дружини Игнатий Дубов милиционер ячĕпе хисепленет. Ялта Рамансен урамне Дубов ятне панă.

Тамарăпа амăшĕ сĕтел хатĕрлесе пĕтерне çĕре кил хуçи те килсе çитрĕ. Хăй хĕрĕнкĕ. Куçĕ чарăлса кайнă, пичĕ тăртанчăк. Тути хĕррисем çуталса тăраççĕ. Кĕрĕкне хывса пăтаран çакрĕ те кĕпин çӳлти тӳмине хыттăн туртса вĕçертрĕ: тăвăннă пулас, хаш та хаш сывлать. Кĕске мăйне сулахай аллипе сăтăркаларĕ те Раман патне уксахласа пычĕ.

— Хăна пур-çке пирĕн! Хамăръял! — аллине лап хучĕ вăл Раманăн сарлака хѝлпуççийĕ çине. — Калап пĕр кун эсех пуль тесе! Йĕлтĕр йĕррипе килтĕм те хамăр патах çитрĕм. Халĕ тытрăм ĕнтĕ! Халĕ — ман алăра. Читлĕхре! Ирт-ха сĕтел хушшине, апатланар.

Çапла хăна пулчĕ вара Раман. Тамарăпа, ун ашшĕ-амăшĕпе пĕрле ларса апатланчĕ. Эрех ĕçме хăнăхман вăл. Çатра Михали тем пек пусахласан та, сăраран пуçне урăххине тутанса пăхмарĕ. Апат хыççăн Юманлăха таврăнма пуçтарăнчĕ каччă. Тамара вăрттăн илĕртсе юлма йăлăннине курмăш турĕ. Çапла кăмăлсăр хăварчĕ вăл çамрăк хĕрарăма килĕнче.

## 13

Хĕл ҫӑрсӑрланса кайрĕ. Иккĕмĕш эрне ĕнтĕ тӑман тустарать. Вӑрмана юр кĕштесе тултарчĕ. Унтан шатӑрр сивĕтсе пӑрахрĕ. Хĕл кайӑкĕсем чӑтлӑхсене тарса пытанчĕҫ. Вӑрман ĕҫлекенсем ҫеҫ сивве парӑнмаҫҫĕ. Малтан йывӑҫ кучĕсене юртан тасатса ӑшша пиҫеҫҫĕ, унтан касса, турат иртсе сивве хӑвалаҫҫĕ. Вӑрманпромхоз директорĕ Тарина вӑрман тӑрӑх илсе ҫӳрени рабочисемшĕн усса килчĕ. Ĕҫ тумне типĕтме уйрӑм пӳлĕм туса панӑ халь. Делянкӑна вĕри апатпа тухма пуҫларĕҫ.

Кӑнтӑрлахи кану хыҫҫӑн Раман юман тункати ҫинче шухӑша кайса ларатчĕ. Шӑпӑрттӑн Ҫтаппан пырса тӑчĕ ун умне. Хӑлхаран пӑшӑлтатать.

— Раман, итле-ха. Авланас тетĕп.

— Чим-ха, хӑҫан? Кама илен?

— Эс тӑхта. Итле. Хĕлимун йӑмӑкĕ патне килсе каятьҫке Ҫӑлтӑр поселокĕнчен пĕр хитре хĕр, ҫавна илесшĕн эп.

— Хӑйпе калаҫнӑ-и? Е, Анютӑна юратнӑ пек, аякран пӑхса ҫеҫ юрататӑн?

— Интереслĕ. Эс Мерчĕке йӑрккан тесе эпир, мĕн, ҫӑвар карса ларатпӑр-им? Калаҫрӑм. Яла илсе кайса аннесене те кӑтартрӑм. Хӑйсем патĕнче те пултӑмӑр. Лайӑххӑн асӑрхаман та пуль эс вӑл хĕре. Курсан тĕлĕнсе кайӑн. Ак ҫакӑн пек пĕчĕкрехскер, чĕлхи чĕкеҫ чĕлхи пек, сӑнĕ тата... Анюта ун ҫывӑхне те ан тӑтӑр! Анне сӑра тӑвать. Ҫитес шӑматкун туй пулать. Вӑт тĕнче!

Раман Ҫтаппана кунашкал савӑнӑҫлине пĕртте курманччĕ. Малтан хӑлхаран ҫеҫ пӑшӑлтатнӑскер, халĕ тапӑртатса кӑна тӑрать.

— Хӑйматлӑхне кама тӑватӑн-ха? — ыйтрĕ Раман.

— Хĕлимуна. Килĕшет вӑл.

Бригада эрнипех пит хĕрӳ ĕҫлерĕ. Шӑматкунхи нормӑна малтанах тултарчĕ. Рамансене вара туя кайма ирĕк пачĕҫ.

Ҫтаппансен килĕнчен икĕ машинӑпа юрӑ янраттарса тухса кайрĕ арҫын туйĕ. Хĕллехи вӑрман ҫулĕ такӑр. Ҫитмелли ҫĕре часах ҫитрĕҫ. Туй арӑмĕсемпе каччисем асарписер ташласа юрлаҫҫĕ. Миша Фильчин купӑс туртать. Ҫинахван параппан ҫапать. Вырӑсла хапхаран вӑтам ҫулсенчи лутрарах хĕрарӑм тухса тӑчĕ. Кабина алӑкне уҫнӑ Ҫтаппанпа иккĕшĕ тем калаҫрĕҫ. «Верук ҫук» тени ҫеҫ кĕрсе юлчĕ хӑлхана. Ҫураҫнӑ хĕр курма таврӑннӑ пĕр моржкпа хулана тухса шӑвӑннӑ иккен.

— Вăт тĕнче сана, Çтаппан! — ахăлтатрĕ турат иртнĕ çĕрте ĕçлекен Улькка. — Хитри хыççăн хăваласа хыр хăййи кăшлăн. Интереслă...

Туя тесе тапранса тухнă çынна мĕн ăна, шӳт туса, кулса пултăр! Улталаннă кĕрӳ çеç сурчăк сирпĕтсе Верук амăшĕпе çаплах тем çуйхашрĕ. Ял халăхĕ кĕрр пухăнчĕ. «Тăхтăр-ха, тăхтăр, — хăлаçланса тухрĕ çав вăхăтра ушкăнран пĕр хĕрарăм. — Хам тупса парам сире хĕр, во! Килĕшетĕр-и?»

Хĕлимун Çтаппана турткалама пуçларĕ: «Яла хĕрсĕр таврăнсан, ят каять. Хĕрарăм тени пурте пĕрех вăл. Пĕр сорт. Тавай, килĕшер, илсе каяр «во! хĕре!» Евчи хăйĕн хĕрне çупа сĕр'се тăрать. Çтаппанăн пуçĕ йăлт арпашăнса кайрĕ ĕнтĕ, юлашкинчен алă сулчĕ те килĕшрĕ. Хайхи хĕре тупса та килчĕç. Çтаппанпа иккĕшне паллаштарчĕç. Ашшĕ-амăшĕ хирĕçлесех тăмарĕ — туйпа килнĕскерсене туйпах пама килĕшрĕç. Туй çунмарĕ, кĕрлерĕ ялта. Çтаппан арăмлă пулса таврăнчĕ.

Эрне иртет, уйăх, çур çул...

Раман тунката çинче каллех пуçне ик аллипе тĕревлесе çĕрелле пăхса ларатчĕ. Çумра Çтаппан мăшлатса тăни илтĕнчĕ.

— Раман, итле-ха, мĕн калатăп сана.

— Итлетĕп, — пуçне çĕклерĕ Дубов.

— Авлантăм. Интереслă. Юрату тени пулмарĕ. Мĕн тăвас халь, чавса çывăх та — çыртма çук. Ман вара çыртмаллах пулчĕ. Тухса кайрĕ арăм. Вăт тĕнче! Каллех барака куçатăп.

Раман ĕнсине хыçса илме çеç пултарчĕ. Юлташне лăплантарма нимĕнле сăмах та тупаймарĕ. Çтаппан уйрăлса утсан, вăл шухăша путрĕ: «Чăн та, юратусăр епле чăмăртантăр-ха çемье тени! Кунта темĕнле маттур евчĕ те, темле ăслă хăйматлăх та пулăшаймĕ. Намăсран тесе, ача вăййилле туй тумалла марччĕ. Йăнăш пулчĕ, йăнăш çул... Эп хам тата мĕнле çул çинче-ши? Мерчĕк хыçне Сятров лесник картуне çӳреме лайăх-ха халлĕхе. Мĕн пĕчĕкренпех пĕлетпĕр-ха Тамарăпа иксĕмĕр пĕр-пĕрне. Çтаппанпа арăмĕ пек, пĕрре курсах, алă тытман. Пирĕн ачаллах юрату тĕвĕленнĕ темелле. Анчах та юратăвах-ши? Стасика качча тухрĕ вĕт-ха Тамара. Апла вăл мана чунтан юратман. Паллах. Эпĕ тата? Юрататăп-ши? Чунтан-вартанах-ши? Тамара хăй ман çума пит йăпшăннипе улталанса пурăнмастăп-ши эп? Мĕншĕн-ха эп унпа пурнăç çулĕпе аллааллăн утасси çинчен шухăшламастăп? Юманлăхра хамăр лартнă йывăççем патĕнчен иртнĕ чухне кашнинче куçа

Анюта куранса каять. Тамарăна пачах та аса илместĕп çав самантсенче...»

Дубов патнелле утакан Иван Капитонович сасартăк туратран такăнса ÿкрĕ. Раман, сасса илтсе, пуçне ваштах çĕклерĕ, хăвăртрах чупса пырса мастера ура çине тăма пулăшрĕ.

— Тавтапуç, шăллăм. Ватăлатпăр пулас... — аллине лекнĕ тураг хуçăкне аяккалла вăркăнтарчĕ мастер.

— Туратран-тумхахран такăнмасăр утма çук ĕнтĕ вăрманта, — хута кĕнĕн сăмах хушрĕ Раман.

Арсентьев качча куçĕнчен шăтарасла çивĕччĕн пăхса илчĕ. Ăнланчĕ Раман, ахальтен килмен пулас Иван Капитонович.

— Турат тетĕн апла? Шутласа пăхмаллах сан та, Раман. Асăрханмасан, чунпа лăнчăлансан, пурнăç çулĕ урлă та выртма пултараççĕ вĕсем, çакăн пек пуç пӳрне хулăнăш туратсем çеç мар, пысăкраххисем те, пуслăх пеккисем те. Вĕсене тытса хуçаймăн, прĕксĕрех урлă сиксе каçма е айккинелле сирсе яма тивĕ. Сикнĕ чухне такăнма та пулать. Сирнĕ чухне кăкăртан та çапĕ. Манашкал ÿкме те пулать. Шутласа пăх.

Витĕр пăхакан Иван Капитонович куçĕнчен Раман ниçталла пăрăнаймарĕ, итлесе пĕтермеллех пулчĕ ун йӳçĕ сăмахне. Паллă, ара, Тамара патне çӳренĕшĕн ӳпкелесе калаçрĕ Арсентьев. Илтнĕ ĕнтĕ. Вăрман хăлхаллă, уй куçлă тесе ахальтен каламан ваттисем.

— Санран эпĕ нимĕн те ыйтмастăп, тăн парса ятламастăп сана. Хам та каччă пулса курнă. Ăнланатăп. Ху пуçупа ху пурăн. Анчах ан йăнăш, — тин куçне илчĕ мастер, унтан çапла хушса хучĕ: — Пĕркун Первомайскра, канашлăва кайсан, Сятровпа калаçкаласа илме тӳр килчĕ те, сана темскер пит асăнать вăл.

— Пулĕ, пулĕ, — ним калама аптрарĕ Дубов.

— Пулĕ-пулĕпех пурнăç пулмасть çав, шăллăм, — тутине пăрса илчĕ Иван Капитонович, — малашне мĕн пулассине мĕнле пулассн çинчен шухăшламалла. Çав çĕлен-калтасемпе çыхланса, аçу-аслаçу ятне яр кăна сана! Ять!

Уйрăлас умĕн вăл пуçне чиксе тăракан Рамана лăплантарса хăварчĕ:

— Бригаду сан каллех мала тухать. Яков Кашкинăн та кăтартусем япăх мар. Хăрушсăрлăх техникине пăснипе çеç юларах пыраççĕ. Çапла. Лайăх ĕçле. Лайăх пурăн.

## 14

Çăва тухсан, икĕ вăрман пунктне пĕррене пĕрлештерчĕç. Мерчĕке вăхăтлăха çаплипех хăварчĕç-ха. Юманлăх вара çаралса юла пуçларĕ. Бараксене пăсса Хурашыв поселокне куçарчĕç. Çемьеллисем валли çĕнĕ çуртсем лартма тытăнчĕç. Çемьесĕррисене халлĕхе Юманлăхра клуба вырнаçтарчĕç.

Хурашывран Юманлăха çитме çичĕ çухрăм. Унта куçса кайнисен самай тертленме тиврĕ. Ирпе ирех тăрса ĕçе çуран утмалла, каçпа, ĕшеннĕ шăмшакпа, — каллех çуран. Рамансен ĕнтĕ унта пилĕк-ултă çухрăм утма тивет.

Касмалли вырăн Чаккасран инçех те мар. Карăк çырми таврашĕнчи çăкалăхра. Иртсе пынă чухне ватă çăка хăвăлĕнчен чăрр! та чăрр! сасă илтĕнет. Турачĕсем çинче шăкăрах шăнкăрчсем. Акă пĕри, амăшĕ пулас, çăварĕнчи ăманĕпе хăвăла чăма пачĕ — хӳри çеç тулалла кăнтарса тăрать. Кĕçех каялла чакса тухрĕ те тепĕр турат çинче çунат çапса ларакан мăшăрĕпе пăрр! çеç вĕçсе кайрĕ. Таврара — чĕрĕлнĕ çутçанталăкăн пин-пин сасăллă шавĕ.

— Çак делянкăна касмалла-и пирĕн? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Раман.

— Вăн, паллă тунă, — чăрăш юпа çине çырнине тĕллесе кăтартрĕ Иван Капитонович. — Куратăн пуль? Вула.

— Вĕсене ăçта чикĕпĕр? — пуç тăрринелле кăтартрĕ каччă.

— Шăнкăрч чĕпписене-и? — йăкăлт сиксе илчĕ Çтаппан. — Вĕçтеретпĕр. Вăт тĕнче!

Раман Çтаппана хăмсарса илчĕ:

— Мĕн пуçупа калаçан çак эс!

— Çитĕ-ха сире, — чарчĕ вĕсене Арсентьев.

— Кунта, — терĕ Раман, — такамăн пуçĕ çитместех.

— Виçсе панă — касмалла, — хулпуççине сиктерчĕ мастер, — итлемесен юрамасть.

— Пĕр анра пуçшăн çавăн чухлĕ кайăк чĕппи пĕтермелле-и вара пирĕн? Вăн мĕн чухлĕ йăва! — хĕрӳленчĕ Раман. — Килĕшмелле мар кунпа, юрамасть капла, мĕн те пулин тумаллах. Шутласа пăхăр-ха. Пĕр шăнкăрч çемйи чĕпĕ çитĕнтернĕ вăхăтра кăна темиçе пин хурт-кăпшанкă пĕтерет. Мĕн чухлĕ усă кӳрет! Эх! Эсир хуть касăр, хуть ан касăр — эп вăрманпромхоза каятăп.

Раман чăнах та Первомайск еннелле каякан çул çине ӳкрĕ. Иван Капитонович чарса тăмарĕ. Бригадир шăнкăрч йăвиллĕ çăкасене касма килĕшменшĕн хăй ăшĕнче савăнчĕ çеç вăл. Тĕрĕсмарлăха курса каччă аптраса ӳкменшĕн, ăна

тӳрлетес гесе чӗрипе хыпса ҫуннӑшӑн хӗпӗртерӗ. Раман-ран кулса юлнӑ ытти бригадирсем ҫине пӑхса илчӗ те ним пулман пекех ҫапла хушрӗ:

— Ҫанма ларар, ачасем, чечек пуҫтарар. Дубова пысӑк чечек кӑшӑлӗпе кӗтсе илме хатӗрленер.

Утса ӗшеннӗ ҫынсенчен хӑшӗ ҫерем ҫине тӑсӑлса выртрӗ, хӑшӗ чӑнах та чечек татма пуҫларӗ.

Раман ытлашши нумай кӗттермерӗ, тӑрантас ҫине ларсах таврӑнчӗ. Тилхепине вӑрманпромхоз директорӗ Захаров тытнӑ, хыҫалта тӗп лесничипе Дубов улпутсем пек канлӗн ларса пыраҫҫӗ. Хӗлӗх Хӗлимунӗ Рамана чечек ҫыххи пырса тыттарчӗ.

Лесничипе тавлашса илнӗ хыҫҫӑн Захаров участока тепӗр делянкӑна куҫарттарчӗ — шаларах, хутӑш вӑрмана. Куна вара вӗсем тепӗр темиҫе уйӑхран, шӑнкӑрчсем чӗппи-сене ӳстерсе вӗҫтерсен, касма пуҫларӗҫ.

## 15

Хурашыв текен пӗчӗк юханшыв, Сятров картунӗ па-тӗнче пӗкӗ пек авӑнса илсе, Мерчӗк ҫумӗпех юхса выр-тать. Ҫырантан пӑхсан, шыв хӑйӑвӗ чӑн та хура тӗслӗн курӑнать. Патне ҫитетӗн — ҫап-ҫутӑ, таса. Чугун ҫул ен-нелле сулӑнсан, шыв кӑштах сарӑлать. Сулахай ҫыранта — вӑрман ӗҫлекенсен поселокӗ ларать. Поселок ячӗ те Ху-рашыв. Юманлӑхсем ҫакӑнта куҫса килчӗҫ те ӗнтӗ. Клуб-не те хӑйсенчен хӑвармарӗҫ вӗсем, сӳтсе турттарса кил-нӗскере, ӑна вӑрӑм та сарлака пӗве пуҫне хӑпартса ларт-рӗҫ. Унпа юнашарах — ҫамрӑк хурӑнлӑх. Ҫавӑнпа клуба «Хурӑнлӑх» ят пачӗҫ.

Мерчӗк ҫулӗ Раманшӑн пушшех вӑрӑмланчӗ ӗнтӗ. Иван Капитонович асӑрхаттарса каланине асрах тытать вӑл, апла пулин те хӑйне алла илеймест, — чунӗ Тамара еннел-лех туртӑнать. Вырсарникун каллех Мерчӗке тухса кайрӗ каччӑ.

Тамара ӑна пӗве хӗрринче кӗтсе илчӗ. Ашшӗпе амӑшӗ пасара тухнӑ-мӗн. Тамара аллинчи хут таткине ҫурмаран чӗрсе шыва пӑрахрӗ те:

— Пӗтрӗ, — терӗ тути хӗррине ҫыртса. — Стасик кил-лет, ҫыру илтӗм. Авӑ, пӗвене петӗм. Манран каҫару ыйтать. Тем тумалла.

Тамара, нӗшӗклесе, пуҫӗпе Раман кӑкӑрне тӑрӑнчӗ, куҫ-не шӑла-шӑла калаҫрӗ:

— Эсӗ мана пурпӗрех качча илес ҫук, пӗлетӗп эп. Си-вӗпсех пыратӑн манран. Малтанхи пек, кашни кун килме

пăрахрăн. Ман пурăнмаллах. Ĕмĕре пĕччен ирттерес çук. Тăнран тухап ĕнтĕ шухăшласа. Çапах та вăл ман упăшка пулнă-çке. Упăшка! Тем тăвас?

— Çитĕ-çке сана, Тамара, — лăплантарма тăрăшрĕ ăна Раман, — килмесĕрех кулянса ан ӳк-ха.

— Паян килет вăл. Тĕлĕкре курнă. Ман тĕлĕк яланах тĕл килет. Атя луччĕ улăха анар. Халех, эп пуртă илем, милĕк касмаллачче. Аннесем таврăннă çĕре мунча хутса кăларас.

Вĕсем хăва чăтлăхĕ витĕр утрĕç. Тамарăшăн кашни тĕмĕ пĕлнĕскер кунта. Сахал чупнă-вылянă-и ку улăхра! Хурашыв шывĕпе çăвăнса ӳснĕ. Хурашыв хĕрринчех Стасик ытамне лекнĕ. Чăн-чăннипех пулнă-ши хĕрĕн юратăвĕ? Юн вылявĕнчен килнĕ çамрăклăх йăнăшĕ кăна мар-ши? Халĕ те ак... Стасика та вăл пĕтĕмпех юратма пăрахаймасть, çав вăхăтрах Рамана та юратать пек. Иккĕшне танлаштарса пăхать. Стасик — имшер, чирлĕ арçын, Раман — вăйлă, хăюллă, хĕрарăм чунне уçакан тăн-тăн арçын. Хăшĕнпе утмалла-ши малашне унăн пурнăç çулĕпелен?

Раман, шыв урлă каçса, хурăнлăхра милĕк хуçма тытăнчĕ.

Тамара хăва чăтлăхĕнчен уçланка тухрĕ. Пĕр пĕчĕк çеç уçланкă, чăнкă çыранри йывăçсем хушшинчи çутлăх. Тавралла — хăвалăх, çирĕклĕх, хурăнлăх, умра — Хурашыв. Тин кăна-ха пуш-пушахчĕ уçланкă. Акă, самантрах тулчĕ — çамрăк хĕрарăмăн йăрăс пĕвĕпе, асамлăхĕпе, шухăшĕпе, ĕмĕчĕпе...

Çыр хĕррине пырса ларнă Тамара, çара урисене пĕчĕк ачалла сулкаласа, умри шывсиккине сӳрĕккĕн сăнаса ларать. Шывсикки вăйсăр, шавĕ йăваш. Хăвалăх пусса илессшĕн ăна.

Тамара сасартăк çыртан чалт сиксе анчĕ те тури хăвалăх тăрăхнелле чупрĕ. Ют çыншăн пит нимех те мар ĕнтĕ çав хăвасем. Тамарăшăн вара вĕсем — чун уççи, чĕре ыратăвĕ. Хăвасене вăл çитсе ачашшăн çупăрларĕ, куçне хупса кукленсе ларчĕ. Куçĕ умне тахçанхи килсе тухрĕ. Акă вĕсем Стасикпа улăхра алла-аллăн тытăнса утаççĕ. Тин çумăр çуса иртнĕ. Хура кăвак пĕлĕт хыçĕнчен кулса тухнă хĕвел Хурашыв урлă асамат кĕперĕ хыврĕ. Кĕперĕн сылтăм вĕçĕ пĕчĕк уçланкăри шывсиккине тăрăнчĕ. Тамарăпа Стасик уçланкă еннелле çара уран чупаççĕ. Анчах тем пек ыткăнса чупсан та вĕсен çав кĕпер айĕнчен тухасси пулмарĕ. Кĕпер тарсах-тарсах пычĕ те уçланка çитеспе пачах çухалчĕ. Стасик вара икĕ хăвана авса илчĕ те ункăласа çыхрĕ. Тĕлĕнмелле, вĕсене çавăнтанпа никам та

текӗнмен иккен. Икӗ хӑва пӗр-пӗринчен явӑнса, ыталанса ӳссе кайнӑ. Телейлӗ мӑшӑр тейӗн. Тамарӑшӑн ҫеҫ ҫак Асамат уҫланки чӑн-чӑн телей уҫланки пулаймарӗ. Мӗншӗн ҫакӑнта ун чухне Стасик вырӑнне Раман пулман-ши? Аса илчӗ те халӗ Тамара хӑйӗн малтанхи вылянчӑк утӑмне, йӑнӑш утӑмне... Пӗчӗк пурттине ҫӗклерӗ Тамара, кач! кач! качлаттарчӗ хӑвасене тӗпӗнченех. Лешсем ытакланнӑ халлӗнех тайӑлса пычӗҫ те, юлашки хутчен Тамара еннелле ҫаврӑнса, шывалла шаплатса ӳкрӗҫ.

— Ан кас! Ан кас тетӗп сана, Тамара! — янӑраса кайрӗ ҫав самантра улӑх тӑрӑх тӑвӑнчӑк сасӑ.

Стасик сасси!

Ҫук, илтӗнчӗ кӑна ҫакӑ пӑлханса хӗрсе кайнӑ хӗрарӑма. Вӑл тӑп тӳрленсе тӑчӗ. Пуҫӗ шавлать. Ҫук, ҫук, пуҫ шавлани ҫеҫ мар ку. Ҫумӑр кашласа ҫывхарать-мӗн тата. Хӗвел пӗлӗт айне кӗрсе ҫухалнӑ.

— Тамара!

Анчах Тамара ҫаврӑнса та пӑхмарӗ.

Шикленсе ӳкнӗ Раман пуртӑ тытса таракан Тамара патне хашкаса ҫитрӗ. Иккӗшӗ те пӗр-пӗрне сӑмах чӗнеймеҫҫӗ.

Тӳпере хура кӑвак, шупка сарӑ пӗлӗтсем ярӑнаҫҫӗ...

Ҫумӑр мӗнле пуҫланчӗ, ҫавӑн пекех хӑвӑрт иртсе кайрӗ. Раман каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ. Хура шыв урлӑ асамат кӗперӗ карӑннӑ. Каччӑ ӑна питӗ шухӑша кайса пӑхса тӑчӗ.

— Манӑн асамат кӗперӗ... — пӑшӑлтатрӗ Тамара. — Стасикпа иксӗмӗрӗн. Асап кӗперӗ...

Темле тӑлӑххӑн, юттӑн туйса илчӗ Раман хӑйне ҫак хӑваллӑ улӑхра.

## 16

Дубов комсомол ӗҫӗпе Мерчӗке кайрӗ. Мерчӗк ӗлӗкхи пекех шавлӑ. «Вӑрман хули» унчченхи йӑлапах пурӑнать. Кунти секретаре — Илле Иванова — Раман поселок ҫывӑхӗнче йывӑҫ каснӑ ҫӗрте шыраса тупрӗ. Иванов — участок мастерӗ, кӑмӑллӑ ҫамрӑк ҫын. Сӑнӗ-питӗнчен ун нихҫан та кулӑ ҫухалмасть пулӗ. Хӑвӑрт калаҫаканскерӗнне, унӑнне хӑшпӗр сӑмахне ӑнланса юлма та хӗн. Сасси хулӑн. Илле темшӗн ҫынна куҫран пӑхма вӑтанать, пуҫне чикерех калаҫать. Аран-аран асӑрхаса илчӗ халӗ Раман ун куҫне. Секретарӗн куҫӗсем пысӑк, кӑвак, куҫ хупанкисем сарӑрах. Ҫӳҫне вирелле тураса вырттарнӑ. Раманран вӑл икӗ ҫул аслӑрах. Партие кӗме ӗлкӗрнӗ. Ӑсӗ-шухӑшӗ тӗплӗ тенине илтнӗ ун ҫинчен. Илле Иванова вӑрманӑн пуласси-килесси канӑҫ памасть.

— Ытла ирсĕрле хăтланатпăр — касса, çĕмĕрсе, çăрса хăваратпăр, хамăр хыççăн тасатмастпăр, — тесе пăшăрханать вăл.

— Қам пирки калатăн çак эсĕ, Илле? Сирĕн ĕç вырăнне пăхатăп та эп... Вĕренмелле иккен пирĕн сирĕнтен. Эпир вара делянкăна чăнахах çăрăлтарса хăваратпăр. Йывăç йăвантарма вĕреннĕ, вăрман илемне упрама пĕлместпĕр.

— Тĕп-тĕрĕс калатăн! — хулăн сассипе вăрмана янратса илчĕ Илле. — Сирĕн те, пирĕн те çавах. Пĕрне хурласа тепĕрне ырламалли çук. Çырма леш енче, вăн, тепĕр участок пур. Çил-тăвăл аркатса хăварнă хыççăнхи пекех унта. Қаласа та пăхнă. Ман сăмах йывăç хăвăлĕнчи çил евĕр çухалать. Пĕрин хăлхине те кĕмест. Сирĕн те чаплах мар, тĕрĕс. «Çăмăл кавалерипе» атакăна тухмалла пуль тетĕп.

Дубов шăпах çакăн пирки сăмах пуçарасшăнччĕ. Илле хăех пуçларĕ те, малалла сăмах кал-кал сыпăнса пычĕ.

— Эсĕ комитет ларăвĕнче пулаймарăн, — терĕ Дубов.— «Çăмăл кавалери» ыйтăвне сӳтсе явнăччĕ унта.

— Вăхăт пулмарĕ Хурашыва пыма, — айăпа кĕнĕн пуçне чикрĕ Иванов.

— Çавăнпа паян хам килсе канашласа пăхма шутларăм, — ăнлантарчĕ ăна Раман. — Тирпейлĕх, тасалăх çинчен манмăпăр-ха ăна. Халĕ вара пĕр тăхтамасăр вăрман вăррисемпе кĕрешӳ пуçарса ямалла.

Йывăç каснă çĕртен вĕсем Мерчĕке тухатчĕç. Поселока çитме нумаях та юлманччĕ. Шавласа пынипе сисмен те, кĕçех çул кукринчен сиксе тухнă лашана пырса çапăнатчĕç.

— Тпру! — чарчĕ юланутçă çӳрен кĕсрене.

Раман пуçне çĕклесе пăхрĕ те комбинезон, шлепке, атă тăхăннă, хулпуççийĕ урлă сăран сумка çакнă çынна тӳрех палласа илчĕ: Стасик! Нумай, пит нумай улшăннă иккен ачаранпа. Тăртанчăкрах пичĕ кăтра кăмпана аса илтерет. Сăнĕ шуркам, сухаллă тата. Шĕвĕ сухал... Çитменнине, кăвакарма пуçланă.

Пăхăр тăхапа илемлетнĕ йĕвенрен ярса тытса лашана чарма пулăшрĕ те Раман юланутçа хыттăн сывлăх сунчĕ:

— Салам, Стасик! Миçе çул курманни!

Стасик якалса çуталнă кивĕ йĕнер çинчен сиксе анчĕ те Раманпа Иллене алă пачĕ. Алли пăр пек сивĕ. Чирлĕ çын алли.

— Вăт тĕлпулу! — хăлаçланчĕ вăл. — Қам шутланă иксĕмĕр çак çул юппинче çапла курнăçасса! Вăт пурнăç! Сире курсан, хăраса тармалла вăрмантан. Иксĕр те упа пек. Улшăнман, нумай улшăнман эс, Раман... Қĕрнекленнĕ,

тёреклеине çеç. Сăну-пуçу çавах. Эп вара... пётрём пулас.

Илле Рамана: «Вăрман пунктĕнче кĕтетĕп», — терĕ те урапа çулĕпе малалла утрĕ. Пĕрле вĕренсе пĕрле ӳснĕ тантăшсем калаçса тăрса юлчĕç. Стасик лашине хурăнран кăкарчĕ. Унтан иккĕшĕ те çул хĕррине такам ӳкерсе хăварнă юман каски çине пырса ларчĕç.

— Да, миçе çул курман сана! — Рамана пĕççинчен çапса илчĕ Стасик, — миçе çул...

— Шкултн сывпуллашу каçĕнченпех, — асăрханса чăмăртарĕ Раман ун аллине. — Тамарăна иксĕмĕр ăсатнă каçранпах.

— Каç марччĕ ун чухне, ирччĕ ĕнтĕ, — тӳрлетрĕ Стасик.

— Камшăн ир, камшăн каç, — тĕртсе илчĕ Раман. — Саншăн — ирччĕ, маншăн — каçчĕ.

— Юрĕ, ара, — пӳлчĕ Стасик, — палкамăпăр пустуй ун пирки, иртсе кайнă ир-каç çинчен. Эс ман пурнăçа пĕлместĕн, эп — санне. Каласа кăтарт-ха ху çинчен малтан, унтан эп калăп.

Сăмах-юмах нумая тăсăлчĕ. Лаша та тăрса ывăнчĕ пулас, урисене пĕр вырăнта канăçсăррăн пускалама пуçларĕ. Стасик хăй шăпишĕн пит кулянать.

— Ухмах эп, — пуçне пăркалать вăл, — лайăххăн каччă пулса та çӳреймерĕм вĕт. Эс, ав, çирĕм тăватта çитсе те авланман, ирĕклĕ кайăк, вĕçсе çӳрен ху пĕлнĕ пек... Саншăн халь хĕр те, инке-матка та туллиех. Эх, мана, ухмаха!

— Кам айăплă вара уншăн? — Стасик еннелле çаврăнса ларчĕ Раман.

— Кам айăплă тетĕн-и? Кам пултăр — иксĕмĕр. Ик ухмах. Тамарăпа иксĕмĕр. Ачаллах тенешкел хĕрарăмпа арçын шутне кĕрсе ӳкрĕмĕр. Ухмахла васкаса...

— Ир татнă çимĕç хăвăрт шанать тенине илтнĕ-и эс, Стасик?

— Илтнĕ те, мĕн тăвăн!

— Çавă çав. Çутçанталăкра, пурнăçра кашнин хăйĕн вăхăчĕ, хăйĕн черечĕпе йĕркиĕ пур.

— Анланатăн-ха та ăна, — пуçне чикрĕ Стасик, — тем пăтрантăмăр эпир. Пĕлетĕн-и, Раман, ман пурнăç мĕнлине? Пăтранчăк кӳлле лекрĕм эп. Куç курми пулса çитрĕ. Çапăнтăм-çапăнтăм та вăн халь Хурашыв çыранне тухса ӳкрĕм. Юрать-ха Тамара шеллерĕ: типпе юлнă пулă пек, çăвара карса кăнса выртма памарĕ. Çăлчĕ. Анланмалларах каласан, эппин, уйрăлнăччĕ эп Тамарăран. Кĕвĕçсе... Экспедицисенче, ылтăн прнискĕсенче çӳрерĕм терĕм-çке. Кайран хама сыватакан врачпа, пĕччен хĕрарăмпа, çыхланса кайрăм. Унта пурăнма куçрăм. Путлĕскер пулмарĕ. Ман куç

умӗнчех урӑххисемпе тухса йӑрккагчӗ. Хамӑн арӑм хамӑн арӑмах терӗм: пӑрахрӑм та килтӗм кунта. Хуньӑмсем йышӑнчӗҫ. Тамара ҫав вӑл... Тамарӑшӑнах килтӗм. Итле-ха, Раман, эс тӗл пулман-и ӑна кунта таврӑннӑранпа?

— Курман, — суйрӗ Раман.

Стасик нухайкка аврипе хӑйӑр ҫинче темле йӗрсем чӗркелерӗ.

— Эп, тен, курнӑ пуль, тӗл пулса калаҫнӑ пуль тенӗччӗ. Ҫавӑнпа йытрӑм, — хӑйӑлтатса илчӗ Стасик.

Раман чӗнмесӗр ирттерсе ячӗ.

Стасик чӗре пӑлханӑвне ҫаплах пусараймарӗ пулас-ха, сӑмахне ниепле те урӑх йӗрпе пӑрса яраймарӗ, хуйхӑрса калаҫрӗ:

— Эп Саратов майри патӗнче пурӑннӑ чухне пӗрре пынӑччӗ те Тамара ман пата, таврӑнма пит йӑлӑнса ыйтнӑччӗ. Эп килӗшмерӗм те, мана вӑл ҫапла ҫунтарса хӑварнӑччӗ: «Хулара упӑшкаллӑ пулаймасан, тухатӑп та каятӑп аннесем патне вӑрмана, шыраса тупатӑп Ромашока, чӗртетӗп тахҫанхи юратӑвне унӑнне», — тенӗччӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн ыйха ҫухатрӑм вӗт. Ан ятла та эс мана, Раман, Тамара сан ятна асӑнман пулсанах, тен, лӑпкӑрах туяттӑмччӗ-и халь хама хам. Кала, тархасшӑн, Раман, тӗрӗссине, чӑнах курман-и эс ӑна?

— Курман, — малтанхи пекех пӗр сӑмахпа тавӑрчӗ Дубов.

— Каҫар эс мана ухмах йӳтетнӗшӗн. Пуҫ пӑтраннипе мар-и! — ури ҫине ҫӗкленчӗ Стасик. — Апла тепре куриччен! — лаши ҫине утланса алӑ сулчӗ вӑл.

Раман ӑна тӑхтама ыйтрӗ:

— Мансах кайнӑ, Стасик. Ӑҫта ӗҫлеме кӗтӗн кунта?

— Мерчӗке, вӑрман пунктне. Коменданта. Вӑ-ӑн, куратӑн-и, тарасаллӑ ҫӑл пур ав ҫав йывӑҫсем хушшинче. Ҫавӑнта пӳрт лартатӑп. Сывӑ пул!

Стасик лаши хыҫҫӑн хӑйӑр сирпӗнсе юлчӗ. Раман юланутҫа пӑхса шухӑша кайрӗ: «Е пӗлет вӑл Тамарӑпа тӗл пулни ҫинчен, е пӗлесшӗн ҫеҫ ҫунать. Вӑт сана «Ҫӑмӑл кавалери!». Урӑх кавалери хӗҫӗ айне пулас мар капла...»

## 17

Ҫу иртсе кайни сисӗнмерӗ те. Раман Дубов куҫса ҫӳрекен ялава алӑран ямарӗ. Кӗркунне районти комсомол организацийӗн конференцийӗ пулчӗ. Раман та вӑрманпромхоз делегачӗсемпе пӗрле райком ҫуртне ҫӗкленӳллӗ туйӑмпа ҫитсе кӗчӗ. Фойере каччӑсемпе хӗрсем юрӑ шӑранта-

раççĕ. Рамансем те юрра хутшăнчĕç. Çамрăксен пит-куçра — савăклăх, уçăмлăх, хастарлăх.

Конференцире Раман сăмах каларĕ. Унччен кунашкал йышлă халăх умне тухса курманскер, вăл малтан хăйне именчĕклĕрех тытрĕ. Унтан майĕпенех тулли зала хăнăхса пычĕ. Сасси унăн калаçнă май Мерчĕкре сăвă вуланă чухнехи пекех вăйланса, вăйланса çĕкленчĕ:

— Владимир Маяковский çапла каланă, — терĕ Раман,— пирĕн революци вăл ĕçре, вĕренӳре, йăлара. Çак сăмахсем паянхи кун та çивĕч хĕçпăшал вырăнĕнчех. Вĕсене пурнăçа кĕртме çуралнă эпир, çĕннишĕн, лайăххишĕн кĕрешсе çĕнтерме çуралнă. Анчах та пирĕн çитменлĕхсем те нумайха. Ытлашшипех лăпкă эпир. Лăпкăлăх вăл — пирĕн тăшман! Ана хирĕç çивĕччĕн кĕрешмелле.

Дубов уйрăмах вăрман вăррисемпе çине тăрса кĕрешмелли çинчен хĕрсе калаçрĕ.

Конференци хыççăн Раман вăрманпромхоз кантурне васкарĕ. Асăрхаман та хайхискер, анатри склад эстакади çумĕнче кĕçех пĕр хĕре пырса тăрăнатчĕ. Картлашка тăрăх сирпĕнсе аннăскерне вăл хăтăрса тăкма та хатĕрччĕ ĕнтĕ. Лешĕ качча хăй маларах çунтарса илме ĕлкĕрчĕ.

— Çӳреççĕ кунта кансĕрлесе, вакун тиеме ярап ак, ва-а-акун ти-и-е-ме! — кăшкăрса пăрахрĕ хĕр, унтан варт çаврăнса пăхрĕ те каялла хăпарса тарчĕ.

Раман тин тăна кĕчĕ. Анюта вĕт-ха ку, çухалнă Анюта! Анюта ĕнтĕ эстакада карлăкĕ урлă уртăннă та пĕр сăмах чĕнмесĕр çӳлтен Рамана сăнаса тăрать. Уринче ун атă, çиййĕнче хура платье, фуфайка.

Каччă эстакада çине хăпарчĕ, хĕр çумне пырса тăчĕ.

— Анюта, эсех-и ку? Апла салам пултăр.

— Салам!

— Кунта мĕн тăван эс? Шупашкартан вутă тиеме килмен пуль те?

— Аха, вакунĕпех турттарса каясшăн-ха. Тиеме пулăшатăн-и?

— Пулăшма пулăшăп-ха та... Ан суй-ха эс. Тĕрĕссине кала.

— Тĕрĕссинех-и? Калас пуль: кунта ĕçлетĕп, смена мастерĕнче.

— Шупашкара каятăп теттĕнччĕ-çке...

— Атте тытрĕ те Шупашкар вырăнне Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумне ячĕ мана. Кăçал заочнăй уйрăма куçрăм. Вĕренетĕп те, ĕçлетĕп те. Ман атте вăл!.. Пĕлместĕнха эс ăна...

Анютăн хăмăр куçĕ кулăпа çиçет. Раман хĕр çӳçпе çып-

çăннă пăчкă кĕрпине курчĕ те, Юманлăх клубĕнче пĕрле кино курнине аса илчĕ. Анютăна вăл нимĕн калама та ĕлкĕреймерĕ, станцие тавар тиенĕ пуйăс çитсе кĕчĕ те чарăнмасăрах кĕрлесе иртрĕ.

— Мĕнле пурăнатăн, Раман? — пуйăс шавĕ витĕр ыйтрĕ хĕр.

— Аванах. Юманлăхран Хурашыва куçса килтĕмĕр. Ĕçе кашни кун çуран çичĕ çухрăм утатпăр. Çапла пурăнатпăр.

— Иксĕмĕр лартнă йывăçсем мĕнле ӳсеççĕ Юманлăхра?

— Лайăхах. Пырса курас кăмăл çук-и?

— Çтаппан мĕнле пурăнать? Пĕрлех ĕçлетĕр-и? — Рамана хуравламасăр ыйтрĕ хĕр.

Çтаппан тесенех Раманăн çанçурăмĕ вĕриленсе кайрĕ. Тӳрех вăл Çтаппан авланасшăн мĕнле çуннине тата Анютăна качча илме ĕмĕтленсе пурăннине аса илчĕ те авăк кăмăлне шăнараймасăр ак мĕнле лаплаттарса хучĕ:

— Авланнăччĕ. Арăмĕ пăрахса кайрĕ. Пĕчченех халь. Качча тухма пултаратăн.

— Э-э, юрать, юрать апла, — эстакада тăрăх сиккелесе чупса кайрĕ Анюта. — Çтаппана кала, амăшне туй сăри ларттартăр!

Раман кунашкал килсе тухасса кĕтменччĕ. Хăй çаврăнăçусăрришĕн тарăхса, нимĕн тума пĕлмерĕ. Аптранă енне ури айне лекнĕ çавра ывăс пек пĕрене пуçне тапса сирпĕнтерчĕ. Кустăрма чугун çул хĕрринчи канава çитичченех кăлтăртатса кайрĕ те шыва шаплатса ӳкрĕ. Анюта эстакада вĕçне çитсе чарăнчĕ, качча кулса алă сулчĕ. Раман карттусне çамки çине пусса антарчĕ те çаврăнса утрĕ.

Çапла, юратура ăнсах пымарĕ-ха Раманăн. Кĕтмен çĕртен Тамарăна тĕл пулсан, ача чухнехи пурнăçĕ тепĕр хут каялла таврăннăн туйăннăччĕ ăна. Тахçан йăлăнтарнă хĕрача ĕнтĕ çине тăрсах çыпçăнма тытăнни каччă чунне тепĕр хут хумхантарса янăччĕ. Халĕ, ак, Стасик таврăнсан, Тамара ăна каллех пĕччен тăратса хăварчĕ. Çак Анюта пит килĕшнĕччĕ ĕнтĕ — вăрмантан пăрахса кайрĕ. Ун чухнех, пĕрле ĕçленĕ кунсенче, Раман чăнласа калас тенĕ сăмаха шӳтлесе-йĕкĕлтесе ирттерсе яратчĕ те, халĕ те çавăн евĕрлех пулса тухрĕ ун. Тем шухăш-ха Анютăн, такам ун чĕрипе пуçĕнче...

## 18

Тепĕр хĕл пуçланчĕ. Малтан юр вăйлах çумарĕ-ха, кайран нĕр харăсах тултарса лартрĕ. Йывăç тураттисем

юр пуснипе пуҫӗсене уснӑ. Вӑрманпа пыракан Раман аяльти туратсене йӗлтӗр туйипе шак! шаккать те юртан иртсе хӑварать. Иртнӗ вырсарникун ҫӳренӗ чухнехи йӗр кӑштах кӑпӑш юрпа витӗннӗ. Ҫив йӗрпе ҫӑмӑллӑн кайса, Раман хутӑш вӑрмана пырса тухрӗ. Кунта чӑрӑш, ҫӑка, юман, кавӑрӑҫ ӳсет. Вӗсем хушшинчех пилеш те пур. Унӑн хӗвелпе йӑмӑхакан хӗп-хӗрлӗ сапакисем таҫтанах куҫа илӗртеҫҫӗ. Раман, пуҫне каҫӑртса, шӑн ҫырласене шӑлпа тата-тата хыпать. Йӳҫӗ-пылак сӗткен ҫӳҫентерсе илсе ӑшчике уҫӑлтарса ярать. Ӑш хыпни ирттӗр тесе, пӗр сапакине каччӑ ним чарӑнмасӑр ҫисе ячӗ. Теприн ҫырлисене татма пуҫланӑччӗ кӑна, сӑмса умӗнчех чӑрӑш йӗкелӗ патлатса ӳкрӗ. Раман пуҫне ҫӗклесе пӑхрӗ те чылай ҫӳлте турат вӗҫӗнче ларакан пакшана курчӗ, пӳрнипе юнарӗ:

— Эс, шельмӑ, мӗн хӑтланан унта?

Пакша, ҫын хӑтӑрнине ӑнланнӑ пек, тепӗр турат ҫине сикрӗ.

— Ан шиклен, тивместӗп. Эп кайсан, анса тӑраниччех пилеш ҫи.

Ҫын пуррипе шуйханса ҫӑка ҫине куҫнӑ пилеш кайӑкӗсем ӑмӑртмалла чӗвӗлтетеҫҫӗ. Пуҫ тӑрринчен мӑшӑр карӑк вашлаттарса вӗҫсе иртрӗ. Чӑтлӑхалла пӑши йӗрӗ кӗрсе ҫухалать. Пыл тути калакан йӳҫек ҫимӗҫе тутанса пӑхасшӑн ҫунакансем Рамансӑр пуҫнех йышлӑ иккен.

Темиҫе сапакана татса шӑлавар кӗсйине чикрӗ те Раман, хӑй кунтан каясса чӑтӑмсӑррӑн кӗтекен пакшапа пилеш кайӑкӗсем ҫине тепӗр хут ӑшшӑн пӑхса илсе, кулакулах малалла ярӑнтарчӗ. Инҫех те каяймарӗ вӑл, пӑшал кӗрӗслетнӗ сасӑпа тӑпах чарӑнса тӑчӗ. Унтан: «Ҫам мӗн тытать-ши ӗнтӗ?» — тесе, сасӑ илтӗннӗ еннелле чавтарчӗ. Тарӑн ҫырма урлӑ хыпаланса каҫнипе сывлӑшӗ пӳлӗнсех ларчӗ. Ҫывӑхрах пӑшал тепре кӗрӗслетрӗ. Раман ҫамрӑк хырлӑха чупса тухрӗ. Ҫырма хӗррипче хӑяккӑн кайса ӳкнӗ пӑши выртать.

Ҫын ҫине ӑнтӑлса пӑхакан айӑпсӑр чӗрчун вилес умӗн асапланса тапкалашать. Суранӗнчен юхакан юн шурӑ юра хӗрлӗ тӗспе сӑрлать. Акӑ пӑши чӗлхине ҫыртса лартрӗ те пӗтӗм кӗлеткипе чӗтресе, туртӑнса илчӗ, вӑрӑм урисене тӑсса ячӗ, пуҫне каҫӑртса, майракипе кӗрте тӑрӑнчӗ. Хупӑнса ӗлкӗреймен пысӑк куҫ Раман ҫине ҫап-ҫуттӑн йӑлтӑртатса пӑхать. Вилнӗ хыҫҫӑн та хӑйне пулӑшма ыйтнӑнах туйӑнчӗ апӑрша чӗрчунӗ.

Ҫурӑм хыҫӗнче юр чӑштӑртатни илтӗнчӗ. Раман вӑртах каялла ҫаврӑнчӗ. Лутака хурама ҫумӗнче Стасик тӑрать. Аллинче — икӗ кӗпҫеллӗ пӑшал.

— Стасик! — кăшкăрса ячĕ Дубов. — Эс петĕн-и?! Мĕн туса хутăн? Пĕлетĕн вĕт тытма юраманнине! Куншăн сана никам та каçарас çук!

— Стой! — пăшалĕпе тĕллерĕ Стасик. — Эпĕ петĕм. Ман пăши. Сан мар, сан ĕç çук. Эп перетĕп. Татах... Сана та. Пăши çумне тӳнтеретĕп.

— Ан выля пăшалпа! — тарăхса кайрĕ Раман. — Мĕн пулнă сана?! Ухмаха тухрăн-им?!

— Вылямастăп, — шăлне шатăртаттарчĕ Стасик. — Ухмаха та тухман. Тăр тетĕп сана хускалмасăр. Ан ут кунталла. Перетĕп! Тахçанах кĕтеттĕм ку самантa эпĕ. Халь эсĕ ман алăра.

Раман Стасикран пилĕк-ултă утăмра чарăнса тăчĕ. Туйрĕ вăл, шӳтлемест Стасик. Тем те кĕтме пулать унран. Ача чухнех пĕр ним маршăн чĕрре кĕме юрататчĕ.

— Мĕн усалли тунă вара эп сана ун пекех? — аптранă енне ыйтрĕ Раман.

— Нимĕн те туман! — шăл йĕрчĕ Стасик. — Ха, нимĕн те туман вăл! Таса каччă. Тăр вырăнта! Ан çывхар! Тамарăшăн тавăратăп сана, Тамарăшăн вĕлеретĕп. Унпа асса пурăннăшăн. Ăнлантăн-и? Йăлтах паллă халь мана. Малтан пĕлсех кайманччĕ. Хам ăшра çеç шутлаттăм. Мерчĕк патĕнче пĕрремĕш хут тĕл пулсан та санпа чун уçсах калаçрăм. Халĕ те нимĕн пытармасăр калаçатăп.

— Кам элекленĕ сана?

— Никам та элеклемен. Тĕрĕссине каларĕç. Пĕлесех тетĕн пулсан, пĕл виличчен: хуньăм каларĕ, Тамара та тунаймарĕ.

— Тамара? Ну, тĕл пулнă пултăр! Калаçнă пултăр! Вара мĕн? Эс ху та ун чухне урăххипе пурăннă. Ăна пăрахса кайнă. Путсĕр!

— Ман арăм вăл Тамара. Пĕлетĕн-и çавна? Арăм! Юрататăп эп ăна. Ан кĕр пирĕн хушша. Шкултах уруна çапса хуçасшăнччĕ санне—темме хуçман. Тек сĕнкĕлтететтĕн Тамара хыççăн.

— Эп нихçан та сĕнкĕлтетмен, эс ху! — тарăхса кăшкăрчĕ Раман. — Кам илсе тарчĕ ăна хулана? Илсе тарсан та телей кӳмерĕн. Тен, манпа телейлĕрех пулатчĕ. Хуçрăн эс ун пурнăçне! Эп санран хăрамастăп! — сасартăк пĕр утăм малалла ярса пусрĕ Раман. — Хăрамастăп айван чунлăскертен, хăрамастăп!..

Çав вăхăтра пăшал сасси янăраса кайрĕ. Хăратмалла кăна печĕ-ши Стасик. Рамана пуля лекмерĕ. Тем хушăра Стасик патне çитсе пăшалне туртса илчĕ каччă, юман çумне çапса аркатрĕ. Унтан урса кайнă Стасика янахĕнчен

çапса йăвантарса ячĕ те килнĕ йĕрпех каялла çаврăнса ярăнтарчĕ.

## 19

Вăрманти хăрушă тĕлпулу пăтăрмахĕ Раманпа Стасик хушшинчех юлчĕ. Пĕри те никама та шарламарĕ ун çинчен. Сехри хăпса тухнă Стасик перекет кассинчен укçа илчĕ те пăшишĕн хăй прĕкĕпе штраф кайса тӳлерĕ.

Раман ăна хĕл каçиччен те тек тĕл пулмарĕ. Тамарăпа вара курнăçса калаçнăччĕ. Иртнĕ кĕркунне район центрĕнче музыка шкулĕ уçăлчĕ. Тамара унта ĕçлеме килнĕ. Шкулĕ вăрманпромхоз кантурĕнчен инçех мар, тăрăхла пĕр çуртра вырнаçнă. Тамарăна ăнсăртран урам кĕтессинче тĕл пулчĕ Раман. Занятисем хыççăн хваттерне таврăнатчĕ леш. Рамана вăл хăйпе пĕрле чĕнчĕ. Çул çинче те, пӳрте кĕрсен те калаçу çыхăнсах каймарĕ. Çавна сиссе-ши. Тамара пианино умне пырса ларчĕ, каччă çине йăлтăркка куçĕпе ытарлăн пăхса илчĕ те выляма пуçларĕ. Клавишсем тăрăх чупакан çинçе пӳрнесем, усăнса аннă кăтра çӳç пайăркисем çине куç сиктермесĕр пăхса ларчĕ Раман, чуна тивекен кĕвве тимлесе итлерĕ.

— Чайковский, — ăнлантарчĕ выляса пĕтернĕ хыççăн Тамара. — Фортепьянопа оркестр валли çырнă Пĕрремĕш концерт. Мĕн тери çĕнтерӳллĕн янăракан кĕвĕ! Хăватлă, савăнăçлă самантсем лирикăллă туйăмпа улшăнса пыраççĕ. Гимн пек янравлă. Мĕн чухлĕ илемлĕх!

Хавхаланса калаçакан Тамарăна Раман ăмсанса, кĕвĕçсе пăхрĕ. Хăй вăл музыкăна питĕ япăх пĕлет-çке-ха.

— Пĕлетĕн-и, — юнашар пырса тăчĕ Тамара, — çак концерта унăн тусĕ Рубинштейн пит ăста вылянă. Халĕ те тĕнчери чи чаплă пианистсем калаççĕ ăна, кашниех унта хăйне евĕр çĕнĕлĕх тупать. Эх, эсĕ те çав, ман Ромашок... Паян ку концерта эпĕ, ара, саншăн темле питĕ хавасланса вылярăм. Кун пек нихçан та выляйман эпĕ ăна. Ӳлĕмрен те выляймастăп пуль. Çук, пулмасть, Ромашок.

Тамара икĕ аллине те Раман хулпуççийĕ çине хучĕ, каччăн хура куçĕнчен тĕмсĕлсе-тĕмсĕлсе пăхрĕ, чунĕ кӳтсе килнипе йĕрсе ячĕ. Ĕсĕкле-ĕсĕкле калаçрĕ вара:

— Стасик çисе ярать мана, чĕрĕллех кăшлать. Сан çумна хушса кĕвĕçет. Сунара кайнăччĕ вăл пĕррехинче. Аран сĕтĕрĕнсе çитрĕ. Шăтăкран упа тухса тапăнчĕ тет. Хăйне, хĕрхенсе, васкасах больницăна леçрĕм. Сывалса таврăнчĕ те манпа хирĕлме пуçларĕ. Сана та, мана та хăратать. Аттепе иккĕшĕ пĕр майлă. «Аскăнчăка аскăнчăк

вилĕмĕ кĕтет», — тесе хĕнет мана Стасик. Пĕр каçхине, нӳхрепе хăяр илме ансан, алăкне хупса питĕрсе илчĕ те... ирччен те кăлармарĕ. Шăнса кӳтрĕм. Чирлесех ӳкрĕм. Аран-аран сывалтăм. Эх, пурнăç! Ма ухмах пулнă-ши çамрăк чух? Ма юратнă-ши çав тăмсая? Халь пулсан-и? Халь ним тума та çук. Халь чăтмалла. Хăçанччен-ши? Пурпĕрех вĕлеретĕп тет. Сана та, мана та. Мĕн тăвас ман? Мĕн тăвас?

Раман Тамарăна аран-аран лăплантарчĕ. Қайран, ăсатнă чух, Тамарăн куçĕнче хаваслăх хĕлхемĕ çиçетчĕ, тути ырă кулăпа илемленнĕччĕ.

Раман хăлхинчен пианино сасси кунĕпе те, çĕрĕпе те каймарĕ пĕлмерĕ. «Эх, — шухăшĕпе тăвăлчĕ каччă, — нивушлĕ ку Тамарăран хăпса пĕтейместĕп эпĕ? Мĕншĕн хĕрхенетĕп-ха ăна? Вăл мана хĕрхенчĕ-и? Стасикĕ этем мар, паллах. Анчах уншăн кам айăплă-ха? Тамара хăй суйласа илчĕ ăна, мана тиркерĕ...»

## 20

Çăва тухсан, Раманăн Мерчĕк коменданчĕпе каллех таппа-хирĕç тĕл пулма тӳр килчĕ.

Илле Иванов ăна поселок хыçне çитичченех ăсатса хăварчĕ. Унран уйрăлсан, Дубов тӳрех Хурашыв еннелле утрĕ. Телефон линийĕ карма каснă уçă вырăнпа пырать. Хурашыв айлăмĕ тăрăх çырма-çатра нумай, пĕр тĕлте шурлăх та пур. Сукмак икĕ айккипе те мăк ӳсет. Қайнăçемĕн сывлăш нӳрелсе пычĕ. Ӳпре йышлăланчĕ. Шурлăх ĕнтĕ таврара. Сукмак сулахаялла пăрăнчĕ. Çĕр çинче таканланă лаша ури йĕрри палăрать. Умра темле шăв-шав илтĕнчĕ. Раман, сукмакран пăрăнса, йĕр тăрăх кайрĕ. Утма шанчăклăрах пултăр тесе, шĕшкĕ касса вăрăм туя турĕ. Кĕçех вĕтлĕх хыçĕнче лаша пуçĕ курăнса кайрĕ. Çур кӳлепи таран çăрăлчăка путса аннă янавар малти урисемпе тапаçланать. Çумĕнче çын йăшăлтатать. Лапăртанса пĕтнĕскерне, ăна паллама та çук. Қурпун кĕлетке. Қачака сухал. Шапа куçĕ пек тулалла куç. «Стасик вĕт ку!»

Стасик Рамана асăрхарĕ-ха, анчах сăмах чĕнмерĕ. Раман та шарламарĕ.

Ку вырăна хĕлле каснă. Хатĕрленĕ йывăçа турттарса тухма ĕлкĕреймен. Раман мунча пĕрени пек хурăнсене пĕрерĕн-пĕрерĕн сĕтĕрме пуçларĕ. Тăватă метр тăршшĕ татнăскерсем ытла йывăрах мар. Вĕсенчен вăл пĕр рет хурса кĕпер пекки турĕ. Ун тăрăх Стасик патне çитрĕ. Стасик ушах тĕл урлă лашапа сиксе каçасшăн пулнă пулас

та — сиксе каҫайман. Кӗсрен кайри урисем лачакана путнӑ, хуҫин сулахай урине йӗнер ӗсенкипе хирӗнтерсе лартнӑ. Стасик урине кӑларма ҫӑмӑлах пулмарӗ. Раман йӑлт пылчӑкланса пӗтрӗ. Халтан кайнӑ Стасика вӑл, пӗренс кӗпер тӑрӑх сӗтӗрсе тухса, хӑва тӗмӗ айне пырса вырттарчӗ. Лешӗ сылтӑм куҫне хупласа лартнӑ пылчӑка пӳрнипе шӑлса пӑрахрӗ, сухалне тасатса якаткаларӗ, вара, йынӑшса илсе, тин сӑмах хушрӗ:

— Тавах сана, Раман. Эп сана пулӑшмасть пуль тенӗччӗ. Курсан та, палласан та юри чӗнмерӗм.

— Эх, сана, йытӑ пуҫне! — чышкине ун сӑмси умне тытса кӑтартрӗ Раман. — Леш тӗнчере мар, ҫут тӗнчерех тӗл пултӑмӑр иккен иксӗмӗр! Ан ман, эпир пурӑнма ҫуралнӑ. Вилме мар. Пӑх-халӗ ҫут тӗнче ҫине, итле кайӑксен юррине! Пурӑн, савӑн. Тӑмсай!

Стасик чӗнмерӗ. Тӗм кутӗнче йӑшӑлтатакан хурт-кӑпшанка пӑхса выртать, хушӑран урине хыпашласа айлатса илет. Раман ӑна ҫапла хӑварса Мерчӗкелле чупрӗ.

Вӑл Илле Ивановсемпе каялла ҫитнӗ ҫӗре Стасик тӑрса ларнӑччӗ ӗнтӗ. Лаши вара пушшех путса аннӑ, ҫурӑмӗ ҫеҫ курӑнать темелле. Кӗсрене, вӗренпе ҫаклатса, эрталпе туртса кӑларчӗҫ. Раманпа Илле Стасика, икӗ енчен ҫавӑтса, Мерчӗке илсе ҫитерчӗҫ, йывӑҫ пушатса пӗтернӗ лесовоз ҫине лартса, больницӑна ӑсатрӗҫ.

## 21

Дубов хӑйӗн бригадинчи ҫынсене ӗнтӗ йӑлтах хӑнӑхса ҫитрӗ. Пурте ҫамрӑк, вӑйпитти. Хӗлӗх Хӗлимунӗ те шухӑштуйӑмӗпе шухӑ-ха. Пӗрехмай Улька Салканова ҫумнелле йӑпшӑнать.

Улька качча кайман ҫирӗм улттӑри хӗр. Юманлӑхри столовӑйне Хурашыва куҫарса кайсан килсе кӗчӗ вӑл Дубов бригадине. Уҫӑ кӑмӑллӑ ӗҫчен хӗре темшӗн ҫутҫанталӑк сӑн-питрен кӳрентернӗ. Арҫынларах тӗслӗскер, куктӗрриллӗ питне пытарас тесе-ши, тутӑрне хупларах ҫыхать. Ахаль те тӑрӑхларах питҫӑмартийӗсем вара пушшех шӗвӗрӗлсе юлаҫҫӗ. Сарлака тута хӗррисем тутӑр айнех кӗрсе каяҫҫӗ. Кулнӑ е калаҫнӑ чух сайрарах шӑлӗсене алӑ тупанӗпе картласа пытарать. Кӗлетки типшӗм, кӑшт курпунтарах. Урисем ҫинҫе. Сӑмах-юмахран вара ӑна тур панах темелле. Чӗлхи ҫивӗч пулнӑранах пуль Улькаран куҫ умӗнче никамах та кулма хӑяймасть.

— Шыҫмак сӑмсуна пуртӑ айне ан чик, Хӗлимун, — уҫӑ сасӑпа янратрӗ Улька. — атту ҫӗрӗк турат тесе касса вар-

кăнтарăп. Сăмсасăр катемпи пулса ан юл тата. Ан çулăх!

Хĕлĕх Хĕлимунĕ мăкăртата-мăкăртата аллине пуртă тытать, касса ӳкернĕ йывăç патнелле кăвакал пек пăркаланса утать. Укахви Макина Улька сăмахĕнчен каçса кайса кулать.

Укахви Улькаран пĕр çул çеç аслă. Çапах вăл пĕрле ĕçлекен тантăшĕсенчен ытларах пурнăç курнă, хура-шура çамрăклах тӳснĕ. Ашшĕсĕр ӳснĕскер, вунсаккăртах качча тухнă вăл. Юманлăх поселокне упăшкипе пĕрле ĕçлеме килнĕ. Упăшки ăнсăртран йывăç çапнипе вилсен, пĕчченех тăрса юлнă. Ачи-пăчи те çук. Укахви те хĕр пекех. Илемлĕ, кăмăллă сăн-питлĕ, яштака çамрăк хĕрарăм çине хушăран Раман хăй те юратуллăн пăхкаласа илет. Уйрăмах ăна Укахви кулли кăмăла каfive. Авă, халĕ те вăл пĕтĕм кăмăлтан киленсе кулать. Ĕçре арçынсенчен нимĕн чухлĕ те юлмасть. Ытларах тинтерех бригадăна килнĕ Çинахван Сафинпа юнашар ĕçлет. Килĕшет-ши вăл ăна? Çирĕм пиллĕкелле çывхаракан Çинахвин хусах-ха, салтакран иртнĕ кĕркунне таврăннă. Монгол сăнлă хурарах çӳçлĕ каччă хăйне Укахви тĕсесе пăхнине чăтаймасть. Хĕрарăмран вăл аяккарах пăрăнма тăрăшать. Укахви пурпĕрех ун çумнеллех туртăнать.

— Вăт тĕнче, интереслă! — терĕ пĕррехинче Çтаппан.— Куç Укахви çине пăхать, шухăш Улька çинче. Ма вăл, Раман, ун пек?

Раман, хĕрнĕ пăчка кăшт сивĕтме тесе чарнăскер, пулăшакана çурăмĕнчен лăпкарĕ:

— Ма тесе сурăх калать, тусăм, — терĕ вăл. — Сурăх пулар мар. Эпир иксĕмĕр ун çине пăхса тăни вăл хăй пирĕн çине пăхнине пĕлтермест. Асăрхас пулать Укахви куçĕсем кам çинелле хĕм сапнине. Пуçунта Улька пулсан, куçунта та Ульках пултăр. Ăнлантăн-и? Вылянчăк шухăшпа пуçна ан çĕмĕр.

Çтаппан ĕçленĕ чухне пĕтĕм вăйне парса ĕçлет. Хурăна сĕткен юхтарма касса пăснăшăн ятланă хыççăн халĕ вăл вăрманти кашни йывăçа шелleме пуçларĕ. Пурнăçĕ ăнманнишĕн хушăран кулянкалать, арăмне аса илет. Ăна хытă тарăхать. Çапах та авланас шухăша пăрахмасть-ха. Улька Салкановăна аякран сăнать, хăйпе каласма шикленет. Сана Улька, качча пырсан, чĕрĕллех çисе ярать тесе сехĕрлентерсе тăрать ăна Хĕлĕх Хĕлимунĕ.

Бригада туслă, пĕр шухăшлă пулнăшăн, ĕçе юратнăшăн Дубов савăнать. Вăрманпромхозра вĕсем чи лайăх коллективсен шутĕнче.

## 22

Миша Фильчинпа Дубов Улатăртан таврăнаççĕ. Миша тусне хăнана чĕннĕччĕ. Чугун çул вăрман витĕр выртать. Пăва станцине çитрĕç. Кунта вăрман пункчĕ, юнашарах склад пур. Первомайскран унта пуйăспа ĕçе çӳрекен, тĕрлĕрен ĕçпе пыракан çын сахал мар. Халĕ вĕсем киле таврăнма пуçтарăннă ав, перрон çинче ушкăн-ушкăн хĕвĕшсе тăнăскерсем пуйăс чарăннă-чарăнман вакун алăкĕсенелле чупрĕç.

Дубовпа Фильчин ларнă вакуна Иван Капитоновичпа тепĕр çын кĕрсе тăчĕç. Мастер кĕрнеклĕ ватă арçынна хăйĕнчен маларах иртгерчĕ. Ку çынна Раман пĕлет. Анатри складра курнă. Яльчиков хушаматлăскер. Кăвак френчпа галифе, атă тăхăннă, пуçĕнче сукна карттус. Сухалне яка хырнă. Тăнлавĕсем шап-шурă.

— Кунта хамăр ачасемех пыраççĕ-иç? — сывлăх сунчĕ Арсентьев, — атя ларар, Иван Яковлевич.

Пуйăс вакунсене картлаттарса вырăнтан хускалчĕ.

— Улатăртан таврăнатпăр, Мишăсем патĕнчен, — сăмах май пĕлтерчĕ Раман, — ĕнер кайрăмăр та... Ашшĕ те халь ун пĕрлех, кунтах — пăравус тытса пырать.

— Ватти туртать, çамрăкки катаччи чупать апла, — терĕ Иван Яковлевич. — Пĕлекенччĕ улатăрсене. Хушаматăр мĕнле-ха?

— Фильчин, — קаларĕ Миша. — Павел Фильчин ман атте.

— Ун пек машиниста пĕлейместĕп. Анчах Фильчина, Фрол Васильча, лайăх паллатăп. Милици начальникĕнче ĕçлетчĕ. Маттур çынччĕ.

Яльчиков сăмахĕпе хавхаланса ӳкнĕ Миша ун çумне куçса ларчĕ, калаçма тытăнчĕ.

— Ман асатте вăл, Фрол Васильч.

— Вăт мĕнле! — Мишăна куçран тинкерсе пăхрĕ Яльчиков. — Киле кайсан, аслаçуна пысăк салам кала, Иван Яковлевичран, Первомайск ватсупиинчен, те.

Миша пĕр хушă аптраса ларчĕ, аллинчи хаçата пĕтĕрчĕ-пĕтĕрчĕ те аран-аран:

— Асатте çук çав ĕнтĕ пирĕн, — терĕ пуçне усса.

— Шел, шел Фрола, — сарлака çамкине шăлса илчĕ Иван Яковлевич, — сахал мар контрăна тустарнăччĕ пĕрле. Эп унта хула Советне ертсе пыраттăмччĕ ун чухне...

— Саламăра аттене калăп, — сăмаха татасшăн пулмарĕ Миша.

— Мĕн тăвăн, çамрăк çыннăм, аслаçу вилнĕ пулсан,

апла аçуна кала,— аллисене çĕрелле усса ларчĕ Яльчиков. Унтан вакун чӳречинчен пăхса илчĕ те Мишăран:— Ху ăçта ĕçлетĕн-ха — тесе ыйтрĕ.

— Вăрманпромхозра. Анчах йывăç каснă çĕрте мар. Клубра.

— Апла пĕр çĕртех ĕçлетпĕр, пĕр коллективрах. Эп те, вăн, ватсупнă тесен те çылăх мар, кăштăртататăп çынсемпе пĕрле.

— Ун пек ан калăр-ха, Иван Яковлевич,— калаçăва хутшăнчĕ Арсентьев,— сире тепĕр çамрăкки те çитес çукха!

— Мухта ĕнтĕ, мухта,— каллех чӳречерен пăхрĕ Яльчиков,— сăмаххи çеç вăл. Пĕрре ватлăх енне кайсан унта...

— Туртса тимĕр татмалла халь,— килĕшмерĕ Иван Капитонович, — вăл, Раманпа иксĕр пăхаттир пек ларатăр.

— А эс çемçешке пуль,— терĕ Яльчиков.— Пĕлетпĕр сана! Хам куç умĕнче ӳсрĕн вĕт.

Пуйăс разъездра чарăннипе калаçу пĕр вăхăтлăха татăлчĕ. Акă, пăравус вăрăммăн кăшкăртрĕ те, вакун кустăрмисем каллех рельс сыпăкĕсене шутлама тытăнчĕç.

— Вăт, Раман, тахçанах паллаштарас тенĕччĕ сана хамăн пĕрремĕш учительпе, шкултипе мар, ĕçрипе, пурнăçрипе. Ун патĕнче вĕреннĕ эп юман тукмакки çапма.

— Эс, Йăван, мана мухтама хăçан пăрахан? — сарлака аллине Арсентьев хулпуççийĕ çине хучĕ Яльчиков.— Юлашки хут калатăп, асăрхаттаратăп. Çамрăксем умĕнче пите хĕрететĕн. Юман каска çурма вĕрентнĕ эпĕ ăна... Пăх-халĕ... Эс мана çамрăксемпе лайăхрах паллаштар. Пирĕн иртсе кайнă. Ман вĕсем çинчен пĕлес килет.

Иван Капитонович юлташне тек хирĕçлемерĕ, меллĕрех вырнаçса ларса:

— Акă ку, ху пекки, пăхаттирĕ,— терĕ,— бригадир, Раман Дубов. Ман патра ĕçлет, тепри, каларĕ ĕнтĕ, тусун мăнукĕ — Миша, «Хурăнлăх» клуб заведующийĕ. Малтан мотористра ĕçлетчĕ. Халĕ, вăн, культура фронтĕнче.

— Тахçанах çавăнтан пуçламаллаччĕ,— алă пачĕ çамрăксене Яльчиков.— Иван Яковлевич теççĕ мана, анатри склад мастерĕ.

— Аслă мастер,— тӳрлетрĕ ăна Арсентьев.

— Каллех мана çӳлерех хăпартасшăн,— пӳрнипе юнарĕ ăна Яльчиков.

Çамрăксем Яльчиков пурнăçĕпе питĕ кăсăкланчĕç. Ара, куп сăлтавĕ пĕчĕк мар вĕсен. Фильчинпа Раман аслашшĕ-

сем, Фрол Васильевич вырăспа Юман Йăкăначĕ чăваш, Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче Улатăрта пĕрле ĕçленĕ. Фрол Фильчин паттăрла пуç хунă Йăкăнат милиционерăн пуçлăхĕ пулнă. Çакна каччăсем Рамансен ялне хăнана кайсан ăнсăртран пĕлнĕччĕ. Миша Дубовсен килĕнче çакăнса тăракан кивĕ сăнӳкерчĕкре хăйĕн аслашшĕне палласа илчĕ те, пуçланчĕ вара калаçу! Калаçăва Раман амăшĕ те хутшăнчĕ, иртнине аса илсе кала-кала кăтартрĕ. Çапла вĕçĕ-хĕррисĕх те тупăнчĕ. Халĕ тата, ак, вĕсен аслашшĕсемпе пĕр вăхăтри, Совет влаçĕшĕн вĕсемпе пĕрле кĕрешнĕ çын юнашарах ларса пырать. Епле калаçмăн-ха унпа, епле ыйтса пĕлмĕн! Çулăхмаллинех çулăхрĕç çамрăксем Яльчикова.

— Юрĕ, эппин, — килĕшрĕ лешĕ. — Мухтанни пек пулать те, юрĕ ĕнтĕ. Итлĕр. Ялти прихут шкулĕнчен вĕренсе тухсан, малалла вĕренесси пулмарĕ, укçа çукчĕ. Донбаса тухса кайрăм вара. Шахтăра хамăр ялсем нумаййăн ĕçлетчĕç. Унта пилĕк çул пилĕк аврăм. Вунултăмĕш çулхи раштавра салтака илчĕç. Шавлă Питĕре лекрĕм, лейб-гвардин Измайловски полкне. Февральти революцие хутшăнтăмăр. Финляндски вокзалта Ленина кĕтсе илтĕмĕр.

— Чăнах-и? Ленина хăвăр куçăрпа курнă-и эсир? — калаçăва пӳлсех ыйтрĕç Мишăпа Раман.

Иван Яковлевич пуçне пăркаласа кулса ячĕ:

— Тем, ĕненмеççĕ курăнать ку çамрăксем мана, Иван Капитонович?

— Ĕненмесĕр мар, Иван Яковлевич, тĕлĕннипе эпир. Эсир ан кӳренĕр ĕнтĕ, — лайăхмарланчĕ Раман.

Яльчикова вĕсем малалла питĕ тимлесе итлерĕç.

— Пирĕнтен виç-тăватă утăмрах, куç умĕнчех, Ленин броневик çинче сăмах каларĕ. Тепĕр кунне эпĕ яла çыру çырса ятăм, Ленина курни çинчен пĕлтертĕм. «Аврора» залп панă вăхăтра эпир Нева çыранĕнче пулеметпа хурал тăтăмăр. Хĕллехи кермене штурмланă хыççăн отряда казармăна куçарчĕç. Унтан Балтика тинĕс морякĕсемпе пĕрле Питĕре Корнилов çарĕсенчен хӳтĕленĕ. Хĕрлĕ Çарăн регулярлă чаçĕсене туса хуриччене Крыленко отрядĕнче тăтăмăр.

Пуйăс чарăнчĕ.

— Вăт, çитрĕмĕр те, — Иван Яковлевич чĕлĕмне махорка пусса тултарчĕ, — калаçса вăхăт иртни те сисĕнмерĕ.

Вакунран пĕрлех тухрĕç, чугун çул хĕррипе утрĕç. Раманпа Миша Яльчиковран çаплах хăпмарĕç-ха. Малалла мĕн пулнă та мĕн пулнă тесе çеç пыраççĕ.

— Ан тархаслаттар ӗнтӗ ҫамрӑксене, каласа пар, — вӗсен хутне кӗчӗ Иван Капитонович. — Атя, кантура кӗрер те...

Анатри склад кантурӗ эстакада ҫумӗнчех. Пысӑк мар кивӗ йывӑҫ ҫуртра пӗр енче начальник пӳлӗмӗ, тепӗр енче — бухгалтери. Вӗсене хирӗҫ склад начальникӗ Безбородов васкаса тухрӗ.

— Ӑҫта васкатӑн ҫак, Лука Палыч? — ыйтрӗ унран Яльчиков.

— Директор чӗнет-ха. Вакунсем пирки. Эсир кӗрсе ларӑр.

## 23

Безбородов сӗтелӗ хыҫӗнчи стена ҫинче чылай пысӑк ӳкерчӗк ҫакӑнса тӑрать. Грековӑн чапа тухнӑ «Тачанки». Ҫамрӑксем ӑна тимлесе пӑхнине кура Яльчиков та ун умне пырса тӑчӗ.

— Ӑйлӑ ӳкернӗ вӗт, ачсем? — чӗлӗмне паклаттарчӗ вӑл. — Пӗр пӑхма тытӑнсан уйрӑлма пӗлместӗн. Тӑратӑн-тӑратӑн та, куҫ умӗнче тачанка малалла ӗрӗхет, хӑлхана ҫапӑҫу шавӗ пырса кӗрет. Лашисем чӗрӗ пекех!

Унпа килӗшсе, пурте пуҫӗсене сулчӗҫ.

— Ытти чаплӑ художниксене те юрататӑп эп, — мӑйӑхне шӑлкаларӗ Иван Яковлевич. — Ҫапах та Греков маншӑн чуна питӗ ҫывӑх. Граждан вӑрҫин эпизочӗсенче вӑл хӑйне евӗрлӗ уйрӑмлӑх тупма пӗлнӗ, ҫав вӑхӑтри революциллӗ романтикӑна чӗррӗн кӑтартма пултарнӑ. Ҫыннисем те, лашисем те, ҫеҫенхирӗ те чӑн-чӑн пурнӑҫри пек ӗнентерӳллӗ. Греков ҫав вӑл. Митрофан Борисович. Казак. Хӗрлӗ Ҫар добровольцӗ. Пӗрремӗш утлӑ ҫарӑн мухтава тухнӑ похочӗсене хутшӑннӑскер. Эп те ҫав ҫартах пулнӑ. Халь хамӑн ача та ҫар художникӗ. Курма килсен, Лука Палыча парнелӗх ӳкерсе парса хӑварчӗ ҫакна. Начар мар репродукци. Безбородов хӑй те кавалери офицерӗ пулнӑ. Юратать ҫил пек ӗрӗхсе пыракан утсене. Ха, епле тулхӑрса ыткӑнаҫҫӗ вӗсем, тӑваттӑшӗ те...

— Эх, тачанка!.. — ура тапса, аллине сулласа хуллен юрласа ячӗ Яльчиков. — Сальск ҫеҫенхирӗсем аса килчӗҫ, — пукан ҫине йывӑррӑн кайса ларчӗ старик. — Миҫе ҫӗр ҫухрӑм чупнӑ-ши «максим» лартнӑ тачанкӑпа!.. Вунтӑххӑрмӗш ҫулхи кӗркунне шуррисем анлӑ наступлени пуҫларӗҫ. Мана ҫав кунсенче штаба чӗнтерчӗҫ. «Пулеметчиксен уйрӑм командине йышӑнӑр. Шуррисене Славянск патне тухма памалла мар», — терӗ полк командирӗ. Ҫам-

ракчĕ эпĕ ун чухне. Вăтăр ултă пулемет расчечĕ шанса пачĕç мана. Савăнтăм та, шиклентĕм те. Ответлăх пысăкçке. Наступлени ир çинче пуçланчĕ. Тăшманăн темиçе атакине сирсе ятăмăр. Пурпĕрех каялла чакмарăмăр. Амантăм. Сывалсан батальон пачĕç. Вăрçă чарăнсан киле таврăнтăм. Тăван çĕршыв аслă вăрçинче артиллери полкĕн командир заместителĕ, полк штабĕн начальникĕ пултăм. Днепр патĕнче йывăр амантăм. Çĕнтерӳ хыççăн каллех вăрмана çаврăнса çитрĕм, Первомайсках.

— Кунта чи малтан хăçан килнĕ вара эсир? — ыйтрĕ Раман.

— Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕ хыççăн. Унта та аларан пăшал яман-çке. ЧОН батальонĕн командирĕччĕ. Кăнтăрла алăра ручкăччĕ, каçхине — пăшал. Вĕренсе тухсан, çакăнта килмелле пулчĕ, çĕнĕрен йĕркеленĕ вăрманпромхоз директорне лартрĕç.

Раманпа Миша тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕç.

— Эсир пĕрремĕш директор пулнă-и вара? Чăнах-и? Эпир мĕнле пĕлмен ун çинчен!

Иван Капитонович вĕсене лăплантарчĕ:

— Тухса çӳремелле ытларах вăрмантан халăх çине, темĕн те илтсе-курса пĕлĕр вара.

— Вăт кампа паллашрăмăр! Виçĕ ăру паттăрĕсен тĕлпулăвне ирттермелле пирĕн. Юрĕ-и, Иван Яковлевич? — каллĕ-маллĕ утрĕ Раман. — Сирĕнтен хăпмастпăр халь, çук.

— Кун пек çамрăксене ниМĕнле крепость та парăнмасăр тăраймĕ, — терĕ Яльчиков. — Парăнатăп.

— Тĕлпулăвне, — хутшăнчĕ Арсентьев, — Юманлăх вăрманĕнче ирттерĕпĕр. Дубов милиционер юманĕ айĕнче.

— Виçĕ юман патĕнче. Тĕп-тĕрĕс! — савăнчĕ Миша Фильчин та.

Иван Яковлевич «Тачанка» çине, унтан Раманпа Миша еннелле, каллех ӳкерчĕк çине пăхса илчĕ те:

— Сирте эпĕ хамăрăн çамрăклăх хĕрӳлĕхне куратăп, ачсем, — терĕ. — Ан çухатăр çав хĕрӳлĕхе нихçан та. Эх, тачанка...

## 24

Вăрман ĕçĕ çамрăк шăмшака та самаях лутăркать. Каçалапа пилĕк авăнми пулса çитет, кĕлетке чул пек хытса ларать. Делянкăран таврăннă чух ураран ура иртмест. Ĕç тумтирне хывса пăрахса çăвăнса тасалсан тин çанçурăм уçăлать. Раман костюм тăхăнса урама тухрĕ, вăрманпромхоз еннелле васкаса утрĕ. «Директорпа партком секретарĕ

мĕн çăмăлпа чĕнтернĕ-ши? Комсомол ĕçĕпех пуль ĕнтĕ»,— çак шухăшпа пырса кĕчĕ вăл кантура. Секретарь пӳлĕмĕнчен ăна хирĕç Яковлев хăй тухрĕ. «Директор, патĕнче пухăнатпăр, атя часрах», — Семен Трофимович Рамана калаçма памасăрах коридор тăрăх çавăтса кайрĕ.

Мерчĕк картунĕн лесникĕ Сятров çинчен çăхав пур иккен. Вăл ытлашши вырьăх усрать, вăрмана таптаттарса çĕмĕрет тенĕ унта. Çăхав тĕрĕслекен комиссие Дубова та кĕртме шутланă, çавăнпа чĕннĕ.

Комисси вырсарникун Мерчĕкелле çул тытрĕ. Хĕвел анас умĕн вăрманпромхоз газикĕ картуна çитсе чарăнчĕ. Хуçи килĕнчех. Лесник пӳртрен васкамасăр тухрĕ, шала кĕме чĕнчĕ. Хăнана мар, çăхав тĕрĕслеме килни çинчен ăнлантарсан, Сятров куçĕ сиввĕн ялкăшса илчĕ. Вăл çӳхе тутине пăрса лартрĕ, талпăнса вĕрекен йыттине хăмсарчĕ те:

— Лесник çинчен нихçан та шалăп çырмасăр пулман пуль, — тесе мăкăртатрĕ сиввĕн. — Манран ирĕк. Тĕрĕслĕр.

Тавралăха самаях каçхи сăн çапнă ĕнтĕ, сывлăш уçă. Лăпкă. Вĕтлĕх вăрмантан тухнă выльăхсем картуналла канлĕн утаççĕ. Сăвакан виçĕ ĕнепе сакăр тына пăрушĕ хайхи «Раман пĕвине» тăрăнчĕç. «Тамара пĕвинчен» виçĕ лашапа икĕ тиха, пĕр ушкăн сурăх шыв ĕçет. Йышлă кăвакалсем пĕве çийĕн чĕлтĕрти хумлă йĕр хăвараççĕ. Вĕсене пăхса тăрса, Раман хăй çакăнта Тамарăпалан сулăпа ярăнса çӳренине аса илчĕ, салху шухăша путрĕ. Асанлĕве милиционер сасси татрĕ. Лейтенант комисси членĕсене витене чĕнет иккен. Витере — самăртма хупнăултă чăмăр сысна.

— Пуян пурăнатăн, Михаил Гаврилович, — тĕлĕнсе пуçне пăркаларĕ Тарин, — кун пек фермăпа кăкăра çапса мухтанма пулать.

— Илья Ильич, — пӳлчĕ ăна Сятров, — ферма тесе ан кул-ха эс. Ман мар вĕсем. Çу каçма килсе янăскерсем. Кĕркунне илсе каяççĕ те ак хуçисем, хам валли тислĕкĕ çеç юлать. Тăван-юлташшăнах çунатăп çапла. Çынна усă тăвиччен хур ту тесе ахаль каламан-тăр çав...

— Лашисем тата камăн? — ыйтрĕ милиционер. — Вĕсем те тăванусен-и? Колхозниксем лаша усранине, тем, курман.

Сятров пичĕ туртăнса илчĕ, шухăшларĕ-шухăшларĕ те:

— Ара, кĕрӳ кӳршĕрех ман, Мерчĕкре, — терĕ. — Çавăн ерсе килнĕ. Пĕрле ӳснĕскерсем, яхăнне те уйрăлмаççĕ. Выльăх вĕт вăл лаша, çын мар, каланине ăнланмасть.

Тарин ăна куçран пăхса:

— Ан суй-ха пустуй, Михаил Гаврилович, — тесе пӳлчĕ.

— Тупата туршăн суймастăп. Эх, çак Тарина! Вăрман çыннисене ăнланман пек калаçнăшăн тарăхас килет сана, — вите патĕнче вылякан лашасем çине ытараймасăр та темле тĕмсĕлсе пăхрĕ Сятров, — çӳçӳ кăвакарнă, ăсу кĕмен.

Тарин кăлтăртатса кулса ячĕ, куçне хĕсрĕ, пиншак кĕсйинчен «Беломор» кăларса тивертрĕ, вара тин лесника хуравларĕ:

— Ăнланатпăр-ха, Михаил Гаврилович. Çӳç вăл ахаль кăвакарман, сире ярса илмелĕх те ăс пур. Çитет сӳпĕлтетсе! Акт çырар.

Пӳртре Раман пуринчен малтан хайхи пĕркун курнă икĕ сăнӳкерчĕке асăрхарĕ. Курпун сăмсаллă, кĕске мăйăхлă Палюк тутине пăчăртаса такама çиçе ярасла шăмарса пăхать. Вăрăм сухаллă Сятров Кавĕрли чеен кулать. Ывăлĕ, Михали те, çав чеелĕхе илсе юлнă. «Тарăхăр, кулăр, вăрă-хурахпа кулак, сирĕн усал ĕçĕрсемпе ĕмĕтĕр тахçанах татăлнă. Михалан та выçлăхланса пурăнасси пĕтĕ», — çапла шухăшласа, ӳкерчĕксенчен аяккалла пăрăнчĕ Раман. Тарин çырса ĕлкĕрнĕ акт айне алă пырса пусрĕ.

Тамара амăшĕ апат хатĕрленĕ. Сятров эрех туртса кăларчĕ. Сĕтел хушшине ларма йăлăнаççĕ.

— Çиместпĕр, ĕçместпĕр, тавтапуç, Михаил Гаврилович. Эрехӳ те хăвăн мар, ялтан такам килсе панăскер. Взятка илсе пурăнатăн, патшалăх вăрманĕпе иртĕхсе, — тарăхса каласа хăварчĕ ăна Илья Ильич.

— Ăна доказать тумалла-ха! — ним тума аптраса сурчăкне сирпĕтрĕ Сятров.

— Ан васка, вăхăт çитĕ.

Раман хыçала тăрса юлнăччĕ, ăна Сятров тытса чарчĕ, хыпаланса калаçма тытăнчĕ.

— Хамăр ялсем-и эс, хамăр ялсем мар-и? Мĕн тума сĕтĕрĕнсе килтĕн кунта? Хăвах сăрламан-и-ха шалăпне те. Тавăрма шутларăн апла? Хĕре качча илейменшĕн-и? Тавăрасшăн? Кĕрĕве каласа парам ак. Ан тăнă пул пирĕн çул урлă! Эпир!..

Чунтан тарăхса кайнă Раман лесник аллине хулĕнчен вĕçертрĕ те хирĕç çаврăнса тăчĕ, Сятрова сивĕ куçĕнчен пăхса:

— Пĕр ялтан пулсан та, эпир иксĕмĕр ют, — терĕ шăл витĕр. — Çăхав çыракан йышши мар эпĕ. Эпир, Дубовсем, куçран калатпăр. Питрен çапатпăр. Кирлĕ пулсан. Тамарăна ан тĕртĕр мана. Вăл хăйĕнне хăй пĕлет, эп — хамăнне!

Пĕве пусĕпе каçнă чухне Раман, шывра сулă куранмасть-ши тесе, ун-кун пăхкаларĕ. Ик пĕвинче те çук сулă. Лаша вити хыçне кайса тăратнăскерне, аран-аран асăрхаса илчĕ кăштахран ăна каччă. Сулă... Савăк каç, черчен уйăх, çăлтăрсем...

Сятров картунĕнчен Мерчĕк инçе мар. Çырма урлă каçсан, Тарин комендант патне кĕрсе тухас терĕ. Стасик Павлов тарасаллă çăл умне чăнах та улт кĕтеслĕ çурт туса лартнă иккен. Хыçалта, вăрман çумĕнче, мунча пур. Килĕ тавралла чăрăш ракатка тытса çаврăннă. Стасик, костылĕсем çине уртăнса, картиш урлă таçталла утатчĕ. Тамара икĕ пăрăва картишне хуса кĕртесшĕн. Лешсем итлемеççĕ, хапха патне çитеççĕ те ик еннелле тапса сикеççĕ.

— Ну, Ромашок, сана! — аллинчи пиçĕ хулăпа хăмсарать Тамара. — Ак, милици çитрĕ, тыттарса ярап-ха!

Раманпа Тарин пăрусене картишне хăваласа кĕртме пулăшрĕç. Илья Ильич Стасик патнелле утрĕ.

— Çак вăкăрĕ ашкăнать, чарусăр, — каччă кусĕнчен чăрсăррăн пăхрĕ Тамара. — Сан ятлă хутăм та, ан çиллен. Стасик та ялан чăкрашать упшăн. Çĕтĕлтĕр-и! Мĕн çăмăлпа килтĕр?

— Çăхав тĕрĕслеме. Аçусем патĕнче пултăмăр. Халĕ сирĕн кĕтĕве тĕрĕслетпĕр. Ромашока лайăх пăхса усра. Эпваскатăп. Стасик вăкăрла пăхать ав кунталла.

Раман хапха патнелле çитнĕ самантра Стасик калапине илтрĕ:

— Ку пӳрт пирки, Илья Ильич, иккĕленмелли çук. Хăвăрт лартни-мĕнĕ... Хуньăм кăларнă пура. Ытти хатĕрĕ... Ахаль илмен, пĕрне те. Укçаллах. Лаши ман витерех. Выльăх нумай тытмастăп. Саккуна пĕлетĕп. Çитменнине тата... пăхакан та çук.

Стасик костылĕсем çине уртăнса Тамарăна хирĕç утрĕ, арăмне тем каларĕ, унтан пурне те пӳрте чĕнчĕ. Пĕр-пĕрин çине пăхкаласа илчĕç те комисси çыннисем Стасик хыççăн утрĕç.

Пӳрт ăшчиккине хăт кĕртсе çитереймен-ха, пĕренесем хушшинчи мăка та çапса тухайман. Мачча хăмисене те хĕстерсе пĕтереймен. Кăмака туман. Шалти пӳлĕмре пианино ларни курăнать.

Тамара лаçран яшка хуранĕ çĕклесе кĕчĕ. Арçынсем калаçнă вăхăтра вăл сĕтел çине хатĕрлерĕ. Алли ун пит çаврăнăçуллă. Кăпăклă сăра тултарса пачĕ. Техĕмлĕ, ăшчике уçакан сăра.

Апат хыççăн Стасик «хăнасене» шалти пӳлĕме илсе

кĕрсе кăтартрĕ, ăçта-ăçта мĕн лартасси çинчен каласа мухтанчĕ. Пианино тĕлĕнче, стена çинче, пăши мăйраки. Раман ăна курсанах юр çинче юнпа чыхăнса тапкаланакан пăшие аса илчĕ. Стасик вăл пăши мăйраки çине тинкерсе пăхнине асăрхарĕ. Иккĕшĕн те куçĕсем тĕл пулса, çутăлса илчĕç, анчах пĕри те нимĕн те шарламарĕ.

Стасиксем патĕнче нумай лармарĕç вĕсем, часах çула тухрĕç, Мерчĕк коменданчĕ хапха юпи çине таянса тăрса юлчĕ. Тамара тухмарĕ, Раман машинăна мĕнле кĕрсе ларнине, газик кукăралла пăрăнса кĕнине чӳречерен вăрттăн сăнаса тăчĕ вăл. Унтан сисмесĕрех аллине чĕри тĕлне тытрĕ те, куççулĕпе чыхăнса, стена çумне вăйсăррăн сĕвенчĕ.

## 25

Раман хăйĕнчен хăй тĕлĕнет. Анюта ăçтине пĕлнĕренпе çулталăк çитет ĕнтĕ, анчах çаплах-ха унпа тĕл пулса куçа-куçăн калаçаймасть. Кашнинчех: «Халь пурпĕрех калаçатăп-ха», — тесе пырать хĕр ĕçленĕ çĕре — хăйса, хăюланса чĕрине уçса параймасть. Анюта Рамана кашнинчех йĕкĕлтет: «Çтаппан амăшĕ сăра çакнă-и-ха? Туйне хăçан тăвас теççĕ?» Каччă тăвăнать те шăлне çыртать. Ирĕксĕртен шӳтлесе ирттерет: «Хатĕрленеççĕ, хатĕрленеççĕ-ха, евчĕ ярĕç ак кĕçех, кĕтсе пурăн...» — «Эс çилленни мана питĕ килĕшет, ун пек чух ман сана курас килет...» — тет те Анюта тасталла чупа парать.

Паянхинче хайхи Раман, тăрпалтай пек, мăк-мак пулса тăрса юлмарĕ. Хĕре хăвалама тытăнчĕ. Çăмăл шăмшаклă Анюта йывăçсем хушшинче явăнать, вĕсен вуллисене йĕтĕн тĕслĕ çивĕчĕсемпе çапăнтарса хăварать, чупнă çĕртех пĕрпĕр çамрăк хурăна тытса ыталать. Раман тӳрĕрен ыткăнчĕ, хурăн тавра çаврăнакан хĕре сылтăм аллипе вулă çумне хĕстерсе ĕлкĕрчĕ. Кăшт çеç пите-питĕн пырса çапăнмарĕç, куçĕсем шĕл-кăваррăн ялкăшса илчĕç... Çирĕк вуллине алтакан улатакка, хĕрпе каччă вылянине курса, хăйĕн чăрмавлă ĕçне пăрахсах аялалла кăсăкланса тинкерчĕ. Çил те таçта кайса кĕчĕ. «Ай!» — терĕ те Анюта ури хырăмĕнчен кăткă çыртнипе тапăртатса илчĕ. Раманран вĕçерĕнсе тарчĕ.

— Тытаймастăн!

— Тытатăп!

Тăвăл тăпăлтарнă пĕр хыр юнашарти йывăçсем çине ӳкнĕ. Анюта çавăн вулли тăрăх чупса хăпарса кайрĕ. Каччă — хĕр хыççăн.

Хыр тӑрри сасартӑк шатӑртатма, аялалла усӑнма тытӑнчӗ. «Ӳкетпӗр!» — тесе асӑрхаттарчӗ те Раман аяккалла сике пачӗ. Ҫав самантрах йывӑҫ та ҫӗре хаплатрӗ. Хӑпӑл-хапӑл сиксе тӑнӑ Раман унталла-кунталла пӑхрӗ: хыр айӗнче те, айккинче те Анюта ҫук.

— Ку-кук! — илтӗнче пуҫ тӑрринче евӗк сасӑ. — Тытаймастӑн!

— Ну, сана, ҫавраҫиле, — чышкипе юнарӗ Раман. — Ан тулӗк!

— Хӗнетӗн-и?

— Хам пӗлетӗп мӗн тӑвассине.

— Апла аимастӑп. Хӑпарса илмесӗр те. Ларатӑп.

— Ну, калатӑп апла. Мӗн... Мӗн... Эс халь маншӑн мӗн... — такӑнса-такӑнса пычӗ Раман — калас шухӑшне калаймарӗ.

— Кала, кала, мӗн-ха? — хурӑн вулли тӑрӑх хӑвӑрт шуса анса, каччӑ умне пырса тӑчӗ хӗр.

— Кай, Анюта, — хаш сывласа ячӗ Раман, — ҫӳҫпуҫ вирелле тӑчӗ вӗт саншӑн!

— Манӑн та, — кулма чарӑнчӗ Анюта. — Хыр айне пулатӑп пуль терӗм... Эп хурӑн тураттинчен ярса тытрӑм та сывлӑшра ҫакӑнса юлтӑм.

Анюта ҫӳҫне хурӑн вӑрри тирӗнсе тулнӑ. Раман, ҫӳҫ пайӑркисене асӑрханулллӑн сирсе, хурӑн вӑррине иртме пуҫларӗ. Пурне те илсе пӑрахмасть тата. Тӗллӗн-тӗллӗн хӑварать, мӗншӗн тесен, Раманшӑн пулсан, хурӑн вӑрри сапӑннӑ Анюта ҫӳҫӗ темрен те илемлӗ, темрен те тутлӑ шӑршлӑ халь...

Ҫинҫешке хурӑн пек курӑнакан Анюта ҫумӗнче капмар юман пек тӗреклӗ Раман ҫурӑлнӑ шӑлаварӗпе ҫатӑлтаттарса утать. Вӑрман кӑралӑхӗнчен хӑтӑлса юлнӑ хӗрпе каччӑ ӗнтӗ паркра хӗвеле хирӗҫ куҫӗсене хӗссе пыраҫҫӗ.

— Итле-ха, Анюта.

— Мӗн ҫак? — пуҫне Раман еннелле чалӑштарчӗ хӗр.

— Ҫил тӑпӑлтарнӑ ҫав хыр пиркиех-ха эпӗ...

— Мӗн, пӗренелӗх кӑларасшӑн мар пулӗ те эсӗ ӑна? Пӳрт лартма хатӗрленетӗн-им?

— Ун пирки мар-ха. Эпӗ...

— Мӗн пирки тата?

— Ара... — именсе пуҫне чикрӗ каччӑ.

— Ара-тӑк, эпӗ те ҫав хыр- пиркиех каласшӑнччӗ, — кулчӗ хӗр.

— Мӗн?

— Вӑрман хуҫалӑхӗнче ӗҫлекенсем вӑрмана тасатмасӑр сана кӗҫех хыр айне туса вӗлеретчӗҫ тесшӗнччӗ.

Каччă ёнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса илчĕ.

— Йывăçĕ вăл ман Анютăна та чутах...

— Сан Анюту-и вара эпĕ? — Рамана хирĕç çаврăнса тăчĕ хĕр. — Ăçта çырнă унашкал?

— Манăн. Ман Анюта, — хăюлланчĕ каччă. — Ак çакăнта çырнă, акă... — чĕри тĕлне тытса кăтартрĕ вăл.

Хĕрпе каччă пĕр-пĕрне куçран пăхрĕç.

— Эх, эсĕ, вăрман упи! Хăçан тухăн хăвăн шăтăкунтан? — тутине тăсрĕ Анюта. — Ман сана кашни кун курас килет...

— Пĕлместĕп. Тен, нихçан та тухмăп. Пÿрт лартатăп та Юманлăхра, пурăнма тытăнатăп.

— Пĕччеnех-и?

— Пĕччен мар. Авланатăп.

— Кам ухмаххи каччă пырать сана унта?

— Эсĕ, Анюта, каччă тухатăн мана, эсĕ.

— Эх, фантазер! Пÿрт те лартрăн, хĕр те тупрăн. Авланатăн та... Анчах çуралман тихан пилĕкне ан хуç. Халь аллăма вĕçерт. Киле каймалла. Тепре куриччен!

Анюта паркри чĕнтĕрлĕ кĕперпе вĕлтĕртеттерсе чупать. Ун ури сассипе шыври кăвакалсем тавралла шăпăр-шăпăр партлатса саланчĕç.

«Вăт сана Анюта, Яльчиков хĕрĕ. Ашшĕнех хывнă пулас. Ун кăмăлĕ сисĕнет. Текех йĕпе пăрулла меммеленсе çитет пуль мана, хăюллăрах пулмалла», — шухăшларĕ Раман.

Сукмак Дубова пĕве хĕррине илсе тухрĕ. Клубра ăна Миша Фильчин кĕвĕпе кĕтсе илчĕ. Унтан пианино умĕнчен çĕкленчĕ те тусне пырса ыталарĕ.

— Тухать, Раман, пулать! Илтрĕн-и, мĕнле янăрать?

— Çак халь выляни-и? Илтрĕм-ха. Аван пек. Анчах мĕнле юрă иккенне ăнланаймарăм-ха.

— Хам хывнă юрă вăл. Тахçантанпах асапланаттăм унпа. Пĕркун каланăччĕ вĕт-ха сана. Пĕрремĕш юрă. Итле, тепĕр хут выляса кăтартатăп.

Фильчин каллех пианино умне вырнаçса ларчĕ. Пÿрнисем клавишсем çийĕн ташланă май, пÿлĕме марш евĕрлĕ хаваслă кĕвĕ шăранса сарăлчĕ. Кĕвĕ майăн Миша хăй те юрлать.

Бензопăчкă çĕкленĕ маттурсем ирхи хĕвелпе пĕрлех ĕçе васкани, ирхи кайăксен хорне уçă саслă вăйлă моторсем хутшăнни сисĕнсе тăрать юрăра.

Юрă вĕçленсен, Раман Мишăна ыталаса илчĕ;

— Ну, маттур та эс: композиторĕ те, вылякан̆ĕ те, юрăçи те хăвах. Сăввине ăçтан тупрăн?

— Сăввине кунти пĕр çамрăк поэт çырса пачĕ. Ку

юрă, Раман, сан çинчен, сан бригаду çинчен. Янраттарăпăр-ха ăна эртелпе!

Миша савăнăçлăн кулать, çав хушăрах хăйĕн сăнĕ шурса кайрĕ. Кĕсйинченваскасах эмел таблеткн кăларса, чĕлхи айне хучĕ, тарăннăн сывла-сывла илчĕ. Шăлне çыртса, айккинелле пăрăнчĕ те сулахай хулĕнчен шприцпа укол турĕ. Пуçне çӳлелле уха-уха:

— Кайрăмăр каллех малалла, — терĕ тусне. — Парăнмăпăр ăна, эсрел чирне! Çĕнтереймĕ пире пурпĕрех!

> Эй, моряк, ты слишком долго плавал.
> Я тебя успела позабыть,
> Мне теперь морской по нраву дьявол...

Пианино каласа юрларĕ те вăл касса татнă пек сасартăк чарăнчĕ.

— Хам матросра çӳренĕ чухнехи тинĕс, ют çĕршыв порчĕсем аса килчĕç. Улатăр хĕрĕ аса килчĕ, — хашш сывласа, пианино хупăлчине шаплаттарса хупрĕ Миша. — Чăнах та нумай ишрĕм пулмалла çав тинĕсре, нумай ишрĕм. Тинĕс хумĕсемпе, тăварлă хумсемпе, кĕрешсе чуна кантартăм, киле таврăнсан, чĕрене ыраттармалли çеç тупрăм. Юратушăн, Аленăшăн. Качча тухнă ман хĕр. Хам паллакан йĕкĕтех. Тарăхрăм та, куç ан куртăр тесе, ирĕн вăрмана тухса килтĕм. Çакă ĕнтĕ вăл, пĕркун сана хăвăр яла кайнă чухне каласа пĕтерменни. Çакă Улатăртан пăрахса килнин сăлтавĕ... Ăнлантăн-и?

— Ах, çав кĕтсе пурăнайман хĕрсене! Çӳçрен çăлса лăскас килет те вĕсене! Кам ытларах йăпатать, кам ытларах суйса астарать, çавăн хыççăн каяççĕ. Ан кулян уншăн. Савăн çеç. Унашкал Аленăсем вĕсем арăм пулсан та шанчăклă йышшисем мар.

— Эх, явăл патне кайччăр-и апла пулсан ун пеккисем! Улталаманни, тĕрĕс чунли патне каяр. Тухрăмăр. Атя!

— Атя, кайрăмăр. Пирĕн урам аналлла, шуса пырать пĕр çуна...

Фильчин ку юрă сăмахĕсене лайăх пĕлмест. Раман хыççăн кĕввине çеç ĕнĕрлекелесе утрĕ.

## 26

Вăрман касакансене тент витнĕ автомашина уйăрса панă. Унпа ĕçе çӳреççĕ, ĕçрен таврăнаççĕ. Çав машинăпах кăнтăрла вĕри апат кӳрсе çитереççĕ. Апатпа Машка-Милашка çӳрет. Кашкинпа пăтă пĕçерсе çитереймен вăл. Первомайска куçсан, иккĕшĕ пĕрле нумай пурăнаймарĕç, уй-

рălчĕç. Машка Юманлăхра ОРС лавккинче ĕçлесе укçа нумай пухнă теççĕ. Ялтан вăхăтлăха вăрман касма килнĕ çынсене пайтах лартман-и вăл! Ирĕке хăнăхнă вăйпитти хĕрарăм Яккупа пĕрлешнĕ хыççăн та, çуллă чĕлхеллĕ, хăюллă арçынсене кăмăллама пăрахман. Арăмĕн вăрттăн иртĕхĕвне Кашкин сиснĕ-ха, çапах — хăйĕнчен пĕтĕм поселок кулнине пăхмасăр! — курнине курмăш пулса шăла çыртнă. Ана Машка-Милашка хăй мар, ытларах унăн туприн, пуян кил-çурчĕ кирлĕ пулнă. Машка-Милашки вара, малтанхинчен хӳхĕмрех çĕнĕ пӳрт лартсан. Яккăва хыçран тапсах кăларса янă. Ун пирки вăл халĕ Хĕлĕх Хĕлимунĕсене кула-кулах каласа кăтартать: «Хĕрарăм пылакки кăтартнă ăна, çитет. Сăрă хурт пулчĕ вăл маншăн, упăшка мар. Çиме-ĕçме те, тумланма та, япала туянма та, пӳртçурт лартма та пĕр пус паман мана. Укçи ун йăлтах кассăра, кĕнеке çинче. Тимĕр пăрça. Арçын-и тата вăл? Йĕрĕнчĕк! Пичĕ куктĕрриллĕ, такам çӳлтен-аялтан хĕстернĕ пек лапчăк. Ух! Чăтнă. Çитет!»

Хĕлĕх Хĕлимунĕ ăна тăрăшсах калаçтарать, чее тилĕ пек йăпăлтатать: «Машка-Милашка, пĕр вунă-вунпилĕк çул кĕçĕнрех пулас пулсанччĕ сан халь! Ак çак Çтаппана ним мар илсе памалла! Тен, туй тăвар çапах та?..»

Пуçне сулахаялла вăшт-вашт ухса, силленсе килекен Çтаппан çине йĕрĕнчĕклĕн пăхса илет те Машка-Милашка Хĕлимуна юнать: «Ан кул. Мана нимле Якку та, нимле Çтаппан та кирлĕ мар. Эх, ăçта-ши вăл çамрăклăх тени, кăтартасчĕ халь сана хĕр чухнехи пĕвĕме. Çу пек ирĕлсе каймалла эс. Эп акăш пек ишнĕ ун чухне арçынсем умĕнче. Çавраçил кăларнă вĕсем хушшинче. Халь ман ирĕксĕрех санашкал хĕрлĕ сăмсасем çине пăхма тивет».

Хĕлимун Çтаппана поварпа туслашма хĕтĕртни пурне те паллă ĕнтĕ. Улька Салканова та мăкăр-мăкăр туса çӳрет. Акă, каснă уçлăха машина кĕрлеттерсе çитрĕ.

— Хатĕрлен, Çтаппан, хăюллă пул! — айăккинчен кăлт тĕртрĕ Хĕлимун ăнман хусаха. — Ман та санпа юнашар тăрас-ха, тен, мана та сулăмлăрах аш татăкĕ лекĕ. Калаç эс унпа чĕррĕнрех. Упăшка кирлĕ ăна, тăм писмен. Хăçантанпа хăраххăн вĕт!

— Çавăнпа мăнтăрланса кайнă пуль, — сĕрсе илчĕ çитсе тăнă Улька.

Шартах сикрĕ Çтаппан, çавна май йывăç тĕртмелли шалçана та аллинчен ӳкерсе, ним чĕнмесĕр машина патнелле уттарчĕ.

— Эй, ман Çтаппанăм çитрĕ-иç! — хавасланса ӳкрĕ Машка-Милашка. — Пулăш-ха апат антарма хăвăртрах!

Кил ак кунта, шыв ярса паратăп. Çу аллусене малтан.

Çтаппан сĕтел çине савăт-сапа лартса тухрĕ. Машка-Милашка тарăн тирĕксене купăста яшки яра-яра парать.

— Пăх-ха, Улька, килĕшет вĕт иккĕшне пĕрле ĕçлени, — хĕтĕртет Хĕлимун, — кунта пирĕн Çтаппанăн алли-ури вăрман каснă çĕртинчен вунă хут ытларах çыпăçуллă. Пăх-ха, мĕн мăнăш аш татăкĕ хурса пачĕ ăна Милашки. Эх, маначчĕ!..

— Килĕшмесĕр çак, — хулпуççине пăркаларĕ Улька, — мăнтăр майра çумĕнче те килĕшмесен, тата кам çумĕнче килĕшмелле... Кашкинне пăрахрĕ те... Такама çавăрса илĕ вăл, такама ташлаттарĕ хăй умĕнче!

Хĕлĕх Хĕлимунĕ, Ульканн Çтаппан еннелле сулăнакан вăрттăн туйăмне ăнланаканскер, çине тăрсах йĕкĕлтет:

— Ха, тата тепĕр татăк хурса пачĕ. Ма малтанах хам чупмарăм?

Çăвăнса пурте апата ларчĕç. Машинăпа турттарса çӳрекен сĕтел пысăк мар, çавăнпа чавсапа чавса тĕкĕнсе ларма тивет. Çтаппан Улька çумне лекрĕ. Çтаппанăн тирĕк тĕпĕ курăнма пуçласанах, ун патне Машка-Милашка йăпăрт пырса тăчĕ, ним шарламасăрах ашлă шӳрпе хушса пачĕ.

Сивĕ компот ĕçнĕ хыççăн пурте йывăç сулхăнне туртăнчĕç.

— Эс ан кай-ха? — чарчĕ Машка ура çине тăнă Çтаппана. — Сĕтелне, иксĕмĕр пĕрле хатĕрленĕскерне, пĕрлех пуçтарар.

Улька Çтаппана хулран çулса илчĕ. Машка-Милашка çине куççуллĕ куçĕпе çисе ярасла шăмарса пăхрĕ.

— Парам сире хатĕрлеме-пуçтарма, ха, вĕсем, тăркăнтăрлах!.. — çĕртен патак çĕклесе юнарĕ Улька.

Çтаппан турткалашса каялла пăха-пăхах Улька хыççăн танкăшрĕ. Машка-Милашка çăпалипе тункатаран таянса тăчĕ те, вĕчине чĕтретсе, чунтан кулса юлчĕ. Хĕлимун чăрăш айĕнче йăхлатса выртать.

Çирĕм ултта çитсе те хăй хыççăн каччă тени мĕншĕн чупманнине Улька Салканова аван чухлать. Яштака хитре Укахви çине пĕрре мар ăмсанса та кĕвĕçсе пăхнă вăл. «Мĕншĕн мана анне килпетсĕр çуратнă-ши?» — тесе вăрттăн куççуль те кăларнă. Сарлака туталлă, сайра шăллă, куктĕрриллĕ, арçынларах сăнлă Улька тăсланкă Çтаппан çумĕнче çинçе урисемпе танкăлтатса пырать ав. Улька Çтаппана аларан вĕçертместĕпех тесе шутласа хунă. Çтаппан пĕрре мыскараллă авланса курни те, унăн сусăрăнчăк кĕлетки те, тискертерех пăхакан куçĕ те, чалăш тути те

йӗрӗнтермест ана. Улька Ҫтаппана ӗҫченнишӗн, ырӑ камӑлӗшӗн юрататӑ. Чӑтлӑха ҫитсен, ҫынсем куранми пулсан, хӗр хусах умне тӑчӗ те хурлӑхлӑ сасӑпа калама пуҫларӗ:

— Ухмах эс, Ҫтаппан, Хӗлӗх Хӗлимунӗ хыҫҫӑн сикетӗн, Машка-Милашкӑпа пӑтрашӑнатӑн, хӑвӑн ҫумӑнтине курмастӑн. Юрататӑп вӗт эп сана, Ҫтаппан. Хӑҫантанпа! Паян чӑтма ҫук чун кӳтсе ҫитрӗ. Ҫав мӑнтӑрккашӑнах хамӑн вӑрттӑнлӑха ҫынсене кӑтартрӑм. Курччӑр-и, пӗлччӗр-и эп сана юратнине!..

Чалт сикрӗ те Улька Ҫтаппан мӑйӗнчен пӗррех уртӑнчӗ, лешӗн кӑп карӑннӑ хулӑн тутинчен чуптуса пӗтерчӗ, унтан, пуҫне ик аллипе ярса илсе, ҫерем ҫине лаплатса ларчӗ.

— Интереслӑ. Вӑт тӗнче! — тутине чаплаттарса тӑчӗ Ҫтаппан.

— Ҫтаппан, каҫар мана, ухмаха, — пуҫне ҫӗклесе ун куҫӗнчен пӑхрӗ Улька. — Пӗрремӗш хут арҫынна чуптурӑм, пӗрремӗш хут — сана. Тутам ҫумне ку таранччен арҫын тути сӗртӗнсе курманччӗ. Ҫтаппан, ман качча тухас килет, ҫынсем пек, хӗрарӑм пулас килет. Эп саншӑнах ҫуралнӑ пуль. Ҫтаппан, тен, пире турӑ ҫырнӑ пуль...

Ҫтаппан хӗр ҫумне хӑяккӑн сӗвенсе ларчӗ, унӑн кӑптака мӑйӗ ҫине аллине хучӗ, чалӑш тутипе Ulькана хыттӑн чуптуса илчӗ.

— Ҫтаппан! — илтӗнчӗ Раман сасси.

Иккӗшӗ те тӑрса бригада ӗҫленӗ ҫӗрелле чупрӗҫ.

Улька Ҫтаппан пуҫне ҫавӑрса янӑ хыҫҫӑн Машка-Милашка Хӗлӗх Хӗлимунӗн тирӗкне ытларах какайлӑ яшка ярса пама тытӑнчӗ. Хӗлимун хӑй те Улькапа Ҫтаппанран урӑх кулмарӗ. Ҫтаппан хӗр сӗнӗвӗшӗн, вӑл хӑйӗн чунне уҫса панӑшӑн ҫав тери савӑннӑ. Бригадира пӗррехинче ҫапла каларӗ: «Итле, Раман, хам вӑрттӑнлӑха сана ҫеҫ шанса пӗлтереп. Авланас теп, Улька качча тухать мана».

Раман, хӑй те авланса курманскер, юлташне нимӗнле ӑслӑ канаш та параймарӗ, ҫакна ҫеҫ асӑрхаттарчӗ:

— Эпир сан туйра сикме хӑнӑхнӑ, пире мӗн, бригада ятне ҫеҫ ан яр.

Ҫтаппанпа Улька кӗр мӑнтӑрӗнче мӑшӑрланчӗҫ.

— Ҫӳпҫи ҫине хупӑлчиех кирлӗ ҫав, — терӗ туй хыҫҫӑн Раманпа калаҫса ларнӑ хушӑра Иван Капитонович. — Эс тата мӗнле, хӗр тупрӑн-и-ха?

Раман мастер мӗн вӑлтнине аван ӑнланать, ҫапах вӑтана-вӑтанах хӑйӗн вӑрттӑнлӑхне уҫса пачӗ:

— Пур пек-ха. Астӑватӑр-и Анютӑна? Ҫавӑ.

Иван Капитонович ваштах ун еннелле ҫаврӑнчӗ:

— Анюта тетӗн-и? Мана аҫу вырӑнне хуратӑн пулсан,

итле, шухăшу пур-тăк, авлан, ан тăс вăраха. Анчах авлан та хĕрарăм пурнăçне ан пăс. Çамкаран шаккасах калатăп сана. Пурнăçра тем те килсе тухма пултарать. Куçпа курсах пуçна шурлăха ан чик. Пурнăç çулĕпе çирĕп ут. Вĕренме кайма хатĕрленетĕн-и-ха тата?

— Кăçал вĕренме кĕретĕпех. Унтан авланатăп.

Вăрман техники институтне заочно вĕренме кĕмешкĕн Дубова вăрманпромхоз директорĕ Захаров та, Арсентьев та темиçе хутчен каланă ёнтĕ. Каччă хăйсен сĕнĕвне пуçа илни Иван Капитоновича савăнтарчĕ.

## 27

Кĕркунне мерчĕксене те Хурашыв вăрман пункчĕпе пĕрлештерчĕç. Пысăклатнă пунктра ёнтĕ тăватă участок. Кашни мастер участокĕнче — тăватă бригада. Арсентьева пункт начальникне лартасшăнччĕ — килĕшмерĕ. «Тархасшăн, ан тĕкĕнĕр, ватлăхра ан лутăркăр, вăй-хал та, пĕлӳ те çитмест пысăк коллективпа ĕçлеме, хĕрӳрех çын шырăр», — терĕ вăл директора. «Ватти лутăрканасшăн мар, çамрăксем ытла симĕс, вăтаммисем хушшинче суйласа илмелли çук. Лишайкин мĕнле пек сан шутупа?» — ыйтрĕ Захаров мастертан. Иван Капитонович шухăша кайрĕ, директора кăн-кăвак куçĕнчен пăхса илчĕ те хăй Лишайкин пирки мĕн шухăшланине пĕр пытармасăр каларĕ: «Трифон Сидорч вăл «пултарулăхне» Мерчĕкрех аван кăтартрĕ те, кунта ытлашшипех аташса каймĕ-ши? Вăрмана Лишайкин хăй пахчинчи пуянлăх выраннех хурать... Сятровсемпе мĕн чухлĕ йывăç сутнă пуль вĕсем! Халăхра сăмах ахальтен çӳрес çук, анчах тытман. Тата акă мĕн: хăйне мăнна хурать, мухтанине юратать. Йăпăлтисене, ултавçăсене пухса тултарнă хăй тавра. Ĕçлесси пирки каламалли çук ёнтĕ. Пултарать».

Директор Арсентьева итлесе пĕтерчĕ, сăлтавсăрах плащ тӳмисене вĕçертсе тӳмелерĕ, çамкине картлантарчĕ, вара татăклăн: «Лишайкин çитменлĕхĕсене эпĕ хам та лайăх пĕлетĕп, — терĕ. — Йăнăшмасăр ĕçлес çук. Йывăç сутнипе тытман, тĕрĕс. Тӳрлетсе пăхма тăрăшăпăр-ха пĕрле, ватăлса-хытсах ларман-ха вăл. План тултарма пултарать. Иксĕмĕр те начальник чухне тупăшса курнă-çке уппа, танлашма йывăрччĕ. Урăх çын çук халлĕхе. Безбородова анатри складран илес килмест. Кадрсем çитмеççĕ. Ӳстерес пулать. Хамăрăнах. Авă, сирĕн упта Дубов ĕçлет. Çавсене вĕрентмелле, çавсене хатĕрлемелле. Халĕ мана Лишайкинах кирлĕ, Лишайкинпах план тултармалла. Çапла пуль,

Иван Капитонович?» «Çапли çапла пулĕ те-ха вăл,—ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ Арсентьев, — планне çынсем тăваççĕ-çке... Вĕсемпе те ĕçлемелле...»

Арсентьев хăйпе килĕшменнине директор аван туйрĕ, вара ăна ку ыйтупа тек пăлхантарас мар тесе, тăрантасĕ çине хăпарса ларчĕ те çулçăллă çулпа йывăççем хушшине кĕрсе çухалчĕ.

Мастер йывăççем хаплата-хаплата ўкнĕ тĕле тўрĕрен тухрĕ. Дубов бригади ăвăс касать.

— Хăшкăлса çитрĕм йăлтах, — тарлă çамкине алсипе шăлса илчĕ бригадир, — вĕтĕ вăрман, кубатура тухмасть, юрать хăвăр вĕрентнĕ пек пĕр майлă тўнтерсе выратпăр та, Çинахвана трелевка тума çăмăл. Турат иртме çеç кансĕр. Çтаппана унта пулăшма ятăм-ха. Мотор чăхăмласшăн. Юсас терĕм.

Дубов «Дружбăпа» чакаланнă хушăра мастер тахçанах хускатма шутланă калаçăвне пуçларĕ.

— Итле-ха, Раман, — терĕ Арсентьев, ун умне ларса, — пĕр япала çинчен ыйтса пĕлмелли пур.

— Мĕн япала-ши? — свечана пăрнă май пуçне çĕклемесĕрех ыйтрĕ каччă.

— Партие кĕрес пирки шухăшламан-и эс?

Бригадир пăчка тапратса пăхрĕ те чарчĕ, мастер куçĕнчен вăрттăн пăхса илчĕ, вара унпа юнашар пырса вырнаçрĕ.

— Васкас мар-ха, — терĕ, — халлĕхе иртерех пек. Хатĕр мар. Ячĕшĕн çеç кĕрес килмест. Партие мĕн усă пама пултарăп-ши халь эп?

— Санран усси пулĕ-ха, Раман, пурте сан пек тăрăшсан, таса чунлă, çирĕп утăмлă пулсан!..

Иван Капитонович аллинчи карттусне пуçĕ çине кăп лартрĕ те сасартăк:

— Пурте пĕр пек мар çав, тĕрĕс. Лишайкин та коммунист ав, — тесе хучĕ.

— Пĕлетĕп. Темĕн те илтнĕ ун çинчен. Темĕнле халап та çўрет. Эп унашкал çынсене коммунист теме иккĕленетĕп. Ман, сăмахран, мĕн вĕренмелли пур унран? — пăчка аллине тытрĕ Раман. Унтан, тем аса илсе, малалла каларĕ: — Яков Кашкина та эсир тем тума васкаса илнĕ партие. Лайăх ĕçлет тесе-ши?

Арсентьев ура çине тăчĕ, Рамана ăнлантарчĕ:

— Хĕвстĕрпе ĕçленĕ чух Кашкин чăнах та маттур ача пекехчĕ. Авланчĕ. Бригадир турăмăр. Çавăн чухне заявлени çырса пачĕ те вăл. Ĕçлет, хăйне хăй йĕркеллĕ тытать. Илес терĕмĕр. Илтĕмĕр. Пире çамрăксем кирлĕ.

Раман каласа пĕтереймен шухăшĕпех асапланчĕ.

— Пур лайăх ĕçлекен çынна та ăçтан партие илсе пĕтерен? Тен вăл, Кашкин пек, хăй хырăмĕшĕн, хăй пуянлăхĕшĕн çеç мекĕрленет. Ыттисемшĕн çунмасть? Пĕр пĕчĕк тĕслĕх каласа кăтартам-ха. Çулла ман пăчкă сăнчăрĕ татăлса хăшкăлтарчĕ. Кашкинсем патне ятăм çапла Çтаппана, пĕлетĕп, ун пур запас сăнчăр. Памарĕ вĕт! Хăйне пулăшнине маннă. Пĕлтĕр бригадăпа çур кун ĕçлесе патăмăр. Чапшăн вилет. Ăна çеç мухтамалла. Вăл çеç паттăр. Хăй йывăç каснă вырăна нихçан тасатса-йĕркелесе хăвармасть. Вăхăт нумай иртет-çке çапăпа çапăçса. Астăватăр-и тата эпир вăрман çаратакансемпе кĕрешме тытăннине? Комсомолецсен рейдне чĕнтĕм те эпĕ ăна, вăл: «Эпĕ коммунист, сирĕнпе çапкаланса çӳреме ачамккă мар», — тесе çеç алă сулчĕ. Эпир çынсен килĕсенчен вăрланă йывăçа турттарса тухатпăр — вăл вĕсемпе шăл йĕрсе тăрать.

Иван Капитонович ним калама аптрарĕ. Коммунистăн мĕнле пулмалли çинчен Дубов çапла хĕрсе калаçни савăнтарчĕ ăна.

Парторгпа калаçнă хыççăн Раман хăй те парти çинчен, коммунист тивĕçĕ çинчен ытларах, тарăнрах шухăшлама тытăнчĕ. Унăн халĕ пĕр тĕллев: вăй пур таран ĕçлемелле, вĕренмелле, халăхпа пĕрле пулмалла, вăрман пуянлăхне упрассишĕн кĕрешмелле.

## 28

Кашни кун аллă-утмăл кубометр йывăç касма çăмăл мар. Комсомол ĕçĕ валли Дубов аран-аран вăхăт тупать. Вăл çук чухне бригадăра ыттисене йывăр килет-çке. Çапах комсомол ĕçне те тумалла. Кăнтăрла иртсен вăл, хăй вырăнне Çтаппана хăварса, Первомайска тухрĕ, клуб патĕнче анса юлчĕ. Фильчина вырăнта тупаймарĕ, вара парк çумĕнчи măн çулпа тăвалла утрĕ. Сулахай енче илемлĕ вăрман тăрăхĕ сыхланса юлнă. Тахçан касмасăр хăварнă хурăнсемпе çăкасем, чăрăшсем авăксăр çилпе пĕр ĕнерӳллĕн кашласа лараççĕ. Ура айне сарă, хăмăр, хĕрлĕ çулçă тăкăнать.

Сылтăм енче те йывăçсем. Унта — чĕнтĕрленĕ йывăç кĕпер. Ун çийĕн Анюта чупса иртмест, кавакал чăмса шыва кĕмест. Парк тутлă ыйхă путнă тейĕн. Сасартăк шăплăха паллана, хăнăхнă сасă янратрĕ, çывăхрах «Дружба» çатăртатма, улама тытăнчĕ. Кĕпер çинелле пăхса шухăша кайнă Раман картах сикрĕ, сулахаялла тинкерчĕ. Хăй куçне хăй ĕненмерĕ вара: илем-

лĕ вăрман тăрăхĕнче темĕнле икĕ арçын тăрăшсах йывăç касать. Кĕçех, акă, çулçă тăкма пуçланă çăка, çынсенчен пулăшу ыйтнă пек, тураттисемпе саркаланса çĕр çине шатăртатса-нăйкăшса ӳкрĕ. Раман васкаса унталла чупрĕ. Моторист, эстакада çинче ĕçлекен чаплас куçлă арçын, пăчка ĕнтĕ хурăн вулли кăкне тытнăччĕ. Хашкаса çитнĕ Раман ун моторне чарса лартрĕ. Арçынсем иккĕшĕ те куçĕсемпе Дубов çине шăтарасла тăрăнчĕç.

— Ухмаха тухнă-им эсир? Мĕн тăватăр? — пӳлĕне-пӳлĕне кăшкăрчĕ Раман.

— Эпĕр мар-ха, эс ху ăсран тайăлнă пулас, — пăчка çĕре пăрахрĕ моторист. — Дубовчĕ вĕт-ха эс? Палларăм. Касасчĕ вăрман йывăçне. Кансĕрлесе çӳрен кунта. Ут, ут хăвăн çулупа! Ĕçлекен çын патне пыриччен...

— Мĕн тăватăр эсир? — каллех кăшкăрчĕ Раман. — Мĕн тума касатăр ку йывăççене? Поселок варринчи вăрмана?!

— Çурт лартмашкăн вырăн пушатма. Урам тума. Ăнлантăн-и? — каларĕ тĕрев тытса тăраканни.

— Кам хушнă сире? — чарăнаймарĕ Дубов.

— Хуть те кам хушнă пултăр, сан ĕç çук, кай кунтан, ан чăрмантар! — шавла пуçларĕ моторист.

— Халех сире сан ĕç çук парап, — терĕ те Дубов çĕрте выртакан пăчка хулпуççи çине вăшлаттарса илсе хучĕ, эстакада еннелле çаврăнса лаплаттарчĕ. Хыçран чупма пăхнă арçынсем, сасартăк тем шик кĕнĕрен-ши, тăп чарăнчĕç те ятлаçса, кăшкăрашса тăрса юлчĕç.

Вирхĕнсе пырса кĕчĕ Дубов Безбородов пӳлĕмне. Пăчка кăмака çумне пырса тăратрĕ. Сĕтел хушшинче яка пуçне шăлкаласа ларакан Лука Павлович каччă çинелле шалт аптраса пăхрĕ:

— Мĕн ĕçпе эс капла? Мĕн пулчĕ? Пăчки ку ăçтан?

— Ну, этемсем те, — пукан çине лак ларчĕ Дубов, — мĕнле пуçпа шухăшласа касаççĕ йывăçа? Кам хушнипе?

— Ăнланмарăм-ха эп, мĕн çинчен эс? Мĕн касаççĕ?

— Вăн унта, парка хирĕç, пур-çке вăрман тăрăхĕ. Çавăнта касаççĕ. Акă, пăчкине туртса илсе килтĕм.

— Нумай касnă-и? —ура çине вăш-ваш сиксе тăчĕ Безбородов.

— Тин касма пуçланă. Пĕр çăкине кăна ӳкерсе ĕлкĕрчĕç.

— Апла маттур, питĕ вăхăтра çитсе тухнă эсĕ унта. Халех эп вĕсене... Çав РСУ начальникĕ пĕтерет ĕнтĕ, стройучасток хуçи. Эп вĕсене вĕрентетĕп ак вăрманта мĕнле хуçаланмаллине!

Безбородов телефон трубкине çулса илсе такампа ятлаçма пуçларĕ.

Лука Павлович телефонпа калаçнă хушăра РСУ начальникĕ хăй персе çитрĕ. Безбородов трубкăна шартлаттарса хучĕ те сĕтел хушшинчен ăна хирĕç тухрĕ.

— Эсĕ мана ма улталан? — тапăнчĕ хайхискĕр килнĕ çынна. — Мотористран пăчка мĕн каласа илсе кайрăн? Килти вутта татма тесе-и? Çапла вĕт? Мĕншĕн суйрăн? Мĕншĕн кастаратăн парк патĕнчи вăрмана?

РСУ начальникĕ малтан нимĕн теме аптраса каялла чакрĕ, унтан, Дубов пуррипе усă курса-ши, тавлашма пуçларĕ:

— Эпир планпа ĕçлетпĕр. Поссовет çирĕплетнĕ планпа. Вăл йывăççем пире çурт лартма кансĕрлеççĕ. Крансене çаврăнкалама памаççĕ.

— Акă çакна курнă-и эс? — чышкине чăмăртаса кăтартрĕ Лука Павлович. — Ĕç тухмĕ! Сире эпир вăл вăрман тăрăхне касма памастпăр тесе тахçанах каланă — касма памастпăр! Тавтапуç сана, Раман, сăтăрçăсене вăхăтра чарнăшăн. Çав вăрман тăрăхне эпир вăрçă хыççăнхи çулсенче юри касмасăр хăвартăмăр, поселок илемлĕ пултăр терĕмĕр. Вĕсем ав мĕн хăтланаççĕ халь!

Лешĕ хăйĕннех перет:

— Ун пирки вара санран ыйтмастпăр. Вăрман унта юнашарах, тавраллах. Сан симĕс тăрăхна каснăшăн... Ан хăра, пирĕнтен те юлать вăрман.

Çакна илтсен, Безбородов тарăхса кăвакарсах кайрĕ:

— Парам сана юлать! Тăнсăр пуç!..

РСУ начальникĕ тухса кайсан та питĕ тарăхса калаçрĕ вăл:

— Илтнĕччĕ-ха эп, пĕлетĕп. Унти лайăх йывăççенчен хăйне валли пуралăх хатĕрлеттересшĕн. Çук, пулмасть ку. Пулмасть!

Безбородов сĕтеле тăрăслаттарнипе телефон аппарачĕ пĕр вырăнта сиккелесе илчĕ. Хĕрсе кайнă Лука Павлович кăштахран тин лăпланчĕ.

— Вăт çапла, Дубов. Кашни çын кашни йывăçшăн кĕрешмесен, çак манăн шакла пуç пекех тăрса юлать вăрман. Тăрăшмалла! Çапăçмалла уншăн! Пултаратăн, Дубов.

Безбородов тӳссе лараймарĕ, Раманпа пĕрле хăй те парка тухса утрĕ. Мĕнле йывăçа каснине унăн хăй куçĕпе хăйĕн курасси килчĕ.

— Вăл мĕнле, çĕнĕ урам тăваççĕ-мĕн вĕсем кунта. Вăрман касса! Ахалех пушă вырăн пур, тем çаврăнмалăх та çитет. Пăх-халĕ, мĕнле йывăççем! Çав çăка пекех йăванса

выртмаллаччĕ вĕт вĕсем çĕрте. Вăхăтра ан чар-ха вĕсене... Поселок илемĕнчен, таса сывлăшран хăраççĕ. Çук, кастармăпăр урăх. Сыхлăпăр эпир çав илеме!.. Да... Сăмах майĕ ыйтам-ха санран, Раман: эс пӳрт лартас теместĕн-и-ха?

— Халлĕхе шутламан-ха. Лартас пулсан та, чăрăш сахал.

— Чăнах та, эстакада çине икĕ уйăх чăрăш-хыр килсе курман. Касса пĕтертĕр пуль ĕнтĕ эсир вĕсене?

— Тĕрĕсех калатăр, Лука Павăлч,— килĕшрĕ Раман.— Хăвăрах пĕлетĕр, çывăхри вăрманта лайăх йывăç юлмарĕ. Никĕс тумалăх юман та çук. Нумай касатпăр, çулталăкра икçĕр пине яхăн кубла метр вĕт, шӳт мар. Пĕтеретпĕр. Çамрăкки, каснă чух хăварни, акни-лартни ӳсессе кĕт-ха! Сухал та чĕркуççи тĕлне çитĕ. Пӳрт те лартаймăн. Авланса та кураймăн. Ма чакармаççĕ-ши вăрман касмалли планне?

— Малашлăху сан халь, Раман, ой-ой! Авланма та ĕлкĕрĕн, пӳрт те лартăн, — терĕ Безбородов. — Çакăнта паян вăхăтра ĕлкĕрнĕшĕн сана медаль парăттăм. План пирки вара пирĕн шухăшламаллах. Чакармалла ăна. Ытларах ӳстермелле вăрманне. Сахалтан та çуллен виç-тăватă миллион хыр-чăрăш, юман хунавĕ лартса хăвармалла. Халлĕхе ăна пурнăçлаймастпăр-ха.

## 29

Вăхăт хăвăрт иртет. Касакансем кăнтăр кунне вăрмантах ирттереççĕ. Темиçе сменăпа ĕçлеме çук. Хĕвеле вăрманта кĕтсе илеççĕ, вăрмантан каç пулсан тин таврăнаççĕ. Акă, машина çинчен сиксе аннă рабочисене ирхи хĕвел чăтлăх витĕр сăрхăнакан шевлисемпе асăрхануллăн хыпашларĕ. Пурте куçĕсене аллисемпе хупларĕç.

Çтаппан пăчкă çине ӳкнĕ çулçа илсе пăрахрĕ те сăнчăра пӳрнипе сăтăрса тĕрĕслерĕ.

— Ĕнерхи кăлтăкĕ свечарах пулчĕ пулмалла, — терĕ Раман.

— Тĕрĕс. Эп ăна улăштартăм. Эс панă кĕнекене вулатăп та тĕлĕнетĕп, пит интереслă япала-çке вăл мотор. Ман халь, киле таврăнсан, пушă вăхăт туллиех. Улька аван пăхать мана. Лайăх арăмпа пит интереслă. Авлан, Раман, туп канлĕ пурнăç хуна валли. Анюта епле! Картинка çинчи пек.

Раман кулса илет те ун пуçне тытса сылтăмалла пăрать: «Пăх, — тет, — хăвăн Ульку та каснă-лартнă яштака хурăн!»

Раман хурçă пралукран явнă çинçе троса карт! туртрĕ. «Дружба» тĕтĕм кăларса çатăртатма пуçларĕ, сăнчăрĕ çăка вуллине кăшласа кĕчĕ. Урлăлла майлă тӳнтерчĕç те мăн çăкана, ун çине ытти йывăççене йĕркипе йăвантарчĕç. Çинахван Сафин трактор çĕççине аялтан çăмăллăнах илтерет те, юнашар выртакан йывăççене троспа хăвăрт çаклатса, çул хĕррине кал-каллăн сĕтĕрсе тухать. Çак мелшĕн Çинахван Рамана мухтаса пĕтерейместь.

Çинахван маттур каччă. Хурашыв поселокне ĕçлеме куçсан, хăй валли çине тăрсах кил-çурт çавăрчĕ. Рамансен хваттерĕнчен инçе мар пурăнать. Вăрман нушине ыттисенчен пĕртте кая мар курнă çын. Малтанхи тракторĕ вăйсăрччĕ унăн, кĕреш юмансене турттарма питĕ йывăрччĕ. Юрать-ха вăл вăхăтра йывăçа вăрмантах татса сыпăланă, хальхи пек пулсан... Халĕ вара тракторĕ те хăватлăрах, чарăнса чакăртатса лармасть, тăватă-пилĕк йывăç таран сĕтĕрсе тухать.

Çул хĕрринчен вăрман лаптăкне каялла çитнĕ çĕре Сафин тракторĕ валли хатĕр йывăç курăнмарĕ. Хĕлимун тем каласа култарать хĕрарăмсене. Çинахван кăшкăрнине илтсе, вăл çăка туратти иртме пуçларĕ. «Дружба» кĕрлевĕ çумне пуртă начлатнă сасă хушăнчĕ. Улькапа Укахви те ĕçе пикенчĕç. Укахви пуртта арçын пек тытма пĕлет. Каснă чух та пурттин сасси Улькаппинчен уçăмлăрах, хыттăнрах тухать. Иккĕ-виççĕ лачлаттарнипех парка турат çĕрелле усăнать.

Кĕçех Машка-Милашка вĕсене апат çитерсе кайрĕ. Çынсем каллех хăйсен ĕç вырăнне йышăнчĕç. «Дружба» чыхăна-чыхăна йывăç кăшлать. Çинахван тракторе пĕрре вăйлăн кĕрлет, тепре сассине пусарать, тунката урлă ташласа сиккелет. Çăка тăррине икĕ енчен шĕвĕртсе пыракан Хĕлимун ушкăнĕ ăмăртмалла качлаттарать. Пуртă сасси, мотор кĕрлевĕпе хутшăнса, вăрман кĕввине вăйлатать, пуянлатать, аякка-аякка саланса çухалать.

Кунти делянкăна касса пĕтерсен, çаратса тасатсан, Арсентьев участокне чылай шала куçарчĕç. Рамансем икĕ çырма хушшине лекрĕç. Тепĕр пуçĕнче — Кашкин бригади. Лаптăкĕсем пĕрин те хурламалла мар.

Юман тӳнтересси хурăн каснинчен самай йывăр. Пăчкăпа пайтах чĕтретес пулать хул-çурăма. Вăрман патши çăмăллăнах парăнма шутламасть, çулăм кăларсах тимĕрпе кĕрешет. Чăррăнт! тăвать те пăчкă, мотор пак сӳнсе ларать. Раман ăна çĕнĕрен тапратать. Хĕрнĕ мотортан пит-куçа ăшă çапать. Çтаппан сăнчăр мĕн тарăнăш касса кĕнине сăнасах тăрать, пуртăпа картнă сăх тĕлне çите пуçласан,

юплĕ шалçипе пĕтĕм вăйран мекĕрленсе тĕкме тытăнать. Акă, юлашкинчен парăнать-парăнатех юман. Раман пăчка айккинелле вăшт илсе хурать те Çаппана пулăшмаваскать. Çĕршер çул кĕрнеклĕн çĕкленсе ларнă ватă юман çĕрелле кашласа ӳксе кĕрĕслетет. Раман пысăк туратсене пăчкăпа татса ӳкерет те тепĕр юман патне утать.

Вырăнĕ аякра пирки кунти йывăçа вăхăтра турттарса ĕлкĕреймеççĕ. Çавăнпа Çинахванăн кĕрешсене çырма хĕрринчи çӳлти склада сĕтĕрме тивет. Раман унта ĕç-пуç мĕнле пырать-ши тесе кайса пăхма шутларĕ. Лебедчикпа курса калаçрĕ. Ваçça Степнова таппа-хирĕç тĕл пулчĕ. Шикли шикленнĕ, кĕрĕк пĕркеннĕ тенĕ пек, Степнов ун çумĕнчен хăравçă мулкач пек пăрăнчĕ.

Ваçça вăл—Варсонофий Степнов шоферăн шăллĕ. Ялтан пиччĕшĕ патне куçса килнĕ. Раман тантăшĕ. Салтака темшĕн юрăхлă пулаймарĕ. Пĕр хушă Юманлăхра Хĕрӳ Хĕветĕр бригадинче турат иртнĕ çĕрте ĕçленĕ. Чире персе юлхавланнăшăн Сидоров ăна бригадăран хуса янă. Ун чухнехи Мерчĕк вăрман пункчĕн пуçлăхĕ Лишайкин ачана Илле Иванов патне вырнаçтарнă. Иванов та сăрă хурта чăтайман, часах «сывпуллашнă» унпа. Ун хыççăн Сятров Михали патĕнче лесник кĕтĕвне пăхса пурăннă. Сятров кĕтĕвне пĕтерсен, Лишайкин ăна каллех ĕçе вырнаçтарнă, Арсентьев участокне тĕкнĕ. Халĕ маркировщикра ĕçлет. Тракторпа сĕтĕрсе тухнă йывăçа виçсе йышăнмалла унăн, автомашинăпа мĕн чухлĕ тиесе кайнине шута илмелле. Раман, çак маркировщик çинчен усаллине çеç илтнĕскер, ăна шансах каймасть. Çавăнпа хăй каснă кубатурăна Степнов йышăннипе танлаштарса пăхма шутларĕ.

— Ваçça, миçе йывăç ман унта? Пăхса илес, — чарсах ыйтрĕ вăл маркировщикран.

— Халь тĕрĕсленипе мĕн пĕлен ăна, каçпа пĕтĕмлетĕпĕр, — хирĕçлеме пăхрĕ Степнов.

— Мана хамăн кăна мар, Яков Кашкинăн те интереслентерет. Пĕрле ĕçлетпĕр, ăмăртатпăр вĕт...

— Тĕрĕсле, тĕрĕсле, — сăмса айĕн мăкăртатрĕ Ваçça, — пĕр çыпçăннăскер, уйрăлас çук эс манран.

Раман маркировщик хучĕпе паллашнă май пĕрре хĕрелсе, тепре шуралса кайрĕ.

— Эсĕ мĕн хăтланатăн, Ваçça? Аçта манăн ытти виç юманĕ? — куçран пăхса ыйтрĕ Дубов. — Аха! Акă вĕсем! Тупрăм. Кашкин бригади çине çырнă. Мана улталас тетĕн-и? Иртенне кам миçе юман касма пултарнине лайăх пĕлетĕп эпĕ. Эс пирĕн тара çынна парнелесшĕн-и, йытă!

Раман тăвăлса хăпарнă çиллине пусараймарĕ, пĕр утăм

ярса пусрĕ Ваçça еннелле, тепĕр утăм... Лешĕ каялла чакса, чакса пычĕ, каптăрт такăнчĕ те тункатаран — пилĕкрен çӳллĕ вĕлтĕрен ăшне чикеленчĕ ӳкрĕ, çатăр-çатăр, шăтăр-шăтăр тутарса, çырма тĕпнелле анса кайрĕ. Раман çыран хĕррине пырса пăхрĕ. Ваçça лапра ăшĕнчен упаленсе тухать. Дубов маркировщик тетрадьне ахăрса тăракан лебедчика тыттарчĕ те бригада ĕçленĕ çĕрелле çаврăнса утрĕ. Çӳлти складра хăй мĕн пĕлни-курнине юлташĕсене каласа пачĕ.

— Эс итле, Раман Митрофанч, — бригадир тавра çаврăнчĕ Хĕлимун, — пĕлсех пĕтерейместĕн пуль-ха вĕсене. Çук. Ваçça Лишайкина кукка тет. Кашкинĕ те хурăнташлă. Ăнлан çавна.

— Мана мĕн? — сарлака хул-çурăмне хускаткаласа тăчĕ Дубов. — Маншăн пулсан, хăть кукка, хăть кукаçи тетĕр. Улталама вара... памастăп. Çук, памастăп!

## 30

Ваçça Степнов çатракасенчен, тымарсенчен туртăнкаласа аран-аран çырана хăпарчĕ те Кашкина курах кайрĕ.

— Эп сана шыратăп, — çынна çапла курнипе тĕлĕнсе тăп чарăнчĕ Якку. — Мĕн пулнă сана?

Шăйăрăлса пĕтнĕ питне-çамкине хыпашласа пăхрĕ те Степнов алли çинче юн курнипе сăмсине нăш-нăш туртрĕ:

— Дубов хĕнерĕ-ĕ. Йывăç кубатурине çырса пынă тетраде туртса илчĕ те манран. Сана та темтепĕр каласа пĕтерчĕ... Ах, ура ыратать!..

— Мĕн аплах урса кайнă вара вăл?

— Ман виç юман ăçта тет. Сан бригаду çине çырнăччĕ те эп вĕсене. Çавăншăн çырмана тытса печĕ.

— Апла мана та хăратасшăн-ха вăл... Юрать. Курăпăр, кам кама унта! Куккуна пĕлтерер. Çиччас юсатпăр хăйне.

Усалăн ури улттă тесе ахальтен каламан çав... Каçалапа вăрмана милици машини кĕрлеттерсе çитрĕ. Кабинăран пĕр лутрарах старшина сиксе анчĕ. Тумне майлакаласа юсаннă хыççăн юман каснă çĕрелле уттарчĕ. Касса çитернĕ йывăça çĕре ӳкеричченех пăхса тăчĕ те:

— Хăшĕ кунта сирĕн Дубов? — тесе ыйтрĕ.

— Эпĕ, — уп умне аллинчи пăчкипех пырса тăчĕ Раман.

— Сирĕн манпа милици уйрăмне пырас пулать, — аллине карттус сăмси çумне çĕклерĕ старшина. — Калаçмалли пур.

— Мĕн тума илсе каясшăн пирĕн бригадира эсир? — вĕсен хушшине кĕрсе тăрса чанкăлтатма пуçларĕ Улька.—

Чӑн-чӑн каскӑнӗсене тытасчӗ. Вӑн, пирӗн Ҫтаппанӑнне станца патӗнчех сехетне салтса илнӗ. Бригадира тытса каясшӑн-и-ха эсир? Пирӗн бригадира-и? Ак ҫак турата илеп те...

Ҫтаппан хӗрсе кайнӑ арӑмне аран аллинчен тытса чарчӗ.

Хӑй ирӗкӗпе машина патнелле утакан Рамана курсан, Улька калаҫма чарӑнчӗ. Пурте шӑпланчӗҫ. Чакӑлти чакак ҫеҫ, тем усала сиснӗн, тахӑш йывӑҫ ҫинче ҫывӑхрах чакӑлтатса ларать.

Степнов маркировщика ӗҫ вӑхӑтӗнче хӗнесе сусӑрлатнӑ тесе айӑпланӑ Дубова вунпилӗк талӑклӑха хупрӗҫ. Иван Капитонович кун пирки Лишайкинпа хытах тавлашса илчӗ. Таҫта шӑннипе сӑмси питӗрӗнсе ларнӑ Лишайкин кашни сӑмахрах тенӗ пек кӑхлата-кӑхлата илет. Калаҫма кансӗр унпа тата кӑмӑлӗ те ҫук пулас хӑйӗн Дубов ӗҫӗ пирки калаҫма.

— Иван Капитонович, — куҫне тартса, пушмак пуҫӗпе кивӗ кӑткӑ тӗмине сиркелерӗ ак вӑл. — Мӗн пит хыпкаланатӑр эсир ку ӗҫпе? Астӑвӑр, каскӑнҫӑсене хӳтӗлекен парторгпа малашне килӗшмесен те пултаратпӑр эпир. Ӗмӗрлӗх лартнӑ вырӑн мар вӑл сирӗн...

— Ну, Трифон Сидорч, — тарӑхса кайрӗ Арсентьев. — Йӑнӑшатӑн, хытӑ йӑнӑшатӑн. Эсӗ приказпа лартмастӑн секретаре. Коммунистсем хӑйсем суйлаҫҫӗ. Эс хушса ӗҫлеттерместӗн. Эпӗ-и, урӑххи пулать-и унта, парти сӑмахне вара тимлемех, парторганизацинех, коммунистсенех итлеме тивет. Начальник пулсан та! Эс пӗччен никам та мар. Эпӗ те ҫавах. А Раманшӑн эпӗ яланах хуравлӑ пулнӑ, пулатӑп та. Вӑл — ман вӗренекенӗм. Тепӗр хут калатӑп: кунта вӑл мар айӑпли, Степновпа Кашкин!

Трифон Сидорович вӑрманта нумай тӑмарӗ, ҫула май лесовозпа ларса кайрӗ. Иван Капитоновичӑн чӗри пӑтӑрмахлӑ ӗҫ пирки калаҫнӑ чухне те, халӗ те лӑпланма пултараймарӗ. Лишайкин мӗнле ҫын иккенне паян вӑл тата лайӑхрах ӑнланса илчӗ. Ӗҫшӗн тӑрӑшать ӗнтӗ. Хӑйшӗн — тата ытларах. Ҫынсене хисеплемест. Элеке итлет. Ку вара ертсе пыракан ҫыншӑн питӗ япӑх. Унпа киревсӗрсем, йӑпӑлтисем усӑ курса, хӑйсене иртӗнме паман таса ҫынсене варалама, пӗтӗм йыш ӗҫне чӑрмантарма пултараҫҫӗ.

## 31

Раманпа тепӗр виҫӗ арҫынна чугун ҫул хӗрринчи эстакада ҫине вутӑ тиеме илсе кайрӗҫ. Раман карттусне куҫӗ

ҫинех антарса лартнӑ, иртен-ҫӳрене пӑхма та вӑтанать. Салтакра та хуть гауптвахтӑра пӗрре те ларса курманскер, кунта, ӗҫленӗ ҫӗрте, милиционер хуралне лекрӗ ав вӑл...

Мастер будкинчен Анюта тухса тӑчӗ, Рамана хурал аллинчи ушкӑнра курса, шак хытса тӑчӗ хӗр.

— Мӗне пӗлтерет ку? Мӗн пулнӑ вара сана капла? — ыйтрӗ вӑл, милиционер чарнине пӑхмасӑрах каччӑ патнерех пырса.

Дубовӑн пичӗ пӗҫерсе кайрӗ, чӗлхи ҫине пӗр сӑмах та килмерӗ, аптранипе вӑл карттусне хывса аллинче лӳчӗркеме тытӑнчӗ, кӑшт аяккинелле пӑрӑнса, хӑйпе мӗн пулса тухнине виҫӗ-тӑватӑ сӑмахпа ӑнлантарса пачӗ.

Каччӑран уйрӑлсанах, Анюта парткома чупрӗ.

Шӑла ҫыртса ӗҫе тытӑнчӗ Раман тепӗр кунне. Ваҫҫа Степнова складра курмарӗ, ӑна урӑх участока куҫарнӑ иккен. Анчах историйӗ ку тата чылая тӑсӑлчӗ-ха. Лишайкинсен ушкӑнӗ алӑ усса ларман, ҫав Арсентьевсемпе Безбородовсем айне пулӑпӑр-и вара тесех шӑлӗсене шакканӑ пулас. Тивӗҫлӗ тенӗ ҫӗре кӗҫех икӗ ҫӑхав персе ҫитрӗ: парти комитетне тата комсомол райкомне. «Комсомол организацийӗн секретарӗ, райком членӗ Дубов Роман йӗркерен тухнӑ, милицие лекнӗ...» — тенӗ пӗринче. Тепӗр ҫырӑвӗнче Дубов хутне кӗнӗ таса чӗреллӗ ҫынсене айӑпланӑ: «Арсентьев мастер Дубов бригадине ӗҫре юри мала кӑларса пырать. Дубова алӑ ҫинче ҫӗклесе ҫӳрет. Тӗрӗсмарлӑха чӑтаймасӑр, Арсентьев патӗнчен ҫынсем туха-туха каяҫҫӗ... Иртӗнчӗке хӳтӗлекен коммунистсене парти енӗпе ҫирӗп ответ тыттармалла».

Партком секретарӗ Яковлев, сигаретне татти-сыпписӗр мӑкӑрлантарса, ҫӑхава икӗ хутчен вуласа тухрӗ. Дубов пирки Безбородов ҫеҫ мар, вӑл хӑй те кирлӗ ҫынсемпе хӗреслленсех калаҫнӑччӗ пӗркун. Тӳрех ӑнланчӗ вӑл: ҫӑхавра хӑйӗн ятне-хушаматне кӑтартман ҫын, анонимщик, партком секретарьне те сӑнасах тӑрать пулас, ун ҫинчен те ҫав хура ӑшлӑ ҫын таҫта та тем ҫырма та ӳркенсе тӑмӗ. Уншӑн хӑрасах ӳкмӗ-ха Яковлев, ҫапах та мӗн чухлӗ вӑхӑта илеҫҫӗ, кӑмӑла пӑсаҫҫӗ ҫав путсӗрсем.

Тепӗр эрнерен, хӑй шутланӑ пекех, анонимщик секретаре сӑхма ӗлкӗрчӗ те. Райком инструкторӗ Яковлева чылай вӑрӑм ҫыру вуласа пачӗ. «Яковлев партилле туйӑма ҫухатнӑ, демагогсене хӳтӗлет...» — ҫырса тултарнӑ унта.

Иван Капитонович вӑрман пунктӗнче партин уҫӑ пухӑвне ирттерчӗ. Элекҫӗсене, суеҫӗсене, анонимщиксене парторг ятран каласах питлерӗ. «Эсир, Трифон Сидорч, — терӗ, — тӗрӗс мар ҫул ҫине тӑнӑ. Ҫынсене суя ҫырусем

çыртарса, пĕтĕм халăха пăтрататăр. Шухăшласа пăхăр: чăн-чăн коммунистах-ши вара эсир çакăн хыççăн?»

Лишайкин ура çине сиксе тăчĕ, кăрн! та кăрн! тутарчĕ пырне, тӳрре тухма тăрăшрĕ, Арсентьева хăйне кирлĕ-кирлĕ марпа варалама пăхрĕ, анчах ĕçĕ тухмарĕ ун. Халăх шавласа кайрĕ, Лишайкинăн ирĕксĕрех шăпăрттăн кăна вырăна ларма тиврĕ.

Çапах та Дубова кайран комсомол комитечĕн секретарьне суйламарĕç. Кун пирки парткомра тĕрĕсех шутласа хунăччĕ ĕнтĕ. Пĕрре шав кăларса милицие лекнĕ секретарĕн пурпĕрех авторитечĕ чакать, çитменнине тата института вĕренме кĕнĕскерĕн, Дубовăн вăхăчĕ сахал терĕç. Çапла вара комсомол «тилхепине» Раман «Хурăнлăх» клуб пуçлăхне Миша Фильчина тыттарчĕ.

## 32

Фильчин хĕрсех ĕçе тытăнчĕ. Чирĕ çинчен те манса кайрĕ, чупать те чупать. Раманпа калаçма та, йĕркеллĕн ларса апат çиме те вăхăчĕ çук халĕ унăн. Ăшаланать кăна. Комсомол юбилейĕ ячĕпе виçĕ ăру çыннисен тĕлпулăвне, малтан калаçса татăлнă пекех, вăрманта виçĕ юман патĕнче ирттерчĕç.

Икĕ грузовик юнашар лартса, сцена турĕç. Хĕрлĕ ялавсем, капăр тумланнă çынсем кĕрхи вăрман илемне уявла тĕс кĕртрĕç. Çул хĕрринчи ватă юманран вăтамми, унтан çамрăкки патне хăюсем тăсăлаççĕ, вĕсем тăрăх пĕчĕк ялавсем çакса тухнă. Аякран пăхсан, юмансем пĕр-пĕринпе хĕрлĕ хăмачпа çыхăннă пăхаттирсем пек курăнаççĕ. Виçĕ пăхаттир... Виçĕ ăру кĕрешӳçисем вĕсем айĕнче комсомолăн аслă уявне уявлаççĕ, хăйсем утса тухнă кĕрешӳпе çĕнтерӳ çулĕсене аса илеççĕ. Иван Яковлевич хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа кăтартрĕ. Унтан Арсентьева сăмах пачĕç. Кăкăрĕ çинче Иван Капитоновичăн вăрçăра илнĕ наградисем хушшинче Ленин орденĕ те пур. Яльчиковпа Безбородовăн Хĕрлĕ Ялав орденĕсене çамрăксем ăмсанса пăхаççĕ. Арсентьевăн сулахай питçăмарти путса кĕрет, ӳчĕ туртăнса илет. Ку вăл — иртнĕ вăрçă палли. Кăвакарнă сайра çӳçĕпе çил вылять, сарлака çамки хĕвел шавлипе çиçет. Малалла ӳпĕннĕ те вăл васкамасăр калать:

— Эпир, вăрçă вăхăтĕнчи комсомолецсем, Дубовсемпе Яльчиковсем пире алăран панă Хĕрлĕ ялава çĕре ӳкермерĕмĕр, унпа малалла çĕнтерӳ çулĕпе çирĕппĕн утрăмăр, сире, çамрăксене, патăмăр. Çирĕп тытăр ăна, кĕрешӳпе çĕнтерӳ ялавне!

Вăрманта алă çупин кĕрлсе тăрать. Пуç тăрринче хĕрлĕ симĕс çулçăсем вĕлтĕртетеççĕ. Қапăр тумлă кĕрхи вăрман уяври çынсемпе пĕрле савăннăн, мăнаçланнăн туйăнать. Йышлă турат витĕр сăрхăнакан хĕвел пайăркисем Дубовсен вицĕ юманне ылтăнпа сăрласа çутăлтараççĕ...

Тĕлпулу уявĕнчен Раманпа Анюта килелле çуран таврăнма шутларĕç.

Вĕсем Юманлăха çитнĕ çĕре упа сурчăкĕ пек йĕпхӳ пĕрĕхе пуçларĕ. Тахçан шавлă поселок пулнă вырăнта халĕ салху та тӳлек. Хăйсем лартса хăварнă йывăçсем патне çитрĕç хĕрпе каччă. Пĕр-пĕрин çине пăхма вăтанса, сăмах чĕнмесĕр тăраççĕ. Çап-çамрăк çăкапа хурăн çил варкăшнă майăн черчен тураттисемпе çапкалашса илеççĕ.

— Авланатăп эпĕ, — Анютăна кăкăрĕ çумне пăчăртарĕ Раман. — Хăраххăн пурнăç йăлăхтарса çитерчĕ. Паянтан эсĕ — манăн.

— Ăçта пурăнăпăр?

— Баракра. Пирĕн килĕшӳ пур: кам малтан авланать, хваттер çавна юлать. Кайран пӳрт лартатпăр. Анчах аçупа аннӳ килĕшĕç-и-ха сан?

— Хирĕçлес шухăш çук вĕсен, Раман. Атте сана питĕ кăмăллать. Хăюллă та маттур пулнăшăн. Қĕрӳ вăл хама хывтăр тетчĕ атте тахçанах.

— Қĕрӳ... — пуçне пĕкрĕ Раман.

— Мĕн? — чеен пăхрĕ ун çинелле Анюта. — Килĕшместь-им сăмахĕ?

— Мар-ха. Темле вăтантарса ярать мана ку сăмах...

— Ан вăтан. Упăшка пулас килсен, кĕрӳ пулассинчен те иртеймĕн, — кулчĕ хĕр. Анчах ĕнтĕ хăй те вăтанса кайса шăпăрт пулса тăчĕ.

## 33

Пĕррехинче вăрмана Яльчиков пычĕ. Иван Яковлевич, яланхи пекех, сăрапа турттарнă пальтопа. Галифе, атă тăхăннă. Пуçĕнче сукна карттус. Çӳллĕскер, сарлака хулçурăмлăскер, вăл пĕр-пĕр кинофильмран тухса тăнă комиссар пекех курăнать. Урлă-пирлĕ выртакан туратсем урлă çăмăллăн каçса, бригада ĕçленĕ çĕрелле утать ав. Дубовсене вăл, аллине çĕклесе, аякранах сывлăх сунчĕ. Канма ларнă çынсем, Яльчиков çитсен, пурте ура çине çĕкленчĕç.

— Ай-яй, вăрмана нумай çаратнă эсир, — тавралла пăхса çаврăнчĕ Иван Яковлевич. — Çул тăрăх сăнаса килтĕм те — йăлт хуйха ӳкрĕм. Кун пекех кассан...

— Шалаллах кĕрсе пыратпăр, — аллинчи хуçăк туратпа анăçалла тĕллесе кăтартрĕ Дубов.

Старик çĕрте выртакан çăка вулли çине пырса ларчĕ, кукăр чĕлĕмне кăларса туртса ячĕ те, бригада ĕçĕ-хĕлĕ çинчен ыйткаласа пĕлчĕ.

— Хĕрĕх çул çитет ĕнтĕ эпĕ çак вăрман çĕрĕ çине ура ярса пусни, — аса илме тытăнчĕ Иван Яковлевич. — Çилĕмлĕ, хăватлă пулчĕ пулмалла вырăнĕ. Паянхи кунччен те уйăрмасть хăйĕнчен, ниçта та ямасть... Вăрманпромхозăн кантурĕ те малтан сынран тара илнĕ хваттертеччĕ, хальхи вокзал патĕнче. Пĕрремĕш приказ çыртăм. Асран каймасть вăл. Ун чухне, хальхи пек, министерство çукчĕ. Чăваш вăрман промышленность тресчĕ пулнă. Трест управляющийĕн приказĕ тăрăх çичĕ лесничествăна пĕрлештертĕмĕр. Мансах кайнă, тата тепĕр вăрман завочĕ пурччĕ-çке. Пуçланчĕ вара! Çĕршыв валли çанă тавăрса йывăç хатĕрлеме тытăнтăмăр.

Иван Яковлевич çулпа мĕкĕрсе иртекен МАЗа куçĕпе пăхса ăсатрĕ.

— Халĕ мĕн! Ĕçлеме çăмăл: автомашини, кранĕ, тракторĕ — пурте пур. Ун чухне обозра тăватçĕре яхăн лашаччĕ. Ялтан тепĕр çавăн чухлĕ килетчĕ. Пилĕкçĕр-ултçĕр пин кубометр ăсататтăмăрччĕ патшалăха çулталăкра. Хĕлле пăр çул турăмăр. Тури Юпалран анатри склада çитиччен, пĕтĕмпе вăтăр çухрăм тăршшĕ. Касса сыпăланă йывăçа вагонеткăна тиетпĕр те пăрлă çулпа ăна лашапа турттаратпăр. Вăрçăчченнех усă куртăмăр çапла механизациленĕ çулпа. Мухтанмасăрах калатăп: трестра мала тухнăччĕ, Хĕрлĕ ялав çĕнсе илтĕмĕр.

Хама Улатăра куçарсан та вăрманпромхоз çыннисемпе, пĕрле ĕçлеме пуçланă çынсемпе, çыхăну тытма пăрахманччĕ, çавăнпах пуль вăрçă хыççăн Первомайсках таврăнтăм. Вăрçă çулĕсенче ман юлташ, Шакуров, директорччĕ. Ман пата вăл фронта пĕрмаях çырса тăратчĕ. Танк колонни тума, «Лесоруб Чувашии» авиаэскадрилья валли укçа пумай пухни çинчен пĕлтерсен, питĕ савăннăччĕ эп. Вăрманпромхоз кантурĕнче курман-и-ха эсир? Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тума 50000 тенкĕ укçа пухса панăшăн вăрманпромхозра ĕçлекенсене Сталин тав туса янă телеграммăна арчахрах пăхса лартăмăр-ха. Яковлевпа Безбородов вăрманпромхоз музейĕ тума шут тытнă. Эпĕ те вĕсене пулăшасшăн. Сирĕнтен те пулăшу кĕтетпĕр.

Яльчиков вăрманпромхоз историне каласа кăтартнине Дубовсем кăсăкланса итлерĕç. Чăнах, ара, ĕçлеççĕ вĕсем çак пысăк йышра — вăрманпромхозра пин çурă çын,

анчах сахал пӗлеҫҫӗ коллектив пурнӑҫне, историне. Хӗрӗх ҫул хушшинче кунта́ пайтах ырӑ ӗҫ тунӑ, мен чухлӗ ӗҫ паттӑрӗ ӳссе ҫитӗннӗ. Ҫамрӑксен шухӑшне ӑнланнӑ пекех, Иван Яковлевич юлашкинчен ҫапла каларӗ:

— Ӑннипе илсен, ачасем, эпир пурте хамӑр тунӑ ӗҫе чунтан юрататпӑр, хаклатпӑр. Эпир тунӑ ӗҫре яланах пиншер ҫын вӑйӗ, шухӑш-туйӑмӗ. Иртнӗ пилӗкҫуллӑхсен хастарлӑхне манма юрамасть. Ҫав пилӗкҫуллӑхсем вӗсем — паянхи пурнӑҫ никӗсӗ. Хамӑр ҫав никӗс ҫинче ҫӗнӗ пурнӑҫ тума пултарнишӗн эпӗ сирӗнпе мухтанатӑп, сирӗн вӑй, сирӗн ӗҫ, сирӗн малашлӑх умӗнче пуҫ таятӑп.

Апат вӑхӑчӗ вӗҫленнине сиснӗ Яльчиков ура ҫине сӗкленчӗ, бригада та тӑрса ӗҫе пикенчӗ. Иван Яковлевич хурӑн туратти иртсе пӑхрӗ. Ватӑ ҫынна нумай ӗҫлеттермерӗҫ. Арсентьев пырса ҫитрӗ те, вӗсем ҫӳлти склада ҫул тытрӗҫ.

Раманшӑн халӗ чӗринче ҫӗнӗрен вӑй хушӑннӑ пекех туйӑнчӗ. Ҫакӑн пек маттур, паттӑр ҫынсем пуҫланӑ ӗҫе малалла туса пыма вӗсен тата ҫине тӑрарах тӑрӑшмалла.

## 34

Тент витнӗ грузовик вырӑнне вӑрман касакансене илсе ҫӳреме автобус уйӑрса пачӗҫ. Автобусра ырӑ, тарланӑ ҫанҫурӑм шӑнас хӑрушлӑх ҫук. Вӑрмантан тухсан шофер ҫынсене ОРС столовӑйӗ умӗнче антарса хӑварать. Кунтан пурин те киле ҫитме ҫывӑх.

— Ӗнер ҫыру илтӗм. Ҫӗпӗртен Хӗрӳ Хӗветӗрӗ ҫырать, — ҫула май калаҫрӗ Иван Капитонович. — Таврӑнатӑп тет. Кӗтсе илес пулать.

— Чее вара Хӗрӳ, — пуҫне пӑркаларӗ Хӗлимун, — япӑх чухне тарчӗ, халь ӗҫсем лайӑхланчӗҫ те — кунталла тапасшӑн.

— Эс апла ан калаҫ-ха, Хӗлимун, — чарчӗ ӑна Арсентьев. — Пурнӑҫра тем те килсе тухӗ. Ӑҫтан пӗлен ӑна. Килет-тӗк — килтӗр. Йышӑнатпӑр. Пурин валли те ӗҫ ҫитет.

Сидоров валли ӗҫ ӑнах та тӳрех тупӑннӑччӗ. Ваҫҫа Степнов пӑтӑрмахӗ хыҫҫӑн Лишайкин Яков Кашкина урӑх мастер участокне куҫарнӑччӗ. Арсентьев участокӗнче тепӗр бригада тума шутларӗҫ. Шӑпах ҫав вӑхӑтра Хӗрӳ Хӗветӗр персе ҫитрӗ. «Хӗрӳ пӗтсе пырать ҫав пирӗн, ваттисен, — терӗ вӑл хӑйне бригада йышӑнма сӗнсен, — ӗҫлеччӗр ҫамрӑксем, вӑй ҫитнӗ таран пулӑшӑпӑр вӗсене».

Бригадӑна Ҫтаппанӑн йӗркелемелле пулчӗ. Раманпа ӗҫлесе, вӑл вӑрман ӑсталӑхне лайӑх вӗренсе ҫитнӗччӗ ӗнтӗ.

Хĕлимун унран юлмарĕ, помощника çыранчĕ. Улькана Çтаппан хăй илмерĕ. «Килте те, вăрманта та ун аллинче, тăнран каятăп капла», — терĕ алă сулкаласах. Улька кӳренмерĕ: «Эп сан бригадуна пырас тесе те шутламан. Мана кунтах лайăх. Пурпĕр эсир Хĕлимунпа иксĕр пире çитейместĕр», — тесе тавăрчĕ.

Раманăн малтанхи вĕрентекенĕ, Хĕрӳ Хĕветĕр, пулăшакан пулма килĕшрĕ. Моторист малтанлăха хăйне темле лайăх мар, вырăнта мар пек туйрĕ. Аран-аран хăнăхрĕ. Каярахпа черетпе касма пуçларĕç. Сидоров çĕпĕрте эстакада çинче ĕçленĕ, çавăнпах-ши халĕ пăчка питĕ тунсăхласа çитнĕн алла ярса тытрĕ.

Иван Капитоновичăн ăшĕнче çав кунсенче тăвăл алхасрĕ. Лишайкин хăйĕн кăмăлне кайман парторгран хăпрĕ-хăпрех вĕт.

Мерчĕксене Хурашыв вăрман пункчĕпе пĕрлештерсен, хăшне-пĕрне тем килĕшмерĕ, «пирĕн», «сирĕн» текелени илтĕнкелетчĕ. Кăмăлĕ çырлахман çав рабочисене Лишайкин тата ытларах хĕтĕртсе янă. Коммунистсем хушшинче те йĕр хăвармасăр иртмерĕ ку. Парторганизаци отчетпа суйлав пухăвĕнче мерчĕксем «çĕнтерчĕç», секретаре «хăйсен çыннине» — Илле Иванова суйларĕç. Пуху хыççăн партком секретарĕ Яковлев Иван Капитоновича çула май килнех кĕртсе хăварчĕ.

— Эпĕ хама секретаре суйламаншăн пĕртте куляпмасгăп, кӳренместĕп те, — терĕ Арсентьев. — Çитет мана, сакăр çул улшăнмасăр ĕçлерĕм. Мана урăххи тарăхтарать. Лишайкин парторганизацие хăй аллине çавăрса илесшĕн. Иванов ăна хирĕç калаймасть, тем тесен те иртеймест ун куçĕнчен, ытла çемçе кăмăллă.

— Ун пек тума памăпăр-ха ăна, — хирĕçлерĕ Яковлев.

— Сăмах çеç вăл. Вĕсен ĕçне эсир килсе тăвас çук. Сирĕн хăвăрăн ĕç мăй таран.

— Тĕрĕсси тĕрĕсех-ха, — тин килĕшрĕ унпа секретарь,— кулленхи палăртнă-палăртман ĕç чăнах мăйран пăвать пире. Парти ĕçĕ çăмăл мар ĕнтĕ.

Арсентьев партком секретарĕнчен уйрăлнă каç часах çывăрса каяймарĕ. Чӳречерен темиçе те пырса пăхрĕ. Урам леш вĕçĕнче Рамансем пурăнакан баракран çул çине çутă ӳкнĕ. Дубов пурнăçĕ, пуласлăхĕ питĕ шухăшлаттарать мастера. Тепĕр чухне вăл хĕрӳлĕхне пула хăйне хăй сиен туса хурасран та шикленмелле.

## 35

Октябрь уявӗ ҫитеспе Раманпа Анюта мӑшӑрланчӗҫ.

Туй умӗнхи кунсенче Дубов бригади вӑрманта ырми-канми ӗҫлерӗ. Ӑмӑртура мала тухса бригадира савӑнтарма шутларӗҫ ҫынсем. Ку ӗнтӗ Раманшӑн чи хаклӑ парне пулатчӗ, паллах. Анчах та ӗҫ тухмарӗ, вӗсем иккӗмӗш вырӑна юлчӗҫ.

— Ну, халь, — терӗ вара Улька Хӗветӗре, — пӳртлӗх йывӑҫ касар. Парнелер Рамана!

— Пӳртлӗх йывӑҫ? — кулса илчӗ Хӗветӗр. — Йышӑнмасть сан йывӑҫна Раман, Ҫашкин мар вӑл. Диван туянса парар мар-и бригадӑпа?

Ҫурӑм хыҫӗнче Раман ҫулҫӑ чӑштӑртаттарса килнине илтсен, калаҫӑва урӑх енне пӑрса ячӗҫ.

— Курӑр-ха, сывлӑш епле кӑвакарчӗ вӑрман ҫийӗн! Ку — ӑшша вара, — йӗри-тавралла ҫаврӑнса пӑхрӗ Хӗветӗр.

— Ӑшши лайӑх-ха вӑл, — пуҫне ҫӳлелле каҫӑртрӗ Улька. — Эп Ҫтаппанпа пӗрлешнӗ ҫул та ҫаплахчӗ. Лайӑх астӑватӑп.

— А-ах, ҫав пылак вӑхӑта каялла тавӑрса килес килет пулӗ-ха, — мазутпа вараланнӑ аллине ҫӗтӗк таткипе сӑтӑркаларӗ Ҫинахван. — Ҫапла-и, Улька инке?

— Сан кулассн. Хӑвӑн та пулӗ-ха чуп-чуп уйӑхӗ. Хуть те мӗнле пулнӑ пултӑр, пуртта вара сывлӑша лартман, турат ҫинех лартнӑ. Ак ҫапла!.. — кач! тутарчӗ Улька ҫӑка тураттине, вӑшт ҫеҫ касӑлса сирпӗнчӗ турат.

Ҫапла, бригада мала тухаймани самаях пӑшӑрхантарчӗ пулин те, кӗтнӗ туй савӑнӑҫла иртрӗ. Фильчин оркестрӗ хаваслӑ кӗвӗ шӑрантарать. Чӑвашла тумланнӑ Анютӑпа Раман, алла-аллӑн тытӑнса, капӑрлатнӑ сцена ҫине хӑпарчӗҫ. Анюти енне хӗр ҫумӗсем кӗпӗрр пырса тӑчӗҫ. Раман енӗнче — туй ачисем, тӑванӗсем. Туй арӑмӗсем саркаланса юрлаҫҫӗ:

Ой, пичи Раман пур,
Инке лайӑх — Анюк пур,
Астуман та...

Музыка шкулӗнче пӗрле ӗҫлекен Люба Шушинапа ӑшталанса ҫитсе кӗнӗ Тамара кӑртах сикрӗ.«Астуман та, Тамар» тесе янратса ярассӑнах туйӑнчӗ ӑна. Анчах туй арӑмӗсем ӑна-кӑна пӗлмерӗҫ, савӑнсах малалла юрларӗҫ:

...Анютӑпа Рамана
Туса парар савӑк туй!

Тамарӑн куҫӗ хуралса килчӗ. «Мӗншӗн Анютӑпа?—хирӗҫет, ыратать, кӑшкӑрать хӗрарӑм чунӗ. — Мӗншӗн Тамарӑпа Рамана тухмарӗ ҫак туй?..» Ара, курсамӑр, епле ҫӑвать ҫӑлтӑр ҫумӑрӗ Тамарӑпа Раман ҫине! Ҫӑлтӑрсем пӗвене ӳксе чашлатаҫҫӗ, таврана ҫулӑмлӑ хум сирпӗтеҫҫӗ, савӑшуллӑ мӑшӑр ярӑнакан сулла силлеҫҫӗ, тайӑлтараҫҫӗ, тӳнтерсе ярасса ҫитереҫҫӗ... Куҫ курмасть. Тӗттӗм... Тамара хуллен, хӑраса уҫать куҫне. Сцена ҫинче туй сикет. Раманпа Анюта поссовет секретарӗ умне тӑнӑ, уҫса хунӑ хулӑн кӗнеке ҫине алӑ пусаҫҫӗ. Лешӗ вӗсене мӑшӑрланнӑ ятпа саламлать, Анютӑна чӗрӗ чечек ҫыххи парать. «Мӗншӗн ӑна парать-ха? — каллех тӑнран каять Тамара. — Мӗншӗн мана мар? Эпӗ те кунтах-ҫке, юнашарах». Раманпа Анюта ҫӗрӗ улӑштарса тӑхӑнаҫҫӗ. «Пуҫламӑшӗ те, вӗҫӗ те ҫук мӑшӑрлану ҫӗррин ун, — тет туй пуҫӗ Хӗлӗх Хӗлимунӗ,— сирӗн те, ҫамрӑк мӑшӑрӑн, юрату ҫавӑн пекех вӗҫӗ-хӗррисӗр пултӑр». «Суя!»—кӑшкӑрать Тамарӑн чунӗ, пӗтӗм ӑшчикки. Фильчин та «юратӑвӑн пуҫламӑшӗ те, вӗҫӗ те ҫук» тесе оркестрпа суя кӗвӗ кӑларать пек. «Суяҫҫӗ. Пурте суяҫҫӗ. Юратӑвӑн пуҫламӑшӗ те, вӗҫӗ те пур. Раман юратӑвӗ... Пуҫламӑшӗ ӑҫтаччӗ-ши унӑн? Аха, шкул парти хушшинчен, Тамарӑна вӑрттӑн панӑ ҫырусенчен пуҫланнӑччӗ. Аха, Мерчӗкре сулӑ ҫинче малалла тӑсӑлнӑччӗ... Вӗҫӗ тата ӑҫта? Аха, кунтах-ҫке, Хурашыв улӑхӗнче, аслатиллӗ ҫумӑр айӗнче, асамат кӗперӗ айӗнче... Раман юратӑвӗ... Сан пуҫламӑшӗ те, вӗҫӗ те пур. Мана юратмашкӑн эс пуҫларӑн та, пӑрахрӑн та. Манӑн вара пуҫламӑшӗ анчах. Вӗҫӗ ҫук. Нихӑҫан та вӗҫленмӗ вӑл, нихӑҫан та. Юратӑвӑн вӗҫне курмастӑп. Курма та сунмастӑп. Ах, ҫӗрӗ, ҫӗрӗ... Ҫӗррӗн пуҫламӑшӗ те, вӗҫӗ те ҫук. Юратӑвӑн... Пур. Пуҫламӑшӗ те, вӗҫӗ те пур. Пуҫламӑшӗ ҫеҫ лайӑх унӑн, чӗрене уҫакан, куҫа курми тӑвакан савӑнӑҫ пуҫламӑшӗ...»

Тамара туй арӑмӗсем юрланипе тӑна кӗчӗ. Хай ҫине тӗлӗнсе пӑхса тӑракан Люба Шушнаран вӑтанса, хӗпхӗрлӗ хӗрелсе кайрӗ.

Туй пуҫӗ ура ҫине сиксе тӑчӗ те пӗртте йӳҫӗ марла савӑнса: «Йӳҫӗ!» — тесе кӑшкӑрса ячӗ. Пурте вара алӑ ҫупсах янраттарчӗҫ: «Йӳҫӗ!» «Йу-ҫӗ!!!» Анютӑпа Раман вӑтана-вӑтанах пӗтӗм халӑх умӗнче чуптурӗҫ.

Тамара куҫне хупрӗ. Чӑтаймарӗ, пуҫран ҫапнӑ пек тухса кайрӗ клубран. Туй унран хаклӑран хаклине туртса илсе юлчӗ.

Туй та, Октябрь уявĕ те сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕç. Малтан çунă-çуман тăнă юр ноябрь вĕçĕнче кĕштех тултарса лартрĕ. Вăрман ĕçлекенсемшĕн чи йывăр тапхăр пуçланчĕ. Ĕнтĕ кĕрт уçсах халтан каятăн. Хĕлĕпех çапла. Касас йывăç кутне ăна лайăх тасатмалла. Унсăрăн тĕпĕнчен илейместĕн. Раманпа Хĕрӳ Хĕветĕр çуллахинчен çӳллĕрех пĕр тунката та хăварасшăн мар. Сидоров Çтаппансем тункатасене çӳллĕ хăварнине асăрханă та вĕсене хайхискерсене кайсах ятласа килчĕ. Кăштахран, çилли пусăрăнсан, кил нуши пирки калаçмалли тупăнчĕ унăн:

— Паян иртерех кайма пулмасть-ши? Çапă тиеме килнĕ пĕр инке качака сутма пулнăччĕ. Çавна кайса туянас тетĕп. Арăм ман качакашăн вилет! Ĕне те пур ĕнтĕ — ăна качака сĕчĕ пар! Урăх нимĕн те кирлĕ мар. Юманлăхра та усрарăмăр çав шĕвĕр майракаллă шуйттана. Çĕпĕрте те туянтарчĕ. Тăнран ярать. Сан арăму анратмасть-и-ха вăл кирлĕ те ку кирлĕ тесе?

Раман «Дружбăна» тунката çинчен илсе çĕклерĕ.

— Качака таранах тапăнмасть-ха, — кулса илчĕ вăл.— Амăшĕ сĕт килсе парсах тăрать те, татăк мар сĕтрен эпир. Ваттисем хамăра та ĕнеллĕ тăвасшăн-ха пире, хĕл каçнă пăру парнелерĕç. Вите тавраш çук та — хăйсем патĕнчех тытаççĕ халь.

— Вăхăтра аса илтертĕн, — çаннинчен тытса чарчĕ ăна Хĕветĕр, — Хурашыврӑх вите сутакан пур. Хамăр гараж патĕнче. Илмелле. Эртелпе туххăмра майласа лартатпăр ăна.

Раманшăн ку калаçу пит усăллă пулчĕ. Витене туянса çийĕнчех куçарса лартрĕç.

Вĕсем Мерчĕк хыçĕнче вăрман касаççĕ-ха. Пĕр кунхине Хурашыва таврăннă чух автобус çĕмĕрĕлсе ларчĕ. Шофер, капота уçса, моторпа тĕрмешме пуçларĕ. Раман та пычĕ ун патне. Хĕртмелли лампа кирлĕ, унсăрăн тӳрлетме май çук. «Мерчĕк çывăхрах, кайса пăхмастăн-и?» — ыйтрĕ шофер. Раман килĕшрĕ. Унпа пĕрле шыв ĕçмелле тесе Çтаппан та утрĕ.

Халиччен хурт вĕлли пек сĕрлесе ларнă Мерчĕк йăлтах пушанса юлнă. Чӳречисене хăмапа çапнă темиçе пӳртпе куçарса каяйман лавкка çурчĕ пур та, тата вăрман хĕрринче, тарасаллă çăл умĕнче, Стасик Павловăн хуçалăхĕ сарăлса ларать. Хапхине туса пĕтернĕ ĕнтĕ. Алăкĕсене сарăпа та кăвакпа сăрланă, решеткине — хăмăрпа. Пӳртĕн çул еннелле тухакан виçĕ чӳречинне те харашкисене эреш-

лесе касиă, сăрласа илемлетнĕ. Стасик килĕнче пĕчченех. Раманпа Çтаппана чӳречеренех курнă пулас, хирĕç тухрĕ. Дубов унран хĕртмелли лампа ыйтрĕ.

— Хушăн пулсан памастăмччĕ те — юрать эртелпе,— мăкăртатса кĕрсе кайрĕ вăл шалалла. — Куртăн-и, ман пурте тупăнать, — мухтанса лампăна Çтаппана тыттарчĕ вăл. — Васкамастăн пуль, Раман? Ман санпа калаçмалли пур. Юлташу çитерсе парать шофера.

Дубов Çтаппана пĕчченех машина патне ячĕ, кив лавкка çурчĕ умĕнче кĕтсе тăма хушрĕ.

— Пустуях килтĕм эп кунта. Саратоврах пурăнмаллаччĕ. Чун кӳтет. Пурнăç мар. Тамара юратмасть мана. Сивĕнчĕ. Пĕрмай сана аса илет. Тарăхнипе арăма та, сана та, хама та кураймиı пулса çитрĕм. Кил çавăртăм — арăма çеç çавăраймарăм. Санах юратать вăл, — сиввĕн пăхса калаçрĕ Стасик.

— Пуш сăмах туса ан тăр-ха эс, — лăплантарасшăн пулчĕ ăна Раман. — Эп авланнă çын. Ман арăм пур. Сан арăмупа çыхланса çӳремĕп. Кам кансĕрлет сире, кам чарать çак керменте савăнса пурăнма?

— Эсĕ кансĕрлетĕн. Эсĕ! Первомайскран килет те Тамара — урать: йĕрет, çиет мана. Сан туйра та пулнă вăл. Унтан таврăнсан ай-яй хирчĕ. «Эс ман пурнăçа пĕтертĕн, ман телее таптарăн. Раман пек туйла авланма та пĕлмерĕн, эп те çынсем пек туйла качча тухаймарăм», —тесе йăнăрашрĕ. Тарăхнипе туяпа хăмсартăм та, ашшĕсем патне тухса тарчĕ.

Раман аптраса ӳкрĕ, тата мĕн калать-ши тесе, Стасика куçĕнчен тĕлĕнсе пăхрĕ. Лешĕн куçĕ çапăçава кĕме хатĕр çыннăнни евĕр ялкăшса çунать, тути хĕрри чĕтрене-чĕтрене илнипе сăнĕ тискеррĕн курăнать.

— Хăвăр çăрнă пурнăç çулĕпе хăвăрах утăр, — терĕ вара Раман.

Сарайĕнчен упа çури пăркаланса тухрĕ те вĕсем патнелле мĕшĕлтетрĕ, ларса урисене малалла тăсрĕ. Стасик ăна кĕсйинчен сахăр катăкĕ кăларса хыптарчĕ. Упа çурипе айланнă хушăра Стасикăн çилли çаврăнчĕ курăнать.

— Çитĕ ĕнтĕ хамшăн макăрса сан умăнта, намăс,—терĕ. — Эх, Раман, лайăх та çав кунта, вăрманта... Егера кĕтĕм ав, вăрман хуралçине, тискер кайăк хуралçине. Мерчĕк коменданчĕ кăна мар халь эп, пĕтĕм вăрман коменданчĕ, — хĕрхӳн мухтанса илчĕ Стасик. — Ку упа çурине хуньăм пачĕ. Амăшне персе вĕлернĕ те... Мана халь пыра та парать, йăпанса пурăнма арăм вырăнне...

Çав самантра Стасикăн шуранка пичĕ, сухалпа витĕн-

нĕ шĕвĕр янахĕ, курпунланнă кĕлетки Дубова хĕрхентерсех ячĕç.

Павлов малалла калаçрĕ:

— Хуньăмăн ун ĕлĕкхи кулак психологийĕ. Таçтан та сисĕнет. Упа çури парнеленĕ чухне те: «Ӳстерсен ашне çурмалла пайлăпăр», — тесе хăварчĕ. Кулать вăл çынран. Манран та кулать. Ӳсĕрпе мухтанать: «Эп сана, кĕрӳ,— тет, — укçа айне тума пултаратăп, эс манпа ан хирĕç, атту çĕртетĕп», тет. Хăратăп унран. Тамара пачах урăхла. Ашшĕне хывман. Сăнĕ ашшĕн пулсан та, кăмăлĕ амăшĕн.

— Çапла, Стасик, хуню сан çынсене тара тытмасăрах хăйшĕн ĕçлеттерет, вăрманне сутать, çурмалла пайлать. Сан вырăнта чăтаяс çук эп, — Стасик мĕн каласса кĕтсе, ун куçĕнчен пăхрĕ Раман.

— Эп сан пек мар çав. Унпа çемье енчен çыхăннă,—мăкăртатса илчĕ лешĕ.

— Эс йăлтах тир ăшĕнче-çке, — тин асăрханă пек пăхрĕ ун çине Раман. — Вăрман коменданчĕ темерĕн...

Стасик урине тир атă тăхăннă, шап-шурă кĕрĕкпе, пуçĕнче лапсăркка çĕлĕк, аллинче — тир алса.

— Э-э! Кунти мар вĕсем. Якутире чухне çĕлеттернĕскерсемех. Халĕ шăпах кирлĕ пулчĕç. Хамăн сывлăха кура. Кунта вĕçен кайăкĕ те, тискер кайăкĕ те сахал. Пуррине те нумай тытса пĕтереççĕ. Вăрманĕ те çаралсах пырать. Эсир нумай касатăр. Вăрман коменданчĕ пулмалла вара пирĕн... Пурин те!

— Пулмалла та — эс, Стасик, çапах начар комендантха. Хунюна та нимĕн те тăваймастăн. Сунар вăхăтне уямасть вăл. Хăй çеç-и тата?! Сятровсене иртĕнме памалла мар вăрманпа. Халăхăн хуçа пулмалла хăйĕн пуянлăхĕпе.

— Санпа килĕшетĕп эпĕ. Анчах манăн кĕрешме вăй çитмест, — аллине усрĕ Стасик. — Çапах та эп сана касармастăп. Паян чип-чипер калаçрăмăр та... Ыран... Тамарăна тĕкĕн кăна! Хамăръял тесе тăмастăп.

Хапха алăкĕнче Çтаппан курăнчĕ. Бригадира васкатать.

## 37

Урашывра ялти пекех пурăнаççĕ. Бараксемпе пӳртсем хыçне кашни çемьенех çĕр уйăрса панă. Чылайăшĕ сад ӳстерме пуçланă. Хĕлĕх Хĕлимунĕ те вунă улмуççи лартса хăварнăччĕ. Раман Дубов та сад çинчен ĕмĕтленет — ăçта, хăш тĕлте мĕнле, миçе йывăç пулмаллине палăртса хунă ĕнтĕ. Çуркуннене çеç кĕтет.

Рамансен кил хушшийĕ тăвăр. Вăхăтлăх тытса çавăрнă ракатка курăнмиех юр тултарать. Çӳллĕрех хӳме кирлĕ ĕнтĕ, вырăсла хапха та кансĕрлемĕ. Вите умĕнче пăрушне çăра шыв ĕçтернĕ чухне çапла шухăшласа тăчĕ вăл.

Çула май пекле Илле Иванов килсе кĕчĕ. Илле—иккĕмĕш участок мастерĕ, партбюро секретарĕ. Хурашыв леш вĕçĕнче пӳрт лартма ĕлкĕрнĕ, кирлĕ таран хуралтă çавăрнă.

Тул алăкне уçса, тĕттĕм пӳртумне кĕчĕç. Ура айĕнче кивĕ хăма чĕриклетсе илчĕ. Барак пӳлĕмĕ пысăк мар. Сылтăмра, алăк çумĕнче, кăмака. Сулахай енне шифоньер лартнă. Тĕпелте — тимĕр кравать. Кĕтесре—тăваткал сĕтел. Пукансем...

— Вăт çапла çăрăлкаласа пурăнатпăр эпир, — юлташне кĕрĕк хывма пулăшрĕ Раман.

Илле çăматтине те хывасшăн пулчĕ — Анюта хывтармарĕ: урай сивĕ. Алă çума кăмака хыçĕнчи умывальник еннелле тĕллесе кăтартрĕ.

— Анюта, — терĕ алă çуса кăмака хыçĕнчен хĕсĕнкелесе тухнă Илле, — Раман çак пӳлĕмрех сан ĕмĕрне ирттересшĕн пулĕ-ха. Çавăн пек туйăнать. Никамран уйрăм çын ан пул, Раман. Ларг лайăх пӳрт.

Раман вĕсене итле-итле васкасах яшка антарать.

— Кунта халь пурăнма пулать-ха. Тӳрех кермене кĕртсе ярсан вăл, арăм тени, ытлашши мăнкăмăлланса кайĕ. Нуша кулачне те çимелле. Çапла пуль, Анюта?

Алăка тул енчен шаккарĕç, пӳрте Яльчиков кĕрсе тăчĕ.

— Лайăх туять вара ман ват сăмса! — терĕ вăл салтăннă май. — Вăхăтра çитрĕм. Шăп апата.

Анюта пурне те сĕтел хушшине васкатрĕ.

Арçынсен вĕсен йăли çапла: тӳрех ĕç çинчен шавлама тытăнаççĕ.

— Мана, — терĕ çиме чарăнсах Раман, — пĕр япала канăç памасть. Ак, Яков Кашкинах илер. Ĕçлет вăкăр пекех. Эпир те тăрăшмастпăр мар пек. Çапах вĕсене çитейместпĕр. Уйăх-и унта е квартал, е тата, калăпăр, çулталăк пĕтет те, вĕсен кубатура нумайрах. Ултав пур пек çакăнта.

Иван Яковлевич пĕр иккĕленмесĕр каласа хучĕ:

— Хушса çыраççĕ, кĕрӳ, ялтан ĕçлеме килнĕ çынсен кубатурине хушаççĕ!

— Ăна эп чухласа илнĕ-ха. Анчах тăрă шыв çине кăлараймастпăр. Питĕ чее хăтланаççĕ. Тĕрĕсне тупасса тупăпăр-ха, вăл малашлăх. Мана ытларах çав çынсен чун-чĕри шухăшлаттарать. Кашкин бригадипе эпир пĕр вăхăтра коммунизмла ĕç коллективĕ ятне илтĕмĕр. Хут çинче вăл —

паянхи обществăн чăн-чăн çынни, тĕрĕссипе — ултав çӳпçи. Кашкина эпĕ çакăн хыççăн тем тесен те коммунист вырăнне хумастăп. Е тата Варсонофий Степновпа мĕн туса хутăр-ха? — сăмахне малалла тăсрĕ Раман. — Кулăшла. Кунĕн-çĕрĕн вăрман вăрлать. Эсир вара сăнне Хисеп хăми çине кĕртсе лартрăр, Илле тусăм. Ĕçĕ пирки ним те каламастăп. Вăрманпромхозĕпе те çитекенни сахал ăна. Анатри склада йывăç чи нумай вăл турттарса кăларнă. Ултă пин кубометрччĕ-и ун? Уншăн мухтамалла. Анчах çынна пирĕн ĕçшĕн çеç хакламалла-ши?

Яльчиков кĕрӳшне юнашар туртса лартрĕ.

— Санпа килĕшетĕп, йăлтах килĕшетĕп, — терĕ вăл.— Çапла çав, хăшпĕр çынна пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанне çитиччен мухтавпа чĕркесе хума хатĕр эпир. Çав вăхăтрах хайхи çын ăшĕнче чăннипе мĕн ларнине пăхмастпăр. Ĕçшĕн, хастар ĕçшĕн мухтамалла çынна, анчах, эс каланă пек, кĕрӳ, ăна общество умĕнче хисеплĕ çын тăвас тесен лайăх тĕрĕслесе пăхмалла, кăмăл-сипет суранĕ пур-тăк — сиплемелле.

— Унашкал çитменлĕхсемпе кĕрешекен сахал çав пирĕн хушăра. Никамăн та пĕр-пĕрне усал тăвас килмест пулас. Авă, Илле Иванч та Лишайкинпа çырлахса ларнă,— Иванова куçран чăрр пăхрĕ Раман. — Те хăрать унран?

Çапла хăвăрт «чĕпĕтсе илнипе» Илле сăварне кап карчĕ, аллинчи кашăкне шăкăрт! ӳкерчĕ сĕтел çине.

— Куна, Раман, кăшт кукăртрăн-ха, — терĕ вăл. — Сехĕрленсех ӳкмен те, анчах иртме те хĕн унран. Укçине ун патĕнче илетпĕр-çке. Ун куçĕнченех пăхатпăр. Тавлашатăп эпĕ унпа. Вăрçать, хăратма пăхать.

— Çакна тăрă шыв çине кăлармасан сана, Илле! — куçĕпе çирĕ юлташне Раман. — Çын тесе те, юлташ тесе те, парторг тесе те шутламастăп вара сана. Асту!

— Ай, хĕрӳ кĕрӳ вара ман, — çурăмĕнчен лăпкарĕ ăна Яльчиков. — Маттур! Çапах сире пĕр ăслă сăмах калам. Ытлашши усăсăр ан хĕрӳленĕр. Тăнлавсем вĕсем ахаль те хăвăрт кăвакарассĕ. Асăрханса ĕçлĕр. Пĕччен-иккĕн мар. Шанчăклă, çывăх юлташсемпе. Халăхпа пĕрле çиеле кăларăр усала.

Ку таранччен хăйĕн ĕçĕпе темĕн чăрманса çӳренĕ Анюта, сĕтел патне пырса, ашшĕн тирĕкĕнчен яшка сыпса пăхрĕ те хыпăнса ӳкрĕ:

— Калаçса эсир апата та сивĕтсе янă-няк. Ай-уй, сирĕнпе! Ăшăтса парас пуль. Ах, çак Рамана...

— Кунта каçкуй халь! Хĕрӳ ăшчикре сивĕ апат та вĕреме кĕмелле, — кула-кулах сĕтел хушшинчен тухрĕ Ил-

ле. — Эп санпа, Раман, акӑ мĕн пуплесшĕнччĕ. Партие кĕмелле сан. Пирĕн рете тӑмалла. Ун чух, ху каланӑ пек, пĕрле, вӑйлӑнрах кĕрешĕпĕр.

## 38

Хурашыв вӑрман пункчĕ пилĕкçуллӑх кӑтартӑвĕсемпе мала тухрĕ. Утмӑл пин кубла метр йывӑç касса хатĕрленĕ.

— Кунпа, пĕлетĕр-и, пин пӳрт лартма пулать, — терĕ калаçу irttерме пынӑ Иванов, — рабочисен шучĕ икĕ хут ытла чакрĕ, кашни çын пуçне каснӑ йывӑç шучĕ вара икĕ хут ӳсрĕ, — сакӑрçĕр кубометра çитрĕ. Малашне те çаплах ĕçлер, юлташсем!

Рабочисем алӑ çупрĕç. Раман сӑмах илчĕ:

— Эпир бригадӑпа çапла шутларӑмӑр, — тĕреклĕ хулçурӑмне хускатса илчĕ вӑл, — çитес пилĕкçуллӑха тӑватӑ çулта ним те мар тултарма пултаратпӑр. Пирĕн халь Çтаппан кайнӑ хыççăн пĕр çын çитмест, ун вырӑнне хамӑрах лайӑх ĕçлесе пытӑмӑр. Вӑя шанатпӑр. Çавӑнпа та сахал йышпах пилĕкçуллӑх планĕнчен irttерсе тепĕр вунӑ пин кубометр йывӑç касма пулатпӑр. Шутласа пӑхнӑ. Пустуй сӑмах мар. Кашкинсене, яланхи пекех, ӑмӑртӑва чĕнетпĕр.

Тепĕр темиçе кунтан вӑрмана Захаров та килсе çитрĕ.

Киле кайма автобус патне Раманпа Çтаппан бригадисем пĕр вӑхӑтрах тухрĕç. Улька упӑшкипе юнашар ярӑнса утать. Вĕсен ури айĕнче Хĕлимун мечĕк пек кускалать.

— Пустуй лапӑртататӑр-ха ку тӑват çулпа, — мӑкӑртатать вӑл Улька çумĕнче. — Туман тиха пилĕкне малтанах хуçатӑр.

— Кай, ан янккаса пыр, — аяккалла тĕксе ячĕ ӑна Улька. — Эпĕр эсĕр мар. Тихине те тӑвӑпӑр. Ӳстерĕпĕр те. Кӳлсе те чупӑпӑр. Пилĕкçуллӑха та тӑватӑ çултах тултарӑпӑр.

## 39

Авланнӑ хыççăн Раманӑн килте те ĕç хушӑнчĕ. Институтра хӑй тĕллĕн вĕренекенскерĕн кĕнекесемпе те лармалла. Фильчин клуба чĕнет — унта та каймалла. Миша арçынсен хорне йĕркеленĕ, эрнере икĕ хутчен репетици irttерет. Парти съезчĕ ячĕпе комсомол райкомĕ тата культура пайĕ «Эпир Ленин, парти ĕçне парӑннӑ» ятпа фестиваль irttерме йышӑннӑ. Раман та унта сӑвӑ вуласа пама хатĕрленет.

Фильчинӑн иккĕмĕш юрӑ çуралчĕ. Малтанхине Рамана

халалланăччĕ. Ку юррине съезд ячĕпе фестиваль валли çырчĕ. Съезд уçăлнă кун фестивалĕн юлашки турĕ иртрĕ. Вăрман касакансен хорне Миша баянпа выляса ертсе пычĕ. Юрă залра хăватлăн янăрать:

> Тăван çĕршыва чĕререн юратса
> Малтан малалла партипе çул тытар...

Концерта поселокран çеç мар, таврари ялсенчен те йышлăн пуçтарăнса килнĕ. Тамара та малти ретре музыка шкулĕнче ĕçлекенсем хушшинче ларать. Вĕсем — хăйне евĕр жюри.

— Вăт ку баянист-тăк баянист, — пăшăлтатать Люба Шушина.

— Кăмăла кайрĕ-им? — ун еннелле çаврăнчĕ Тамара.

— Мана вăл вылянипитĕ килĕшет. Янравлă, уçă тухать, суя сасă çук. Пирĕн шкулаччĕ çавăн пек баянист! Пыма пултараять-ши вăл ачасене вĕрентме?

— Диплом çук унăн. Хăй тĕллĕн вĕреннĕ. Кам илтĕр апла ăна шкула?

— Ах, çав хамăр директор пек «музыкантсене», ларать баянне тытса, тĕлĕрсе...

— Шăпăрт, Люба, шăпрах, — кĕпе çаннинчен туртса чарчĕ ăна Тамара, — сцена çине пăх.

Чаршав хыçĕнчен Раман утса тухрĕ. Хулăн çӳçне хыçалла турасa якатнă. Хура костюмпа. Пиншакĕ айĕнче — шупка йăрăм кĕпе. Пăч-пăч шурă тĕрĕллĕ сарлака галстук çыхнă. Арçын кăшт кукăртарах тĕреклĕ урисемпе йывăç урайне кисретсе пырать. Сцена хĕрринче тăп чарăнчĕ. Лакпа витнĕ хура пушмак пуçĕнче Тамара сасартăк хăйĕн сăнне асăрхаса илчĕ. Савăнсах кайрĕ: вăл Раманпа пĕрлех-çке, ун умĕнчех... Тен, Раманăн пичĕ çинче те йăлкăшать Тамарăн сăнĕ? Анчах Раман ăна туймасть те, асăрхамасть те, сулахай аллине хыçалалла янă, сылтăммипе хушăран сулкаласа, Мерчĕк клубĕнчи пекех, Маяковскиӣ сăввине сулмаклăн калать. Сасси ун пĕр çĕкленет, пĕр лăпланать, унтан пĕтĕм зал анлăшне сарăлса янăрать: «...Парти — вăл çеç нихăçан улталами пĕртен-пĕр шанчăкăм ман».

Тамара иртнине аса илсе ларать. Мерчĕк клубĕ... Тăвăрччĕ унта. Пăчăччĕ. Махорка шăрши кĕретчĕ. Уçă сывлăша тухас килетчĕ. Тĕттĕмччĕ урамра. Çăлтăр çутинче салтак гимнастерки тăхăннă Раман тăни курăнатчĕ... Халĕ районти Культура çуртĕ... Аслă кунта. Уçă. Раман чаршав хыçнелле утать. Пушмакĕсем пĕчĕкленсе, тĕксĕмленсе пы-

раççĕ, ура сасси те хуллен илтĕнет ĕнтĕ. Раман куç умĕнчеп çухалать.

Концерт вĕçленчĕ. Вăрманпромхоз хорĕ лауреат ятне çĕнсе илчĕ. Дубова сăвă каланăшăн пĕрремĕш степеньлĕ диплом пачĕç. Чи пуянни, чи савăнăçли Миша пулчĕ. Акă, ун патнелле чечек çыххи çĕкленĕ Люба Шушина çывхарать... Малти ретре Тамара пуçне усса ларать.

Анютăпа Раман урама тухрĕç. Хурашыв еннелле утанĕ сахал. Айлăмалла аннă çĕре вĕсем çул çинче иккĕшех тăрса юлчĕç. Путăк-шăтăк çулпа парк тĕлне çитрĕç. Кунта, вăрман хĕрринче, утма самаях çăмăлланчĕ.

— Кĕçех çакăнта пурăнма куçатпăр ĕнтĕ, — савăнтарасшăн упăшки Анютăна.

— Çуртне тахçан туса пĕтереççĕ-ха?..

— Кăçал пĕтермесен те, килес çул пулать.

— Килес çул... Нумай кĕтмелле. Унччен сан кăмака куçарма тивет. Кĕçех эпĕ умывальник патне кĕрейми пулатăп.

— Кĕрейми пул. Эп уншăн савăнатăп çеç! Эп ăна кĕтетĕп. Тахçанах. Хĕрӳ Хĕветĕре куçарттаратăп кăмакана. Урра! Ман арăм...

Анюта упăшки тутине аллипе хуплать:

— Вăт намăссăр, çын илтсен тем калĕ.

— Никам та çук кунта. Вăрман çеç кашлать. Хурăнсем юрлаççĕ, авă! Илтетĕн-и, вăрман мĕнле кашлать!

Анюта Рамана чарăнма хушрĕ. Иккĕшĕ те шăпăрттăн тăрса итлерĕç. Вăрман кашланă сасăпа хутăш тем кĕрлет, шарлать. Кĕпер патнелле çывхарнăçем вĕсем часах ăнланса илчĕç: «Хурăнлăх» клубĕ çумĕнчи пĕве татăлса кайнă, çырма талккăшĕпех шыв алхасать. Вăхăтра юсамарĕç пĕвене. Шыв никама та кĕтмен ав, çурхи вăйпа талпăннă та ĕрĕхнĕ. Чар-ха халь ăна тытса! Кĕрлет, тулхăрать, кĕпере çĕклесе каяс пек кăпăкланса ыткăнать.

Унтанпа эрне ытла иртрĕ. Раман, клубран таврăннă май, Хурашыв айлăмне чылайччен сăнаса тăчĕ. Пĕве татса кайнă хыççăн касăлса юлнă шырлан урлă сиксе каçрĕ те чарăнчĕ. Ун умĕнче — хытнă юшкăна шăтарса тухнă çеçпĕл. Ытла та йывăр пулнă пулмалла чечеке çут тĕнче курмашкăн, çĕре çӳлелле тĕкнипе пуçĕ те кăшт пĕкĕрĕлнĕ, çулçи çинче хĕвелпе кушăхнă тăпра катăкĕ çыпçăнса тăрать. Раман ăна татмарĕ, шеллерĕ. Çавнашкал йывăрлăха çĕнтерсе хĕвел патнелле кармашакан черчен чечеке аллипе çепĕççĕн ачашларĕ. Çулçи çинчи тăпрана илсе пăрахсан, çăмăлланнă çеçпĕл йăшăлах тӳрленчĕ. Ӳс, çеçпĕл, ӳс! Çутçанталăк илемне кӳр, çынсене савăнтар!

Анюта декретлă отпуска тухрĕ, текех ĕçе çӳремест. Арăмне килти ĕçпе çăмăлтарах пултăр тесе, Раман ялтан амăшне илсе килчĕ. Тин вара кăштах алă çавăрнă пек туйăнчĕ. Анчах канăç çук ĕнтĕ чĕрере: арăмĕ ача çуратасса чăтăмсăр кĕтет çамрăк арçын. Мĕн тейĕн, пĕрремĕш ача пуриншĕн те хаклă вăл. Çак вăхăтра Раман халăх çинчи ĕçе пачах хутшăнмарĕ тесен те юрать. Вăрмантан тӳрех килнелле çул тытать. Юлашкинчен, кĕтнĕ вăхăт çитрĕ-çитрех. Пĕррехинче ĕçрен таврăнчĕ те вăл — Анюта килте çук: больницăна илсе кайнă. Тумне улăштармасăрах тухса чупрĕ унта Раман. Çунат шăтрĕ тейĕн. Арăмĕ ывăл ача çуратнине пĕлсен, савăннипе вăл ниçта кайса кĕре пĕлмерĕ, хăйне калама çук телейлĕн туйрĕ.

— Анне, манăн ывăл пур, ывăл! — кăшкăрса ячĕ Раман килне чупса çитнĕ-çитменех. — Юман ятлă хуратăп та ăна. Дубов Юман Романович пулать!

— Ара, эс Юман ятлă хурăн та-ха, анчах кинпе канашларăн-и? — ыйтрĕ амăшĕ, тĕпелтен кăштăртатса тухса.

Амăшĕ ячĕшĕн кăна çапла каланине Раман пĕрре пăхсах ăнланчĕ. Карчăкшăн пулсан пурпĕрех, хуть те мĕнле ят хурсан та... Кинĕ ывăл ача çуратни, тинех хăй вăл мăнуклă пулса тăни савăнтарать ватта чи малтан. Çапах та мăнукĕн ятне хунă чухне вăл ывăлне хирĕçлерĕ, кинĕ майлă пулчĕ.

— Эсир мана хуть те мĕн калăр, пурпĕрех Юман ятлă хуратăп, — хăйĕннех печĕ Раман. — Эп ашшĕ: çавăнпа та ывăл ятне хам хуратăп.

— Пăх-ха эс ăна. А эп тата кам? — Анюта ура çине сиксе тăчĕ.

— Амăшĕ, амăшĕ эсĕ, — лăплантарса вырăна лартрĕ ăна упăшки.

— Вара эпĕ ача ячĕ хунă çĕре те хутшăнма пултараймастăп-и? Эп çуратнă пуль ăна?

— Юрать, юрать. Эс çуратнă. Сан ачу. А ман — ывăл. Пĕлетĕн-и, ывăл! Салтак! Çурат та хĕр, ун чухне сан ирĕк, хăть те мĕнле ят хур. Чармастăп. Куна вара Юман ят паратпăр. Юман Романович Дубов! Янравлă вĕт, э?

Амăшĕ те ӳкĕтлесе пăхать ывăлне, лешĕ шутламасть те итлеме. Анюта упăшкине çавăрма тытăнать:

— Кай, тĕнчене ан култар-ха. Юман? Ăçтан çын ячĕ пултăр вăл? Юман Юманĕ тесе кулĕç ачаран.

— Кулмаççĕ. Кулсан та, «Юман Юманĕ» вăл «Качака Варсунĕ» тени мар.

— Эпĕ сана вунă ача çуратса парăп та, пурне те вара йывăç ячĕсем хурса тухăпăр-и? Пĕрне Юман, теприне — Хурăн, унтан — Çăка, Йăмра, Пилеш, Палан...

Калаçăва каллех амăшĕ хутшăнчĕ:

— Пирĕн ялта пурччĕ пĕрисем. Çеруксем теттĕмĕрччĕ. Çавсен ачисем Чĕкеç, Пăрчкан, Курак, Кайăк ятлăччĕ, Ятсăр ятли те пурччĕ пулас.

— Ку та аван, — савăннипе ачинчен уйрăлма пĕлмест Раман. — Юман хыççăн Чĕкеç пулать. Илтрĕн-и, Анюта? Чĕкеç! Анне тупса пачĕ ятне, пит лайăх ят — Чĕкеç. Юманпа Чĕкеç. Ылтăн ачасем, чаплă ятсем пулаççĕ вĕт! О-ой, ман Юманăм!..

— Вырăсла кала эс ăна, халь кунта, поселокра, чăвашĕ те, тутарĕ те, мăкшийĕ те вырăсла вĕрентет ачине. «Ой, мой родненький Дубок-Дубочек» те, — тăрăхлама пуçларĕ Анюта упăшкинчен.

— Ой, мой родненький Юман, маленький Юман Романч, — ачине алла илчĕ ашшĕ, унтан арăмĕ умне пырса тăчĕ.

Анюта лăпланса ачине кăкăр ĕмĕртрĕ, ывăлĕпе чĕвĕлтетсе калаçма тытăнчĕ;

— Ах, пĕчĕк пепкемçĕм. Хырăм выçать-и, пĕчĕк Юман? Ах, çав аçуна ăна, тулăксăрскерне, ниепле те чакмасть вĕт хăйĕнчен. Ак ăна ятлăпăр, ак, ак! Аслашшĕпе ашшĕшĕн çеç, сан аслаçусемшĕн, килĕшрĕмĕр-ха ку ятпа. Ахаль пулсан!..

Раман хĕп-хĕпĕртĕк. Анюта аллинчи пĕчĕк Юман çинчен куçне илеймест!

## 41

Вăрман кăнтăрла та, каç та, хĕлле те, çулла та, çилпе те, çилсĕр те кашлать: савăнать, хурланать, ахăрма, ихĕрме те пĕлет, макăрать те, куççуль те тăкать. Çурçĕртен пуçласа кăнтăра, тухăçран пуçласа анăçа çитичченех çĕр питне симĕс тумпа илемлетсе, çут тĕнчене сиплĕх кӳрсе этемлĕхе савăнтарса кашлать вăрман... Пĕтĕм чĕрчун тĕнчине сывлама таса сывлăш парса тăрать.

Анчах та çав çутçанталăк пуянлăхне хĕрхенмесĕр тустарса пĕтерекенсем те пур-ха. Акă, Кашкин бригадинчи Лариван Васильев трактористпа Ваççа Степнов йывăç вăрлама килнĕ. Вĕсене Сятров пулăшать. Никĕслĕх юмана троспа трактор хыçĕнчен çаклатасшăн виççĕшĕ те эхлетсех тĕрмешеççĕ.

Вăрăсене хăратса хăвалас тенĕ пекех кашлать вăрманĕ, вĕсен усал тарлă çурăмĕсем çине шултра çумăр тăкать.

Юман кĕрешсене майласа çыхнă хыççăн, Сятров картун еннелле кайса çухалчĕ, Степновпа Васильев кабинăна кĕрсе ларчĕç. Трактор тапранчĕ, çынран çӳллĕрех ӳснĕ çап-çамрăк хырлăха кĕрлеттерсе кĕрсе кайрĕ. Хурçă шăллă кусансем ӳссе йывăç пулас хунавсене пĕр шелсĕр лутăркаса таптаççĕ, тăпăлтараççĕ...

Эй, вăрман! Чарсам çав путсĕрсене! Чарăн-ха вăхăтлăха вĕсене таса сывлăш пама! Пăчăхчăр вĕсем, халăх пуянлăхĕн мурĕсем, сывлăшсăр! Вăрман кашлать, хăйне тустарса юхăнтаракан ирсĕрсене нимĕн те тăваймасть.

Тӳрĕрен те тӳрĕ кайса пырать трактор, çырманалла анать. Сасартăк вăл ĕмĕрхи йывăçа çитсе тăрăнать, йĕпе вулă тăрăх чалăшшăн сăтăрттарса, хăяккăн йăванать. Картлаттарса тросран вĕçерĕнсе кайнă кĕреш юман сулăмпа трактор кабинине тăрăслаттарать.

Вăл каç Раман дружинниксене ертсе тухнăччĕ. Дежурствăна «Хурăнлăх» клубран пуçларĕç. Çырма хĕррипе кайса, вăрман пункчĕн гаражĕ патне çитрĕç. Хуралçă Васильев тракторĕ çукки çинчен пĕлтерчĕ. «Ăçта кайса кĕме пултарнă-ха трактор? — тĕлĕнсе шухăшларĕ Раман. — Шыраса пăхас пулать».

Дружинниксем вăрманпа пыраççĕ халь. Çумăр хыççăн хăйăр пирченсе юлнă. Утма çăмăл. Сисмерĕç те хĕреслĕ прачака çитрĕç. Кунтан çул тăватă еннелле каять. Дружинниксем Первомайск хыçĕнчи улăха тухакан çулпа утрĕç. Кăштахран умра мотор сасси илтĕнчĕ. Кунталлах çывхаратчĕ трактор, анчах кĕçех шăпланчĕ те, хăлхара вăрман шавĕ çеç кашласа тăра пуçларĕ. Йывăр пĕлĕтсене çил кăнтăралла хăваласа кайрĕ. Тӳпе тасалчĕ. Кăтăлнă уйăх çути шыв кӳлленчĕкĕсене тĕксĕмрех йăлтăрти сийпе витрĕ.

— Илтместĕр-и нихăшĕ те трактор сассине? — ыйтрĕ Раман юлташĕсенчен.

— Умрахчĕ вăл, самантрах таçта çухалчĕ. Илтĕнмест халь, — терĕç дружинниксем.

Çав хушăра Çтаппан аллипе çырманалла кăтартса кăшкăрса ячĕ:

— Трактор ав унта, юлташсем!..

Дружинниксем çыран хĕррипе чупрĕç. Акă, çитрĕç. Трактор хăяккăн выртать. Раман кабина чӳречинчен хунарпа çутатса пăхрĕ. Шалта çын выртать. Ана асăрханулăн туртса кăларчĕç, ал тымарне тытса пăхрĕç: чĕрех. Ку Лариван Васильев пулчĕ. Салтакла хăвăрт наçилкка хатĕрлерĕç, аманнă çынна майласа выртгарчĕç, тăваттăн йăтса çул çине тухрĕç.

Утсан-утсан, çул айккинче сасă илтĕнчĕ. Çамрăксем наçилккана çĕр çине лартрĕç те сасă еннелле чупрĕç. Йĕпе хăйăр çинче, сытăм аякне икĕ аллипе пăчăртаса, Ваççа Степнов выртать. Çăварне типпе юлнă пулă пек карса пăрахнă хăй. Фильчин тытса тăракан хунар çутинче унăн куçĕ тискеррĕн йăлкăшать.

Никамăн та хĕрхенес килмерĕ Ваççана. Çапах та вĕсем тепĕр наçилкка турĕç. Раман Ваççана наçилкка çине пĕчĕк ачана йатса хунă пек çĕклесе вырттарчĕ.

Майĕпен малалла тапранчĕç, вăрмантан тухса, Васильевпа Степнова больницăна илсе çитерчĕç. Миша Фильчина та чирĕ аптратса ӳкерчĕ. Çул çинче ăна та пулăшмалла пулчĕ. Укол тунă хыççăн тин вăй кĕчĕ Мишăна.

Çапла вĕçленчĕ дежурство. Раман киле ирпе тин таврăнчĕ. Фильчина вăл хăйсем патне чĕнчĕ. Юман тутине чаплаттарса çывăрать. Анюта хыпăнса ӳкнĕ, хуйхăрать.

— Эп сире Степнова йăтса килнĕшĕн ятламастăп, — терĕ сăмах май Анюта, — çакна çеç каласшăн: усал çынна темле ырă тусан та, унран лайăххине илтес çук.

— Пăрахăр-ха çав йĕксĕк çинчен калаçма. Этем тивĕçне манман эпир, çăлнă ăна — çитет. Çĕнĕ кун пуçланчĕ ав, — чӳрече каррине сирчĕ Миша. — Курăр, хĕвел епле çĕкленет!

Сăпкари Юман сас пачĕ. Анюта ун патне васкарĕ, ачине вăхăтсăр вăратнăшăн арçынсене юнарĕ.

— Хĕвелпе вăраннă çын хĕвел пекех хĕрӳ те хăватлă пулать, — терĕ Фильчин. — Ман каймалла.

Раман та апат çинĕ хыççăнах ĕçе тухса-утрĕ.

## 42

Çав каçран вара урăх çумăр çумарĕ. Вăрман çулĕ çинче вĕри хăйăр йăшăртатать. Сывлăшра тусан пĕлĕчĕ явăнать. Хĕвел пĕр шелсĕр çунтарать. Çанçурăма тăварлă тар çиет. Ирех вăйран ӳксе ĕçе çитнĕ çынсем ӳрĕк-сӳрĕккĕн ĕçе тытăнаççĕ. Вăрăмтуна çыпçăнса хăшкăлтарать. Пăчăхса, тусанпа тулса çитнĕ çанталăкра ĕçлеме мар, ларма та, тăма та май çук. Раман кун пеккине хăнăхнă. Ним туйман-асăрхаман пек, «Дружбăна» чăрлаттарать те чăрлаттарать вăл. Улькапа Укахви аран ĕлкĕрсе турат иртсе пыраççĕ. Вĕсене Хĕрӳ Хĕветĕрпе Çинахван пулăшма васкаççĕ. Çынсем пĕрпĕрин хушшинче ĕç пайламаççĕ: кам пушанать, теприн патне чупать. Раман хăй те тракторпа ĕçлеме вĕренчĕ.

...Кăнтăр апачĕ вĕçленсе пыратчĕ ĕнтĕ. Раман, яланхи пекех, салтакла хăвăрт çисе пĕтернĕскер, сĕтел хушшинчен

чи малтан тухрĕ, турттарса хатĕрленĕ йывăç умĕнче тем шухăша кайса тăчĕ. Çав вăхăтра лесовоз кĕрлеттерсе çитрĕ. Кабинăран Варсонофин хура пуçĕ курăнать. Машинăна каллĕ-маллĕ уттарчĕ те вăл прицепа каялла çавăрчĕ, майĕпен чакарма пуçларĕ. Унтан пуçне вĕлт пытарчĕ те газ хушрĕ, машина мĕкĕрсе каялла ыткăнчĕ. Акă вăл йывăç кучĕсене пырса çапĕ те Рамана лапчăтса хурĕ. Анчах та Çинахван МАЗ кустăрми айне пĕр пысăк каска ывăтса ĕлкĕрчĕ. Кĕмсĕрт-кĕмсĕрт! турĕ çывăхра. Раман аяккалла сиксе ӳкрĕ. Прицеп йывăççене пырса тĕшĕрчĕ... Кабинăран тухнă Степнов унталла куç айĕн пăхса шăл йĕрчĕ те, ним пулман пекех, апата кĕрсе ларчĕ.

Ку хăрушă саманта Çинахван çеç лайăх курса юлчĕ, çавăнпа пуль ыттисем шарламарĕç. Раман та, ăна-кăна тин ăнкарса илнипе, тӳрех чĕнмерĕ. Тракторист, акă, Степнов умне пырса тăчĕ, ăна тарăхса кăшкăрса пăрахрĕ:

— Сана-и, Варсонофий, пирĕн Дубова таптанă пулсан-и? Çакăнта хамах пуртăпа касса пăрахаттăм. Кустăрма умне пенĕ çав каскана илсе пуçăнтан кĕрĕслеттерсен, халь те çылăх пулмасть. Юри хăтлантăн кури куçа курми туса. Асăрхаман, хăй аяла пулнă теттĕнччĕ ĕнтĕ, намăссăр... Марш кунтан!

Çинахван хăйне чараймарĕ, Степнов умĕнчи яшка тирĕкне çапса ывăтрĕ. Варсонофий хĕремесленсе сиксе тăчĕ, каялла чака-чака кабинăна чăмрĕ, унтан тин пуçне кăларса çухăрчĕ:

— Хăçан та пулин лекетĕн-ха, Çинахван!

— Ан пуçтахлан, хăрамастпăр санран.

Хура ăшлă çын Варсонофий. Йывăç вăрланăшăн темиçе те тытрĕç, çапах хăй айăпне туясшăн мар, уншăн шăл хăйрать, Дубовсене юнать. Паян, ак, майлă самантпа усă курса, Рамана йывăç хушшине хĕстерсе лапчăтма хăтланчĕ. Çук, пулмарĕ. Çинахван çăлса хăварчĕ Дубова. Халлĕхе Лишайкин хӳттинче пурăнать-ха Варсонофий. Хăçанччен-ши?

Шăллĕ, Ваççи, кăшт тăна кĕнĕ пек-ха. Больницăран тухнă хыççăн Раманпа клубра тĕл пулса калаçрĕ, хăйне вилĕмрен çăлнăшăн тав турĕ. Дубов ăна кăштах тăн кĕртсе илчĕ:

— Куккусем сана йăнăш çул çине тĕртеççĕ. Тимĕр решетке сан çулу çинче. Сулланса пыратăн çав çулпа. Ӳкессрен сана пĕр енчен Варсонофий, тепĕр енчен Лишайкин тытса пыраççĕ-ха. Анчах виççĕрĕн те урусем шăваççĕ. Çынсем пек пурăнма хăнăхас пулать сан, Ваçça. Асту, унсăрăн пĕтетĕн. Чыс тени пулмаллах этемĕн. Эс, пур, хăвăнпа

пĕрле вăрра пынă Лариван юлташна та инкекре пăрахса хăварнă. Ун çине мĕнле куçпа пăхăн халь?

— Эпĕ ăна вилнĕ пуль терĕм. Унтан эсир...

Ваçça урăх сăмах тупаймасăр пӳрнипе кăмакана шакăртаттарчĕ, такам пăрахнă пирус тĕпне пушмак пуçĕпе лапчăтса, урайĕнче шутарчĕ.

— Комсомолецах-ши вара эсĕ çакăн хыççăн? Унта мĕншĕн кĕнине ăнланатăн-и? Патшалăх вăрманне çарататăн, юлташна йывăрлăхра пăрахса хăваратăн. Кам вĕрентет сана çапла хăтланма?

Клуба çынсем килме пуçларĕç, вара вĕсем урама тухрĕç. Хăраса ӳкнĕ Ваçça тин çăварне уçрĕ:

— Санпа тупăшмастăп эп, Раман. Тĕрĕсех калатăн. Больницăра выртнă чухне сахал мар шухăшларăм ун çинчен. Ырă ĕçре инкеке лекнĕ пулсан, больницăна юлташсем пырсах тăнă пулĕччĕç. Ыттисем патне пынине пăхса ăмсанаттăм. Ман пата никам та пымарĕ.

— Апла калаçатăн пулсан, ытлашши пĕтнĕ çын мар-ха эс. Çапах та, чăн-чăн юлташсем тупăнччăр тесен, сахал мар тăрăшма тивет санăн. Кирлĕ пулсан, кирек хăçан та пулăшма эп хатĕр. Халлĕхе сывă пул.

Дубов Степновран уйрăлса аяккалла утрĕ, клуб тавра тытнă ракатка умĕнче чарăнчĕ. Анаталла, тусан мăкăрлантарса, тăрантас анать. Умĕнче йытă чупать. Çатанра иккĕн: сулахай енче — Стасик, сылтăмра — Тамара. Тамарăн сăнĕ курăнмасть. Хыçалалла усăннă тутăр вĕçĕ вĕл-вĕл вĕçет. Тăрантас, пĕве хыçĕнчи йывăç кĕперпе каçса, тăвалла хăпарчĕ.

Клуба Фильчин патне Раман сасартăк пусăрăннă кăмăлпа пырса кĕчĕ. Миша ăна çĕнĕ концерт программи хатĕрлеме чĕннĕччĕ.

## 43

Тăрантас тусанлă Мерчĕк çулĕпе пырать. Тамара эрне каялла ывăл çуратнă. Павлов арăмĕпе ачине Первомайскран киле илсе таврăнать.

Хăйăр çинче Стасик лашине хăваламарĕ, арăмĕпе çаплах тем чăкăлташса пырать вăл. Дубовсен умĕнчен иртнĕ чухне пуçларĕ кĕвĕçӳ юррине — тăсать те тăсать ав.

— Эх, пурнăç пулатчĕ сан, Ромашока качча тухнă пулсан... Ромашок халĕ алă çинче çĕклесе кĕретчĕ сана. Хурашывра баракра пурăнаттăн, Мерчĕкре мар, вăрман варринчи улт кĕтеслĕ пӳртре мар... Ахалех татрăм сирĕн савăк пурнăçа. Эс мана юратманнине те, эс Ромашокшăн хып-

са çуннине те пĕлетпĕр. Эс киле мĕншĕн час-час таврăнманнине те, эс унта Ромашокпа тĕл пулнине те... Пурне те пĕлеп. Çак ачан ашшĕ кам пулнине те...

Стасик ӳсĕрпе пакăлтатнă чух чĕлхине çыртма хăнăхнă Тамара çакна илтнипе кăртах сикрĕ, пĕтĕм çанçурăмĕ вĕриленсе кайнине туйса илчĕ. Ачи те çав хушăра сас пачĕ. Куçĕнче куççулĕ шăрçаланчĕ амăшĕн, туртăннă питçăмарти тăрăх йăрăлтатса юхса анчĕ...

Кĕçех вĕсене пĕр лав хуса çитрĕ. Сятров иккен. Мереçентен таврăнать. Ашшĕне курсан, Тамарăн кăшкăрса макăрса ярасси килчĕ, çапах та кӳтсе çитнĕ чунне хытарчĕ, нимĕн те шарламарĕ. Аслашшĕ мăнукне шăрпăк çутса пăхрĕ те, вĕсенчен иртсе, çулпа малалла кĕмсĕртеттерчĕ.

Хырлăхран пăрăнса уçă вырăна тухсан, Сятров йывăçсем айĕнче карлаттарсах çулăм явăннине асăрхарĕ. «Ку ман картун мар-ха, эп нимĕн те курман», — терĕ те лашине тилхепе вĕçĕпе туртса çапрĕ Михала. Айăра картуна çитичченех сиккипе чуптарчĕ. Тара ӳкнĕ лашана тăварса витене хупрĕ те Сятров пӳрте кĕчĕ, кӳршĕ лесникпа калаçанçи туса, телефон трубкине юри çĕре ӳкерсе аркатрĕ.

— Михала, апат çи ларса, — илтĕнчĕ шалти пӳлĕмрен арăмĕн чĕтревлĕ сасси.

Сятров хывăнмасăрах кравать çине тĕшĕрĕлчĕ. Унтан сасартăк ура çине сиксе тăчĕ, ашшĕн сăнӳкерчĕкĕ умне чĕркуçленсе ларчĕ.

— Аттемçĕм, илтетĕн-и мана? Эс каласа хăварнине пурнăçа кĕртетĕп. Хĕрхенместĕп: вăрманне те, çыннисене те. Çунтăр, йăлтах пĕттĕр. Пурпĕрех вăл мана лекмест. Вăрттăн çеç вăрласа пуйма пулать унпа. Вăрттăн çеç пытанса пурăнма пулать унта. Пуйрăм, атте, эс хушнă пекех ĕçлерĕм. Халĕ çитет. Ывăнтăм. Ватăлтăм. Каятăп кунтан пăрахса. Таратăп. Халь эп санран пуян, атте. Темиçе хут пуян. Пурпĕрех çав айван халăха вăрманта хамшăн ĕçлеттертĕм, патшалăх вăрманĕнчен вĕçекен ылтăн çулçăсене хамăн кĕсъене чиктертĕм. Ха-ха-ха! Ухмахсем! Сятровсем пĕтмен, чĕрĕ! Пурăнаççĕ. Вăрман... Çунтăр-и! Халь мана вăл тек кирлĕ мар!

Михала, пит-куçне сăтăрса, вырăнĕ çине ĕнтĕ çывăрмаллах кайса выртрĕ, арăмĕ еннелле куç шурри кăларса пăхрĕ. Лешĕ пӳлĕм алăкĕ çумĕнче чĕтресе тăрать.

Стасикпа Тамара та вăрман çуннине аякранах асăрхарĕç. Лашине хӳтерсе, Стасик пушар тĕлĕнчен çил пек вĕçтерсе иртрĕ, унтан тилхепине лăнчах ячĕ.

— Атя хăвăртрах! — васкатрĕ упăшкине Тамара. — Ат тесем патне çитсе телефонпа пĕлтерер!

— Аçу пирĕнтен малтан пĕлтернĕ ĕнтĕ ун çинчен. Халех килсе сӳнтерессĕ, — пĕр пăлханмасăр калаçрĕ Стасик.

Ларкăч çинчен хыçала куçрĕ те Стасик, канлĕн таянса ларса, харлаттарма тытăнчĕ. Тамара, ачине чĕрçи çине хурса, лашана васкасах хăваларĕ. Çитрĕç ашшĕн кантурне. Паллана сасса илтсе, йытăсем нăйкăшса илчĕç. Шалта çук. Тамара алăкран шаккарĕ, унтан чӳречерен тӳнлеттерчĕ. Чӳрече каррине сирсе вăрттăн пăхса тăракан амăшĕ илттĕр тесе, Тамара сывлăшне пӳлĕнтерсех кăшкăрать:

— Анне, уç часрах! Пушар! Вăрман çунать!

Вăл алăкран хăвăрт кĕчĕ те ачине амăшне тыттарчĕ, телефон патне ыткăнчĕ — усси пулмарĕ.

— Вăрман çунать-и? — тĕлĕнчĕ амăшĕ. — Аçу та таврăнсан пушарпа минрерĕ. Тин çывăрса кайрĕ-ха.

— Шурут тăвайккинче çунать, анне. Ах, мĕн тумалла?

Тамара картишне чупса тухрĕ, тăрантас çинчен Стасика сĕтĕрсе антарчĕ те, лашана çавăрса, Первомайска тухса вĕçтерчĕ.

## 44

Мĕн ирччен лăш курмасăр ĕçлерĕç пушарниксем. Пушара пурпĕрех чарса лартаймарĕç. Çулăм çамрăк хырлăха ярса илчĕ те кайрĕ вара çырма леш еннелле алхасса! Ирпе тракторсем канав алтма пуçларĕç. Вăрманта ĕçлекенсем пурте пушар сӳнтерме тухнă. Кĕреçе-пуртă çĕкленĕ çынсем тĕтĕмпе çулăм витĕр унталла-кунталла чупни, ушкăнăн-ушкăнăн кĕпĕрленсе пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçни пирвайхи кун уссине нумаях параймарĕ. Завод директоре, кил хуçи арăмĕ, вăрманпромхоз çынни, фабрикăра ĕçлекен — пурте хутăшса пăтрашăнса кайнăччĕ. Пур енчен те хушса тăни кăна илтĕнет: унталла! кунталла!

Дубовсен ушкăнне прачак тăрăх тăратса тухрĕç. Пурте кĕреçепе тăпра сирпĕнтерме тытăнчĕç. Умра — хутăш вăрман. Шалтан çунса, çатăртатса кунталла куçса килет пушар. Тĕтĕм куçа çиет. Типĕ курăкпа çулçă, вĕтĕ турат бензин сапнă пек хыпса илет. Çул хĕррине çитет те çулăм тин кăна çынсем чавса тухнă канава тăрăнса лăпланать.

Шалалла тепĕр кĕреçе хăйăр печĕ кăна Раман, вĕсем умнех мулкач сиксе тухрĕ, унталла-кунталла пăхрĕ, йĕркипе тăракан çынсенчен сехĕрленчĕ-ши, çаврăнчĕ те каялла çулăм ăшне чăмрĕ.

Ку сыпӑкра ӗҫ вӗҫлесе, Дубовсем малалла куҫрӗҫ. Кунта вара ҫулӑм ҫул урлӑ каҫнӑ, трактор сухаласа хӑварнӑ таранах мар канав ҫумне ҫитсе чарӑннӑ. Акӑ, кӑшт ҫил ҫавӑрттарса килчӗ те ҫулӑма чӑрӑш вулли тӑрӑх хӑпартса ячӗ. Тин кӑна сип-симӗс ларнӑ йывӑҫ тӑр-тӑр чӗтренсе ялкӑшма тытӑнчӗ, тепӗр самантранах хура тумпа витӗнчӗ. Ялкӑшакан ҫулӑм леш енчен Хӗрӳ Хӗветӗр ертсе пыракан ушкӑн сиксе тухрӗ.

— Эсир пӗрремӗш хут вӑрман пушарӗ сӳнтеретӗр пулас-ха, — терӗ Хӗветӗр Рамансене. — Ман вара ку ӗҫре опыт пур.

Ҫапла Хӗветӗр вӗтӗ туратпа типӗ курӑк-ҫулҫӑ пуҫтарчӗ те темиҫе купа турӗ, унтан вӗсене чӗртсе ячӗ. Ҫулӑм вӑйланса кайрӗ, шал енӗпе талккӑшпех ярса илчӗ, хыр-чӑрӑш тӑрӑх чупса, хирӗҫ килекен вут-ҫулӑмпа пӗрлешсе ахӑрчӗ, пӗлӗтелле урнӑ ҫил-тӑвӑл пек кармашрӗ. Кӗр-кӗр-кӗр! кӗрлесе тӑчӗ унта, вара майӗпен лӑпланчӗ.

— Канав хӗрринчи вут-кӑвара хӑйӑрпа сапса сӳнтерер те тепӗр вырӑна куҫар. Кунта халь хӑрушӑ мар. Ҫулӑм, авӑ, хире-хирӗҫ пулса, пӗр-пӗринпе тытӑҫса пӗтсе ларчӗ,— кӑмӑллӑн калаҫрӗ Хӗрӳ Хӗветӗр.

Унтан тата темиҫе ҫӗре куҫмалла пулчӗ. Ҫулӑм чашкӑрса малаллах чупать, пач кӗтмен ҫӗрте алхасса хӑпарса каять. Йӗри-тавра ҫын кӑшкӑрашни самантлӑха та тамалмасть. Хӑрушшӑн кӗрлет пушар. Ҫулӑм тӑвӑл чухнехи тинӗс хумӗ евӗр пӗтӗрӗнсе, кӗрлесе йывӑҫ тӑррисем тӑрӑх явӑнать. Нимӗнле вӑй тытса чарассӑн туйӑнмасть ӑна. Акӑ, ӑна хирӗҫ тепӗр ҫулӑм хумӗ явӑнса пырать. Кӗҫех вӗсем пӗрлешеҫҫӗ те палл хӑпарса каяҫҫӗ ҫӳлелле. Ҫулӑм тӑрринче явӑнакан хура тӗтӗм хӗвеле хупласа илет.

Рамансем пысӑкрах лаптӑк татса илчӗҫ. Кунтан Сятров картунӗ те лайӑхах курӑнать. Ҫил вӑйланчӗ. Ҫынсем тем пек тӑрмашрӗҫ пулин те, пушар лесник килӗ патнеллех ҫывхарса пычӗ. Раманпа Тамарӑна тахҫан кӗрхи пӗвере ярӑннӑ чух уйӑх ҫутинче илемлӗн те илӗртӳллӗн курӑнса ларнӑ чӑрӑшсем самантрах ҫулӑмпа ҫатӑртатса хыпса илчӗҫ, лӑссисем кӗлленсе шыва тӑкӑнчӗҫ. Ҫав чӑрӑшсем айӗнче Сятровсен кивӗ пӳрчӗ. Ҫӗннине пурӑнма куҫсан, Михала ӑна темшӗн пӑстарманччӗ, пысӑк ҫӑрапах питӗрсе усратчӗ, пӗр йыттине унта кӑкарнӑччӗ.

Ҫулӑм чӑрӑшсенчен пӳрт тӑррине сиксе ӳкрӗ, йӑлт ҫавӑрса илсе ялкӑшма тытӑнчӗ. Халӑх лесникӑн ҫӗнӗ пӳртне сыхлама чупрӗ. Пӗрисем ҫӳле хӑпарса кайнӑ — шыв сапса тӑраҫҫӗ, теприсем япала кӑлараҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтра таҫтан Сятровӗ хӑй хашкаса ҫитрӗ. Умне тӑма хӑрушӑ. Куҫне-

пуçне чарса пăрахнăскер, вăл унталла-кунталла пăхрĕ те çунакан кивĕ пӳрт еннелле ыткăнчĕ, çăраççине хирсе вăркăнтарчĕ те тĕттĕм алăк анинче çĕр тĕпне анса кайнă пек çухалчĕ. Çав самантрах çулăм чĕлхисем пӳрте вĕри кăшăлпа кăшăлласа илчĕç. Кĕçех мачча ишĕлсе анчĕ, çӳлелле хура тĕтĕм палкаса хăпарчĕ. Çатра Михали çапла кивĕ пӳртре пăчланчĕ.

Пĕве çумĕнчи сарайне те вут ăшалать. Ун çывăхĕнчех— утă капанĕсем, вĕсем хыçĕнче — çĕнĕ пӳрт. Çитсе тăнă пушар машинисем çурт тăррине шыв сирпĕтеççĕ. Раман сарай çумĕнче типсе кайнă сулла асăрхарĕ, ăна çунтарса ярас мар тесе йăтрĕ те пĕвене тĕртсе ячĕ.

Ĕнтĕ вăл лаç умĕпе чупса иртетчĕ. Сасартăк сылтăм ури шуса кайрĕ. Чарăнса çĕрелле пăхрĕ те лач сурчĕ. Çурăлнă сăнӳкерчĕкрен ăна хирĕç Çатра Кавĕрлин тĕссĕр куçĕ чеен кулса пăхать. Старик сухалĕ çумне Палюкăн курпунтарах шĕвĕр сăмси çыпçăннă. Тарăхнă Раман урине пĕтĕм вăйран силлерĕ, хура рамăсем пĕррех вăркăнса сирпĕнчĕç. Çĕре ӳкнĕ-ӳкмен вĕсем урлă çынсен ушкăнĕ тапăртатса иртрĕ.

Халĕ кунта хăрушлăх иртсе кайрĕ. Лесникăн çĕнĕ пӳрчĕ сыхланса юлчĕ. Сарайпа утă капанĕсене çăлаймарĕç вара. Пушарниксем кивĕ пӳрт пĕренисем çинелле шыв пĕрĕхтереççĕ. Хуп-хура кăмрăк пĕренесене пакурпа туртса кăларма пуçларĕç. Таçта та тустарса пăхрĕç, ниçта та çук Сятров. Çын палли те пулин юлмаллах-çке. Раман пакурне шаларах ячĕ те пĕтĕм вăйран пăтратма пуçларĕ. Пакур темрен çакланчĕ. Туртрĕ-туртрĕ Дубов ăна — туртса илеймерĕ. Мĕн амакĕ?

— Михала ямасть ăна, Сятров, — çурăм хыçĕнче шăлне йĕрчĕ Хĕлĕх Хĕлимунĕ. — Вилнĕ çын тытать çав вăл. Хăрамастăн-и?

Раман ăна сив куçпа пăхса шăплантарчĕ.

Насуспа çав вырăна шыв сапса лайăхрах тасатрĕç те темиçен пĕр харăс кĕрсе кайрĕç. Хулăн тимĕрпе çапнă алăк çине пырса тухрĕç. Аран хирсе уçрĕç алăка. Аялтан нӳрĕк сывлăшпа тĕтĕм йăсăрланса тухрĕ. Кăшт курăнакан пулсан, шăтăкпа аялалла анчĕç çынсем. Пĕрре, иккĕ, виççĕ... вуннăмĕш картлашка çине пусрĕ Раман, тин аттисем бетон урайне каптăртаттарса илчĕç. Картлашка çумĕнче — Сятров кĕлетки. Михала чĕрĕп пек хутланса ларнă, аллисене хырăмĕ çумне хĕстернĕ, пуçĕ аяккалла пăраннă. Шăлĕсем хушшинчен çыртса лартнă чĕлхе вĕçĕ курăнать. Чарăлса кайнă виле куç çап-çуттăн йăлтăртатать. Тĕттĕмпе чыкăнса вилнĕскер, хытă асапланнă пулас Сятров.

Илья Ильич, яланхи йăлипе, пирус туртса ячĕ те шăрпăкне урайне пăрахрĕ. Шăрпăк темле сарăрах çавраăка япала çине ӳкрĕ — мĕл-мĕл çунса выртать. Тарин çаврашкана пĕшкĕнсе илчĕ.

— Курăр-ха, курăр, юлташсем! — алăкран ӳкекен çутă çине тытса кăтартрĕ хайхискере Тарин. — Ара, укçа вĕт ку, ылтăн укçа!

Патша вăхăтĕнче кăларнă пилĕк тенкĕлĕх ылтăн укçана черетпе илсе тыта-тыта пăхрĕç. Тарин тепĕр шăрпăк çутрĕ, унпа пĕрлех — Яковлев та. Урайĕнче туллиех ылтăн укçа сапаланса выртать.

— Кунта килсе курăр-ха тата! — тĕлĕнсе кăшкăрчĕ Раман. — Мул купи-и!..

Кĕтесре тимĕр кăшăлпа турттарнă пысăках мар юман арча хăяккăн кайса ӳкнĕ. Хупăлчи хирĕнсе уçăлнă. Шалта — темĕн тĕрлĕ тĕспе йăлкăшакан кевер чул, ылтăн, кĕмĕл япала.

— Акă кам пулнă иккен эсĕ, Сятров! — пирусне урипе таптаса лутăркарĕ Семен Трофимович. — Акă мĕнпе çыхăннă пулнă сан пурнăçу, акă мĕншĕн пуçна çирĕн хăваннe! Каларăн çав пĕррехинче, чĕлхӳ уçăлнă чух: «Эх, Семен Трофимович, сан хĕвелӳ — парти. Эсĕ ун ăшшипе пурăнатăн. Манăн та хамăн хĕвел пур. Эп ун ăшшипе сывлатăп», — терĕн. Мĕнле хĕвел вăл тесе ыйтрăм — каламарăн. Сӳнчĕ санăн хĕвелӳ, Сятров, пĕтрĕ ăшши.

— Эй, пăхăр-ха, ывçинче те унăн ылтăн, — терĕ Тарин ,— ах, шуйттан, пурăннă вĕт хытса!..

Раманăн çак шăршлă путвалтан хăвăртрах уçă сывлăша тухасси килчĕ, пусма тăрăх чупсах хăпарса кайрĕ вăл. Ăна хирĕç лесникăн çĕнĕ пӳрчĕ енчен Хĕлимун саркаланса килет.

— Ăçта кӳпсе лартма ĕлкĕртĕн? — юнарĕ ăна Дубов.

— Пу-шарта, — иксӳ ернипе аран калайрĕ Хĕлимун. — Хам... хамах тупрăм та хам... ятăм аншарлине. Эс ан шарла. Мăй таран ĕçкĕ унта!..

— Ну, сана лекет куншăн!

— Мана-и? Фикă. Лесникăн хăйĕн тетĕн-им? Ял çыннисен сăмакунĕ вăл. Тутинченех пĕл-тĕм. Ĕçмелле ăна, янтă япалана, пĕтермелле.

Раман урăх чĕнмерĕ, ăшĕнче çеç: «Сысна тип çанталăкра та пылчăк тупать!» — тесе ятлаçса илчĕ.

Кĕреçине илчĕ те Дубов икĕ пĕве хушшипе Мерчĕк еннелле васкаса утрĕ. Тамара пĕвинче тăлăх сулă хуллен салхуллăн ярăнать. Ун тавралла çунăк хăма таткисем ишеççĕ, çыран хĕрринче — кăмрăкланнă хура чăрăшсем. Капланса

килнĕ шухăшне пусарса, Раман малалла чупрĕ, часах пушар сӳнтерекенсен пĕр ушкăнне ҫитсе хутшăнчĕ.

Хурашыв ҫыранĕ ку. Трактор кĕреймест кунта, канав сухаласа тухма ҫук. Ҫавăнпа йăлтах алăпа ĕҫлемелле. Кам кĕреҫепе ҫĕр алтать, кам ҫулăма ҫапăпа ҫапса сӳнтерет. Темиҫе сехет хушши кĕрленĕ ҫулăма аран чарчĕҫ. Стасик Павлов килĕ те инҫе мар кунтан. Уҫăрах вырăнта ларнăран унта пушар ҫитеймен.

Ҫынсем сулахай ҫырана каҫса канма ларчĕҫ. Раман ҫунтарса яракан хĕвелтен пытанса, ҫирĕк сулхăнне ҫерем ҫине тăсăлса выртрĕ. Тарлă ӳт шăршине сиснĕ вăрăмтунасем кĕтӳпе сырăнаҫҫĕ. Пуҫ кашлать, хăлха вĕҫĕмсĕр янăраса тăрать. Ывăнса ҫитнĕ шăмшак лĕпсĕрех каять.

## 45

Вăрман пушарĕпе кĕрешме чрезвычайлă комисси туса хучĕҫ. Комисси район халăхне, мĕнпур предприятипе учреждение, техникăна пушара хирĕҫ кĕрешме пĕр чăмăра пĕрлештерчĕ.

Мотористсене темиҫе ушкăна пайларĕҫ. Вĕсен халĕ, пушар малалла ытлашши ан сарăлтăр тесе, йывăҫ каса-каса тӳнтерсе пушар ҫулне пӳлмелле. Ҫар чĕлхипе каласан, хӳтĕленӳ линийĕ тумалла.

Пăчкăсем ăмăртмалла ҫатăртатаҫҫĕ. Йывăҫсем пĕр еннелле тӳне-тӳне пыраҫҫĕ. Пуҫ ҫĕклесе пăхма та вăхăт ҫук. Хăвăртрах, хăвăртрах касмалла, вăрмана уҫмалла, пушара такăнтармалла, пусса антармалла, пĕтерсе хумалла. Пушарĕ те парăнмасть, пĕр вырăнта лăплансан, тепĕр ҫерте палкаса сиксе тухать. Авă, Рамансенчен инҫех мар вăрмана темиҫе ҫухрăм ярса илнĕ вăл. Пĕлĕтре талккăшĕпех ҫулăм явăнать, хура тĕтĕм йăтăнать. Каснă лаптăк хĕрринче кĕрлет, малалла каяймасăр пĕр вырăнта ташлать пушар.

Ҫывăхрах пĕр пысăк трактор ҫĕр тĕкетчĕ. Ҫав вырăна халĕ тĕтĕм хупласа илнĕ. Кĕҫех мотор сасси те илтĕнми пулчĕ.

— Трактор шăпланчĕ! — енчен енне пăхкаласа илчĕ Хĕветĕр.

— Пушар ункине лекрĕ пулмалла, — терĕ Ҫтаппан.

— Пулăшмалла ăна, тен, тракторисчĕ тĕтĕмпе чыхăннă, — хыпăнса ӳкрĕ Раман.

Трактор йĕрĕпе васкаса шалалла кĕчĕҫ ҫамрăксем. Тĕтĕм куҫа ҫиет. Йывăҫсем хушшипе ҫулăм ялкăшни курăнать. Каллех трактор сасси илтĕнчĕ. Инҫе те мар. Акă

вăл тракторĕ. Бульдозер çĕççине çĕр çине тăрантарнă та вырăнтан хускалаймасăр кĕрлесе ларать. Чупса çитнĕ çĕре трактор тапранчĕ, унтан каллех чарăнчĕ, моторĕ кĕрлетха. Раманпа Çтаппан кабинăна икĕ енчен харăс кĕрсе кайрĕç. Тракторисчĕ тĕтĕмпе, газпа чыхăнса тăнран кайнă. Ăна антарса айккинелле кайса хучĕç. Раман, трактора çулăм ăшĕнчен илсе тухмашкăн, кабинăна васкаса таврăнчĕ.

Кабинăра калама çук вĕри. Самантрах çăварĕ типсе ларчĕ Раманăн. Йӳçĕ тĕтĕм йăсăрланса сăмса-çăвара, куçа кĕрет. Сывлăш çитмест. Мĕнле пулсан та трактора кунтан илсе тухмаллах. Унсăрăн бензин бакне вут хыпса илме пултарать. Кĕтмен çĕртен трактор силленсе илчĕ, пысăках мар йывăçа пырса тăрăннă иккен. Ăна майĕпен авса хуçрĕ те, чалăшшăн пăрăнса, трактор каллех кивĕ йĕр çине ӳкрĕ. Нумаях та юлман ĕнтĕ уçă çĕре тухасси. Анчах сылтăмран çулăм чашкăрса килет. Ĕлкĕрейĕ-ши Раман ун умĕнчен каçса ӳкме, ĕлкĕреймĕ-ши? Çулăм çывхарнăçем çывхарать. Трактора пăрахса хăварсан тарса ӳкме пулатьха ку çулăмран, анчах апла юрамасть. Ытларах та ытларах газ хушать Раман. Трактор, мĕкĕрсе, çĕр сирпĕтсе, малалла талпăнать. Çулăм ялкăшса, ахăрса сылтăмран çывхарать. Пуç кашлама пуçларĕ. Куç хуралса килчĕ, хăлха йăн-йăн янăрать. Явăнакан çулăм тракторпа пĕр вăхăталлах уçланкă хĕррипе чашкăрса иртрĕ. Раман тĕтĕмпе чыхăнса кайрĕ. Вут хыпса илме пуçланă трактор патнелле çынсем чупаççĕ...

Çук, çăлса ĕлкĕрчĕ трактора Раман.

Моторлă пăчкăпа каснă уçă вырăна çитсен, вут-çулăм вăхăтлăха чарăнчĕ. Кунти лаптăксене хирĕçле чĕртсе яни те пулăшрĕ. Тĕттĕм пуласпа çынсем, ывăнса, лăштăрах халтан кайнăскерсем, автобус патнелле утрĕç. Йывăр пăчкă хулпуççине пусать. Урасем, юман тукмакĕ çакса янă евĕр, çĕр çумĕпе аран сĕтĕрĕнеççĕ...

— Вăрманта иртертĕм ĕмĕре, анчах та кунашкал канмасăр ĕçлесе курман, — тарлă питне çаннипе шăлать Хĕрӳ Хĕветĕр.

— Ан та кала-ха, — ăна лăплантарнăн сăмах хушрĕ Раман, — паянхи пек йывăç касас пулсассăн-и, ку вăрмана эпир нумая ямастпăр, туххăмрах касса пĕтеретпĕр. Пушарĕ тата мĕн чухлĕ пĕтерет. Юрать-ха уçланкăсем нумай вăрманĕнче — маларах каснă вырăнсем. Вĕсем пулмасан, эпир ку пушара чараяс та çук. Шел, мĕн тери вăрман пĕтет.

— Ма кулянан, Раман? — автобус умне çитсе чарăнчĕ

Хĕлимун. — Пирĕн ĕмĕре çитет. Çитменнине тата... ӳсет. Эп малтан касма пуçланă лаптăксенче халь хурăнсем пуслăх хулăнăш. Посадка та çавнашкалах. Хырлăх...

— Мана çапах та пĕр япала канăç памасть, — хăрăмлă питне шăлса илчĕ Раман. — Тĕрĕс мар касатпăр эпир вăрмана. Шутсăр нумай касатпăр. Çулталăкра пилĕк пин гектар. Вăрманпромхоз нумай пирĕн республикăра, Улатăрта, Çĕмĕрлере, унта, кунта... Талккăшĕпех тăрăнатпăр вĕт-ха вăрман çине, тасатса, çап-çара туса кĕрсе каятпăр, варринче унта нумай мар, çав тĕле çитсен, каялла уй тăрăх утса тухăпăр. Посадка тетĕр. Ӳсекен йывăç вăл халлĕхе вăрман мар. Лартатпăр йывăçне. Каснинчен ытларах та. Ăна çуррине ытла выльăх, пăши, çын пĕтерет. Ӳсме памасть. Ӳссен те кукăр-макăр ӳсет, йĕркеллĕ, çурта пек тӳрĕ йывăç сахал. Асат хуçнă çын пек, çул хĕрринче тĕнĕл пуçĕ шăйăрттарнипе асапланса ӳсекен йывăç пек. Вăрман-и çав? Хыр-чăрăша касма вăхăчĕ çитиччен сакăрвунă çул, юмана çĕр çул ытла кĕтмелле, ытти йывăçа та аллă-утмăл çул ӳстермелле. Эпир хĕрĕх çултан ытла кĕтейместпĕр. Ирĕксĕрех çамрăкла, пиçсе çитмесĕрех касма тивет. Вăт сана, Хĕлимун, посадка, хырлăх!..

Автобус, тусан пĕлĕчĕ çĕклесе, поселока çитсе кĕчĕ.

— Пăхăр-ха, пăхăр! — чӳречерен кăтартрĕ Хĕлимун.— Варсонофи Степнов мĕн тăвать!..

Пурте Хĕлимун кăтартнă еннелле тинкерчĕç. Степнов арăмĕпе пӳртрен хĕрсех япала-тупра тултать, анкарти варрине çĕклет, пысăк шăтăка тултарать.

— Ат, хăравçă! — тарăхса кайрĕ Раман. — Пушарта çапла ĕçлесчĕ. Килĕ çунасран хăрать.

— Ĕнерех тĕлĕнтерчĕ-ха вăл, — терĕ Хĕрӳ Хĕветĕр. — Пĕр ушкăна лекнĕччĕ эпир унпа. Хĕрарăмсемпе ахăрса çӳрет, явăл. «Эпир кĕреçепе пенипе çак пушара сӳнтерес çук. Çумăра кĕтмелле. Тур пулăшасса. Çӳлтен лӳшлеттерсен, хăех сӳнет», — тесе пăтратать халăха. Ятласа та пăхрăм — итлемест.

Хĕветĕр тĕтĕмпе хĕрелнĕ куçне шăлса типĕтрĕ те малалла каларĕ:

— Кăнтăр апачĕ хыççăн кăшт канас терĕмĕр. Варсонофий яланах пĕччен-çке, çынсемпе хутшăнмасть. Уçăрах вырăн тупса, хыр айне кайса выртрĕ. Ĕшеннипе-ши, пăчăран-ши, хама та ыйхă пусрĕ. Куç хупăнсах ларать. Вăранса кайрăм, çывăхра никам та çук. Пăхатăп — çĕр çумĕпе çулăм чупса килет, Варсонофий выртакан çамрăк хыр патнех çитнĕ, ăна тавралла çавăрса илнĕ. Мăклă вырăн ытлашши хытă çунмасть-çке-ха, тĕтĕмĕ мăкăрланать вара.

Варсонофий аллине кăвар пĕçертрĕ пулмалла, ялт! сиксе тăчĕ, унталла пăхрĕ, кунталла — тавраллах çунать. Типĕ утрав çинче тапăртатать те тапăртатать çак. Унтан тем ăнкарса илчĕ пулас та — йăпăр-япăр хăпарса кайрĕ хыр çине. Вăл çӳлелле чакаланнă вăхăтра Варсонофий утравĕ те çулăм ăшне путрĕ, йывăç çумĕнчи вĕт-шакăр турат хĕмленчĕ. Çулăм хыра хыпашлама пуçларĕ, сăмалаллă хупă çатăртатса çунать, вулă тăрăх çулăм çӳлелле кармашать. Варсонофий тискеррĕн кăшкăрса тапаçланать, çулăм та ун хыççăнах çатăртатса чупать. Хыр кукăрălса, кукăрălса пычĕ те шарт! турĕ. Варсонофий çунакан торф çине татăлса анчĕ, сухăрашса сиксе тăчĕ те çунакан хыр тăррине аллинчен яма пĕлмесĕр çырманалла кустарчĕ. Эп пырса çитнĕ чухне хăва тĕмĕ çумĕнче ларатчĕ, пиçсе кайнă аллисене сăмса шывĕпе сăтăратчĕ. Куртăр пуль, аллисем шап-шурă, бинтпа чĕркенĕ. Паян вăл вăрмана пымарĕ, шăтăк чавнă. Кам пушар сӳнтерет, кам хăйшĕн çунать, туприне çăлса хăварассишĕн тăрмашать.

Поселок йăлт тĕтĕм айĕнче. Куç йӳçĕхет. Уйрăмах ачапăча нушаланать.

Эрне ытла алхасрĕ вăрман пушарĕ. Хурашыв поселокне те, вăрман варринчи ытти ялсене те ямарĕç ăна. Сятров картунĕпе тепĕр утар çеç çунса кайрĕ. Анкартинчи шăтăка пытарнă япаласене Степновăн каллех пӳрте йăтмалла пулчĕ.

Çанталăк та улшăнчĕ. Шăрăхпа çунса-ĕнсе ларнă çĕр çине талăкĕпех лăпкă çумăр лӳшкерĕ, çунакан тункатасемпе торф лаптăкĕсем çутçанталăк вăйне парăнса сӳне-сӳне пычĕç. Çумăр вăрманăн пушар кирĕкне çуса тасатрĕ. Хурашыв поселокĕпе çывăхри ялсене те таса сывлăш анчĕ.

Пушарпа кĕрешсе паттăрлăх кăтартнисене пухура наградăсемпе парнесем пачĕç. Раман Дубов «Пушарти паттăрлăхшăн» медаль тата трактор çăлса хăварнăшăн телевизор илме тивĕçрĕ.

## 46

Дубов бригади коммунизмла ĕç коллективĕ ятне тахçанах çĕнсе илнĕччĕ. Анчах бригада ятне Хĕлимун ĕçкĕпе варалать. Мĕн тумалла? Тем тĕрлĕ те ӳкĕтлесе пăхрĕç ĕнтĕ ăна, ятларĕç-хăратрĕç те. Çук, юсанмасть çын.

Хĕрӳ Хĕветĕрĕн сасартăк пĕр вăрттăн шухăш çуралчĕ. Пĕлтĕр Мускавра истори музейĕнче тĕлĕнмелле медаль курнăччĕ вăл. Вунсаккăрмĕш ĕмĕрте Пĕрремĕш Петĕр шутласа кăларнăскер-ха медалĕ, ĕçкĕпе ашкăнакансене пама

йышăннăскер. Тимěртен тунă ăна, тăватă кěтеслě çăлтăр пек, тăваткал. Çӳл сине мăй çыххи майлаштарнă. Вунпилěк кěренке (ултă кило) таять. Варрине «Ěçкěпе ашкăннăшăн» тесе çырнă. «Пастай сана, Хěлимун, тупрăм хайхи сан валли. Ах, пулать те пулать халăх кулмалли!» — шухăшларě Хěветěр.

Çапла чунě уçăлсах кайрě ун. Савăннипе шăхăрса юрласа çеç çӳрет вăл. Пěр каçхине автобуса кивě юман тукмаккине юри пурте курмалла мекеçленсе йăтса кěчě. Хěлимун тӳрех кулма тытăнчě унран:

— Курăр-ха, Хěветěрěн вутти-шанкн пěтсе çитнě. Тимěр кăмака хутма илсе каять...

Хěветěр нимех те шарламарě. Хурашыва çитсен, тӳрех машинăсен паркне уттарчě. Мастерскойра тукмак пуçне якатрě, мăйран çакма çакă майлаттарчě — çăраççипе питěрсе илмеллех турě. Виçсе пăхрě: сакăр кило. Петěр патша медалěнчен йывăртарах та — аптрамасть. Маттур-ха Хěлимун. Ěнси хулăн. Чăтě.

Хăйне мăшкăл кěтнине сиснě пекех тата Хěлимун пěр хушă ěçмесěр пурăнчě. Аш ыратать тесе çӳрерě. Анчах нумайлăха пымарě чăтăмлăхě. Машка-Милашка патěнче тăраничченех ěçсе лартать пěррехинче хайхи, унтах çěр каçать. Лешě ăна мухмăрпа ан вилтěр тесе пěр чěрěк эрех парса ярать.

Ниçта та май тупса ěçеймест çав чěрěке Хěлимун. Мухмăрě те иртсе каймалла пек ěнтě. Анчах кěсъери эрехě канăç памасть-çке. Ăçта пытанса ěçмелле? Çтаппан, ав, пěрре те куçран вěçертмест ăна. Хěлимун вара, бригадира улталама шутласа, майěпен варне шăлкалама пуçлать, ахлатать, пěшкěне-пěшкěне ларать. Унтан, шăлаварне хыçалтан тытса, çырманалла вěçтерет. Нумаях та вăхăт иртмест, çырмаран Хěлимун юрă ěнěрлесе хăпарать.

— Ытла хăвăрт иртсе кайрě-çке сан варвитти... — кулса илет Çтаппан.

— Иртни-мěнě, — тет ăна хирěç Хěлимун, — ай, чимха, каллех тапранчě!.. Эс ан кул!

Хěлимун татах çырманалла таптарать, текех вара хăпармасть те унтан. Ана кěтсе йăлăхнă бригадир çырмана анса пăхать те, Хěлимун шěшкě тěми айěнче харлаттарса выртса парать. Ниепле те вăратма çук. Çтаппан тарăхнипе алă сулать те каялла хăпарса каять.

Çакна йăлтах çырма леш енчен Хěрӳ Хěветер сăнаса тăнă. Çтаппан пăрахса кайсанах, вăл Хěлимун патне йăпшăнса çитет. Ун мăйěнчен хайхи юман тукмакки «медалě» çаклатса хурать, çăраççийěпе питěрсе илсех.

Тарăхнă Çтаппан кăнтăр апачĕ киличчен пĕчченех йывăç касрĕ вара. Акă ĕнтĕ автобус делянкăна çитсе чарăнчĕ. Апата ларсан, Хĕрӳ Хĕветĕр, ытарлăн кулкаласа, Çтаппанран çапла ыйтрĕ:

— Сирĕн Хĕлимун ăçта çак? Машка-Милашка кĕтет вĕт ăна, авă, епле ăшталанать сĕтел хатĕрлесе.

Çтаппан аллипе çырманалла тĕллесе кăтартрĕ:

— Вăн выртать унта. Çывăрать.

— Çывăрать?! — сиксе ӳкрĕç хĕрарăмсем. — Ăçта? Эпир лачкам тара ӳкиччен турат иртетпĕр те, вăл çапла мăшкăллать-и пирĕнтен? Чимĕр-ха, юсар ăна?

Хĕрарăмсем бидонпа сив шыв ăсрĕç те çырмана чупса анчĕç, ыттисем те вĕсем хыççăнах утрĕç.

Хĕлимун типнĕ кăткă тĕмине ыталаса илнĕ те туртать кăна ыйха.

Чашт! турĕ пит тăрăх сивĕ шыв.

— Уфф! Фăрр! — пуçне силлесе хускалчĕ Хĕлимун. — Яр-ха, ан тыт тетĕп сана, Машка. Ĕçе каймалла...

Пуçне тем пекех çĕклесшĕн Хĕлимун — çĕклеймест, мĕн пулнине нимĕн те ăнланаймасть-ха. Қаçса кайса ахăраççĕ вăрман касакансем. Акă, ура çине аран-аран мекĕрленсе тăчĕ Хĕлĕх, тайкаланнипе мăйран çакăнса таракан юман тукмаккине каллĕ-маллĕ сулкалантарать.

— Шăпланăр, юлташсем! — ушкăн варрине тухса тăчĕ Сидоров. — Паян эпир хамăр коллективăн хисепсĕр членне Хĕлимун Хĕлиппович Хĕлиппова «Ĕçкĕпе ашкăннăшăн» йывăç медальпе наградăлатпăр. Хамăр участок йышăннă тăрăх, вăл ăна коллективăн чăн-чăн членĕ ятне тивĕçлĕ пуличченех çакса çӳреме пултарать. Çав вăхăтра нимĕнле лайăх правапа та усă кураймасть. Саламлар награда илнĕ ятпа ăна, юлташсем!

Шӳтлесе-ахăрса алă çупни илтĕнсе тăрать вăрманта.

Пурин куçне те уçрĕ вăрман пушарĕ. Халиччен ку таврара пулман типшарла инкек чăннипех тăн кĕртрĕ, вĕрентрĕ çынсене. Вăрмана сыхласси хăй еккипе пулса пынине тин витĕр ăнланса илчĕç. Васкасах пушар хатĕрĕсене çĕнетрĕç, картунсем хушшинчи çыхăнăва лайăхлатрĕç. Каснă вырăнсене типтерлĕ тасатса хăварма тытăнчĕç, делянкăна йышăнмасăр пĕр бригадăна та тек урăх çĕре куçармаççĕ. Ответлăх ӳсрĕ. Рамансем, турат майласа самаях вăхăт иртет пулин те, малтанхинчен пĕртте кая юлмарĕç, тасалăх енĕпе куçса çӳрекен вымпел çĕнсе илчĕç.

Рамана халь Çтаппан бригади шухăшлаттарать-ха. Хĕлĕх Хĕлимунĕ юман медаль çакса намăсланнă хыççăн кăш-

тах тӳрленчӗ темелле, ҫапах та сăра-эрехе маннă теме ҫук-ха ăна. Ҫавăнпа Дубов вăхăтлăха Хӗлимунпа Хӗветӗре ылмаштарма шутларӗ. Мастер хирӗҫлемерӗ.

Ҫакна илтсен, никамран малтан Улька сиксе тăчӗ:

— Ан тӗлӗнтерӗр-ха! Ахаль те ӗҫлеме йывăрланчӗ. Хӗлимун килсен, лайăх кăтартӗ вăл пире «пиҫӗкҫуллăха — тăваттăра»!

— Пустуй лӗпӗртетет Улька, — чăтаймарӗ хайхи Хӗлимунӗ те. — Мӗн, яланах пӗҫ тăратса выртать тетӗр-им эсир мана? Сирӗн патăрта та ҫав ӗҫех тумалла. Кӳҫаратăр пулсан — куҫарăр. Хирӗҫ мар.

Тепӗр кунтан Хӗлимун Раман ҫумӗнче ӗҫлеме тытăнчӗ. Бригадир хӗллехи сессине кайиччен вӗсем ҫывăхлансах, туслашсах ҫитрӗҫ. Хӗлимун шалт тӗлӗнтерчӗ: мухмăрӗ те ҫук, вăрман ҫаппи тиеме килнӗ ипкесенчен те сăра-эрех йăлăнса куҫран ӳкмест халь. Хӗветӗрпе те чип-чиперех ҫураҫнă.

— Эс те мана влияни патăн та медальпе наградăласа, Дубов тата ытларах витерчӗ. Унран хăратăп тетӗн пуль! Ҫук. Темле лайăхмарланса каятăп ун умӗнче, пӗртте кӳрентерес килмест, темле пур енчен те ырă тăвас килет ăна, — чунне уҫрӗ пӗррехинче Хӗлимун Хӗветӗр умӗнче.

— Ҫапла ҫав, Хӗлимунушка, — ҫурăмӗнчен лăпкарӗ ăна Хӗветӗр. — Эп те унра хам ăнланса ҫитеймен асамлăх вăйӗ пуррине туятăп. Виҫ-тăват кун курмасанах, тунсăхласа ҫитетӗп. Ӗҫлеме унпа мӗнле ҫăмăл тата. Куртăн пуль хăвах? Шалккă, кӗҫех инженер пулать.

— Начальника тухтăр ҫав, пирӗншӗн тата лайăх. Пирӗн ӗҫе тата лайăхрах йӗркелетӗр. Вăл Липшайкинсем мар...

## 47

Салтак тумӗпе вăрман ӗҫлеме килсе кӗнӗ Чаккас каччи нумай улшăнчӗ: бригадир пулса тăчӗ, института вӗренме кӗчӗ, авланчӗ. Раман Дубов пурнăҫӗ ҫапла вăрманпа уйрăлми ҫыхăнчӗ. Пур ҫӗрте те унăн вăрман шухăшӗ ҫеҫ — симӗс пуянлăхăн кунҫулӗ, малашлăхӗ. Ҫак ыйтупа вăл институтра та хӗрсех калаҫать. Дубов пек тăрăшакан ҫынсене вӗрентекенсем хисеплеҫҫӗ.

Кашни сессирен Раман тулли кăмăлпа, хавхаланса таврăнать, арăмне институтпа вӗренӳ ҫинчен чарăна пӗлмесӗр каласа кăтартать. Хальхинче те питӗ васкарӗ вăл килне. Анюта ӗҫе тухса кайиччен пурпӗрех ҫитсе ӗлкӗреймерӗ. Вăл хулара иртгернӗ кунсенче Юман тӗреклеиӗ, ӳснӗ пек туйăнчӗ. Сăпкара ҫывăракан ачине пăхса ыта-

раймасть ашшĕ. Апатланнă хыççăн вăл институтран таврăнни çинчен кантура çитсе пĕлтерме шутларĕ.

Кантуртан тухсан, Раман анатри склад еннелле çул тытрĕ, арăмне аякранах асăрхарĕ: фуфайкăпа беретка тăхăннă Анюта, упăшкине курса, эстакада пусми тăрăх чупса анчĕ те Рамана мăйран пырса çакăнчĕ.

— Çынсем кураççĕ вĕт, — асăрхаттарчĕ лешĕ.

— Курмаççĕ, — ыталаса илчĕ ăна Анюта. — Ну, мĕнле?

— Яланхи пекех, «пиллĕксем» çеç, — савăнса ăшшăн кулчĕ Раман. — Килте калаçса пĕтерĕпĕр, халь ĕçлемелле,— тесе Безбородов патне васкарĕ.

Алăк уçсанах куç умне ўкерчĕкри кăпăк кăларса ыткăнакан лашасем сиксе тухрĕç, хăлхара тачанка сасси, пулемет тăкăртатни илтĕннĕ пекех туйăнчĕ. Сĕтел хушшинчен Рамана хирĕç ватăлма пĕлмен, юман кĕрешĕ пек тĕреклĕ Безбородов васкаса тухрĕ.

— Охо-хо! — кĕрлерĕ Лука Павлович. — Ирт кунталла, мĕн çĕнни пур? Мĕнле çĕмĕрттеретĕн унта?

— Аванах вĕçлерĕм сессие. «Хўре» çук.

Иккĕшĕ те пĕр-пĕрин аллисене хыттăн чăмăртарĕç.

— Ватăлатăп пулмалла, — шакла пуçне шăлса илчĕ Безбородов. — Эс чăмăртанă чух алă чĕтрет. Ун пек марччĕ ĕлĕк. Сирĕн пек пуласчĕ халь...

— Пирĕн те, Лука Палыч, сирĕн пек пуласчĕ, — ăна хирĕç пукан çине ларчĕ Раман, — çав тачанка хăвăртлăхĕпе пулеметчиксен хăюлăхне çапса кĕртесчĕ халь пирĕн кăкăрсене... Атту тепĕр чухне çывăрсах каятпăр.

— Тĕрĕс калатăн, Раман, ун пекки те пулкалать. Уншăн вара эпир: ваттисем те, çамрăккисем те — айăплă.

Иван Яковлевич килсе кĕчĕ те, пўлĕм тулса ларнăнах туйăнчĕ. Яланхи йăлипе вăл карттусне хывса сулахай аллине тытрĕ, кĕрўшне алă пачĕ.

— Экзаменсем пирки ыйтмастăп. Анюта каласа пачĕ. Сывлăху çинчен те. Куратăп, çип-çирĕпех. Хунюна манса кайнăшăн ятлатăп. Ха, Лука патне чăмнă вăл!

— Итле-ха, Иван Яковлевич, — чĕлĕмне пепельница хĕрринчен шаккарĕ Безбородов. — Шутласа лартăм та халь, хамăр вырăна йышăнмалли çамрăксем ўссе çитĕнчĕç. Акă вĕсенчен пĕри. Пĕр иккĕленсе тăмасăр ăна вăрман пункчĕн начальникне лартма пулать.

— Эсир ман пирки-и? — вăтаннипе ура çине тăчĕ Раман.

Чĕлĕмне паклаттарса тĕтĕм унки кăларчĕ те Безбородов хушса хучĕ:

— Сан пирки. Тĕрĕссине калатăп. Çынсем сана мала

хураççĕ-тĕк, тивĕçна ыттисене кăтартмаллах. Çав Лишайкинсемпе эпир малалла каяймастпăр.

— Да... — ассăн сывларĕ Яковлев. — Эп Лишайкин пирки Захарова тахçанах тӳррĕн каланăччĕ. Итлемерĕ мана Антон Николайч. Çынпа ĕçлеме пултарайман начальник хăçан коллектив ятне, чысне çĕкленĕ?

— Мĕн тупнă ун çумĕнче Захаров? Тĕлĕнетĕп, — терĕ Безбородов.

— Çăмăл алă, — ваттисен калаçăвне хутшăнчĕ Раман. — Директора мĕн кирлĕ? План. Лишайкин шучĕпе, паян çак поселок тавра хăварнă вăрмана та касма юрать. Çынсем мĕнле ĕçлеççĕ, мĕнле пурăнаççĕ — уншăн пурпĕрех.

Телефон шăнкăртатни калаçăва татрĕ.

## 48

Пушар сӳнтерме аякран хăватлă тракторсем йышлă килнĕччĕ. Вăрман çунма пăрахсан та вĕсене вăхăтлăха Хурашыврах тытса усрарĕç. Татса кайнă пĕвене çав тракторсемпе юсарĕç, тĕпĕнчи мĕнпур тункатана тăпăлтарса тикĕслерĕç. Пĕве пуçне шыв антармалли кавăс алăк касрĕç. Ӳлĕмрен çуркунне татса каяс хăрушлăх çук халь.

Пĕве пуçĕ çийĕн иртекен çула асфальт сарчĕç. Çак çулăн сулахай енче, парка хирĕç, виçев приборĕсен заводне лартмалла теççĕ. Вырăнĕ сахал-çке стройка валли! Хыçалта— çырма, урам урлă — пурăнмалли çуртсем, тепĕр çырми леш енче — çамрăк хырлăх. Нивушлĕ çав мунча пĕрени пек пулнă йывăççене касса тăкĕç-ши? Çакăн çинчен шухăшларĕ Раман.

Кăшт тăварахра Рамансем куçма хатĕрленекен çурт. Çулпа çуртсем хушшинче — вăрман тăрăхĕ. Пĕркун Раманпа Безбородов хутшăнман пулсан, çав йывăççене те касса тăкатчĕç. Мĕн тери кăмăллă вырăн халĕ кунта!

Çĕнĕ хваттере мĕнле, мĕнпе тултармалли çинчен Анюта Раманпа тахçантанпах калаçать. Акă ĕнтĕ Дубов ордер илсе таврăнчĕ. Савăнăçне нихçта чикеймест Анюта. Юмана йăтса, вĕсем анлă урама тухрĕç. Çул çинче юр ирĕлсе пĕтнĕ, хуп-хуран курăнать. Йăвисем патĕнче куракСем краклатса явăнаççĕ. Çăка тураттн çинче шăнкăрч çунат çапса юрлать. Йывăç айĕнче ларакан шап-шурă чул çурт катаранах курăнать.

Хваттере кĕрсен, Анюта тӳрех пӳлĕмсене пăхса çаврăнчĕ, унтан Рамана пырса ыталарĕ те урай варринче вальс çаврăнма тытăнчĕ. Пĕчĕк Юмана çĕкленĕ ашшĕ те Анютăн

тута ҫеммипе ташларӗ. Ҫемье ҫӗнӗ хваттер илнӗшӗн савӑнать...

Ҫав каҫ Ҫинахвансем ҫунса кайрӗҫ. Раман, пушартан таврӑнсан, питӗ шухӑша кайса ларчӗ. Анюта та, ырӑ мара сиснӗ пек, чӗнмесӗр выртрӗ, хушӑран упӑшкипе питӗнчен асӑрхануллӑн сӗртӗнкелесе илчӗ.

Ирхине Раман хӑй мӗн шухӑш тытнине пӗлтерчӗ:

— Хамӑрӑн хваттер ордерне Ҫинахвана парас тетӗп эпӗ, — терӗ вӑл васкамасӑр. — Арӑмӗпе иккӗшӗ те ман бригадӑра ӗҫлеҫӗ. Ҫемьере пилӗк ҫын. Ӑҫта пурӑнӗҫ?

— Ордера тетӗн-и? — вырӑн ҫинчен тӑрса ларчӗ Анюта. — Хваттере-и?

— Аха, хваттер ордерне парас тетӗп. Эпир халлӗхе, Чекеҫ ҫураличчен, кунта та пурӑнкалӑпӑр.

— Ах, Раман, санпа пурӑнма ҫӑмӑл пулас маррине эпӗ малтанах туйнӑ та ҫав... Ҫапах юратрӑм сана, ухмаха, халь хамӑннах асапланма тивет. Нивушлӗ Ҫинахвансене хваттер тупса параймӗҫ?

Анютӑн тути чӗтресе илчӗ, хӑмӑр куҫӗ, шывланчӗ, ӑшӗ пӳлӗнсе килчӗ пулас, тарӑннӑн-тарӑннӑн сывларӗ те пуҫне упӑшкин кӑкӑрӗ ҫине ӳкерчӗ. Раман, арӑмне лӑплантарас тесе, пуҫӗнчен, хулпуҫҫинчен ачашларӗ, ӑшӑ сӑмах каласа чуптуса илесшӗн пулчӗ. Анюта, пуҫне минтер айне чиксе, ӗсӗклесех макӑрса ячӗ.

— Манӑн та пур каламалли. Мана та пӗр япала тахҫанах ӑша ҫунтарать. Калас мар тенӗччӗ. Тӳсейместӗп халь. Ҫав ордерпа чӗрене хускатрӑн. Пӗрмай тем пытарса пурӑнан эс манран. Анчах пӗлетӗп. Ют хӗрарӑмпа ерсе кайнӑ. Эп, ухмаххи, ман упӑшка никамран таса тесе шутланӑ. Эй, турӑ!..

Раман вӑштах тарса ларчӗ.

— Куҫран калани хыҫалтан пушӑпа касиӑ пекех пулчӗ-и?— чарӑнма пӗлмерӗ Анюта. — Санӑн еркӗн пуррине пӗлнӗ пулсан-и?.. Качча тухма мар, юнашар та тӑрас ҫукчӗ. Юратнӑ тата ӑна, ухмаха... Кала, кам пур сан?

Анюта кунашкалли Рамана шалт тӗлӗнтерсе ячӗ. Вӑл ҫарранах сивӗ урайне анса тӑчӗ.

— Никам та ҫук. Пулнӑ. Ҫук, пулни мар-ха вӑл, ну, ҫӳренӗ, эппин. Тамарӑпа ҫӳренӗ! Стасик Павлов арӑмӗпе! Хӑй ӑна пӑрахнӑ вӑхӑтра. Каччӑ чухне. Санпа паллашиччен. Санпа пӗрлешиччен. Ҫӳренӗ! Хамӑн ача чухнехи юратупа. Ну, мӗн вара?! — тӑвӑлчӗ Раман.

Упӑшки ытлашши хаярланса каясран шикленнӗ Анюта сассине пусарчӗ:

— Эс сессире чухне Павлов кӗрсе тухрӗ те... Сан Ра-

ману ман арӑмпа ҫӳрет, пирен ҫемьене аркатать тесе каласа хӑварчӗ. Ҫавӑнтанпах ӑш вӑркаса ҫӳрет манӑн. Ҫапах та чӑтрӑм, сана каламарӑм. Паян чӑтаймарӑм ав. Стасик чӑнах та тӗрӗссине калать пулсан...

Раман та ҫиллине шӑнарчӗ. Анюта айӑплӑ мар. Тамарӑпа чӑнах та ҫӳренӗ. Авланиччченхи савӑшулла тӗлпулусемшӗн ятламалла пулсан, Раманӑн никама та мар, хӑйне кӑна ятламалла.

— Юрӗ, эппин, Раман, авланиччченхине каҫарӑп, анчах халь ан ухмахланса ҫӳре, никама та килӗшмест вӑл унашкал хӑтланни, — тесе упӑшкин ҫӑра ҫӳҫне тӑрмаларӗ Анюта.

Ӗҫе кайма тухсан Раман ҫула май кантура кӗрсе тухрӗ, рабочком председательне кӗсйинчен ордер кӑларса тыттарчӗ те хваттере Ҫинахван Сафин ҫине куҫарса ҫырма ыйтрӗ.

## 49

Ҫуркуннехи вӑрман пӑчкӑ-пуртӑллӑ ҫынна юратмасть, папка кӑларса ҫӗнӗ тум тӑхӑнакан, ешерме тытӑнакан йывӑҫсен лӑпкӑлӑхне упрасшӑн вӑл. Вӑрман касакансем ку вӑхӑтра ҫӗр типсе ҫитиччен анатри складра йывӑҫ сыпӑлаҫҫӗ.

Лишайкин Яков Кашкина ҫапах та вӑрман касмалли лаптӑк тупса панӑ иккен. Раман анатри складран «Хурӑн ҫулҫи» ҫуммипе таврӑнатчӗ. Ун умне ҫулӑн тепӗр енчен «Дружба» ҫӗкленӗ Кашкин тухса тӑчӗ. Иккӗшӗ те пӗр чӗнмесӗр юнашар утса кайрӗҫ. Сӑмаха Якку хускатрӗ:

— Эсӗ пӗрмай ҫилленсе ҫӳренӗн туйӑнать мана...

— Мӗншӗн апла калан? — Кашкин куҫӗнчен пӑхрӗ Раман.

— Мӗншӗнне пӗлетӗн-ха эс, унччен кӑна...

— Мӗн унччен кӑна?.. Ан хӑра, сана тавӑрма шутламастӑп эп. Анчах асту, текех унашкал хӑтланма та ирӗк памастӑп.

— Эп мӗн-ха, эп ахаль те апла хӑтланасшӑн мар, анчах...

— Эс мӗн каласшӑнне пӗлетӗп, — Кашкина пӳлчӗ Раман, — эс ху кӑна малта пуласшӑн, чапшӑн ҫунакан этем эсӗ. Апланса илӗн-ши ҫакна хӑҫан та пулин, юсанӑн-ши?

— Тем тума итлерӗм ун чухне Лишайкина, — хашш сывларӗ Якку. — Халь ахаль те сахал мар шухӑшлатӑп ун ҫинчен. Эсӗ, Раман, вӑйлӑ ҫын. Эс мала тухсан, эп ҫӗр ҫывӑраймастӑп. Апат та анмасть. Вара, хӑвах пӗлен, вӑ-

кăр пек ĕçлетĕп. Санран малта пулас килет манăн. Итле, малта! Хам иккĕмĕш вырăна çеç юлсан, сана кураймн пулатăп. Сан бригадунта мĕнле те пулин пăтăрмах сиксе тухасса та кĕтнĕ. Ман çула пӳлетĕн эс, Раман. Илтетĕн-и? Çул памастăн. Қаçар. Йăлтах каларăм каламаллине. Тахçанах шутланăччĕ. Халь чун лăштах пулчĕ.

Вĕсем пĕве пуçне çитрĕç. Аялта çурхи шыв кĕрлет. Вăрман енчен каç сулхăнĕ сăрхăнать. Тулса пыракан шыв пĕве пăрне çĕклесе çуркалантарнă. Икĕ бригадир, пĕве пуçĕпе каçса, малалла шăпăрттăн утрĕ. Кантур патĕнчи çӳллĕ хырсем айне çитсен тин Дубов каллех сăмах пуçларĕ:

— Эх, Якку, Якку, — терĕ вăл. — Начар çын çав эс. Амăртнă чухне сан пек шухăшламалла-и? Амăрту вăл— пулăшу. Амăртакан çын юлташĕшĕн тăрăшать, ыттисене хăйпе тан пыма лайăх майсем туса пама тăрăшать. А эс?.. Кун пек пурăнсан, вăрманти пĕччен тунката пулса юлатăн. Пĕтермелле сан çав усал шухăша, тасалмалла упран. Ĕçлеме пултаратăн вĕт!

— Паллах, пултаратăп. Хама çитекеннине вăрманпромхозра халлĕхе курмастăп-ха сансăр пуçне.

— Сансăр пуçне, сансăр пуçне... Тупнă ухмахла пĕр сăмах. Қаймастăп вĕт эп ниçта та. Тем пек кураймасăр пурăн эс мана — усси пулмасть, санпах ăмăртатăп, санах çĕнтеретĕп. Қала-ха, ăçтан таврăнатăн çак эсĕ?

Қашкин пăчкине çĕр çине хучĕ.

— Вăрман касатпăр. Завод тăватпăр теççĕ те...

— Мĕнле вăрман? — шалт тĕлĕнчĕ Дубов.

— Çырма леш енчи хырлăх. Қасма çăмăл. Вĕтĕ тулĕк. Тепĕр вунă-çирĕм çултан мĕнешкел пĕрене пулмалла!..

Пĕр кĕтмен çĕртен Раман кăкăртан çулса илнипе Кашкин сывлайми пулса тăчĕ.

— Мĕн тăватăн эс, ăссăр?! Çамрăк посадкăна касса мĕн туса хунине пĕлетĕн-и? Çын лартса ӳстернĕ вăрман вăл! Миçе çул пăхнă, миçе çул нушаланнă унпа! Эс пур, на, тытнă та кăрлаттарнă! — тилĕрсе кайса кăшкăрать Дубов.

Қашкин, мăйне касса кĕнĕ кĕпе çухавине вĕçертсе ярса, унпа хирĕлме тытăнчĕ:

— Мĕн лутăркан эс мана? Вăюпа мухтанатăн-им? Хырлăхшăн эп айăплă-и? Хушнă мана — касатăп. Сана хушман — касмастăн. Ан та çыпçăн апла-тăк. Мана мĕн! Мĕн касма хушаççĕ, çавна касатăп. Эпĕ пĕчĕк çын.

— Эх, пĕчĕк çын!... — аллине лаш! сулчĕ Раман. —Çакăнта ман урасене кас тесен те касатăн-и?

— Вăт танлаштарчĕ те! Çын ури йывăç мар, — тарăхса мăкăртатрĕ Кашкин. — Йывăç вăл хăть ăçта ӳссен те йы-

вăç. Мĕн кашни япалашăн хирĕлсе çӳретĕн эс? Директор тейĕн, пур çĕрте те хушша кĕрет. Мана чапшăн тăрăшатăн терĕн те, пăхатăп та халь: сана хуна чап кирлĕ иккен ытларах.

Раман Кашкинпа тек калаçса тăмарĕ, çаврăнчĕ те тӳрех Иван Капитонович патне уттарчĕ. Арсентьев ăна тимлесе итлерĕ.

— Каярах юлнă эпир, — терĕ вара. — Каснă йывăçа халь тин сыпса лартаймăн. Унсăрах пур та çав çурт лартмалли вырăн...

— Кашкин пек ăнланман çынсем поссоветра та пур иккен.

— Пур çав, — кăвакарнă çӳçне тăрмаларĕ Арсентьев.— Çитес эрнере райсовет сессийĕ пулмалла. Çавăнта тухса калаçма тивет. Депутат сăмахне хăлхана чикекенччĕ...

Хунав вăрмана тĕшĕрни çинчен Дубов район хаçатне çырчĕ. Çапла вара Арсентьев сессире тухса калаçнипе хаçатри статья чиперех усса килчĕç пулмалла. Çамрăк хырлăхра урăхран йывăç касни курăнмарĕ.

## 50

Ӳпре-пăванлă шăрăх çу кунĕсем хăвăрт иртсе кайрĕç. Лишайкин отпуска тухрĕ, хăй вырăнне Иванова хăварчĕ. Дубовпа Арсентьев шутласа пынă тăрăх, бригадăн çак кунсенчех пилĕк çуллăх планĕ тулма тытăнмалла. Рабочком председателĕ Тарин Дубова кантура чĕнтерчĕ те чикĕ леш енне каймалли тӳлевсĕр путевка пурри çинчен пĕлтерчĕ. Профсоюз обкомĕ пилĕкçуллăхра лайăх ĕçпе палăрнисенчен турист ушкăнне хатĕрлет иккен. Безбородов килĕшсен, Раманăн çулçӳреве арăмне илсе кайма май пурри çинчен каларĕ тата Тарин.

Кантуртан тухсан, Дубов вăрмана йывăç пушатса килекен лесовозпа ларса кайрĕ. Вĕсем халĕ кунтан вăтăр çухрăмра ĕçлеççĕ. Хĕрӳ Хĕветĕр каланă пек, шалта, «тайгара», эппин. Çул тăршшĕпех тавралăха тимлĕн сăнаса пычĕ Раман. Ӳсет вăрман, пушар суранне сиплет.

Бригадир путевка çинчен каласан, пурте тӳрех килĕшрĕç: кайма сĕнеççĕ, ырă çул сунаççĕ. Каçалапа Арсентьев çитрĕ. Мастер çынсене тĕреклĕрех йывăç суйласа илме хушрĕ.

— Ну-ка, пĕрле касар ку юмана! — терĕ вара ăшталанса.

Дубов пăчка вулă çумне тытса пусрĕ, акă ĕнтĕ сăнчăр кĕрпек сирпĕтет, каснă хушăк куç умĕнче тарăнланса, сарăлса пырать. Пурте йывăçа тĕревпе тĕртсе тăракан Хĕрӳ

Хĕветĕр тавра пухăнса тулнă, ăна пулăшаççĕ. Хĕрӳ Хĕветĕрпе пĕрле пурте йывăçа тĕревпе тĕртеççĕ. Юман çĕрелле йывăррăн ӳхлетсе анчĕ, хăватлăн хаплатса тураттисене хуçса сирпĕнтерчĕ.

— Саламлатăп сире, ачсем! Пилĕкçуллăха тултарнă ятпа саламлатăп! — пурне те алă тытса тухрĕ Арсентьев.— Çав йывăçпа сирĕн шăпах аллă пилĕк пин кубометр пулма кирлĕ. Пилĕкçуллăх вĕçлениччен тепĕр вунпилĕк пинне паратăрах. Халĕ, Раман, хамăр музей валли çак юман тĕпĕнчен çаврашка касса юлар. Ун çине çапла çырăпăр: «Тăххăрмĕш пилĕкçуллăха виçĕ çул та пилĕк уйăхра тултарнă ятпа каснă. Хурашыв вăрман пунктĕнчи Раман Дубов бригади. 1974 çул».

Хĕветĕр юмана татма тытăнчĕ.

## 51

Болгарие кайма Анюта савăнсах килĕшрĕ. Ăна валли те, ара, Тарин шантарнă пек, путевка тупăнчĕ. Анюта та упăшкинчен кая юлсах ĕçлемест, вăл та пилĕкçуллăх паттăрĕ.

...Дубовсем çӳлçӳреврен лайăх канса, тулли кăмăлпа таврăнчĕç. Анчах киле çитнĕ-çитменех ырă мар хыпар илтсе пăлханма тиврĕ. Хыпарне Сидоров пĕлтерчĕ.

— Эсир çук чухне пирĕн пăтăрмах сиксе тухрĕ-ха, — терĕ вăл тĕксĕммĕн.

— Мĕн тата? — тĕлĕнчĕ Раман.

— Иван Капитонович чирлесе ӳкрĕ, халĕ те больницăрах-ха. Лишайкин отпускран таврăнсан, пĕлетĕр-и, мĕн туса хучĕ? Çуккă халь пирĕн бригада. Салатса янă. Мана Çтаппан патне, Улькапа Укахвие урăх çĕре, Çинахвана тракторĕпе тепĕр участока куçарнă.

Раман тӳрех кантура чупрĕ. Хĕветĕр ун хыççăн аран ĕлкĕрсе пырать. Начальник алăкне шаккамасăрах яри уçса кĕрсе тăчĕç. Кĕтмен хăнасене курнипе Лишайкин кăртах сикрĕ.

— Мĕнле ыйтупаччĕ?

— Пĕр ыйтупа, — ун умне пырса тăчĕ Дубов. — Ăçта ман бригада?!

Начальник пукан çинчен йăраланса çĕкленчĕ.

— Ăна манран мар, хăвăнтан ыйтас пулать, турист юлташ. Çынсем тар тăкса ĕçленĕ чухне каташчи чупма тухса таракан бригадир кирлĕ мар тесе шутларăмăр эпир.

— Эс, Трифон Сидорч, — калаçăва хутшăнчĕ Хĕветĕр,— пĕлерех калаç. Ниçта та тухса тарман вăл. Путевка па-

нă — кайнă. Унччenex эпир пилĕкçуллăха тултарнă-и? Тултарнă. Вăт и все!

— Пилĕк çуллăх плана тултарман эсир, — терĕ Лишайкин каллех хăйĕн вырăнне ларнă май.

— Тултарман? — тĕлĕнсе куçне чарса пăрахрĕ Раман.— Мĕнле тултарман? Аллă пилĕк пин кубометр пани мĕн вăл? Пĕр уйăх каялла çитернĕ эпир плана. Иван Капитоновичпа пĕрле тĕп-тĕрĕс шутласа пынă эпир!

— Эсир шутлама пултарнă. Никам та чармасть. Сирĕн шутпа тулнă, пирĕннипе — тулман. Бухгалтери йăнăшмасть. Яков Кашкин вара тултарчĕ. Вăл тăрăшса ĕçлет. Таçта инçетре ярăнса çӳремест.

— Эпир наянсем апла? План та тултарман пулать!.. — шăлне çыртрĕ Раман.

— Шăлна ан хăйра, Дубов! — сассине хăпартрĕ Лишайкин. — Арăму умĕнче кăшкărма пултаратăн. Кантурта мар!

Тепĕр кунне Раман ир-ирех вăрманпромхоз кантурне çитрĕ. Пĕтернĕ бригада пирки уççи-хуппине пĕлес килчĕ унăн. Партком секретарĕ Яковлев, коридорта тĕл пулнăскер, Дубова тӳрех хăй пӳлĕмне чĕнсе кĕчĕ. Раман сассине илтсе-ши, юнашар пӳлĕмрен рабочком председателĕ Тарин касрĕ. Дубов вĕсене шăлавар кĕсйинчен пĕрер пысăк сигара кăларса тыттарчĕ.

— Парне.

— Тавтапуç, Раман Митрофанович, — сигарăна илчĕ Яковлев, — Мĕнле кайса килтĕр? Мĕнле кантăр?

Дубов кĕскен каласа пачĕ.

— Эй, мĕн каласси! — терĕ Яковлев. — Унта та наха пулĕ те-ха, хамăр тавралăх та юмахри пекех чаплă-ис! Килсе кăтарт-ха кунта ют çынна — тĕлĕнсе хытса кайĕ. Мĕншĕн кану вырăнĕ мар!

— Лишайкин пĕтерет-ха мана, — кулкаласа сăмаха ĕç еннелле пăрчĕ Тарин. — Çав «таркăна» путевка ма патăн та ма патăн, тет Дубов пирки. Ку тем пăтрататать.

— Лишайкинран тем те кĕтме пулать, — сигара тĕтĕмне маччаналла тĕтĕрчĕ Яковлев. — Вăхăтра тăн кĕртеймерĕмĕр. План тултарма пултаракан начальник тесе тытса пурăнчĕ те директор — халĕ хăй те çук. Шупашкарта. Министр заместительне лартрĕç.

— Антон Николайча-и? — тĕлĕнсе тăчĕ Дубов.

— Çапла, — ура çине çĕкленчĕ Яковлев. — Да, Захаровпа ĕçлеме пулатчĕ, Лишайкин пирки йăнăшрĕ пулин те. Çапла, ăна унта илнĕ. Хам отпускра пултăм. Таринпа Илле Иванов çăвар карса ларнă, сан бригадуна, Дубов,

салаттарса ялтарнă. Арсентьев калани тĕрĕсех пулчĕ: Иванов çирĕп секретарь мар, принциплăх çитеймест унăн.

Тарин, хăйне çăвар карса ларнă тенине илтсен, măк-мак турĕ те пулĕмрен тухса çухалчĕ. Партком секретарĕ Дубов умне темле хутсем кăларса хучĕ. Çăхавсем иккен. Пĕрне Варсонофий Степнов çырнă. Вăл Дубова бригада çыннисемпе ĕçсе çўрет тесе элеклет. Раман пĕррехинче чăнах та ўсĕр Хĕлимуна килне сĕтĕрсе çитернĕччĕ. Çакна аякран курса тăрса йăлт тўнтерле çырса кăтартнă çырă-вĕнче. Тепĕр çырăвĕнче Стасик Павлов ятлать Дубова. Раман çав тери тарăхса кайрĕ. Секретарь ăна лăплантарма васкарĕ:

— Тĕрĕсленĕ ĕнтĕ эпир вăл çăхавсене. Çынна ахаль-тен пылчăкпа варалани çеç. Ним кулянмалли те çук. Брига да пирки те, пилĕк çуллăх план пирки те хуйхăрма кирлĕ мар. Çак кунсенчех вăл ыйтăва татса паратпăр. Сирĕн ум-ра эпир, паллах, айăплă. Каçарăр.

Дубов килне кăмăллăн таврăнчĕ. Вăл çитнĕ çĕре ăна тусĕ, Миша Фильчин, кĕтсе ларать. Вăл вĕсене хăйсем патне çĕнĕ хваттере чĕнет. Хаваспах тухса утрĕç Раманпа Анюта унпа пĕрле. Çĕнĕ хваттерте нимĕнех те çук-ха. Зал-ра пианино ларать, кĕтесре — радиоприемник, ун çумĕнче— баян. Миша кроликсем туянни çинчен мухтанса кăтартрĕ. Раман та çав мăть-мăть чĕрчунсене тахçанах Юманĕ вал-ли илесшĕн. «Айта-ха, курар», — тесе вăл Мишăна кар-тишне илсе тухрĕ.

## 52

Пĕррехинче Рамансем патне Яков Кашкин пырса ларчĕ.

— Хăна пул, — тĕпелелле иртме чĕнчĕ ăна кил хуçи.

— Хăни-качки, эп сăмахпаччĕ те, — алăк патĕнче турт-калашса тăчĕ Кашкин. — Атя-ха урама, калаçар. Пўртре пăчă. Ахаль те тата чуна тăвăр.

Вĕсем, картишне тухса, хăма сĕтел хушшине кайса ларчĕç.

— Мĕн сăмахпаччĕ?

Кашкин хĕрлĕ çўçне якатрĕ, пуклак сăмсине, вырăнта-ши тенĕ пек, тĕккелесе пăхрĕ, Рамана хирĕç пăхаймасăр пуçне чикрĕ.

— Мĕнле калас сана, — тăскаларĕ Якку сăмахсене, — çылăх каçарттарма килтĕм.

— Мĕн çылăхĕ тата? Пĕркун каçарттартăн пуль?

— Чун лăпланчĕ тетĕн-и ман ун хыççăн? — тутине пăрчĕ

Кашкин. — Лăпланма мар, пушшех йăшкама тытăнчĕ. Çĕрле те, кăнтăрла та канăç памасть. Эс пилĕкçуллăха манран малтан тултарнине пĕлсен, тытамак тытнă пек пĕтĕрĕнсе ӳкрĕм. Лишайкин отпускран тухсан, тӳрех ун патне чупрăм. Юрать вăл лăплантарчĕ: «Ма хăран эс уншăн? Ăçта Дубов плана тултарни çинчен калакан документ? — терĕ.— Сӳретĕр, кантăр, таврăнсан ĕçлет—тултарать. Сан вара унниччен малтан тулĕ. Орден — сана. Акă ăçта вĕсем, пилĕкçуллăх кăтартăвĕсем!» — терĕ папкине çапса.

— Халь санран нимĕн те пытараймастăп тесшĕн-и эс? — çамкине картлантарса кулчĕ Дубов.

Кашкин çĕрелле пăхса калаçрĕ:

— Сезонниксен кубатурине хушса çыртарчĕ вăл ман бригада çине; икĕ пин кубометр. Уйăх ытла кайра пыраттăмччĕ атту эп санран.

— Халь те кайра, малта мар. Çапах та малта пулас килет, укçа ĕçлесе илес килет, орденпа йăлкăшса çӳрес килет. Çапла-и?

— Хуть çапса пăрах эсĕ мана çакăнта, Раман, — терĕ Кашкин, — эпĕ айăплă мар. Халь ман мĕн тăвас? Мĕнле тухас халăх умне? Ултав вĕт!

Кăнн пăхнă та Дубов çакăн çинелле, кулсарах ларать. Якку çаплах лăпланаймасть-ха, ăшĕнче мĕн тулса çитнине йăлтах Раман умне кăларса тăкасшĕн пулас.

— Çавăн чух урамра эс мана тĕрĕсех каларăн. Эп чăнах та вăрманти пĕччен тунката. Таврара мĕн пулса иртнине пĕлместĕп. Пуçа чикнĕ те пĕрре — йывăç кутне, каçпа пилĕке ик алăпа тытса тӳрлетнĕ те — киле. Унтан — каллех вăрмана. Вĕçĕмсĕр çапла...

— Çапла çав вăл, пурнăç, — васкамасăр каларĕ Раман, — икĕ тĕрлĕ вăл: тĕрĕсси тата ултавли. Тĕрĕсси, йывăр пулсан та, — таса, çутă, илемлĕ; ултавли, çăмăл пулсан та — вараланчăк, тĕттĕм, усал. Тĕрĕс пурнăç çулĕпе утакан — çирĕп; ултав çулĕпе пыракан — вăйсăр. Мĕншĕн чĕтреççĕ тетĕн халĕ сан чĕркуççисем? Мĕншĕн чĕрӳ мулкач чĕрийĕ пек?.. Мĕншĕн тесен эсĕ ултавлă пурнăç çулĕ çине тăнă. Çав çул çинчи тĕпсĕр шăтăка ярăнасран сехĕрленетĕн.

Кашкин килĕшнĕн пуçне сулса илчĕ, пит-куçне пĕркелентерчĕ, айĕнчи сак хăмине чĕриклеттерчĕ. Раман кашни сăмаха шăл витĕр сăрхăнтарса каларĕ:

— Орден илеттĕнччĕ те ĕнтĕ кулаттăнччĕ манран, теприншĕн хыпкаланма тытăнаттăнччĕ. Эх, санпала! Наградăшăн çеç ĕçлеместпĕр вĕт! Эс мана кала-ха тĕрĕссине. Малтан та хушса çырнă вĕт сан бригаду çине? Тӳрех кала.

Манран мён пытаран? Пурпёрех пёлетёп. Халăх контролерёсем тёрёсленё-çке. Миçе хутчен мала тухнă эсир ултавпа, премиилнё!

— Пулнă! — терё Кашкин, типё пусăрăнчăк сасăпа.— Анчах хальхи пек нумай хушман,

Раман кăштах шухăша кайса ларчё те сăмахне каласа пётерчё:

— Ултав вăл хăвăнтан та тухать, çынран та. Халах куçё курать ăна, хăлхи — илтет. Акă, санăн та çавах. Тухрё суя. Ана ниçта та чикейместён. Хут çинче тулнă сан пилёкçуллăху, тёрёссипе — çук. Тата уйăх ытла ёçлемелле. Çакна асту, Якку: саншăн Лишайкин ёçлемест. Вăрманне санăннах касмалла, санăннах тар кăлармалла. Малалла та Лишайкин çулёпех кайсан, чăн та вăрманти пёччен хăвăл тунката пулса юлăн. Тасат чунна. Çёрме ан пар хуна.

Те ăнлансах çитерчё ёнтё Кашкин çакна, темле, анчах сывпуллашса кăмăллăнах тухса утрё.

Пилёкçуллăх паттăрёсен уявне Дубов бригади ячёпе иртерчёç. Фильчин оркестрё кунашкал хăватлă туйăмпа вылянине астумасть Раман. Пурте савăнăçлă. Бригадира пилёкçуллăх ударникён паллине тата Хисеп грамоти пачёç. Тарин ун аллине сехет çыхса ячё. Коллектив куçса çÿрекен Хёрлё ялав çёнсе илнё. Ялав илме сцена умне бригада çыннисем пурте тухрёç.

## 53

Первомайскра вăрман хуçалăх министрён заместительне тахçантанпах кётетчёç. Сăлтавё пурччё çав кётме. Директор ёçне вăхăтлăха туса пыракан тёп лесничи вăрманпромхозшăн тăрăшсах кайманни пур енчен те сисёнетчё. Çавăнпа усă курса, Лишайкин пуçсăрланса кайрё, лесничие пуçран шăлса, поселок çывăхёнчи лайăх вăрман лаптăкёсене касса çаратма пуçларё. Çапла Мерчёкри ирёклё пурнăç уншăн Хурашыва та куçрё. Хăйне ёлёкхи вăрман улпучё пекех тыткалать. Хăравçă, йăпăлти, икё питлё çынсем явăнаççё ун тавра.

Министр заместителё малтан пёр никама асăрхаттарса хумасăр килсе çитрё. Рамансем Первомайск хыçёнче ёçлетчёç. Çамрăк хурăнлăхра йăлт хăшкăлса çитнёччё вёсем. Йăвантар-йăвантар вётлёхе — кубатура çук. Ÿссе çитмен вăрмана çапла пётерттернёшён тарăхса чунё кÿтнёччё.

Кăштах канса илес тесе Дубов пăчка чарчё. Суракан

пилёкне аллипе сăтăркаласа тăратчĕ. Курах кайрĕ, вĕсем патнелле Захаров, хром аттипе туратсене шатăртаттарса, питваскавлăн вашлаттарса килет. Кăлкан çÿçĕ çилпе вĕлкĕшет. Ак, хурăн тункати умне çитсе тăп чарăнчĕ те Раманпа Хĕрÿ Хĕветĕре шăнăрлă хытă аллине тăсса пачĕ.

— Так, так,—çаврăна-çаврăна сăнарĕ Захаров хурăнлăха,—касатпăр, пĕтеретпĕр... Çынсем чĕнмесĕр тăнине кура хăй тĕллĕн юмахланăн калаçрĕ:—Тепĕр вунă çул та пулин усрас тенĕччĕ ку тăрăха, ку хурăнлăха. Вунă çулта миçе пин кубометр йывăç хушăнатчĕ, хурăн пирчеве кĕрсе çирĕпленетчĕ. Хам директор чух ятарласа хăварттартăм. Пĕтеретпĕр капла кассан, Роман Митрофанович!..

Шарламасăр тăракан Дубов хумханнине, тарăхнине кăтартас мар тесе хăйне çирĕпрех тытма тăрăшрĕ, министр заместительне лăпкăн тавăрса каларĕ:

— Эпир ĕнтĕ пĕтеретпĕр-ха, Антон Николаевич, çаратсах хăваратпăр вăрманне. «Дружба» кăшлать те кăшлать. Çанталăк йĕпене кайрĕ. Каснă йывăçа турттарса тухма йывăр. Икшер тракторпа турттараççĕ вăн. Пĕлетпĕр, кунашкал çанталăкра транспорт ĕçĕн хакĕ икĕ-виçĕ хут та хăпарса каять. Вăрмана шала кĕрсен тата ÿсет вăл. Хăйхаклăх, услам тетпĕр... Пĕлетпĕр ăна та. Хакла ларать йывăç, вăрманпромхоз «çука тăрса юлать». Çавăнтан шикленсе поселок тавра ÿсекен çамрăк вăрмана пĕтеретпĕр те ÿсме памастпăр. Кăçал касăпăр ку вĕтлĕхе, килес çул... Тепĕр вун-вунпилĕк çултан мĕн касăпăр? Хамăр пуç çинчи çÿçе-и? Çанталăк тесе... Вăл пире нихçан та ачашламан. Ĕçлеме яланах йывăр. Çапах пире ÿссе çитеймен вăрманах кастараççĕ, хăйхаклăха пăхмасăрах. Тĕрĕссипе каласан, касассине çулсерен чакарса пымалла. Ытларах—ÿстермелле. Таврари вăрман ахаль те кĕсен çинĕ пуç пек тăрса юлчĕ. Мĕн, халь вăрçă вăхăчĕ-и е вăрçă хыççăнхи йывăр тапхăр-и? Вăрман, тĕрĕссипе, тайгара та нумай...

— Эх, Çĕпĕр вăрманĕ вăл...—аллисене саркаласа кăтартрĕ Хĕрÿ Хĕветĕр,—пирĕн вăрман-и! Симĕс укиян. Вĕçĕ-хĕрри çук. Эпир, ак, хамăрăн çак мăн кÿлĕ пысăкăш чăваш вăрманне тапăнатпăр. Чармасан пире...

Ушкăна кĕрсе тăнă Улька чанкăлтатса илчĕ:

— Эсĕр, Антон Николайч, пирĕн бригадира ан ятлăр. Вăл айăплă мар. Ку хурăнлăхшăн куççуль тăкнă пек нихçан та, нимĕншĕн те макăрман пуль эпир.

Вара Дубов министр заместительне тĕпĕ-йĕрĕпе ăнлантарса пачĕ. Çамрăк хурăнлăхра çĕнĕ лаптăк виçсе парсан, Дубов бригади унта йывăç касма килĕшесшĕн пулмарĕ. Вĕсене кура Çтаппан бригади те çаплах турĕ. Арсентьев хисте-

мерĕ вĕсене. Унăн хăйĕн те çамрăк вăрманшăн чунĕ ыратать. Лишайкин хăратса та пăхрĕ. Дубовсем пурпĕрех ĕçе тытăнмарĕç. Тĕп лесничи сăмахĕ те ўкĕте кĕртеймерĕ. Лишайкин вара урăх участокри Кашкин бригадине куçарса килчĕ. Якку ним пулман пекех касма тытăнчĕ çамрăк хурăнлăха. Вара, пирĕнсĕр те пурпĕр касаççĕ тесе, Дубовсем те ĕçе пуçăнчĕç. Иккĕмĕш кун халĕ хурăнлăхра мотор сасси ăмăртмалла кĕрлет. Дубов ĕç хыççăн райком секретарĕпе тĕл пулса калаçнăччĕ. Секретарь министерствăпа çыхăнма пулчĕ, çавăнпа çитрĕ пуль-ха Захаров кунта.

— Акă мĕн, юлташсем. Урăх кунта касмастăр. Ыран аллăмĕш квартала шултра вăрмана каятăр.

Захаров сăмахĕ пурне те савăнтарса ячĕ. Антон Николаевич, умĕнчи тунката урлă каçса, Рамана хулпуççинчен çапса илчĕ, ăшшăн кулса калаçрĕ:

— Маттур. Бригаду та ху пекех. Ўлĕмрен те çапла ĕçлĕр: пĕлсе, шухăшласа, малашлăха пăхса. Çырăвне илтĕм, расчетсем тĕрĕс. Ун пирки кайран калаçăпăр.

## 54

Парти пухăвĕнче Антон Николаевич сăмах каланă чухне Раман хăйĕн хушаматне илтессе кĕтменччĕ. Халĕ, ак, çавăнпа-ши, Лука Павлович çумĕнче вăтанса ларать вăл.

— Пуçаруллă çын сăмахĕ, — тет Захаров,—яланах ăслă, вырăнлă. Акă, Безбородова, Яльчикова, Арсентьева тата Дубова илер. Вĕсем министерствăна пысăк çыру ячĕç. Наука ĕçĕ пекех вăл. Унта хамăр таврари вăрманпа мĕнле усă курмаллине, ăна епле майпа лайăхрах сыхласа хăвармаллине тĕплĕн шухăшласа-шутласа çырса кăтартнă. Эпир ун тăрăх ĕçе тĕрĕслерĕмĕр, темиçе хутчен те виççетанлаштарса пăхрăмăр, кайран вара министерство коллегине кăлартăмăр. Чăнах та, хăй вăхăтĕнче эпир республикăра вăрмана нумай касса пĕтернĕ. Çуллен виçĕ миллион кубла метр. Мĕн тăвăн, вăл пĕтĕмпех хамăртан килмен, çĕршыв йывăç ыйтнă. Халĕ те нумай касатпăр-ха—çуллен ултă пин гектар. Ултçĕр пин гектар çинче вăл палăрман пек те туйăнĕ, паллах. Йывăç мĕнле ўснине шута илсен, лайăхах сисĕнет вара. Касма вăхăт çитмесĕр вăрмана пĕтерсе пыма парар мар. Çавăнпа çитес пилĕкçуллăхра касмалли план икĕ пин гектара яхăнах чакать. Ытларах — лартса ўстеретпĕр. Вăрманпромхозсенчен вăрман комбиначĕсем тăватпăр. Каснă йывăçран строительство материалĕ, халăха кирлĕ таварсем хатĕрлеме пуçлатăр ак эсир те.

Хальхи анатри склад цехĕ, завод тусан, пилĕк хут нумайрах продукци пама тытăнĕ. Çĕнĕ комбинатăн çĕнĕ директорĕ те пур.

Министр заместителе вăрманпромхозăн тĕп инженерне Степанова ура çине тăратрĕ. Анатолий Семеновича Раман тахçанах пĕлет, хисеплет ăна. Пуриншĕн те авторитетлă çын вăл. Аслă, тарăн шухăшлать, паянхи ыйтусене малашлăхпа çыхăнтарма тăрăшать. Темиçе хутчен те пулнă Дубов ун патĕнче, кашни сесси умĕн чăрмантарнă ăна. Кĕскен те асра юлмалла ăнлантарса парать Степанов йывăр ыйтусене. Раманшăн вăл институтри профессор вырăнĕнчех темелле.

Анатолий Семенович, пулас комбинатăн çĕнĕ директорĕ, хĕрĕхелле çывхаракан вăтам пӳллĕ çивĕч арçын. Хуп-хура çӳçлĕ, тăрăхларах питлĕ, тӳрĕ сăмси çумĕнчен тута хĕррине ике тарăн йĕр анать. Чĕрĕ куçĕ ниçсе çитнĕ çĕмĕрт пек хура.

Захаров хăйĕн хушаматне татах асăннипе Раман картах сикрĕ. Вăл ун бригадине коллеги ячĕпе тав тăвать. Антон Николаевич çав вăхăтрах тарăхтаракан хыпар та пĕлтерчĕ. Дубовсем çинчен министерствăна элек çитнĕ-мĕн. Çакна илтсен, пуху шавласа кайрĕ: кам ухмахĕ тапăнать вара çаплах çавăн пек çынсене?..

— Кулăшла япала, çапла-и, юлташсем? — малалла калаçрĕ Захаров. — Çăхава çыраканĕ хăйĕн ятне кăтартман, анчах суя сăмах суяпах юлать вăл. Эпир чăнлăха хамăр куçпа куратпăр.

Дубовсенчен инçех те мар Лишайкин хĕп-хĕрлĕ ларать.

Çĕнĕ директор Лишайкина тӳрех тĕкĕнмерĕ-ха, вырăнĕнчех хăварчĕ. Дубова вара тапăнмаллипех тапăнчĕç — вăрман пунктне участок мастерне лартасшăн ăна. Раман килĕшмерĕ. Ара, хăйĕн тĕллевĕ пур-ха унăн. Тепĕр пилĕк çул та пулин бригадиртах юласшăн. Кĕçех пĕчĕк комплекслă бригадăсем пĕтмелле, вĕсем вырăнне механизациленĕ бригадăсем йĕркеленĕç. Пысăк бригадăпа ĕçлесе курас килет Дубовăн. Ун чухне вăрманта хĕрарăмсене йывăр ĕçе тăратасси пĕтĕ. Вăрман касма пуртăсăр çӳреме тытăнĕç çынсем. Ахальтен мар Раман кĕркунне трактористсен курсне вĕренме кĕчĕ.

Комбинатри коммунистсем ăна районти партконференцие кайма делегата суйларĕç. Конференци пухăнас кун Раман ирех вăранчĕ. Анюта та вăраннă, упăшки çине ăшшăн пăхса выртать.

— Сан паян уяв, саламлатăп, — питĕнчен ачашларĕ вăл ăна, — çĕнĕ кĕпе, çĕнĕ галстук хатĕрлесе хутăм çĕр-

каçах, костюмна та çĕннине тăхăн. Ĕç тумтирĕ йăлăхтарсах çитерет пуль. Çынсем пек, хăçан служащи пулĕ-ши ман упăшка? Вĕрент-вĕрент... Мастера та лармарăн...

Райкомăн пысăк залĕнче Дубов хăйсене темиçе çул каялла куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав панăранпа тек пулман. Вĕсем, комбинат делегачĕсем, пурте пĕрле чӳрече çумĕнчи пĕр рете вырнаçса ларчĕç. Яковлевпа Степанов Рамана хăлхаран икĕ енчен пĕр харăс пăшăлтатрĕç: «Сана, Дубов, бюро членне суйлаççĕ. Ан хумханса ӳк».

Шӳт пулĕ-ха ку тесе шутларĕ Раман, сăмаха кула-кула ирттерсе ячĕ. Анчах та тĕрĕснех каланă иккен ăна. Конференци Дубова акă, райком членне, облаçри партконференцие кайма делегата суйларĕ.

Райкомăн организациллĕ пленумĕ пуçланчĕ.

— Райком бюровĕн членĕ пулма, — терĕ пĕрремĕш секретарь, — вăрман комбинатĕнчи йывăç касакана Роман Митрофанович Дубова суйлама сĕнетĕп. Кам çакăнпа килĕшес тет...

Бюро членне суйланă Рамана секретарь сцена çине чĕнчĕ:

— Дубов юлташ, кунта хăпарма ыйтатăп.

Парторгпа директор хушшинче ларакан Раман çак саманта темле сиссе те юлаймарĕ, ик енчен тĕртнипе имене-именех ура çине тăчĕ, малалла суккăр çын пек утса кайрĕ. Темиçе утăмран тин пурте хăй вырăнне ларчĕ, вара васкасах сцена çинчи сĕтел патнелле çывхарчĕ çын, секретарĕн хăйĕн еннелле тăснă аллине тытса чăмăртарĕ. Лешĕ тӳрех:

— Во! Аçта вăл вăй! — тесе хучĕ ырланăн. — Кун пек вăйпа шикленмелли çук. Ниçта та, нимрен те, никамран та. Чăн-чăн рабочи класс вăйĕ хушăнчĕ пирĕн бюро йышне.

## 55

Степанов директорăн алли вăрман пункчĕсенче те, анатри складсенче те тӳрех палăрчĕ. Ĕçре çынна шанмасăр тăмасть пулин те, вăл кăтартусем мĕнле пурнăçланнине хăй куçĕпе çитсе курма юрататъ, курма анчах мар, ăна пурнăçа кĕртме пулăшать.

Директор виçĕ бригадăран пĕрре тумалла терĕ. Халĕ бригадăсенче пĕрер трактор, пĕрлештерсен, иккĕпех çитет, теприне урăх çĕре куçарма пулать.

Çĕпĕрте унта вахта меслечĕпе ĕçлеççĕ. Çул çук чухне йывăç касса хатĕрлеççĕ, çӳлти склада купаласа хураççĕ

ăна, çул уçăлсан — турттарса кăлараççĕ. Степанов тĕрĕс калать, кунта та çавăн пек ĕçлеме май пур.

Уяв хыççăнах бригадăсене пысăклатрĕç. Раман бригадине Хурашывран вăтăр çухрăмри вăрмана куçарчĕç. Халĕ вĕсем поселока эрнере пĕрре çеç килсе каяççĕ. Çĕрле утар пÿртĕнче выртса тăраççĕ. Хĕрÿ Хĕветĕр каллех сăмах-юмах чĕртсе ячĕ. Хĕлĕх Хĕлимунне пĕтерет.

— Хайхи, — тет Сидоров, — пĕррехинче пирĕн Хĕлимун куç курми пуличчен ярса лартнă, хывăнман та, арăмĕ патне те çитеймен, алăк çумĕнчи тăрăхла сак çинчех çĕрĕпе хуп турттарнă. Арăмĕ, ирех тăрса, пасара кайма хатĕрленнĕ. Упăшки вăрансан мухмăр чĕртме Машка-Милашка патне тухса ан кайтăр тесе, Хĕлимуна сак çумне кĕпе çакмалли вăрăм кантрапа яваласа çыхса хăварнă. Сахал выртнă-и Хĕлимун, нумай-и, ăна хăй пĕлет, хайхискерĕн пичĕ кăтăкланнипе хăрах куçĕ тĕтреленсе уçăлать. Умĕнче пĕр çăмламас шуйттан тăра парать, хĕп-хĕрлĕскер. Самантрах сив тара ÿкет Хĕлĕх. Чăлт-чалт тутарать шуйттан ун питне йĕпе чĕлхипе, сăмсине хыпса лартать, ăна тĕке-тĕке тăрăшсах ĕмме тытăнать. Ярса илесшĕн çакна Хĕлимун — аллине çĕклеме çук, тăрса тапса сирпĕтесшĕн — ури те тапранмасть. Мĕн амакĕ ку тесе хăшкăлать Хĕлимун. Ана-кăна нимĕн те ăнланаймасть. Çăмламас шуйттан нăчлаттарать те нăчлаттарать сăмсана. Ĕнтĕ кăтăкланмасть сăмса, пĕçерсе ыратма тытăнать. Тин чалтăрах уçса ярать Хĕлимун хĕсĕк куçне, мăч-мăч тутарса пăхать: нимле шуйттан та мар, чĕчĕ пăрушĕ нăчкать иккен ун сăмсине. Сурса хăваласа ярать Хĕлимун пăрăва. Çĕкленесшĕн хăй — çĕкленеймест, майран кантра касать. Аптранипе пуçне пăркаласа пăхать, пăрушĕ тата, ку хăйпе вылять тесе пулас, каллех тăртаннă сăмсаран ярса илет. Кăшкăрса хăратасшăн Хĕлимун, нимле майлă сăмах килмест чĕлхе çине, аптранипе вара хаç! тесе çухăрса ярать. Пăрушĕ, Ася ятлăскер, хăйне чĕннине илтсе, пушшех ун çумне çыпçăнать. Иккĕшĕ турткалашнипе сак урайне тÿнсе каять. Хĕлимун хырăмĕ çине хаплатать. Ася чупса пĕр çаврăм тăвать те кăрст! кăрст! сикме тытăнать сак урлă. Хĕлимун ун айĕнче сăмсана лапчăтса выртать, кăшкăрма тытăнать: «Хурах! Хурах!»

Эп çав вăхăтра шăпах пасартан таврăнаттăм, хурахлатнине илтсе чупса кĕтĕм, çăлтăм çынна инкекрен. Халь çывăрать-ха мăшлаттарсах, тĕлĕкре хĕрлĕ çăмлă шуйттансем курать пуль. Авă, пăхăр-ха лайăххах, пичĕ çавăнпа ун тĕк татнă хур ÿчĕ пек шатрашка, сăмси пару ашĕ пек хĕп-хĕрлĕ.

Утар пӳртне янратнӑ кулӑ сассипе Хӗлимун чалтах сиксе тӑчӗ, пит-куҫне сӑтӑрса, ун-кун пӑхкаларӗ, Хӗветӗрӗн карса пӑрахнӑ ҫӑварне курчӗ те хирӗҫ лаплаттарса хучӗ:

— Кулаканӑн мӗнне кӗсен тухтӑр!

Унтан, ҫӑматӑ тӑхӑнса, пӳртрен тухрӗ те вӑрман шавне итлеме пуҫларӗ. Ҫав вӑхӑтра хыҫлӑ ҫуна кӳлнӗ лаша ҫитсе чарӑнчӗ. Вӑл чарӑннӑ-чарӑнман ҫуна ҫинчен директор сиксе анчӗ те тӑлӑпне хывса ҫӗклерӗ. Хӗлимуна пырса алӑ тытрӗ. Степановпа пӗрле Хӗлимун та пӳрте кӗчӗ, халӗ хӑйӗнчен никам та кулма хӑймасса сиссе, директор ҫумне кӗрсе ларчӗ. Анатолий Семенович хӑй кунта виҫӗ кунлӑх ҫеҫ килнине пӗлтерсен, Хӗрӳ Хӗветӗр кӗркуннехине аса илтерчӗ.

— Пулмарӗ апла ман сирӗншӗн курортра канасси!..

— Пулмарӗ ҫав пӗр уйӑх ӗҫлесси, — ун еннелле ҫаврӑнчӗ директор.. — Май килмест. Отпускра Мускава каймалла, аспирантурӑпа ҫыхӑнтӑм та — тепленсе лармалла пулать. Халӗ вара пурпӗрех ӗҫлӗпӗр. Арсентьев кунта пӑчкӑ пур тенӗччӗ. Пулӑшакан тупмалла. Кам килӗшет?

— Манпа килӗшетӗр-и? — ваштах пуҫне ҫӗклерӗ Хӗлимун. — Йӑлӑхрӑм турат иртсе: йывӑҫ каснӑ ҫӗрте ӗҫлесе курас.

— Апла-тӑк, килӗшӗпӗр, Роман Митрофанович хирӗҫлемест пулсан.

Хӗлӗх Хӗлимунӗ савӑнчӗ.

Тӑватӑ пӑчкӑпа ӗҫлерӗҫ. Раман Анатолий Семеновичпа ӑмӑртать. Тем пек шеллет вӑл ӑна лутӑрканнӑшӑн, туять мӗнле йывӑррине. Сидоров, ватӑ енне кайнӑ пулин те, йывӑҫ кутӗнчи юра Хӗлимунран вӑйлӑрах сирпӗтет. Юрӗ пилӗк таранах та, эхлетмелӗх, тар кӑлармалӑх пур ҫав. Ҫапах Хӗветӗре бригадир канма памасӑр хӑвалать. Ӑмӑртура уншӑн юлташ та, хӑвӑнтан аслӑ ҫын та ҫук. Ӑмӑртура — санпа ӑмӑртакан ҫын кӑна. Хӑйсем чылай мала кайнӑран ҫапах та директорпа Хӗлимуна пулӑшма шутларӗҫ. Анатолий Семенович хӑшкӑлсах ҫитнӗ, «Дружбӑна» аранаран ҫӗклет. Хӗлимун нӑйкӑшса илчӗ:

— Турат иртнӗ ҫӗрте канма та пулатчӗ, кунта — ҫук. Юр хырсах тӑн тухать. Хамах килӗшрӗм те ӗнтӗ...

— Ҫапла ҫав вӑл, хӗрӳ ӗҫ, вӑй парса тумалли ӗҫ, — терӗ ӑна Хӗрӳ Хӗветӗр. — Пурте сан пек ӗҫлесен, эпир хальхи хамӑр вӑхӑтринчен ҫирӗм-вӑтӑр ҫул кайра пымалла.

— Ытла ан хӑртӑр-ха ӑна, чиперех ӗҫлет-ҫке ҫынни, — хута кӗресшӗн пулчӗ директор.

— Вӑт ҫапла ҫав вӗсем, — ҫакна курса пӗчӗк ачаллах

хĕпĕртесе ӳкрĕ Хĕлимун, — çапла пăсса яраççĕ ман кă-мăла.

— Сана, чĕмерене, хамăрăн лайăх кăмăл пулмасан, тах-çанах кăларса сирпĕтмелле те коллективран, пиçене тырă анинчен тăпăлтарса пенĕ пек... Çпаççипă кала юлташусене. Ĕçке парăнакан çын вăл нихăçан та ырă туман ыттисене, яланах урараи такăнтарнă, халĕ те çавах. Камăн та пулин ĕçлес пулать уншăн, камăн та пулин ытларах тар кăлар-малла. Сана!.. — ятларĕ ăна Хĕветĕр. — Ĕçкĕпе япăхса çухатнă çулсемшĕн ĕçлесе татас тесен, санăн чĕптĕм куç хупмасăр ăшталанмалла халь, эпир каннă чухне те юр хырмалла.

Директор сăмах хушсан тин Хĕрӳ Хĕветĕр чарăнчĕ.

— Хăрап эп кунта сирĕн патăрта, — пуçне хыçса илчĕ Анатолий Семенович. — Пĕрре ярса илсен, чĕррĕн кăлар-мастăр капла, юрать виç кунлăх çеç килтĕм, уйăхлăх мар...

— Çапла вĕсем, ман воспитательсем, — пуçне вăкăр пек чалăшшăн пăрса пăхрĕ Хĕлимун, — пĕр канăç та памаççĕ, пуça çурхи калчалла чăл-чăл çӳлелле çĕклеттереççĕ. Çапла вĕсем...

56

Сисмесĕрех иртет вăхăт — эрнесемпе уйăхсем пĕрне-пĕри таптаса васкаççĕ. Çурхи хĕвел çӳлерен те çӳле улă-хать. Ун хĕрӳлĕхне чăтаймасăр хулăн юр пусăрăнса, пу-сăрăнса пырать, йывăç айĕсене пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех ирĕке кăларать. Куç умĕнчех чакса, йăшса пыракан юр çине пăх-са савăнать вăрман çынни.

Çĕр çумне лăпчăнса юлнă кĕрт кавирĕ çинче Хĕлимун алă çупса ташлать. Укахвипе Улька та çаврăнса илеççĕ. Вĕсене хирĕç çырма леш енчен тĕлĕнмелле пĕр трактор кĕрлесе тухрĕ те утар патĕнче чарăнчĕ.

Кабинăран сиксе аннă Раманпа Çинахван юлташĕсене çĕнĕ машинăпа паллаштарма тытăнчĕç.

— Ку вышка пекки мĕн япала? — патакпа тĕллесе кă-тартрĕ Хĕрӳ Хĕветĕр.

— Гидроманипулятор, — ăнлантарчĕ Раман.

— Ун вĕçĕнчи, слон хоботĕ пекки тата?

— Йывăç касса тӳнтермелли. Хăех касать, хăех турт-тарса тухать ку трактор.

— Тураттине те хăех иртет-и?

— Тураттине те санран лайăхрах иртет, — кула-кулах ăнлантарать Çинахван.

Савăннипе Хĕлимун трактор тавра тапăртатса çав-рăнчĕ:

— Тин ман праçник çитрĕ, тин турат касма пăрахап!

Хĕрӳ Хĕветĕр ушкăн варрине кĕрсе тăчĕ те яланхи пекех каллĕ-маллĕ çаврăнкаласа калаçма пуçларĕ:

— Ку сезон, тем, пирĕншĕн юлашки пулчĕ пуль. Раман Митрофановича паянтан пулăшакан та, турат иртекен те, трелевка тăвакан та кирлĕ мар. Эпир ытлашши. Çапла-и?

Юлташĕ ăçталла кукăртнине туйрĕ Раман, çавăнпа ăна чарчĕ:

— Чăнах та ку машина йывăç касма та, турттарса ăна пакета пухма та пултарать. Халех ĕçлеттерсе пăхăпăр. Ячĕ унăн ЛП-19. Мускаври выставкăра капăрланса ларатчĕ, тинех вăрмана çитрĕ. Вуншар çул хушши эртелпе тунă ĕçе пĕччен тума пултаракан машинăшăн пурте савăнар. Вăл пирĕн ĕçе çăмăллатать.

— Çапла пуль-ха та, — тутăр вĕçне пĕтĕрсе тăчĕ Улька. — Хăнăхрăмăр та ку ĕçе, каяс килмест-çке вăрмантан...

— Уншăн пăшăрханма кирлĕ мар. Сире, вăрман çыннисене, вăрмантан уйăрмĕç, çăмăлрах ĕç тупса парĕç. Касасси — арçын ĕçĕ вăл. Сире валли вăрман заводĕнче, йывăç лартса ӳстернĕ çĕрте те ĕç мăй таранах.

Улька пурпĕрех кăмăлсăр юлчĕ.

Кĕçех директорпа райком секретарĕ, Иван Капитонович, тĕп инженер тата темиçе çын килчĕç. Акă, ЛП-19 машина çатăртатса пысăк хыр айне çитсе чарăнчĕ, ăна «хобочĕпе» явкаласа тытрĕ, унтан вĕçĕнчи пăчкăпа татрĕ, çĕклесе илсе майласа хучĕ. Пĕрре, иккĕ, виççĕ... Вара каснă йывăççене çаклатрĕ те, МАЗсем тăракан вырăна, çӳлти склада сĕтĕрсе кайса майласа хучĕ.

Анатолий Семенович чăтаймарĕ, машина чарăнсассăнах кабинăна кĕрсе ларчĕ, хăй аллипе темиçе хыр касса пăхрĕ.

— Ну, халĕ, Раман Митрофанович, «Дружбăна» палăк вырăнне лартатпăр, — терĕ савăнпă Степанов.

— Ăçта лартăпăр?

— Вăрмана кĕнĕ тĕле, Хурашыв поселокĕ умне. Миллион йывăç та касрăм пуль тенĕччĕ-и-ха эс унпа?

— Çапла каланăччĕ.

— Апла пулсан, айне çырăпăр: «Вăрман тусне — вăрман çыннисенчен. Раман Дубовпа пĕрле миллионмĕш йывăç каснă ятпа». Ну, мĕнле, килĕшме пулать пек-и, парторг?

— Çынсем пирки шухăшлас пулать пирĕн, — терĕ малалла директор. — Вăрман хуçалăхĕнчи ĕç аталанса, сарăлса пырать, техника çĕнелет. Çав техникăна алла илме пултаракан çамрăксем кирлĕ пире.

— Килес текенсем пур-ха вĕсем, çамрăксем, вăн Херӳ

Хĕветĕр ачи те çак машинăпа ĕçлеме практикăна кайнă, — терĕ Çинахван.

Çапла шутламан çĕртенех пĕчĕк митинг пуçланчĕ. Райком секретарĕ темиçе минут калаçрĕ, юлашкинчен Дубов еннелле çаврăнчĕ те:

— Халĕ,— терĕ вăл,— сирĕн маттур бригадира, Роман Митрофановича, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ парăпăр. Ăна вăл чăн-чăн хастарлăхпа çĕнсе илнĕ.

Çакăн хыççăн райком секретаре Сидорова Ĕç мухтавĕн виççĕмĕш степеньлĕ орденне, Çинахвана, Улькапа Укахвине тата Çтаппана «Ĕçри паттăрлăхшăн» медаль пачĕ.

Хĕрӳ Хĕветĕрпе юнашар тракан Хĕлимунран Улька пӳрнипе тĕллесех кулать:

— Курăр-ха, курăр! Хĕлимун та орден кĕтсе кăкăрне кăвакал аçи пек каçăртнă! Сана тахçанах юман медаль çакса янăччĕ вĕт Хĕветĕр пичче! Пуринчен малтан. Бригадăри пĕрремĕш медалист эс...

Хĕлимун нимĕн калама та пĕлмерĕ, аптранă енне çĕлĕкне чалăштарчĕ, тӳрлетрĕ, пăркаланса илчĕ, хăйматлăх хĕрне пӳрнипе юнарĕ.

— Вăт çапла çав вăл, — терĕ Тарин, — кăкăра тем пек каçăртсан та, халь нимĕн те лекмест.

Вăрман комбинатĕнчи ăмăртура бригада мала тухнă. Директор коллектива куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав пачĕ. Кашниех премии илчĕ.

— Пысăклатнă бригада вахта меслечĕпе ĕçлени мĕнле усă кӳнине халĕ эпир, юлташсем, хамăр куçпа куртăмăр. Эсир хăвăр шутланине чыслăн пурнăçларăр. Яков Кашкин та сирĕн тĕслĕхпе ĕçлеме пуçларĕ. Малашне бригадăсене пурне те пысăклататпăр. Тавтапуç сире, паттăрсем, — савăнса каларĕ директор.

ЛП-19 илсе килнĕ хыççăн бригада вахта участокĕнче нумай пурăнмарĕ. Çанталăк ăшăтнăçемĕн ăшăтрĕ, йывăçсем тавра шыв ункисем çуталчĕç. Çĕрнĕ тунката тĕмисем çинчи кăвак чечеке курса, вĕлтренкайăк юррине илтсе, Раман тахçанхи çуркуннене аса илчĕ. Вăрмана килнĕ пĕрремĕш çуркуннене, вăрманпа туслашнă пĕрремĕш çула, пĕрле йывăç касма пуçланă хĕре... Аса илчĕ те васкасах чечек татма пуçларĕ: арăмĕ валли, амăшĕ валли, ывăлĕ валли... Пурне те савăнтарĕ вăл паян çуркунне парнипе. Паян вăл хăйĕн хастар юлташĕсемпе пĕрле вăрмантан çĕнтерӳпе таврăнать.

Ир пуçланнă çуркунне хăвăрт шавласа иртсе кайрĕ. Тавралăх тутлă шăршăпа тулчĕ, симĕс тумпа витĕнчĕ. Раман Хурăн çулçи паркĕпе утать. Паркран тухсанах, Безбородов хуçалăхĕ курăнса кайрĕ. Çитме инçе-ха, çухрăма яхăн. Çапах халĕ анатри склад çывăхланнă пек. Дубовсем вăрманта ĕçленĕ чухне чугун çул хĕррине башньăллă пысăк кран вырнаçтарса лартнă. Кран вăрăм аллипе йывăç купине ярса илнĕ те, ав, улăп пек çавăрттарать сывлăшра. Эстакада çумĕнче кабель-кран юписем тăрăсăр тăрса юлнă хырсем пек кăнтарса лараççĕ. Вĕсем хушшине машинăсем çинчен запаслăх йывăç пушатса хунă. Купи икĕ хутлă çуртран та çӳллĕрех пулĕ. Çул типиччен ĕçлемелĕх пур кунта. Çул уçăлсан, Рамансем каснă çĕртен тепĕр уйăх ĕçлемелĕх турттарма пулать. Çапла комбинатăн ĕçĕ халĕ пĕр тикĕссĕн пырать.

Дубов анатри склад кантурне кĕчĕ. Кирлĕ документсем илнĕ çынсем тухса кайнă хыççăн пӳлĕмре Яльчиковпа Безбородов кăна юлчĕç. Лука Павлович Рамана чӳрече умне чĕнчĕ.

— Куратăн-и, иккĕмĕш кран çĕкленет. Кăçал ĕçе ятартпăр. Вакунсене мĕнле тиетпĕр халь? Строп-пакетпа. Леш, хăвăр патăрти Илле ашшĕ, Егор Иванч, эп астăвассах çакăнта, анатри складра, грузчикра ĕçлетчĕ. Миçе пин кубометр йывăç йăтман-ши хулпуççипе, миçе çĕр вакун тиеменши вăл! Кран пулнă ĕнтĕ — чĕрĕ кран. Башньăллă кран хута кайнă кун курасчĕ сан ăна, мĕнле ташша ячĕ вăл! Ун хыççăн нумаях ĕçлеймерĕ, пенсие ăсатрăмăр. Авă халĕ вут илме килнĕ. Кранпа вакун тиенине мĕнле сăнать!

Яльчиков та чӳречерен пырса пăхрĕ. Лере Егор Иванович çурт хыçнелле кĕрсе кайсан, пуртс сĕтел патне таврăнчĕç.

— Темскер, эп те ватăлап пулмалла, — чĕлĕм тивертнĕ май аяккине хыпашларĕ Яльчиков, — шăмăсем сурма пуçларĕç, ĕшентерет.

Лука Павлович ăна хавхалантарасшăн пулчĕ:

— Мантăн-им аçа-çиçĕмле хăвăртлăха? Эх, тачанка!..

Хастарлăх кĕввине илтнĕ Яльчиков ура çине йывăррăн çĕкленчĕ.

— Темле, тачанка çине шаларах лартсан та ниmĕнех те тухас çук пулĕ халĕ пирĕнтен. Сирпĕнсе çеç юлăпăр. Пирс халь çынсем те итлесех каясшăн мар. Канăва тухмалла, итле, Лука, канăва... Ватлăхра хамăр ята яриччен — канар çĕршыв панă ырлăхра.

Лука Павлович, сасартăк шĕвĕр пÿрнине тăратса, шапланма хушрĕ, пуçне тайăлтарса, уçă чÿречерен итлерĕ:

— Сирена. Таçта пушар пулмалла. Хамăр сирена сасси!

Чăнах та, сасă пĕрре вăйланать, тепре çухалать, татах вăйланать те çухалать. Виççĕшĕ те кантуртан тухрĕç. Раман алăк анинченех асăрхарĕ: юман юпа çинче пĕр çăмламас кушак мăйăклатса ларать, аялта тепри, пысăкраххи, малти урисемпе йывăçа качалать.

— Вăт эс: маттур, вăй пур, парăнмастпăр, тесе лăплантарасшăн мана — хăлха та начарланнă ав хамăрăн, кушак сассипе сирена сассине пăтраштаратпăр. Эх, тĕнче кулли,— лăхлатрĕ Иван Яковлевич.

Раман та вĕсенчен кулмасăр тÿсеймерĕ.

— Ку ĕçпе çуркунне çитнине те манса кайнă, — кăтăрткăтăрт хыçрĕ Лука Павлович яка пуçне. — Аптрамалла, пĕр канăç та çук. План, план... Вакун, вакун...

Дубов эстакада тавралла пит сăнаса пăхса тăнине асăрхаса, Безбородов Яльчикова кăчăк туртрĕ:

— Ăнлантăм эп çак ачан шухăшне. Пирĕн склада çапă айне тăвасшăн. Иртнинче, министр килсенех, тăнран янăччĕ. «Атьăр, каснă йывăçа туратти-мĕнĕпех анатри склада турттарма тытăнăпăр, сирĕн патра кунта ĕçлеме те лайăхрах», — тет. Директора та ÿкĕте кĕртнĕ вăл. Анатолий Семенович çав ыйтупа ĕнерех чĕнсе калаçрĕ.

Çакна айккинчен илтсе тăнă Дубов вĕсене:

— Паллах, лайăх, — тесе пÿлчĕ. — Вăн, мĕн чухлĕ пушă вырăн! Турат-тунката вăрманта ахаль çунса-çĕрсе пĕтет. Мастерскойсене аслăлатса çĕнĕ завод тăватпăр-и? Тăватпăр. Туратран, тункатаран, пăчкă кĕрпинчен çынсем тем те ăсталаççĕ. Вăрмантах хатĕрлеме пулать мĕн те пулин вĕсенчен. Пирĕн ма усă курмалла мар вĕсемпе? Çавăн çинчен татăклăн калаçма кĕнĕччĕ эп.

Яльчиков кĕрÿшĕ çине тулли кăмăлпа пăхса тăчĕ, юлашкинчен çапла каларĕ:

— Эс пире, кивĕлле ĕçлекенсене, хытăрах хĕстер. Лука Павăлчăн завода хăвăртрах туса пĕтермелле те пенсие каймалла. Хытăрах хĕстер. Вăрман уссине туллин курмалла. Вăрман çынран ан хăратăр.

Ку калаçу çакăнпах вĕçленмерĕ-ха. Умра пысăк ĕçсем тăраççĕ. Умра — пысăк плансем.

## 58

Парти райкомĕн икĕ хутлă чул çуртне Дубов ĕнтĕ самаях хăнăхса çитрĕ темелле. Райкома вăл кашни уйăхрах бюро ларăвне килет.

Бюро членӗсем пӗрремӗш секретарь пӳлӗмӗнчи вӑрӑм сӗтел хушшине вырнаҫса ларчӗҫ, кун йӗркинчи ыйтусемпе, хатӗрлесе хунӑ документсемпе паллашма тытӑнчӗҫ. Дубова пуринчен ытларах кун йӗркинчи икӗ ыйту кӑсӑклантарчӗ. Пӗри — район центрӗн генеральнӑй планӗ, тепри — Лишайкин коммунист ҫинчен. Лишайкин пирки йышӑну проектӗнче партирен кӑлармалла тенӗ. «Тӗрӗсех, — шухӑшларӗ Раман. — Урӑхла пулма та пултараймасть». Тепӗр ыйтӑвӗпе паллашнӑ май вара Хурӑн ҫулҫи паркӗпе хырлӑх посадкисем куҫ умне тухса тӑчӗҫ. Генеральнӑй план тӑрӑх вӗсем вырӑнне йӑлтах ҫурт лартмалла-мӗн. «Тӗлӗнмелле план ку сирӗн, — пуҫне ҫӗклемесӗрех калаҫрӗ унпа хирӗҫ ларакан колхоз председателӗ. — Куна ӑслӑ ҫын туман пуль. Эпир уйра вӑрман лартса ӳстеретпӗр те, кунта поселок вӑрманне касса «хула» тӑвасшӑн». Дубов хӑй ӑшӗнче каласса илчӗ: «Манпа пӗр шухӑшлӑ ку», — терӗ.

Кӗтесри ҫӳллӗ сейф ҫине лартнӑ пысӑк сехет вунпӗр кӑтартать. Лару пуҫланчӗ. Партие тата кандидата кӗрекенсемпе ӗҫ вӗҫленсен, хайхи генеральнӑй план проектне сӳтсе явмалли вӑхӑт ҫитрӗ.

— Ку ыйтупа хавӑр шухӑшӑрсене калӑр, юлташсем. Кам сӑмах илет? — ыйтрӗ пӗрремӗш секретарь.

Райсовет ӗҫтавкомӗн председателе папкине аллипе ҫапса илчӗ те пуриншӗн тенӗ пекех каласа хучӗ:

— Мӗн ытлашши калаҫмалли пур кун пирки! Вӑхӑта пустуй ирттерер мар. Миҫе хут пӑхса тухнӑ ӗнтӗ ӑна эпир. Пурте пӗлетпӗр, пурте куҫ умӗнчех. Поселок хула пек пулать. Савӑнмалла ҫеҫ! Планран хӑшпӗр пайӗ пурнӑҫланӑ та, ытти — майӗпен... Ҫирӗплетер.

Дубов сӑмах ыйтрӗ. Халӗ вӑл тухса калаҫма хӑнӑхса пырать, малтанхи евӗр аптраса тӑмасть, вӑрманта йывӑҫсене пӗр майлӑ тӳнтернӗ пек, сӑмаха майӗпен, йӗркипе илсе пырать.

— Проекчӗ начар мар, — пуҫларӗ вӑл ерипен, — ҫирӗплетме те пулать. Ҫап-ҫара вырӑнта хула тӑвас пулсан. Анчах та пӑхӑр-ха эсир тепӗр хут проекта. Завод валли лартакан ҫуртсем йӑлтах хыр посадки ҫине кӗреҫҫӗ вӗт. Мӗн тума парк витӗр антармалла-ха тата ҫак урама пӗве хӗррине ҫитичченех? Акӑ, паркпа поселок хушшинче мӗн чухлӗ уҫӑ вырӑн! Унта вара, футбол площадки пек тӳрем ҫӗре, юсавпа строительство участокӗн базине вырнаҫтарма пӑхнӑ. Хурашыв пӗвине «Сельхозтехникӑран» тикӗт-минерал анни ҫитмест, вараламалли тепӗр ҫӑрӑлчӑк хушасшӑн. Строительсен базине ӑна поселок айккине кӑлармалла. Кунта тата ҫул урлӑ, аэродром лаптӑкӗ пек ҫӗрте, сад пул-

малла-мĕн. Питĕ тĕлĕнтерет мана çакă: хырлăха касса çурт лартатпăр, пуш вырăнта улма-çырла йывăççи ӳстеретпĕр. Хăвăрах пĕлетĕр, сад валли пирĕн çырма-çатраллă вырăн та темĕн чухлех, комбинат кантурĕ хыçĕнчех.

— Эсир, Дубов, апла калатăр та,— пӳлчĕ ăна райĕçтăвком председателĕ,— анчах кунта йăлтах коммуникацие çыхăннă, халь лартнă чул çуртсем патĕнче водопровод, канализаци пуçланать, котельнăй тунă. Тепĕр хут ту-ха эс вĕсене. Йăлтах шута илнĕ кунта. Йывăç вăл — йывăç. Ӳсет! Лартса яр та... Туса пăх-ха унта çурт!

· Председатель çапла пĕр пăшăрханусăр йывăç ӳсет тенĕрен Дубов чăтма çук тарăхса кайрĕ.

— Тĕрĕс, ӳсет йывăç. Лайăх пăхма пĕлсен. Сыхласан. Леш çурчĕсене тунă чухне те мĕн чухлĕ хырлăх касса пĕтертĕр. Халĕ, ав, çуртсем çывăхне хăварнă йывăççсем те хăраççĕ. Эсир каланă пек ĕçлес пулсан, поселокра тепĕр вунă çултан пĕр лайăх хунав та сыхланса юлмасть, вăрман хĕрри курăнми пулать. Сирĕншĕн, паллах, нимĕн те мар. Эсир кайран мухтанса çӳреме те пултаратăр: «Вăт эпир хула турăмăр!» Тĕрĕс мар хăтланатăр. Тĕрĕс мар. Поселок малашлăхĕшĕн кăна мар, тăван тавралăх малашлăхĕшĕн те кĕрешмелле пирĕн.

Райĕçтăвком пуçлăхĕ каллех тавлашса пăхрĕ. Итлерĕ-итлерĕ те вĕсене пĕрремĕш секретарь пурне те чарăнма ыйтрĕ.

— Шухăшласа пăхар-ха, чăнах та, лайăххах,— терĕ вăл. — Икĕ поселок варрине тăрса юлнă вăрман лаптăкне, парка, касса урам тумасăр вырăн çук-и пирĕн? Тĕрĕс каларĕ Дубов, тĕп-тĕрĕс ăнлантарса пачĕ. Эпĕ ун шухăшĕпе пĕтĕмпех килĕшетĕп. Хула çынни пӳлĕмре ларса сăрланă проект вырăнне пирĕн хамăр шухăша çирĕплетмелле. А чăн та, пăхăр-ха малашлăха! Тăван вырăн илемлĕхĕшĕн тăрăшас туйăм пирĕн пурин те çук-ха. Малашне пире кун пек хăтланнăшăн никам та пуçран шăлмĕ. Паян кунта асăрхаттарнисене шута илсе, проекта халлĕхе çирĕплетер мар, çĕнетсе, лайăхлатса çитериччен тăхтар.

Секретарь сăмахне хирĕçлекен тупăнмарĕ.

## 59

Раман ирех вăранчĕ. Пĕр хушă уçă форточкăран илтĕнекен куккук сассине итлесе выртрĕ те тăчĕ. Чӳрече умĕнче — симĕс тум тăхăна пуçланă вăрман. Хурăнсем кăтрисене тин çеç яма тытăннă-ха. Вĕсем çил варкăштарса килнипе, куçкĕски умĕнчи хĕрупраçа аса илтереççĕ. Çăкасем-

пе юмансем хӗл ыйхинчен васкамасăр вăранаççӗ. Чăрăшсемпе хырсем вӗсем умӗнче симӗс тумӗпе мухтанаççӗ тейӗн. Çурхи вăрман шăрши — çӗр-анне парса тăракан çутçанталăк шăрши — кăкăра уçăлтарать. Раманшăн çакăнтан тутлă, ырă шăршă тӗнчере ниçта та çук.

Куккукпа ăмăртмалла ытти кайăксем юрлаççӗ. Поселока çурмаран уйăракан аслă çул пушах-ха. Тӗлӗнмелле аван урам вăл. Икӗ енӗпе те йывăç. Сылтăмра вăрманпах пӗрлешсе каять. Ун хӗррине карта тытнă. Çав парк халӗ ӗçпе юрă уявӗсем ирттерме, канса-уçăлса çӳреме питӗ лайăх вырăн. Раман çак парка сыхласа хăварассишӗн нумай кӗрешрӗ. Акă халӗ ăна, чӳречерен кăмăллăн пăхса тăраканскере, çурхи вăрман ăшшăн саламлать: пике пек хурăнсем кăтра шереписемпе, хырӗ-чăрăшӗ симӗс лăссипе алă сулаççӗ, юманӗ пăхаттирле пуçӗпе пуç таять.

Раман тепӗр енчи пӳлӗме каçрӗ, асăрханса чӳрече каррине сирчӗ. Çамрăк хырлăх хушшипе сăрхăнса кӗрекен хӗвел пайăркисем кравать çине ӳкрӗç. Ана туйса пулас, çивиттине уçса Юман тутине чăплаттарса илчӗ те каллех шăпланчӗ. Арăмӗн сап-сарă куç харшийӗсем, кăшт каçăртарах сăмси, тăп-тăп тути, янах айӗнчи турпалли, çӗрелле усăнса аннă çӳçӗ хӗвел шевлинче тата та илемлӗрех, ăшăрах курăнаççӗ.

Кăçал Раманăн икӗ отпуск. Пӗр уйăхне вăл çуркунне канма шутларӗ. Ниçта та каяс темерӗ. Уншăн тăван тавралăхах лайăх. Виçӗ енчен вăрман ытамӗпе хӳтӗленнӗ поселок курорт хулинчен пӗрре те кая мар. Илемлӗ Хурашыв тăрăхӗ. Таçта çити тăсăлать пӗви. Сылтăм çыранӗнче — йӗрки-йӗркипе йăрăс хыр, сулахай енче — шап-шурă хурăнлăх...

Çыранти сукмакпа пӗр ушкăн арçын пырать. Малта — Яльчиков. Иван Яковлевич вăрăм урисене çăмăллăн яртярт пусать. Ун хыççăн хулпуççи çине ача лартнă Раман утать. Лука Павловичпа Арсентьев тем юмаххи çапса пыраççӗ, юнашар утаççӗ. Хыçалта — Миша Фильчин.

Паян Раманăн çуралнă кунӗ. Ир çинчен вăрмана çитсе килес терӗç. «Командине» пухаканӗ Яльчиков-ха. Хӗрарăмсем апат-çимӗç хатӗрленӗ çӗре ака кăмпи татса килме хистерӗ вăл.

Пӗве вӗçне тухса пӗчӗк кӗперпе каçрӗç. Кунта, çул хӗрринче, Хурăн çулçи паркӗ вӗçленет, аслă вăрман пуçланать. Айлăмран хăпарма тытăнчӗç. Иван Яковлевич чарăнса тăчӗ, хăвăрт килнипе ăшчикӗ пӳлӗннӗ унăн, кăштах канса илес терӗ.

— Астăватăр-и, çамрăксем, — Раманпа Миша еннелле

çаврăнчĕ Яльчиков, — сире пĕррехинче эпир ĕлĕк йывăç мĕнле турттарни çинчен каласа панăччĕ. Вăт халĕ курăр, — лапамалла кăтартрĕ старик. — Сирĕншĕн вăл çеремленнĕ лапам кăна. Маншăн вара çамрăклăх çулĕсенчен пĕри — пĕр çул. Тăршшипех çăл алтса тухнăччĕ. Типмен çăлкуç та пулма кирлĕ. Акă вăл — пурнăç çулĕ çинчи чĕрĕ çăлкуç.

Юман пуçтарса панă чечеке илчĕ те Иван Яковлевич çак çул тăрăх малалла утрĕ. Раман утнă маях кăмпа шырать.

— Иван Капитонч, — терĕ Безбородов, — пире эс кăмпа вырăнне илсе кай. Эпир ку енчи вырăнсене лайăхах пĕлместпĕр.

— Илсе каятăп çав, илсе каятăп. Утăр, утăр.

Пурте хăйăрлă çул çине тухрĕç. Юмана ĕнтĕ Лука Павлович хăй ĕнси çине çĕклесе лартрĕ. Ача унăн яка пуçне шăлкаласа юрласа пырать.

Юманлăх поселокĕ пулнă вырăна çитсе пусă патне чарăнчĕç.

— Шыв ăсса ĕçер-ха, — терĕ Безбородов, — витри те пулмалла çакăнта. Аха, сăнчăрĕпех. Вăт, миçе çул куçса кайни, хурăнран тунăччĕ пурине, халь те çирĕп. Пăхăр-ха, шывĕ те тап-таса, çап-çутă, çӳп-çап çук.

Раман, ачине хăй аллине илсе, тахçан лартса хăварнă йывăçсем патне пычĕ. Миша Фильчин та шыв ĕçнĕ хыççăн унталла утрĕ. Ваттисем чĕлĕм туртса юлчĕç.

Анютăпа Раман пуçласа янă çап-çамрăк вăрман лаптăкĕ... Юманлăх вырăнне илем кӳрекен йывăçсем. Кашни çемьен, кашни çамрăкăн хăй лартнă юратнă йывăçĕ кунта. Акă вĕсем варринче çăкапа хурăн. Çăка еннелле тайăлнă хурăн тӳрленнĕ, çӳлелле хăпарса кайнă. Юман вĕсем тавра чупать.

— Мана тытаймастăн, мана тытаймастăн, — кула-кула çаврăнать вăл.

Ашшĕ ун хыççăн хăвалать. Миша ярса илчĕ те ачана çӳлелле çĕклерĕ, вара иккĕшĕ выляма тытăнчĕç. Раман кăштах чарăнса тăчĕ, тахçанхине аса илчĕ. Ун умне ирхи хĕвел шевлипе çăвăнакан Анюта тухса тăчĕ. Вăл Раман çине пăха-пăха йывăç кучĕсене таптаса çаврăнать, хăлхара ун сасси илтĕнет. Фильчинпа Юман çаплах выляççĕ, тĕркĕшеççĕ. Ваттисем те кунта кĕнĕ ĕнтĕ. Йывăçсем татах та хушăннă. Тымартан тухаканнисем те пур, ăвăс шăтнă.

Ака кăмпи кăçалхи пек йышлă шăтнине никам та астумасть пуль, йĕрки-йĕркипе лараççĕ кăтра кăмпасем. Юманлăх хыçĕнче карçинккасем часах тулчĕç. Канма çул хĕрринчи юман айне ларчĕç.

— Дубовсене аса илер-ха, — плащне сарсах вырнаçрĕ Иван Капитонович.

Пĕчĕк Юман посадка тăрах чупать — никам та чармасть ăна кунта, ирĕклĕ, уçă. Арсентьев çӳлелле тĕллесе кăтартрĕ. Юман тăрринче — хĕрлĕ ялав. Ăна темиçе çул ĕнтĕ мала тухнă коллектив ячĕпе çакаççĕ.

— Ĕнер улăштартăм, — терĕ Фильчин, — шурса кая пуçланăччĕ те. Дубовăн пысăклатнă бригади ячĕпе çакрăм.

Темĕнле урапа хăлтăртатнă сасăпа пурте çул еннелле çаврăнса пăхрĕç. Тăрантас килет. Çатан ăшĕнче Стасик Павловпа Тамара. Вĕсене çапла çак вырăнта куратăп тесе Раман нихăçан та шутламан пуль! Стасик тилхепе тытнă, качака сухалĕ аялалла усăннă, курпун кĕлетки пушшех пĕкĕрĕлнĕ. Тамара чĕрçи çинче Юманран пĕчĕкрех ача. Çӳхе тута, шĕвĕртерех сăмса, çивĕч куç, вăрăм çивĕт... Ватăлнă Тамара...

Тăрантас çул кукринче курăнми пулчĕ.

Çанçурăма уçăлтарса çил çавăрттарса килчĕ. Пат татăлса анчĕ сарса хунă плащ çине юман йĕкелĕ. Ăна Яльчиков аллине илсе çавăркаласа пăхрĕ.

— Йăкăнат Дубов калаçать пирĕнпе, — терĕ вара ассăн сывласа. — Пĕрлех вăл, юнашарах. Раманăн ашшĕ те, Митрахван та, пĕрлех...

— Курăр-ха, курăр Юмана! — кăшкăрса ячĕ Миша Фильчин.

Юман Дубов посадкăри пĕр пĕчĕк юмана çăлса илнĕ те эхлетсех туртать, алли вĕçерĕнсе кайнипе каялла кайса ӳкет, тăрать те каллех тапаçланать, ӳкет, тăрать те йывăç патне ыткăнать. Иккĕшĕ те парăнасшăн мар, иккĕшĕ те пĕр-пĕрипе парăнмасăр кĕрешеççĕ. Кукашшĕ пырса тытрĕ те мăнукне çӳле-çӳле çĕклерĕ.

— Эх, эс те çав, Юманкай!.. Тăпăлтарасшăнччĕ-и? Вылясшăнччĕ-и? Çирĕп çав вăл юман тени. Тымарĕ те тарăн ун, хăй те хăватлă. Вăн аслаçусен юманĕсем епле кармашса лараççĕ. Пы-ысăк пул. Çӳллĕ ӳс. Çирĕп пул, çак юмансем пекех!

Çул хĕрринчи пуринчен те çӳллĕ, пуринчен те сарлака ват юман çурхи çилпе тем канашлать, унпа юнашарах, пĕр вунă-вуникĕ утăмра тепĕр юманĕ ăна пуç тайрĕ, вĕсен çывăхĕнчех ларакан çамрăк юманĕ çилпе ухăна-ухăна илчĕ. Çул хĕрринчи виçĕ юман, виçĕ пăхаттир, хăйсен чĕлхипе пĕр канашлăн калаçса кашлать. Çав кашлавра çап-çамрăк хунавсем çурхи вăйпа çӳлелле туртăнаççĕ.

70 пус

ЧАВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ